С(чув)
А 23
11277-чув

Леонид Агеев



# Лайăх эмел



Национальная библиотека ЧР
4-011277

11277



ЧĂВАШ АССР
КĔНЕКЕ
ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР
1967



Кз
С (чув)
К
А 23

Леонид Агаков

# Лайăх эмел

Сатирăпа юмор



11277 - чув
Чувашская Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького
г. Чебоксары Чувашской АССР

ПРОВЕРЕНО
20 10 03 НОЯ 2017

## «КАПКĂНА» ЭПĔ ÇАПЛА ПЫРСА ЛЕКРĔМ

*Сатирик автобиографийĕнчен*

*Тăванăм-вулаканăм, çакăн пек калани ним чухлĕ те ан тĕлĕнтертĕр сана: «Капкăна» ăна тĕрлĕ майпа, тĕрлĕ сăлтавпа лекме пулать...*

*Пĕри, калăпăр, халăх пурлăхне вăрласа пурăннăшăн лекет, тепри — çумăр çунă чух та, çумăр çуман чух та ӳсĕр çӳренĕшĕн, виççĕмĕшĕ — пĕр çултах çиччĕ авланнăшăн çакланать. Анчах тепри... мĕнле калас? — хăйĕн шутсăр çырас килнипе, кулăшла сăвă-калав, фельетон çырмасăр ниепле те тӳссе тăма пултарайманнипе пырса лекет.*

*Çапла вăл... Анчах вĕсем хушшинче пĕр пысăках мар уйрăмлăх пур. Малтан асăннисем (вăрлакансем, Бахус тенĕ ĕçкĕ туррине куллен пуç çапакансем, хĕрарăм улшуçисем) пĕрре лекнипех ирттерсе яма пултараççĕ, «Капкăн» хытăрах хĕстернĕ хыççăн тӳрĕ çул çине тухаççĕ те — ĕçĕ те пĕтрĕ. Урăх вара вĕсен ячĕ «Капкăнра» ĕмĕрне те пулмасть. Анчах теприсем — леш çырас килтерекен кĕçĕ ернисем — журнал страницисем çине пĕр лексен, унтан хăтăлаймаççĕ, вĕсен ячĕ, ытла кашни номертех пулмасан та, çулталăкра тăват-пилĕк хут тухатех.*

*Эпĕ шăпах çавăн йышши çынсенчен пĕри пултăм пулмалла. Вăтăр тăхăр çул каялла (ай-ай, вата та иккен эпĕ!..) «Капкăнра» пĕр фельетон çапса кăлартăм та çавăнтан вара юратнă журналăмăртан хăпма пĕлмерĕм...*

*Чăн малтанхи фельетона çырасси ак мĕнле пулчĕ. «Капкăнне» ун чухне пурте юрататчĕç ĕнтĕ, «Капкăн»*

*тени халах хушшинче «милици» самахран та вайларахчĕ. Калапар, хĕрарамсем пĕр-пĕр Йаван-Паваншан çӳçĕсене тапалтарма тытансан та: «Сан çинчен «Капкана» калармалла!» — тесе кашкаратчĕç. Яла пыракан «Капкан» номерĕсем, аларан алла куçса çӳресе, ик-виç кунтанах пару чамлана пек сусленсе каятчĕç.*

*Шупашкарти хаçатсене эпĕ вун таваттарах çырма тытанначчĕ, чылайашне ним шикленмесĕрех «продернуть» та туна, пĕрре, паллана çынсем çинчен çырса каларнашан, аттерен чĕн пиçиххи лекнине те ас таватап, анчах 1928 çулччен «Капканра» пичетленме тӳр килмен.*

*Çав çулхине эпĕ Етĕрнери педтехникуман юлашки курсĕнче вĕренеттĕм. Пирĕн «чаваш чĕлхин методики» тенĕ предмет пурччĕ. Ана пире Н. преподаватель, вата хусах, вĕçĕмсĕр махорка макарлантарнипе шултара шалĕсем сап-сара пулса кайна çын вĕренткелетчĕ. Унан «лекцийĕсене» итлеме çав тери асапчĕ ĕнтĕ — те чавашла калаçать, те вырасла, ниепле те уйарса илме çук. Пĕр урок вахатĕнче эпĕ унан лекцине стенографист пекех çырса пытам та, ака мĕнле «классикалла япала» пулса тухрĕ (сыпакне çеç илетĕп):*

*«...— И вот, если сирĕн свободнай вахат полсан, Афанасьев методикине валас полать. Можно катартма Афанасьевсар пуçне еще Иванова, массовый практикара кирла полать. Кĕнеки в двадцать третьем году издать тунаскер полсан та, ничего. Кив источниксене если взять, то Михееван пор, первая, вторая, третья, четвертая книгасем, инородцасен школьсем валли. Потом в прошлом году анчах издали...» т. ыт. те, малалла та çаван пекех анра-сухралла.*

*Каçхине çак «стенограммана» хамран пĕр курс каярах вĕренекен юлташа катартрам. Ахартамар кана иксĕмĕр...*

*— Яр «Капкана!» — терĕ юлташ.— Çапаççĕ! Хай чавашла икĕ самах çыхса калаймасть, çапах та «Чаваш чĕлхин методикине» вĕрентет. Ял кулли вĕт ку!*

*Çав каçах эпĕ «Машкал» ятла фельетон çыртам. Унта çак çӳлте илсе катартна сыпака кĕртсе хутам. Анчах хаман чан хушамата лартма шиклентĕм: епле пулсан та, фельетон геройĕ — ман учитель-çке-ха, кĕçех юлашки экзаменсем пуçанмалла, çынни усал, темрен тем пулса тухĕ, терĕм. «Тари» тесе çырса хутам аяла. Ан-*

*чах та калăхах пытанма тăрашнă иккен эпĕ! Ик эрнерен-и, виççĕрен-и, хайхи фельетонлă «Капкăн» персе çитрĕ те, ман «герой» урока урнă пек пырса кĕчĕ.*

*— Эп ку «Машкăлшăн» авторне суда паратăп! Нельзя честный çынсем çинчен клеветать тума! — «Капкăн» номерне сĕтел çине çат! çаварса çапрĕ вăл. Хай мана çисе ярас пек пăхать.— Хотя кунта псевдоним, но я знаю кам çырнине. Хам енчен могу подтвердить: ку «Тăрин» чăнах та тăрри тово... шатăк! («Ухмах» тени пулчĕ ĕнтĕ ку...)*

*Тытăнчĕ хайхискер мана хĕсме! Хам япăхах вĕренмен пулсан та, çулталăк вĕçĕнче «неуд» шаплаттарса хучĕ. Юрать, чăваш литературине вĕрентекен тепĕр преподаватель хута кĕчĕ, атту-тăк пĕтеттĕм!*

*Çапла пуçланчĕ манăн сатирик «карьери». Самаях хурлăхлăн пуçланчĕ, тес пулать. Тепĕр тесен, кунтан тĕлĕнмеллиех те çук: сатириксене, фельетонистсене вулакансем çеç юратаççĕ, вĕсен пери вĕçне тăраннисем вара — тӳсме пултараймаççĕ...*

*Техникум хыççăн мана тӳрех Шупашкара, «Канаш» редакцине ĕçлеме чĕнсе илчĕç. Килсенех эпĕ Иван Мучипе паллашрăм. «Санăн перу çивĕч, «Капкăн» валли ытларах çырма тăраш»,— терĕ вăл мана. Пĕтĕм чăваш халăхĕ хисеплекен писатель çунатлантарсах ячĕ. Çĕрĕçĕрĕпе тенĕ пек çыраттăм эпĕ. Халĕ «Капкăнăн» çавăн чухнехи номерĕсене пăхса тухрăм та — савансах кайрăм: 1928 çулăн иккĕмĕш çур çулĕнче Иван Мучи манăн ултă калавпа фельетона пичетлесе кăларнă иккен. Вĕсенчен хăшĕ-пĕрисене эпĕ манса та кайнă. 1929 çулхи пĕрремĕш номерте те манăн самай пысăк калав тухнă...*

*Паллах, çамрăк автор çырнисем ытла пур чух та ăнăçлă пулман. Час-часах Мучи манăн ал çырăвĕсене каялла таварса паратчĕ.*

*— Ку пиççех çитмен-ха санăн, ачам. Ĕçле пăртак, паллă тунă вырăнсене тӳрлет...—Тата ялан вĕренме хистетчĕ: — Ытларах вулас пулать, ачам, Гоголе, Щедрина, Чехова!*

*— Вĕсене вуланă-ха эпĕ...*

*— Татах вула! Пилĕк хут, вунă хут! Хальхи вырăс писателĕсене те вула — Зощенкăна, Шишкова, Лебедев-Кумача. «Лапоть» журнала вула.*

*— Вĕсене тупма çук, Иван Иванч...*

*— Пыр хам пата, парса ярăп.*

*Чăнах та, хăй патне кайсан, вăл мана ун чухнехи вырăс сатирикĕсемпе юморисчĕсен чылай кĕнекисене вулама парса ячĕ. Вырăссемпе пĕрле пĕр украинец — Остап Вишня кĕнеки те пурччĕ. «Улыбки Вишни» ятлăччĕ вăл. Унччен эпĕ вăл автор ҫинчен илтмен те.*

*Эпир Алакĕр Ваҫлейĕпе пĕрле пурăнаттăмăр. Вăл та «Капкăна» тăтăшах ҫыратчĕ. Иван Мучи парса янă кĕнекесене иксĕмĕр те канфет ĕмнĕ пекех вуласа тухрăмăр. Ҫавăн хыҫҫăн эпир «Капкăн» валли хăш-пĕр япаласене пĕрле ҫырма пуҫларăмăр, ҫырнисем айне «Симĕс Хырăм» тесе ал пусаттăмăр. Епле майпа сиксе тухнă пирĕн ҫав псевдоним — ниепле те аса илейместĕп...*

*Иван Мучи хăй тавра пултаруллă авторсене пухса, вĕсене хавхалантарса ĕҫлеттерме пит пĕлетчĕ. Ҫав ҫулсенчи «Капкăн» номерĕсене илсен, Иван Мучисĕр хăйĕнсĕр пуҫне, унта пĕрмаях Ҫ. Шăпчăк, Н. Ваҫанкка, Н. Евдокимов, М. Аттай, А. Этмен, Рони (П. Васильев, халĕ Мускавра пурăнакан профессор), Сенĕк (Кузнецов), Алакĕр Ваҫлейĕ пичетленнине куратăн. Вĕсем хушшинче эпĕ те пулнă. Питĕ туслă, питĕ ĕҫчен коллективчĕ вăл!*

*«Капкăн» пĕрмай ӳссе лайăхланса пычĕ. Унăн тиражĕ ытти пур журналсенчен те пысăкчĕ. Журналта ҫĕнĕрен ҫĕнĕ ятсем палăрчĕҫ.*

*1931 ҫулта сатирăпа юмор кĕнеки кăларасси пирки сăмах хускалчĕ.*

*— Чи лайăх калавсене суйласа илсе кăларас...*

*Кун пирки Иван Мучи пире темиҫе хут та пухса каласрĕ. Ас тăватăп, пĕррехинче уйрăмах вăрăм калаҫу пулчĕ.*

*— Хăвăрăн ку таранччен «Капкăнра» мĕн пичетленнĕ — ҫавсене йăлт пăхса тухăр,— терĕ Мучи.—Ылтăн пĕрчисем шырăр...*

*— Леш юптаруri автан тислĕк купинче ахах пĕрчи шыранă пек-и? — ыйтрĕ Шăпчăк.*

*— Ҫавăн пек тесен те юрать, Папай. Анчах ҫав пĕрчĕсене те тепĕр хут тасатса ҫутатас пулать...*

*Кĕнеке валли ал ҫырăвĕсем часах пухăнса ҫитрĕҫ. Темĕн пысăкăш купа. Иван Мучи ҫав «купара» чылай чакаланчĕ, кĕнекене кĕртме тивĕҫлисене суйларĕ. Кĕнекен ятне те хăех тупнăччĕ—«Йĕплĕ калавсем». Вăл пире пурсăмăра та килĕшрĕ: питĕ тĕрĕс ят!*

*1931 çул вĕçнелле «Йĕплĕ калавсем» кĕнеке пичетленсе тухрĕ. Хуплашкине В. Макаров художник туна — «Йĕплĕ калавсем» сăмахăн юлашки саспаллинчен çиçĕм кукăрăлкаласа анать те кулак пуçне пырса çапать... Кĕнекере çичĕ автор — Иван Мучи, С. Ялавин, С. Шăпчăк, Л. Агаков, Н. Ваçанкка, А. Этмен, В. Алакĕр çырнă 22 калав. Хальхи куçпа пăхсан, пысăк мар вăл, унта пĕтĕмпе те 114 страницă çеç, ку чухнехи сатириксем пĕчченешерĕн те ун пек мар хулăн кĕнекесем кăлараççĕ, анчах 35 çул каялла пирĕншĕн ку та тем пекех пысăк савăнăç пулчĕ.*

*Тĕрĕссипе каласан, çав «Йĕплĕ калавсем» кĕнеке пирĕн сатирăпа юмор литературин «пирвайхи чĕкеçĕ», унăн пуçламăшĕ пулнă. Çавăнпа эпĕ ăна чи юратнă, чи хаклă япала пек упраса усратăп!*

*Каярахпа Иван Мучин хайне уйрăм темиçе кĕнеке тухрĕ. Отечественнăй вăрçă пуçланнă çул Хв. Уяр каллех «Йĕплĕ калавсем» ятпа нумай авторсен калавĕсене пĕрле пухса кăларчĕ, вăрçă пĕтсен (партин XIX тата XX съезчĕсем хыççăн) манăн, С. Шавлин, А. Калканăн, Н. Никитинăн, Хв. Уярăн кĕнекисем тухрĕç, юлашки вăхăтра кулăш литературине юратакансем патне А. Эсхель, Н. Волков, А. Галкин, П. Львов кĕнекисем çитрĕç, нумаях пулмасть тата вулакансене «Кулăш кушелĕ» туянтартăмăр. «Капкăн» авторĕсен коллективĕ «Витĕр куçпа» ятлă сборник пачĕ. Малашне те ун йышши кĕнекесем тăтăшах тухса пырĕç-ха. Кĕскен каласан, аптрамастпăр, сатирăпа юмор литературине майĕпе хăпартса пыратпăр, çитменлĕхсене çунтаратпăр, хамăр çул çинчи пиçен-кикене кăклатпăр, иртĕнекенсене çăварлăхлатпăр, халăха çĕнĕ пурнăç тума пулăшатпăр!..*

*Пĕлетпĕр эпир: пирĕн пурнăç йĕркисене пăсакансемшĕн, халăх пурлăхне хапсăнакансемшĕн, суя çынсемшĕн, юлхавсемшĕн тата ытти çавăн пек путсĕр çынсемшĕн пирĕн сатирă — питĕ лайăх, витĕмлĕ эмел! Ун пек этемсене çак эмеле ытларах хыптармалла!*

## ÇĔТĔК КАРТТУС



УСЛАМÇУ МИКУЛИ — ман тантăш. Пĕчĕкренпех эпир унпа пĕрле ӳснĕ, шкулта та пĕр партă хушшинче ларнă, выртмана та пĕрле çӳренĕ. Паллах, пĕр-пĕрине хăлха чикки те паркаланă эпир, унсăр епле пултăр-ха! Анчах çапăçăва яланах вăл хăй пуçлатчĕ. Манпа çеç мар, ыттисемпе те. Шутсăр шăртлăччĕ. эсрел! Хăйне хирĕç пĕр сăмах каласанах каркка аçи пек хĕрелсе каятчĕ те, сăмси çине çут шăрçа пек тар пĕрчисем тапса тухатчĕç. Вара, хăйĕн вăйĕ çукрахчĕ пулин те, хуть те кам çине те арçури евĕр сиксе ӳкетчĕ. Çапăçнинчен ытла чăрмалама юрататчĕ вăл, чĕрнисем тем таршшĕччĕ хăйĕн, юриех касмастчĕ пулмалла вĕсене. (Чĕрне тени ытла шанчăклă япалах мар ĕнтĕ, çапах та теприсемшĕн — хĕç-пăшал...) Çитменнине, ялан сăмсаран чăрмалама тăрăшатчĕ — епле те пулсан çыннăн портретне пăсса хума...

Ну, çавăн пек усал пулнăшăн ăна хăйне те пит лайăх лекетчĕ, хăш чух — пуринчен ытла выртмара — ачасем ăна пуçĕ çинчен сăхманпа хупласах тӳпелетчĕç. Киле чалăш тутапа таврăнни те пĕрре кăна мар пулнă унăн, анчах вăл кун çинчен часах манатчĕ те каллех пулчĕ-пулмарĕ автан пек сикме тытăнатчĕ, мур. Пулаççĕ вĕт çавăн пек чарăна пĕлми шăрчăксем!

Ӳсерехпе эпĕ ялтан тухса кайрăм — малтан вĕренме, унтан çар службине. Чылай çул хушши курма тĕл килмерĕ Усламçу Микулине. Анчах юлташсем ун çинчен пăч-пач пĕлтеркелетчĕç мана.

Шкултан вĕренкелесе тухнă хыççăн вăл колхозра конюх пулнă, анчах унта нумай тытăнса тăрайман. Пĕр шухă юпах тиха, выляна пек-мĕн пек, хăйне хулĕнчен кăшт çеç çыртса илнĕшĕн вилесле тарăхса, Микула

çавна майĕнчен тилхепепе яваласа юпа çумне кăкарнă та рычакпа хĕнеме тытăннă. Чут çеç вĕлермен çамрăк выльăха, юрать-ха ытти конюхсем сиссе чупса пынă. Çакăн хыççăн колхоз председателĕ ăна лашасем патĕнчен тапсах кăларса янă.

— Кирлĕ мар пире сан пек чунсăр çвер! Сана малашне лаша выльăх мар, йытă çури те шанса памастăп! — тенĕ.

Çав çулах Микулана салтака илнĕ.

— Ну, лере тăн кĕртеççĕ-ха ăна, юсаса яраççĕ, чăн та услам çу пек пулса таврăнать акă, курăр!— тенĕ ял çыннисенчен хăш-пĕри.

— Темĕн-çке, темĕн... Хура куракран шур курак тума пулать-ши? — иккĕленнĕ теприсем.

Микулапа пĕр ротăрах пирĕн ялти тепĕр йĕкĕт пулнă. Службăна кайсан ик-виç эрнеренех çав каччă хăйĕн çывăх юлташне питĕ вăрттăн пĕлтернĕ:

— Ачам-ачам, хай пирĕн Усламçу Микулине вунă кунлăха гауптвахтăна хупрĕç вĕт! Ахаллине мар тата, çирĕп режимлине. Ларать халь. Акă мĕншĕн: команда тăрăх строя хăвăрт йĕркеленсе тăнă чух кайри шеренгăри пĕр салтак ăнсăртран Микулан ура кĕли çине пуснă. Микула вăрт çеç каялла çавăрннă та ним каламасăрах лешне сăмсаран чышкипе янк! тутарнă. Лешин вара ик сăмса шăтăкĕнчен те шапăрах юн юхса аннă, тути те катăлнă иккен. Çавăншăн лекрĕ. Çамрăк салтак-ха, дисциплинăна хăнăхма ĕлкĕреймен, тесе кăна суд тумарĕç, вунă талăклăх «губа» пачĕç çеç. Атту пулсассăн, ун пек мар лекетчĕ аллине ытла вăрăма янăшăн!

Çаплаччĕ пирĕн ялти Усламçу Микули, ачаш муклашки.

Анчах каярахпа эп ун çинчен ыррине те илтнĕччĕ хамăр ялсенчен. Салтакран пит лайăх таврăнчĕ, авланчĕ, ачи те пур ĕнтĕ, халь хăй арманта ĕçлет, мелник, анчах кăшт сыпкалама пуçларĕ-ха, шельмă. Ара кашниех хăй тыррине черетсĕр авăрттарас тесе çуррине чиксе пырать те ун патне, тÿсеймест пуль çав, пăсăлса кайма та пултарать, терĕç.

...Каларăм-çке, Микулана хăйне эпĕ хам ялтан тухса кайнăранпа та курманччĕ, пĕр вунă çул та ытла пулĕ. Çавăн пек хутран-ситрен илткеленĕ çеç ун çинчен. Анчах çынпа çын тĕл пулатех хăçан та пулин. Эпир те тĕл пултăмăр. Иртнĕ çулла, ăнсăртран. Служба ĕçĕпе

мана хамăр района командировкăна янăччĕ. Район центрĕнче автобусран тухрăм та автовокзал çурчĕн картлашки çинче пĕр çын халь кăна хăйĕн юратнă арăмне тахăшĕ вăрласа кайнăшăн хуйхăрнă пек пуçне усса ларнине куртăм. Хăй нимĕн хускалмасть — чĕрĕ çын мар, чултан вартаса тунă скульптура тейĕн. Патнерех пырсан, палларăм илтĕм çакна: Микула, Усламçу Микули ларать! Ак тамаша! Миçе çултан тĕл пулатăп çынпа!

Чарăнса тăтăм та хаваслансах:

— Салам хамăр ялсене! — терĕм. Вăл ман çине çаврăнса та пăхмарĕ,— те илтмерĕ, те темскер,— малтанхи пекех пĕр хускалмасăр ларчĕ. Эпĕ вара тепĕр хут каларăм:

— Итле-ха, юлташ, эсĕ Усламçу Микули мар-и çав? Кушаккассисем мар-и? Паллана пек те эп сана...

Çакăн хыççăн тин вăл пуçне хуллен кăна ман еннелле çаврăнчĕ те темле пăтранчăкрах куçĕсемпе тĕл-л... пăхрĕ. Халь вара эп ăна тата лайăхрах палласа илтĕм: çавă, чăн та, çавă!

— Салам! Калатăп вĕт Микула тесе! — ал тăсса патăм эп ăна.

— Эп те-ха ку... Эсĕ ху Якур пултăн-и çак? — ыйтрĕ вăл хăйăлтатакан сасăпа.

— Уйăрса илейместĕн-им? Якур çав, Тимкка Якурĕ, санăн ача чухнехи тусу-иç!

— Тăн-пуç саланса кайрĕ-ха манăн,— терĕ Микула, сарлака ал лаппипе çамкине сăтăркаласа.

— Мĕн пулчĕ тата? Мухмăр мар пуль те?

— Мухмăртан та усалтарах. Калама та намăс...

— Намăс пулсан, ан кала эппин,— шӳтленĕ пек турăм эпĕ,— хăвăн ирĕк. Анчах сана тĕл пулнăшăн питĕ хĕпĕртерĕм-ха, миçе çул курман пулать те...

— Çапла, вăхăт нумай иртрĕ, сиккипех каять вăхăчĕ.

Эпĕ унпа юнашар лартăм. Халь ĕнтĕ тĕрĕссипех калатăп, манăн ун çинчен пĕлессĕм килсе кайрĕ. Темле пулсан та, ачаранпа пĕрле ӳснĕ çын-çке-ха, çитменнине тата тĕлĕнтермĕшрех çын. Ак халĕ те вăл ахальтен мар пĕр-пĕччен сĕнксе ларать, унăн сăн-пичĕ тин çеç кикен çинĕ пек йӳçек пулни те ахальтен мар ĕнтĕ...

— Ну, пурнăçсем мĕнлерех пыраççĕ, Микула? Калаça парсамччĕ! Мĕн ĕçлетĕн, çемье-кил-йыш мĕнле, ачупăчу... Туртатăн-и? Ме, акă, пирус...

Микула эп тыттарнă пируса вăрахчен лутăркаласа мăшлатса ларчĕ, тивертсен тăрук пысăккăн ĕмнипе чыхăнса кайрĕ, пĕр хушă сывлăш çавăраймасăр ларчĕ. Чылайран тин вара, çаплах çĕрелле пăхса, ассăн сывласа илчĕ те:

— Пурнăçĕ манăн... епле калас... çул хĕрринчи ясмăк пек,— терĕ.

— Тем, хуйхă-суйхă пулчĕ-им?— ыйтатăп эпĕ.

— Калама та пĕлмелле мар, Якур... Ăш хыпать... аптрарăм!

— Атя-ха эппин буфета кĕрер, кăштах сăра ĕçер те калаçса ларар пăртак,— чĕнтĕм хăйхискерне, унăн чĕлхине çемçетес шутпа.

— Сăрасем ĕçсе çÿреме манăн халь «финансы поют романсы», тусăм Якур,— терĕ вăл.— Тÿлемеллисене те темле тÿлесе татмалла...

— Парăма кĕрсе кайрăн-им?

— Кĕртрĕç-ха. Мăй таранах...

— Ну, юрĕ, ун çинчен калаçмăпăр, хам хăна тăватăп сана, атя!

Кĕтĕмĕр хайхи буфета, пĕрер курка кăпăклă «жигулевски» ĕçрĕмĕр, тепрер пирус чĕртсе ятăмăр. Микула куçĕсем кăштах чĕрĕлчĕç,— атту паçăр вĕсем сÿнсе ларнă пекехчĕ унăн. Урăхла каласан, çынна çын сăнĕ кĕме пуçларĕ.

— Пĕлетĕн-и, Якур, эп тин çеç судран тухрăм,— терĕ Микула, хальхинче сăмаха хăех пуçласа.—Суд турĕç мана...По всем правилам, айăпланаканнисен сакки çине лартсах. «Именем Российской Социалистической Федеративной Советской республики...»

— Ан сÿпĕлтет-ха! Пустуй калатăн пуль?!— питĕ тĕлĕннĕ пек пулса, куçсене чарса пăрахсах ыйтрăм эпĕ, анчах çав вăхăтрах хам ăшăмра: «Каллех кампа та пулин çапăçнă ĕнтĕ, эсремет»,— тесе шутларăм.

— Пустуй пулнă пулсан ырлăхчĕ те-ха, пустуй мар çав, Якур Митрич!— ываннă лаша пек сывласа илчĕ ман тус.— Уголовно-процессуальный кодекс текен питĕ хаяр кĕнеке пур çĕр çинче...

— Чăнах пулсан, мĕн пирки вара, мĕншĕн? — тата ытларах тĕлĕннĕ пек пултăм эпĕ, Микулана куçран пăхса.

— Çĕтĕк карттусшăн! — терĕ вăл çилĕпе.— Чăнах, чăнах, ан тĕлĕн, çĕтĕк карттусшăн суда лекрĕм!

— Эс юптарма вӗренсе кайнӑ пулас, Микула... Ӑнланмалларах каласа паман-ши?

Эпӗ буфетчицӑран татах сӑра ыйтса илтӗм. Куркари сӑрана кӑшт ҫеҫ чӑпӑрт-чӑпӑрт тутарса илсен, Микула мана текех кӗттерсе асаплантармарӗ...

— Пӗтӗм ӗҫӗ-пуҫӗ чӑнах та ҫӗтӗк карттусран пуҫланчӗ,— терӗ вӑл.— Ак ҫапла... Леш енче пурӑнакан Уксах Яккӑва ас тӑватӑн-и эс? Хурарах, лутраскер. Шкулта пирӗнпе пӗрлех вӗренчӗ вӑл. Арифметикӑпа вайлӑччӗ, сатачӑсене никамран малтан шутлатчӗ, хӑш чух пире те пулӑшкалатчӗ. Аса илтӗн-и?

— Пит лайӑх ас тӑватӑп-ҫке. Пӗррехинче, хӑвна сатачӑ ҫырса илме паманшӑн, эс ӑна хӗненӗччӗ те пулас,— терӗм эп.

— Пулнӑ та пуль.

— Хӑрах ури темшӗн кӗскерех унӑн...

— Ури кӗскерех те, ӑсӗ кӗске мар вара, ӑна тӳррипех калас пулать. Колхозра халь вӑл техник та, механик та, электрик та, тем шуйттанӗ те. Малалла вӗренме май килнӗ пулсан, пит хороши инженер пулмаллискер... Ну, халь те аптрамасть, вайлӑ пурӑнать. Нумай пулмасть ҫак Якку тӑххӑрмӗш ачине ят хучӗ те мана та хӑнана чӗнчӗ. Чӗннӗ ҫӗре ма каяс мар? Сын кӑмӑлсӑр пулма пултарать тата. Кашни кунах ача ят хумаҫҫӗ вӗт, ху пӗлен... Каяссине эпӗ чиперех кайрӑм, анчах каялла мӗнле таврӑннине ас тусах ҫитейместӗп. Хайхи ҫӗрле ӑш хыпнипе варт! вӑранса кайрӑм. Чӗлхе ҫӑвар маччи ҫумне ҫыпӑҫса ларнӑ, ҫӑварта — чӑх каяшӗ тути... Тӗттӗм пирки ниепле те тавҫӑрса илейместӗп — ӑҫта шуйттанӗнче выртатӑп эпӗ? Хам айра — хытӑ, пуҫ айӗнче— хытӑ, ик еннелле хыпашласа пӑхатӑп — хӑма. Урайӗнче выртатӑп иккен! Тӑрса лартӑм та: «Урине, эп килте-и?»— тетӗп. (Урине ман арӑм вӑл.) Чӗнмест. Эп тепӗр хут, хытӑрах кӑшкӑратӑп: «Эп килте-и?» Тин сас пачӗ: «Килтех, килтех, ҫывӑр, шуйттан, ачасене вӑрататӑн»,— тет. Анчах манӑн каккуй унта ҫывӑрасси, вилетӗп — мухмӑр касать, пуҫ тӑват еннелле ҫурӑлать. Тытӑнтӑм арӑма тархаслама, санӑн мухмӑр уҫмалли мӗн те пулин пур вӗт, сӑра-и унта, мӗн-и, пар-ха, вилетӗп, тетӗп...

Малтан Урине манпа калаҫасшӑн та пулмарӗ, анчах эпӗ сапса пекех ҫыпӑҫрӑм та — йалӑхса ҫитрӗ, хӑпас кунтан, терӗ пулмалла. Ҫутӑ ҫутса кӑмака хыҫнелле

кĕрсе кайрĕ те, кĕçех эпĕ хамăн савнă арăм чăланти сĕтел çине темле кĕленче лартнине илтрĕм. Унтан вăл мана çав тери хаяррăн: «Кўп, тултар усал карланкуна, анчах та çывăрма ан кансĕрле!» — терĕ те вырăн çине кĕрсе выртрĕ. Эпĕ часрах чăланалла чăмрăм. Э-эй, савăнăç!.. Сĕтел çинче çур литрăн çурри лара парать! Килти те мар тата, очищĕнни! Хăçантанпа пытарса усрана ăна Урине — пĕлместĕп, хĕрарăмăнне ăçтан пĕлсе çитерĕн?.. Тўрех янклаттартăм çур стакан. Пит лайăх пулса кайрĕ... Ларкаларăм-ларкаларăм та тата тепĕр çуррине ятăм. Тата ырăрах пулчĕ мана. Унтан чĕлĕм туртас килсе кайрĕ. Йĕм кĕсйисене хыпашласа пăхатăп—нимĕн те çук. Пиншакра пулĕ-ха пирус, терĕм. Чăлантан тухса мăн пўлĕмри лампочкăна çутрăм та алăк патнелле, тумтирсем çакăнса тăнă çĕрелле, утрăм. Çав самантрах стенари пĕр пăта çинче, ытти тумтирсем хушшинче, темле тĕксĕм кăвак карттус çакăнса тăнине курах кайрăм... Ман хамăн ун пек карттус ĕмĕрне те пулман. Ют çын карттусĕ! Ак япала! Мĕне пĕлтерет ку? Тăхта-ха, ара, чим-ха!..

...Микула самантлăха чарăнчĕ те пырне йĕпетме каллех куркари сăрана чăпăрт сыпрĕ. Унтан ассăн сывласа илчĕ те малалла калама пуçларĕ.

— Чăн шуйттанах кĕрсе ларчĕ пуль çав вăхăтра ман пуçа... Шухăшсене унăн та кунăн сиктерме тытăнчĕ... Карттус! Ют карттус! Ăçтан килсе лекнĕ вăл кунта?! Тĕп-тĕрĕс ас тăвватăп, эп каçхине килтен тухса кайнă чух вăл çукчĕ кунта. Ку пăтара яланах ман карттус çакăнса тăнă. Епле калас... Ман карттусăн штатнăй пăти пулнă вăл... Эппин-тĕк... Чим-ха, чим-ха, урлă-пирлĕ шухăшласан, мĕн пулса тухать? Паллă, пĕтĕмпех паллă, кунта йăнăш та, иккĕленў те пулма пултараймасть! Эп Уксах Якку патĕнче хăналаннă вăхăтра ман Урине патĕнче урăх арçын пулнă! Ют кушак аçи хайма вăрлама килнĕ! Еркĕн!..

Микула çамкине нăтăр-нăтăр сăтăркаларĕ те лач! сурчĕ.

— Ы-ых, çав ўсĕр пуçа-а! Мĕнле кăна ирсĕр шухăш пырса кĕмест пуль унта! — Вăл куçĕсене хаяррăн çутăлтарса илчĕ те малалла каларĕ: — Çапла, эп çук чухне ман Урине патне такам пынă пулать ĕнтĕ. Судьясем пек каласан, кун пирки вещественнăй доказательства пур: кăвак карттус. Ют çын карттусĕ, пирĕн килте нихçан

пулман япала... Ку çеç те мар-ха, çав самантрах ман ухмах пуçа тата тепĕр шухăш çиçĕм пек шăтарса кĕчĕ... Эрех! Эп халь кăна ĕçнĕ эрех ăçтан тупăннă? Мана Уринеçур литрăн çуррине ылхансах лартса пачĕ тейĕпĕр, анчах унăн тепĕр çурри ăçта? Ăна кам кÿпсе янă? Ним иккĕленмелли те çук, ăна лешĕ, лешĕ, ман тăшман, эп çук чухне килекенни, кайран васкаса тухса тарнă чух карттусне манса хăвараканни пехлесе кайнă! О-о!.. Мĕнле тÿссе ирттерес ку ĕмĕрне курман мăшкăла?!.

Микула каллех ман çине пăхса илчĕ.

— Халь эп сана кун çинчен вăраммăн каласа паратăп,— терĕ вăл самаях хурлăхлăн,— анчах ун чухне... ун чухне ман ÿсĕр пуçра çак пĕтĕм шухăш пĕр вунă çеккунт хушшинче вĕçсе иртрĕ вĕт, тупата туршăн унтан ытла мар...

— Малалла мĕн пулчĕ вара?— ыйтрăм эпĕ, Микула калавĕпе ытларах та ытларах интересленсе.

— Малалла-и? Паллах, тÿссе тăраймарăм! Çав шуйттан карттусне пăтаран карт! вĕçертсе илтĕм те çываракан Уринене пĕррех уринчен туртса вăратрăм.

— Кала халех, кам карттусĕ ку?! — кăшкăрса пăрахрăм ăна.— Кала, каçхине, эп çук чухне, кам пулчĕ сан патăнта? Кала, тетĕп, атту-тăк эп сана...

Урине йăпăр-япăр тăрса ларчĕ, ман çине ухмаха ернĕ çын çине пăхнă пек пăхать.

— Кай, ăçтан пĕлем эпĕ...— тет.

— Хăвăн патăнта кам пулнине те пĕлместĕн пулать? — урнă пекех çухăрса ятăм та ăна хирĕç, алăри карттуспа пĕррех пуçĕ урлă çапрăм.

Вăл урайне сиксе анчĕ, сив чир тытнă пек чĕтреме тапратрĕ.

— Эх, Микула, ĕçе-ĕçе ухмахах тухса кайрăн пулать!..

— Çапла çав, эп ухмах, сĕм-ухмах, анчах уншăн эсĕ шутсăр ăслă! Тилĕ пекех чее! Кала луччă, кам карттусĕ çак? Мĕнле еркĕн манса хăварчĕ?

— Ан палка кирлĕ мара! — тарăхса кайрĕ Урине те хăйне ним сăлтавсăрах айăпланăшăн.— Нимĕнле карттус та курман эпĕ, никам та килмен ман пата! Тен, эсĕ ху, намăса пĕлмесĕр, ял тăрăх сĕтĕрĕнсе çÿрерĕн пуль? Ун пеккине пултаратăн эсĕ! Кÿпсе тăнран тухрăн пулсан, вырт та çывăр часрах!

Анчах эп те парăнмарăм çав ĕнтĕ, хамăннех петĕм:

— Суятăн! Пĕлетĕн! Пулнă!

Хам çав вăхăтрах ют карттуса йытă тулана пек тулама тытăнтăм, урлă та пирлĕ çуртăм, шăлпа кăшларăм, юлашкинчен урайне пăрахса таптарăм...

— Эх, ухмах, эх, тăм çамка! Сана хăвна çаван пек пăрахса таптамалла! — кăшкăрчĕ Урине, эпĕ çаван пек урса кайса хăтланнине пăхса тăрса.— Тăмана, уй тăмани эсĕ!..

Ку вара мана тата ытларах хĕртсе ячĕ пулмалла. Карттус çĕтĕкне меллĕрех çавăрса тытрăм та тытăнтăм Уринене çунтарма!

— Тухса кай! Халех тухса кай! Кирлĕ мар мана сан пек аскăн хĕрарăм! — çухăратăп хам.

— Мана та сан пек пьянчук кирлĕ мар, каятăп, тек нихçан та ура ярса пусмастăп çак киле! Çитет мана кун чухлĕ асапланнипе, мăй таранах тăрантăм ĕнтĕ! — кăшкăрчĕ мана хирĕç Урине. Унтан хама пĕррех тĕксе ячĕ те, эп ура çине тăма ĕлкĕриччен ик ачана ик хул хушшине хĕстерсе, пÿртрен тухса тарчĕ. «Йытă эсĕ, урнă йытă!» — тесе кăшкăрса хăварнине çеç илтсе юлтăм...

— Хыççăн тухса чупмарăн-и? — ыйтрăм Микуларан.

— Çук. Хыççăн чупма манăн вăй та юлман пулмалла ĕнтĕ. Ура çине тăрсан чăлана кĕрсе кĕленчери юлашки эрехе ĕçсе янине çеç ас тăвататăп. Унтан каллех урайне тăсăлса ÿкнĕ. Кравать патне те çитеймен, сысна... Ирхине ирех тахăшĕ хама сăмсаран тыта-тыта туртнипе вăранса кайрăм. Куçа уçса пăхатăп — ман умра Уксах Якку чĕркуçленсе тăрать. «Мĕн пулнă вара сирĕн? Сансăр пуçне никам та çук, пур алăксем те яриех уçă, хуть те тракторпа килсе кĕр... Эсĕ хăвна çырмана çĕклесе кайса пăрахсан та сисес çук. Мĕн пулнă? — тесе ыйтать манран.

Эпĕ хĕремесленкелесе тăрса лартăм. Мĕн пулнине хам та чухласа илейместĕп-ха. Йăлт маннă.

— Арăму, ачу-пăчу ăçта? — каллех ыйтать Якку.

— Пĕлместĕп.

— Эсĕ ху мĕншĕн урайĕнчех çывăрнă?

— Пĕлместĕп.

— Ну, тăр тавай, мухмăр пуль-ха, эп сан валли çуррине илсе килтĕм. Хамăн та юсанмалла-ха пăртак... Эс ĕнер ман патра кăшт ытлашширех ятăн пулмалла çав. Шăллăм леçрĕ сана. Карттуса та хăванне мар, мананне



Чувашская Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького
11277-чув

тăхăнса кайнă. Ав, эп сан карттусна илсе килсе çак рам...

«Карттус» сăмаха илтсенех ман чĕре яш! турĕ. Çав самантрах, туххăмрах аса илтĕм çĕрле мĕн пулса иртнине. Арăма епле айăпланине те, ют карттуса çурса тăкса ун çĕтĕкĕпе хĕнеме тытăннине те, арăм ачасене çĕклесе тухса тарнине те...

Карттус! Ав камăн пулнă иккен вăл! Ӳсĕрпе эпĕ Якку карттусне тăхăнса килнĕ, анчах ăна-кăна чухламан та Уринене тапăннă... Ку çитмест-ха, хам тата карттусне çурса тăкнă вĕт-ха! Якку халь ăна илме килчĕ. Мĕн тăвас? Яккăва мĕн калас? Намăса ăçта чикес?!

— Ну, тăр, тăр тавай,— терĕ те Якку тепĕр хут, кĕсйинчен тулли кĕленче кăларса сĕтел çине лартрĕ.

Тăтăм. Якку ярса панине ĕçрĕм. Хам ун куçĕнчен пăхаймастăп... Çав вăхăтра вăл сасартăк сак çинчен сиксе тăчĕ те, алăк патнелле чупса кайса, кравать айĕнчен хайĕн карттусĕн виллине туртса кăларчĕ. Пĕр хуша юпа пек хытса тăчĕ. Манăн та чĕре тапма чарăнчĕ. «Ну, пулчĕ мĕн пуласси... Вĕлерет ку мана!»— тетĕп. Якку вăл лайăххи лайăх та, анчах тепĕр чухне ун характерĕ ай-вай! Ăна çиллентертĕн пулсассăн — тӳссе кăна тăр!

— Ку... ку мĕне пĕлтерет, тусăм-тăванăм? — терĕ Якку кăшт тăрсан, ман патăмалла карттус çĕтĕкне силлесе пырса. Хайĕн çине пăхма та хăрушă, чисти тигр. Куçĕсем — йăлтăр-ялтăр, тути чĕтрет.

— Мĕне пĕлтерет ку? Санран ыйтаççĕ, сатана!— кăшкăрса ячĕ хайхи.— Эп сана, тусăм-тăванăм, этем ыранне хурса хăнана чĕнетĕп, эс ман патăмра сысна пек кӳпсе лартатăн, ним чухлайми пулнипе хăвăн виçĕ пус тăман карттусна пăрахса хăварса манăн вĕр-çĕнĕ карттуса тăхăнса каятăн, çитменнине ăна хапха айĕнчен вĕрекен усал йытă пек туласа тăкатăн пулать, э? Мăшкăллас терĕн-и? Çапла-и?

Вăл ĕнтĕ ман умах пырса тăчĕ, манран ответ ыйтать, каламасан — халь тесен халь тута урлă тăхăнтарса яма пултарать, анчах эп ним те калаймастăп, чĕлхесĕр пулса лартăм — шапаш!

— Мĕншĕн çуртăн? Арăм мана ку карттуса хамăн менелник кунĕнче илсе паначчĕ, пĕлетĕн-и? Вăл маншăн чи хаклă япала пулнă! Ну? Кала, мĕн пирки çурса тăкрăн эс ăна? — çаплах тапăнчĕ Якку.

Те ӑс-пуҫ пӑтранса кайрӗ манӑн, тем пулчӗ, пӗлместӗп, анчах ёҫ мӗнле пулни ҫинчен Яккӑва чипер ӑнлантарса каҫару ыйтас вырӑнне тӑрук сиксе тӑтӑм та ҫав тери хӑрушла сасӑпа кӑшкӑрса ятӑм:

— Тытман эп сан карттусна! Ан та ҫулӑх ман ҫума! Тухса кай кунтан, мӗн тума сӗтӗрӗнсе килтӗн, кам чӗннӗ сана?

— Ак ку мӗн вара? Ҫака мӗн?— карттус ҫӗтӗкне ман сӑмса умнех илсе пычӗ Якку.

— Пӗлместӗп! Курман, илтмен! Ӳсӗр пуҫпа эсӗ ху ҫурнӑ пуль! Тухса кай, теҫҫӗ!— Эпӗ Яккӑва пӗррех кӑкӑрӗнчен тӗртрӗм.

— Ах, эс апла-и? — тата ытларах кӑвакарса кайрӗ ман Якку.—Эс халь мана хӑвалатӑн пулать? Ну, тусамтӑванӑм... —Якку хӑй аллинчи карттус ҫӗтӗкӗпе пӗррех туртса ҫапрӗ ман пуҫ урлӑ. Эп хирӗҫ патӑм. Вӑл — мана. Эп каллех ӑна. Пуҫланса кайрӗ вара пирӗн! Тӗпӗрти-тепӗрти! Тӗпӗрти-тепӗрти... Иксӗмӗр те пӗр харӑсах урайне тӑсӑлса ӳкрӗмӗр, пӗрне-пӗри аяла тума хӑтланатпӑр, кӑлтӑрмач пек йӑваланатпӑр, ҫав хушӑрах пӗрпӗрне нӑч-нач! нӑч-нач! тутаратпӑр, кӗпесене ҫуратпӑр, ҫыртатпӑр, чаватпӑр... Якку вӑйлӑрах та, мана ытларах лектерчӗ пулмалла. Анчах эпӗ те парӑнсах каймарӑм. Тахӑш самантра ун ӑлхи ман ҫӑвар тӗлне пулчӗ те, эп ӑна хыпса нӑтӑрт! тутартӑм. Якку мана чавсипе сӑмсаран питӗ хытӑ пачӗ... Тем пулса пӗтетчӗ пирӗн, ҫав вӑхӑтра Урине пырса кӗмен пулсан. Пӗрне-пӗри ҫапсах пӑрахаттӑмӑр пуль ҫав! Урине пире чарӑнма хушса пӗрре кӑшкӑрчӗ, тата тепре кӑшкӑрчӗ, унтан, эпир ҫаплах тӳпелешме чарӑнманнине кура, ҫенӗкрен тулли шыв витри ҫӗклесе кӗчӗ те пирӗн ҫине тӳрех чашлаттарчӗ. Тин вара ӑс кӗнӗ пек пулчӗ пире. Ман ҫурӑм ҫине утланса ларнӑ Якку сиксе тӑчӗ, питӗ усал сӑмах каларӗ те чупса тухсах кайрӗ, унтан эпӗ те тӑтӑм... Якку хыҫҫӑн тухса чупма Урине чарчӗ. Эп, хашка-хашка, Якку илсе килнӗ эрех юлашкине ҫавӑрса хутӑм та ҫав вӑхӑтра стена ҫумне ҫакнӑ мӑн тӗкӗр ҫинче хама курах кайрӑм...

Апайтурух, тур ҫырлахах! Пӗтнӗ ман портрет! Ҫамка ҫинче — чышкӑ пысӑкӑш хӗп-хӗрлӗ мӑкӑль, куҫ айӗсем кӑн-кӑвак, сӑмсаран леш «лорх» паранки пулса ларнӑ, тута ик ҫӗртен каталнӑ, янах шӑмми те чалӑшнӑ пек туйӑнать... Ну, тепӗр хут ҫилӗ килсе кайрӗ манӑн!

Ара, мăшкăл вĕт ку, ĕмĕрне каçармалла мар мăшкăл! Чип-чипер киле килсе çакăн пек «юсаса», çын куçĕ умне тухмалла мар туса хăвараççĕ! Мĕншĕн? Виçĕ пус таракан карттусшăн!..

— Каçармастăп! — терĕм те хама хам, килтен ухă йĕппи пек тухса вăркăнтăм. Арăм сиссе те юлаймарĕ ăна.

Çырма урлă мĕнле вĕçсе каçнине те ас тумастăп. Пĕррех пырса хул пуççипе хиртĕм Яккусен калинккине. Уçăлмарĕ. Питĕрнĕ. Тытăнтăм хăнтăртаттарма. Чышкăсемпе, урасемпе. Сас паракан та, хирĕç тухакан та çук. Те тухса кайнă пурте, те юри уçмаççĕ. Аха-а, хĕнерĕн-хĕнерĕн, ял кулли туса хутăн пулать те халь хăраса ӳкрĕн-и, питĕрĕнсе ларатăн-и, эдăки-так? Не выйдет! Кăтартам эп сана, уксах шуйттана! — тетĕп ĕнтĕ хам, вĕриленнĕçемĕн вĕриленсе.

Таçтан çавăнтах алла рычак кĕрсе кайрĕ. Р-раз! патăм пĕр чӳречинчен. Рами-мĕнĕпех тухса вăркăнчĕ. Р-раз! — теприне, р-раз! — тата теприне. Урам енчи пĕр чӳрече те юлмарĕ... Анчах çав самантрах хама хыçалтан çапса ӳкерчĕç те алăсене каялла çыхма тытăнчĕç. Эп урса кайса аташнине икĕ каччă курса чупса пынă иккен.

Микула калама чарăнчĕ те куркари сăрана ĕçсе ячĕ.

— Вайлă ĕçленĕ,— кулса ятăм эпĕ,— юмахри паттăрсем пекех!

— Юмах ярса кăтартрĕç вара мана,— терĕ Микула.

— Мĕн турĕç?

— Халăх пухăнчĕ — митинг пек! Акт çырчĕç. Пĕрисем: халех тĕрмене ăсатмалла, теççĕ, теприсем тата: ухмаха ернисен çуртне леçес, тесе мăшкăллаççĕ. Суда памалла турĕç. Якку патне темиçе кайса тархасларăм, йалт тӳлетĕп, çиелтен ĕçтеретĕп, ĕмĕр туслă пурăнапăр, тетĕп. Яккăвĕ килĕшме те пăхатчĕ, анчах арăмĕ вара яхăнне те ямасть, калаçмасть те. Пĕр сăмах кăна пулчĕ унăн: суд, суд! Ну, паян акă суд пулчĕ... Эпĕ, паллах, хам айăпа пĕтĕмпех йышăнтăм, каçару ыйтрăм, тӳрленме сăмах патăм, тем те пĕр... Яккăвĕ судра чĕнсех каймарĕ, арăмĕ вара ай-ай намăслантарчĕ, сунтарать кăна! «Усламçу Микули пек хулигансене хĕртнĕ тимĕрпе çунтармалла, ялтан кăларса ямалла, вĕсем пире çĕнĕ пурнăç тума кансĕрлеççĕ»,— темĕн те пĕр каласа тултарчĕ çавăн пекки. Çĕр тĕпнех анса кайăттăм!

— Мӗнпе пӗтрӗ-ха вара сучӗ?

— Çурса тӑкнӑ карттусшӑн тата çӗмӗрсе пӗтернӗ чӳречесемшӗн сто процент тӳлемелле турӗç, унсӑр пуçне хулиганствӑшӑн пӗр çулталӑк «принуд» пачӗç — çирӗм пилӗк процент.

— Алимент тытаççӗ эппин?—кулмасӑр тӳсеймерӗм эпӗ.

— Çапла, тип алимент... Кала-ха, Якур, мӗнле пурӑнмалла халь манӑн? Арӑм çисе ярать, çынсем кашни утӑмрах кулаççӗ ӗнтӗ... Кала-ха, э? Эс вӗреннӗ çын, манран ытларах чухлатӑн...

— Ӗçмелле мар та çапӑçмалла мар,— терӗм эпӗ ача чухнехи тусӑма,— ял-йышпа килӗштерсе пурӑнмалла, пӗтӗмпе те çав кӑна. Вара йӑлтах йӗркеллӗ пулать. Шантарсах калатӑп.

— Тӗрӗс те пуль çав эс калани,— терӗ Микула.

# ЛАЙӐХ ЭМЕЛ

*Колхоз бригадирӗн калавӗ*



Туйран туя, пасартан пасара йӑрккакан Акӑнипе хӑйӗнпе ҫеҫ мар, ывӑлӗпе те тӑн тухрӗ пирӗн. Шалт аптраса ҫитрӗмӗр, ним тума та пӗлместпӗр. Ӗҫлемест те ӗҫлемест колхозра, пурӑнать плахая персе. Юрать, Ахваниҫ мучи ӑс ҫитерчӗ, пулӑшрӗ пире ҫав ханттартан ҫын тума. Тавтапуҫах ӑна.

Анчах ун ҫинчен йӗркипе каласа парас пулать-ха.

Акӑни ывӑлӗ Терень ҫӳллӗшӗ — 192 сантиметр. Чӑваш хушшинче сахалтарах тӗл пулать ун пекки. Хуть те хӑш алӑкран та пӗкӗ пек авӑнса кӗрет вӑл, урай варрине тӑрсан, пуҫӗпе мачча каштине ҫапӑнать. Ялти ҫивӗчрех чӗлхеллӗ ачасем ӑна «Уртмах» теҫҫӗ. Илтнӗ-и эсир ҫавӑн пек сӑмах? Пирӗн енче ҫурт ҫине витнӗ улӑма пусарса тӑма хунӑ вӑрӑм шучӑсене ҫапла калаҫҫӗ... Терень мӗн тери вӑйлӑ пулни ҫинчен калаҫмалли те ҫук — атлет! Кашни аллине икшер пӑт пуканӗ тытса, вӗсемпе мечӗкпе вылянӑ пек выляма пултарать. Пӗр икӗ ҫул каялла лачакана тӳрчӗ таранах путса ларнӑ хӑйсен ӗнине хырӑмӗ айӗнчен вӗренпе яваласа илнӗ те ҫак, пӗр-пӗччченех туртса кӑларнӑ ӑна. Пӗр-пӗр пысӑк хулара пурӑнас пулсан, циркра ҫеҫ ӗҫлесе, халӑха тӗлӗнтермелле вӑл. Ҫын мар — упа!

Ҫук, упа та мар — слон!

Слон мӗн тери вӑйлӑ пулнине пӗлетӗр пуль?

Анчах... анчах ҫав! Колхоза ним усӑ та кӳмерӗ вӑл вӑйлӑ пулни. Кахал! Тӳсме ҫук кахал! Нимӗн те тумасть, хуть те кутӑн ҫак эс ӑна. Тӗрӗссипе, ытла вуҫех кахал теме те ҫукчӗ-ха. Килӗнче ӗҫлет вӑл, килӗнче ӑна амӑшӗ тем те тутарать. Иртнӗ ҫулла, авӑ, хӑйсен садӗнче ватӑ улмуҫҫисемпе ытти кирлӗ мар йывӑҫсене касса тымарӗсене кӑкларӗ-тӗк—тӗлӗнсе каймалла! Леш Крылов мучи юптарӑвӗнчи упаран та кая мар ӗҫлерӗ. Ты-

марсем айне тăлăп çанни хулăнăш рычак чиксе ярсă пĕррех хирет те—йывăç какĕ пăлтăрт! тухса ывтăнать!

Çапла... Анчах халăхпа пĕрре те ĕçлесшĕн пулмарĕ, эсрелĕ. Амăшĕнчен килнĕ ĕнтĕ ку. Мĕн пĕчĕкренпех çынсенчен уйрăм усраса ӳстерчĕ те вăл ăна. Пĕртен пĕр ывăл-çке-ха. Килти кашни тутлă татăк ун валли пулнă. Акăнин тата икĕ хĕр пур — пĕрин хăлхи витĕрех мар, çавăн пирки качча та каяймарĕ, тепри вара виççĕ качча кайса та каялла пычĕ — кĕрӳшĕсене амăшĕ тиркенипе,— вĕсем ĕçлеççĕ. Акăниййĕ хăй — килти коммерсант çеç, тек сутă тăвать. Паранкăпа каять, хăяр-купăстине, ыхри-суханне те сутать, çынсем сисиччен аншарли юхтарса та мухмăр уçма юратакансене ыр тăвать, тем те.

Шкулта вĕренесси пулмарĕ Теренĕн. Кахаллипех пулчĕ çав. Тăваттăмĕш класра виçĕ çул ларчĕ те, ытти ачасенчен пĕр аршăн ытла çӳллĕрех çитĕнсе кайса, ал сулчĕ.

— Ман маçак пĕр пуккă пĕлмесĕрех тăхăр вун виç çул пурăннă, эп пурăнаймастăп-и? — тесе каларĕ тет юлашкинчен.

Вун çичче çитсен авлантарчĕç çакна, чипер хĕрех тупса пачĕç. Чăх-чĕп ферминче ĕçлетчĕ, тăлăх ӳснĕскер. Пи-итĕ маттур хĕрачаччĕ, шутсăр ĕçчен.

Акăни хăй мĕн тери чее çын пулнине кунта та пит лайăх кăтартрĕ. Ывăлне авлантарнă-авлантарман, ун валли кил выранĕ илсе, уйăрса кăларам пекки турĕ. Ячĕшĕн унта кив мунчаран йытă йăви пысăкăш пӳрт те лартрĕ.

— Мĕн тума уйăратăн ывăлна, сирĕн килте те вырăн çитет вĕт? — тесе ыйтсан, вăл кула-кулах хуравларĕ:

— Ара, çамрăксене савăнса пурăнма ирĕклĕрех пултăр тетĕп-çке! Уйрăм пӳртре вĕсене никам та кансĕрлемест...

Паллах, ывăлĕпе кинĕшĕн мар тăрăшнă вăл. Ăна çĕр, кил вырăнĕ кирлĕ пулнă. Çав çулах унта улма-çырла йывăççисем лартрĕç — пĕр виç çĕр тĕп те ытла пулĕ. Хушшисене йăрансем туса тултарчĕç — ура пусма та вырăн çук!

—Пĕр пилĕк-ултă çултан таккойски пуйма пуçлатăп-ха ку садпа, ылтăн тултарнă нӳхреп пекех пулать вăл пирĕншĕн, колхоз çине çаврăнса та пăхмастпăр ун чух,— тесе каларĕ тет Акăни хăйĕн кӳршине.

Ара çав, пиллĕкĕн ик кил выранĕпе пурансан, чанах та пуйма пулать ĕнтĕ! Акани ухмах пулман...

Анчах Теренĕн çамрак арампа саванса пуранасси нумаях пымарĕ. Тухса кайрĕ унан арамĕ вĕсем патĕнчен. Мĕншĕн, тетĕр-и? Итлĕр ака...

Кинĕ чах-чĕп ферминче ĕçленĕ йӳтĕмпе Акани унта час-часах кайса çӳретчĕ. Хаш чух ана пулашанçи те пулатчĕ. Хай вара кашнинчех фермаран е чаха, е автан шахартса килнĕ. Илсе килет те нӳхрепе сиктерет, унтан пусать те пасара илсе каять. Пĕррехинче кинĕ сиснĕ çакна. Акани пырса кайна кун фермари чи паттар автан — пуринчен те вайларах аватакан «ылтан киккирик» çухална. Автанĕ питĕ хитреччĕ ĕнтĕ — районти ял хуçаларах выставкинче те пулна вал. Чаххисем ана юратса вилсех каятчĕç!.. Шырать-шырать çав автана Акани кинĕ — тупаймасть. Куççулĕпех макарать уншан — хай пахса ӳстернĕ-çке, тата вал чи лайах аратласкер пулна, тап-таса «ленгорн». Каçхине киле таврансан вара пахчари мунча умĕнче çав чапла автан киккириккине кушак аçи тĕшĕрсе ларнине курах каять. Ну, тӳрех тавçарса илет вал: автана Терень амашĕ тытса килсе пусна!

— Мĕншĕн варларан эсĕ ман автана? — çилĕпе ыйтать хунямашĕнчен.

— Ай-уй, кинĕм, ма пустуйранах çылаха кĕртетĕн эс мана? Тивме мар, куçпа та курман эп сан автанна! Ака, тура пур...— юрлана пек калаçса тӳрре тухма тапратать хунямашĕ. Çавантах çатти-çатти сахсахса илет.— Çĕр çаттар мана, эп сан фермунта хальччен пĕр чах тĕкĕ илнĕ пулсан! Ак, халех выртса çĕр кашлатап! Кай-кай-кай, ухмаха ан ерех!..

— Ак çак мĕн тата вал, кала-ха! — Кинĕ хайĕн ывçине уçса катартать. Вал автан киккириккине кушак çаварĕнчен каларсах илсе килнĕ иккен.— Мĕнле лекнĕ вал пирĕн пахчана? Хай вĕçсе килнĕ-и?—Çав вахатрах хунямашĕн саппунĕ çумне çыпаçса юлна ылтан тĕслĕ тĕксене асархать.— Ку мĕн тата? Кам тĕкĕ? Эх, намассар! Вара эсĕ, вара!..

Акани, куçне-пуçне çуталтарса, тем калама тарать, анчах кинĕ ана çавар уçма та памасть. Çав тери тарахса кайнаскер, аллинчи автан киккириккипе Акание пĕррех питĕнчен çатлаттарать те тухса каять.

— Правление пĕлтеретĕп! Суда партаратăп! — кăшкăрса хăварать юлашкинчен.— У-у, вупăр! Куçăм ан куртăр сана! Сана та, харам пыр ывăлна та!

Чăнах та председателе кайса каланă вăл. Акăни пирки правленире сӳтсе яврăмăр. Судах памарăмăр, анчах вунă тенкĕ штраф шаплаттартăмăр — кив укçапа çĕр тенкĕ вĕт вăл. Тата питĕ хытă асăрхаттартăмăр...

Шарламарĕ нимĕн те. Пĕр хушă хĕрĕсемпе пĕрле колхозра та ĕçлекелерĕ. Паллах, ячĕшĕн, колхозран каларса ыватасран.

Анчах ывăлĕ, Терень, çаплах плахая печĕ-ха. Ун аллинче пĕр «козырь» пурччĕ — салтака каймалли вăхăт çитсен, хăй арăслан пек пулин те, ăна çара илмен, тиркенĕ, браклананă. Тĕлĕнсе хытсах кайрăмăр! Куршакран икĕ шит çеç çӳллĕрех йĕкĕтсене илсе янă, Уртмаха йышăнман. Не годен! Анчах мĕншĕн «не годен»? Хулана кайсан, председатель юриех военкомата кĕрсе пĕлнĕ — ма илмен çав упана? Салтавĕ пур-мĕн: Теренĕн ура тупанĕ лаптак иккен. Вырăсла ăна «плоскостопие» теççĕ пулас. Çавăншăн хăталса юлнă, эсрелĕ. Кайран хăйне çара илменнипе усă курма тытăнчĕ, мур. Колхоза ĕçлеме тухма чĕнсенех: пĕлетĕр вĕт, эпĕ чирлĕ çын, мана, ав, салтака та илмерĕç, мĕнле намăс мар сире мана ĕç хушма? — тетчĕ.

Пĕрре, утă çине тухас умĕн, çакна ятарласах правление чĕнтĕмĕр. Юлашки хут калаçас — ĕçлет-и вăл, ĕçлемест-и? Питех кутăнлансан — харам пырсем пирки йышăннă саккунпа та усă курма пулать!

Пычĕ çак. Туяпа. Уксахлать.

— Мĕн пулчĕ тата, Терень? — ыйтатпăр ĕнтĕ.

— Ревматис,— тет.

— Ăçта тупрăн вара вăл чире?

— Мунча хыççăн сив кăвас ĕçрĕм.

— Сив кăвас ĕçсен пыр ыратаканччĕ-çке, ӳслĕк пулаканччĕ.

— Манăн ун пек мар, манăн тӳрех урана каять. Урасем вайсăр. Пĕлетĕр вĕт-ха, мана салтака та урасем пирки илмерĕç.— Шутсăр ĕнентермелле калаçать мар-и!

— Чим-ха, Терень, ĕнер каçхине, вăййа тухсан, эсĕ мар-и-ха анатри кĕпер çинче свайсене хуçса пăрахмаллах ташлаттăн? — çилленме пуçласа, сиксе тăчĕ председатель.— Мĕнле тата ытла тăрук чăлахланатăн?

— Манăн яланах çавăн пек тăрук пулать. Акă, çак самантра вар ыратмасть манăн, анчах тепĕр вунă минутран абендицит е кастрит пулса ларма пултарать.

— О, тухтăр пекех калаçатăн-çке! Капла эсĕ часах профессора та тухса кайăн? — кулса илчĕ эпир калаçнине итлесе ларнă бухгалтер.

— Пулма та пултарать. Ахаль çичĕ çул çÿренĕ-им эпĕ шкула? Кашни кун татмалли календарь листисене вулатăп. Унта тем те вĕрентеççĕ.

— Анчах çынсем пек чипер ĕçлекен колхозник пулаймастăн авă. Хăçан йĕркене кĕме шутлатăн? — хаяррăн ыйтрĕ председатель.

— Ăна тÿррĕнех татса калама пултараймастăп. Сывлăхран килет.

— Ан палка кирлĕ мара! Сан пек сывлăхли ялта никам та çук-ха!

— Пĕрре пур, председатель юлташ,— каллех кулса хутшăнчĕ пирĕн бухгалтер.

— Кам пур?

— Иккĕмĕш фермăри «Улăп» ятлă вăкăр...

— Тĕрĕс, çав пур ĕнтĕ тепре.

Пĕр хушă пÿлĕмре шăп пулчĕ. Терень, ним пулман пекех, тутлăн анасласа илчĕ.

— Çыварас килсе кайрĕ-им? — çилĕпе ыйтрĕ председатель, ун çине йĕрĕнерех пăхса.

— Çапла, пĕр çĕр çирĕм-çĕр аллă минут çыварса илсен, кансĕрлемен пулĕччĕ,— терĕ те Терень, çăварне тата ытларах карчĕ.

Председатель тÿсеймерĕ, сĕтел çине чант! çапрĕ.

— Çитет плахая персе пурăнма, Качакаев юлташ! Нумай чăрманнă эпир санпа, нумай каçарнă сана. Тĕкех ун пек пулмасть. Этем шутлă ĕçлеме тытăнмасан, эпир халех сан кил выранне тытса илетпĕр. Ку пĕрре. Унсăр пуçне, эс малашне те тÿрленместĕн пулсан, эпир сана харам пырсем пирки каларнă указ тăрăх...

— Мĕн? Мĕн... указ тăрăх? — туйине шакăрт! пăрахсах сиксе тăчĕ Терень.

— Асататпăр çынсене ĕçлеме вĕрентекен çĕре!

— Не имееш правă! — кăшкăрчĕ ăна хирĕç Терень.

— Мĕншĕн «не имееш правă»? Эс мĕн, хăвна харам пыр мар, тетĕн-и?

— Çук, харам пыр мар.

— Кам вара эс?

— Эп ухмах.

— Епле ухмах?

— Çаплах. Ухмах, и вçо. Анне те мана кунне вуншар хут ухмах, тет, пуранма, пурнаç тума пĕлместĕн, тет. Хам ухмаххине хам та туятăп эпĕ. Тепĕр чухне пуçра пĕр ăс та юлмасть, веç арканса каять. Нерваннăй тухтăр патне кайса пăхатăп-ха, тен, вăл мана ухмахсен больницине хурĕ...

— Ухмах мар эсĕ, тилĕ пек чее çын! Ултавçă!

— Çук çав, председатель, ухмахах эп. Ăсла пулнă пулсан, сан вырăнта ала пусса ларăттăм, сана тăн кĕртĕттĕм. Ухмах пирки халь сан умăнта юпа пек тăратăп. Анчах ухмахсене суд тумаççĕ, пĕлетĕп эпĕ! Эс каланă вырăнсене те ямаççĕ вĕсене — усси çук. Ăнлантăн-и?

— Ăнлантăм... эс мĕн тери шулĕк пулнине.

— Ку сăмахшăн сана ответ тыттарма та пулать, председатель. Халь кил вырăнĕ пирки калам. Тытса илейместĕн эс ăна, мĕншĕн тесен çак кунсенче эпĕ каллех авланатăп та ман çемье пулать — хуçалăх!

— Кама илетĕн вара? Хĕрне тупрăн-и? — йĕкĕлтерех ыйтрĕ бухгалтер.

— Хĕрне тупасси темех мар вăл,— ун çине чалăшшăн пăхса илчĕ Терень.— Санăн хăвăн та икĕ хĕр-ха, пырса ыйтсассăн пĕрине паратăнах...

— Тьфу! Чĕлхӳ харса лартарах санăн! — тăрук тарăхса кайрĕ бухгалтер.— Сан пек ухмаха хĕр парса ларма çав териех йӳтемен-ха!

— Во! во! — саваннă пекех кăшкăрса илчĕ Терень.— Эсĕ те мана ухмах терĕн! Тĕрĕс каларăн! Эппин, ма çулăхатăр эсир ман çума? Мана сирĕн ĕçлеме мар, ăс пухма ярас пулать! Ман сывлăха тӳрлетесси çинчен шухăшлăр эсир, çавăн пирки тăрăшăр!

— Юрать, тăрăшăпăр,— пӳлчĕ ăна председатель.— Енчен те эсĕ ыран халăхпа пĕрле йăлăма утă çулма каймасан, тӳрлететпĕр эпир сана. Лайăх тӳрлететпĕр. Ĕмĕр-ĕмĕр тав тăвăн пире...

...Те амăшĕпе пит тĕплĕн калаçнă Терень çакăн хыççăн, те хăех шут тунă — ăна пĕлместĕп, анчах тепĕр кунне каçалапа йăлăма утта пынă. Çакăр-тăвар чиксех, çава-лапатка йăтсах пынă. Нумайăшне тĕлĕнтернĕ ку, ма тесессĕн икĕ-виçĕ çул халăхпа пĕрле ĕçлемен вăл. Каçхине кăвайт умĕнче çынсемпе шӳт те тука-

лана, çамраксемпе пӗрле пăртак ташша та хуçса илнӗ. Чипер çын пекех.

Ир-ирех халăх çулма тытăнать. Улăхра çава сасси янрать кăна. Ешӗл çăра курăк, кăкран касăлса, паккусăн-паккусăн выртать. Ӗç аннăçемӗн тата хытăрах ӗçлес килет. Халăхпа пӗрле, икӗ хӗр хушшинче, Терень çулса пырать. Пӗвӗ çӳллӗ, аллисем вăрăм та — сарлакан çавăрса илет çавипе. Ытармалла мар!

Пӗр сехет иртет çавăн пек хӗрӳ ӗçре, икӗ сехет, виççӗмӗш çине те каять. Вара сасартăк, кӗтмен-туман çӗртен, пирӗн ӗçчен Терень çавине пăрахать те кăлтăрмач пек пӗр вырăнтах вăлтăр-вăлтăр çаврăнса илет. Унтан аяккалла талт-талт-талт кайса çӳллӗ курăк çине лап! месерле тăсăлса ӳкет. Юнашар çулса пына хӗрсем, тӗлӗннинчен ытла хăраса кайса, ун патнелле ыткăнаççӗ. Вӗсем çитиччен Терень çăварӗнчен кăпăк сирпӗтме тапратнă, куçӗсене çӳлелле çавăрса пăрахнă, урисемпе тапкаланма тытăннă, чăмăртаса лартнă чышкисене чӗтретнӗ, пуçне тек-текех çӗкле-çӗкле çӗре тӳнклеттернӗ...

— Килӗр кунта-а! Терень виле-ет!

— Терене тытса пăрахнă-ă! — кăшкăраççӗ ним тума пӗлмен хӗрсем.

Ну, паллах ӗнтӗ, пӗр наччасрах пӗтӗм халăх Терень патне чупса пухăнать. Терень тапаланать, кисренет, кăпăк сирпӗтет, шăлӗсене шатăртаттарать. Халăх пăлханма, шавлама тытăнать...

— Чупăр часрах фершăл патне! Ăçта вăл?

— Фершăл килмен паян, хулана кайнă...

— Хăпарса выртăр хăшӗ те пулин ун çине, кисренме ан парăр! Пуçне, пуçне тытăр, атту çапса çӗмӗрет вăл ăна! Аллисене çӗр çумне пусса лартăр!

— Шывпа сапсан мӗнле-ши?

— Юрамасть шывпа!

— Тен, çăварне уçса эрех ярса пăхас?

— Уй, ухмах та-çке эсӗ!

Терень çаплах чӗтрет, авкаланать, тӗве пекех сурчăк сирпӗтет, анчах ăна никам та нимӗнпе те пулăшаймасть. Тăраççӗ пăхса çынсем, ахлатаççӗ, Терене хӗрхенеççӗ — пӗтӗмпе те çав кăна.

...Çав вăхăтра ку тӗлпе колхоз валли карçинккасем çыхма касна çӳçе хуллисем тиенӗ лавпа Ахваниç мучи иртсе пырать-мӗн. Улăхри пӗтӗм халăх пӗр çӗре пухăн-

са тем пирки шавланине курать те, вăл та, лав ҫинчен васкасах сиксе анса, ҫынсем патне пырать.

— Мĕн пулнă, хура халăх?

— Терене тытса пăрахнă,— теҫҫĕ ăна. Ахваниҫ, ҫынсене сиркелесе, маларах иртет. Курать — курăк ҫинче чăнах та каччă тапкаланса выртать, кăпăк кăларать.

— Мĕн тумалла-ши, Ахваниҫ мучи, мĕнле пулăшмалла ăна? Эс вата ҫын, пурнăҫра нумай курнă, тен, пĕлетĕн — мĕн таваççĕ кун пек чух? — ыйтаççĕ ҫамрăксем.

Ахваниҫ мучи сайра сухаллă янахне пĕр пӳрнипе кăтарт-кăтарт хыҫса илет те куҫĕсемпе мăч-мăч-мăч тăвать.

— Пĕлкелетĕп пăртак,— тет вăл,— куркаланă кун пеккине...

— Кала, эппин, часрах, мĕн тумалла?

— Чиччас, чиччас, ан васкăр,— тет мучи,—эп ăна хамах та сывататăп пуль-ха. Анчах ăна сыватма вырăн ытларах кирлĕ...

Ҫынсем старик каланине итлеççĕ, сирĕлеççĕ. Ҫав самантрах вара Ахваниҫ унччен ҫурăмĕ хыҫĕнче тытса тăнă вăрăм ҫӳҫе хуллине яш! ҫĕклет те халĕ те тапкаланса выртакан Терене пĕççи тăрăх вăччăшт! тутарать. Вăччăшт! Терень, тăрук пĕтĕм кĕлеткипе сиксе илсе, ӳпне ҫавăрнса выртать.

— Маттур, Терень, маттур, кун пек сана эмеллеме лайăхрах пулать,— тет те Ахваниҫ, каччăна хулăпа ҫурăмĕ тăрăх чашлаттарать. Пĕрре, иккĕ, виççĕ, ҫинеҫине, ахлатса!

Хăшĕсем ăна чарма та пикенеççĕ — мĕн тăватăн эсĕ, ăнран кайнă старик, чирлĕ ҫынна хĕнеме юрать-и вара, уншăн суда та лекме пулать!

— Юрать, юрать, кун пек туни пу-лă-ăшать! — тет ăна хирĕҫ Ахваниҫ, ун аллинчи хулă Терень ҫурăмĕ ҫинелле шăхăрса аннă май...

Хайне чăнах та тытса пăрахнă пек, хай ним пĕлми выртнă пек кăтартас шутпа пулĕ ҫав, Терень малтан тӳснĕ. Анчах Ахваниҫ мучи ăна ҫурăмĕнчен аяларах уйрăмах хытă лектерсен ялт! сиксе тăнă та, старик аллинчи хулла туртса илсе, ҫăтăр-ҫатăр хуҫса ткнă.

— Эс ма хӗнетӗн мана, ват шуйттан? Ыратмасть тетӗн-и мӗн? — кăшкăрса пăрахнă вăл старике, ăна кӗҫ-вӗҫ ҫапса ӳкерес пек чышкăласа.

— Эп хӗнеместӗп, сыватап ҫеҫ сана,— тенӗ Ахваниҫ, аллисене сăтăркаласа...

Ҫавăнтан вара Терень тытамак чирӗпе чирлеме вуҫех пăрахрӗ. Паян кун та чиперех ҫӳрет. Ӗҫлет. Чăн та, ытлашши хастарах мар, ҫапах та ӗҫлет. Ахваниҫ мучи эмелӗ лайăх пулчӗ те-ха...

●

## ЮЛАШКИ МЫСКАРА



Иртнĕ çуркунне, ытармалла мар илемлĕ те ăшă кун, хулари «Тир-саран» кантур çыннисем нумай çул хушши хăйсемпе пĕрле ĕçлесе пуранна Асколон Иванч Экkeeва юлашки çула ăсатса ячĕç...

Ăнланмалларах калас-тăк, Эккеев юлташа вĕсем масар çине илсе кайса чикрĕç эппин. Вилчĕ-çке вăл, шеремет, вилчĕ! Кĕтмен-туман çĕртенех пуçтаранса вырт-рĕ. Хăй ытла ватах та марччĕ-ха, çитмĕл пиллĕке те çитменччĕ, самаях пуранмаллаччĕ унăн, анчах мĕн тăвас тетĕн... Ытла тăруках тем пулнă-çке çынна? Те çăварни эрнинче кантурти хĕрĕх виç çулхи хĕре, вут пуççи пек ялкăшакан çуçлĕ Элькка машинисткăна качча илни юраман, те мунчара ăшши ытла нумай парса çапăнни выранлах пулман. Мунчаран тухас тесе хăрах йĕм пĕççине тăхăнсанах тĕшĕрĕлсе аннă та — сыв пул, çут тĕнче, чипер пуран, çамрăк арăм!..

Мĕн тăвас тетĕн, этем пурнăçĕ çаван пек...

Питĕ хисеплĕ çын пулнă çав Асколон Иванч, «Тир-саран» кантурĕнче вун çичĕ çул пĕр кăлтăк-сăлтăксăр, пĕр выговорсăр ĕçленĕ. Çав хушăра кантурта вăтăр тăватă директор улшăннă — пĕрисене хуса янă, теприсем çÿлелле çĕкленнĕ, анчах Асколон Иванч хăйĕн ĕçне, пĕр эрнелĕх заводить тăвакан сехет пекех, тĕп-тĕрĕс туса пынă та ахаль кассиртан аслă бухгалтера çитнĕ.

Тăрăшнă вăл!

Сехет çинчен асăннă май çакна та каламалла: Асколон Иванчпа пĕрле ĕçлекенсене сехет вуçех те кирлĕ пулман. Вĕсем хăйсен аслă бухгалтерĕ çине пăхнипех вăхăт мĕн чухлине, миçе сехет çитнине тата мĕн тумаллине питĕ лайăх пĕлсе тăнă. Ирхине Асколон хăйĕн сĕтелĕ хушшине ларса шут шăрçине пĕрре шак! тутарчĕ

пулсан, пӗлсех тӑр — шӑп тӑххӑр ҫитнӗ. Кӑнтӑрлапа пуканне кӗр-р! каялла сиктерсе ура ҫине тӑчӗ пулсан — пӗр сехет. Эппин апата каймалла. Каҫалапа Асколон велосипед пек куҫлӑхне сӑмси ҫинчен илсе сӗтел ҫине хучӗ, унтан аллисене хӑлат ҫунаттисем пек ик еннелле сарса ярса тутлӑн кӑна карӑнчӗ-тӗк — ӗҫ пӗтрӗ эппин, киле каймалла...

— Ансат пире хамӑрӑн Асколонпа пурӑнма! — тенӗ «Тир-сӑран» сотрудникӗсем.— Ылтӑн ҫын вӑл, тупата туршӑн! Нихҫан никама сив сӑмах каламасть, хӑлхи витӗрех мар пирки пухусенче малти ретре ларать пулсан та, ыттисем пек ҫынсене тиркеме сиксе тӑмасть, сасӑланӑ чух та аллине чӑн юлашкинчен ҫӗклет...

Пухусенче ӑна яланах мухтанӑ.

— Эккеев юлташран пирӗн пурин те пример илес пулать. Курӑр-ха, ӗҫ дисциплинине епле тытса пырать вӑл! Профсоюз укҫине те никамран малтан тӳлет, ҫамрӑк мар пулин те, пӗр субботникрен юлмасть.

— Кӑмӑлӗ мӗн тери лайӑх тата унӑн! Ҫамрӑксем, ав, пулчӗ-пулмарӗ пӗр-пӗринпе хӑр-хар туса илеҫҫӗ. Анчах Асколон Иванч епле йӗркеллӗ тытать хӑйне! Вӑл кама та пулин, ӑҫта та пулин, мӗнпе те пулин кӳрентернине ас тӑватӑр-и эсир? Ҫук, ас тумастӑр!..

Кӑмӑлӗ чӑнах та ытармалла мар пулнӑ ҫав унӑн. Хуть те хӑш вӑхӑтра пырса кивҫен укҫа ыйт — парать. Санӑн мӗнле те пулин хуйхӑ-суйхӑ пултӑр — чунтан шеллет сана, лӑплантарать, епле те пулсан тӳссе ирттерме ыр сунать.

— Пурнӑҫра усалли иртсе каять вӑл, тӑванӑм, кайран пурӗ пӗр лайӑх пулать. Ан ус пуҫна, ҫӗкле ӑна ҫӳлерех!

Темле майпа тата вӑл хӑш сотрудник хӑҫан ҫуралнине малтанах пӗлсе тӑнӑ. Тепри, тен, хӑйӗн менелникӗ ҫинчен манса та кайнӑ пуль, анчах ирхине ӗҫре Асколон Иванч ун патне пырать те аллине тытса чӑмӑртать (хӗрарӑм пулсан — чуп туса илет):

— Саламлатӑп сана, тӑванӑм, эс паян вӑтӑр пилӗк ҫул тултарнӑ ятпа! Тата икӗ хут вӑтӑр пиллӗк пурӑнма ыр сунатӑп...— Хӑй ҫавӑнтах парне тыттарать — пластмассӑран тунӑ пӗр-пӗр упӑте е качака таки.

Кантуртисенчен кам та пулин авланас е качча каяс пулсан вара Асколон Иванч вӗсене яланах пӗр коробкӑ резинӑ ӗмкӗч тыттарнӑ.

— Ну, мыскараçă та эсĕ, Асколон Иванч! — парнене кăмаллăн кулса йышăннă лешсем.

Мыскарасем тума чăнах та пит ăста пулнă Асколон...

Пĕррехинче, çавăн пек, вĕсен кантурне ревизор пынă. Питĕ хаяр ревизор. Кашни накладноях, кашни квитанциех кутăн та пуçăн çаваркалана, алă пуснисене лупă витĕр пăхнă—суя мар-и? Пĕр-пĕр квитанци хĕрри лутăрканнă пулсан, Асколона вăрçса тăкнă:

— Укçа докуменчĕсене тытма пĕлместĕр, услапсем! Юрамасть ун пек ĕçлеме!..

Тарăхтарсах çитернĕ вăл Асколона. Мĕн тăвас куна? Шутлать-шутлать те Асколон, пĕр каçхине çав ревизора ресторана апат çиме чĕнет. Лешĕ, паллах, килĕшет. Мĕнле ревизор хăйне хăна тунине йышăнмасть-ха? Çитерет çакна, ĕçтерет. Çитернинчен ытларах ĕçтерет ĕнтĕ. Лешĕ часах картран иртет те «Шумел камыш» юрласа ярать, чарма пынă официанткăна çурăмĕнчен аяларахран чĕпĕтсе илет. Скандал! Çав хушăра Асколон хăйсем ĕçнĕ-çинĕшĕн укçине те тӳлемест, ресторантан вăшт кăна тухса шăвăнать. Ну, леш ревизор ашкăннă пирки акт çыраççĕ, хăйне пĕр наччасра вытрезвителе сĕтĕрсе каяççĕ.

Ирхине мухмăр-сухмăрлă, намăс курса пĕтнĕ ревизор чире перет те ĕçне пĕтермесĕрех каялла тухса каять...

Тепрехинче тата Асколон ак çапла тăвать. Урăх çĕрте ĕçлекен пĕр юлташĕ темлерен çакна хăй менелникне чĕнмен. Те юриех чĕнмен, те ытлашши хыпкаланнипе манса хăварнă.

— Ну, тăхта, кăтартам эп сана! — тет те Асколон, ĕç хыççăн кантурта юлса виçĕ сехет хушши пĕр пӳрнепе шаккаса, «йыхрав хучĕ» пичетлет:

«Хисеплĕ тусăм, эпĕ аллă пилĕк çул тултарнă ятпа ыран, каçхине çичĕ сехетре, ман патăма пĕр курка сăра пырса ĕçме чĕнетĕп. Эс пынăшăн эпĕ çав тери савăнаттăм...»

Утмăл штук хатĕрлет те вăл çакăн пек хут, пĕр ачана укçалла тара тытсах тĕрлĕ çынсене валеçтерет. Эх, пырса тулать вара лешин патне хăна! Пӳрте мар — çенĕхе те шăнаçмасть. Юрать-ха, ку ĕçĕ çулла пулнă та, сĕтелсене картишне йăтса тухса лартнă, йĕри-тавра хăмасенчен саксем туса вырнаçтаркаланă. Виçĕ ещĕк

эрех, çур пăт кăлпасси, вăтăр банкă консервă илме тивнĕ хуçин. Самаях укçа кăларттарнă ăна Асколон!..

Кайран вăл, çакăн çинчен ĕçри юлташĕсене каласа парсан, лешсен вар-хырăмĕсем хытса ларичченех ахăртнă...

Анчах «Тир-сăранрисемпе» ун пек шÿтсем туман вăл, вĕсемпе питĕ килĕштерсе пурăннă. Никам та усал шухăшлама пултарайман ун çинчен.

Чăн та, кантур сотрудникĕсен пурнăçĕнче акăш-макăш кÿренмелли япаласем пулкаланă ĕнтĕ. Хăш чух çынсем пĕр-пĕринпе çапăçса каясси, арăмĕсем упăшкисенчен, упăшкисем арăмĕсенчен уйрăласси патнех çитнĕ, анчах уншăн Асколон айăплă тесе никам та шутлама пултарайман.

Ну, калăпăр, хăш чух ак çакăн пек фокуссем пулса иртнĕ.

Çынна курорта яраççĕ. Унăн гипертони, юн таппи ытлашши вăйлă. Пăлханма-хумханма пĕртте юрамасть. Анчах курорта çитсен темиçе кунтанах вăл машинкăпа пичетленĕ çыру илет: «Сан арăму патĕнче кашни каç...» т. ыт. те. Ну, лешĕ хыпăнса ÿкет, телеграммăсем парать, телефонпа калаçма пикенет. Ответ çук. Курортукачку, пăрахать те килет вара. Анчах килĕнче йĕркеллех-мĕн. Арăмĕ пĕр эрнелĕхе яла кайса вата амăшне паранкă кăларма пулăшнă çеç...

Çĕр варринче сасартăк хваттерти телефон янраса каять. Темиçе хут, çине-çине. Кил хуçи вырăн çинчен сиксе тăрса трубкăна ярса тытать.

— Алло, итлетĕп...

— Гаврилов-и ку? — ыйтать трубкăри вăрттăнтарах сасă.

— Çавă. Кам калаçать? Мĕн кирлĕ?

— Сирĕн юратнă ывăлăр Валерий ăçта?

— Юлташĕсемпе пĕрле пулла кайрĕ. Çĕр выртмаллах.

— Çук, хисеплĕ Гаврилов юлташ, унта мар вăл. Такамсемпе пĕрле ĕçсе ÿсĕрĕлнĕ те çапăçма тытăннă. Гахăшĕ ăна çĕçĕпе яшлаттарнă. Машинăпах илсе кайрĕç...

— Хăçан? Ăçта? — тăруках анкă-минкĕ пулса кăшкăрать Гаврилов.— Алло, алло!

Анчах леш вĕçĕнчи сасă урăх илтĕнмест...

Гаврилов часрах арăмне, ачисене вăратать:

— Валерике чиксе парахна!..

Пуçланса каять вара... Ашшĕпе амăшĕ ăнран тухса кайсах унта та кунта шăнкăравлаççĕ, анчах ним усси те пулмасть. Никам та нимĕн те пĕлмест иккен Валерик çинчен. Гавриловсем çĕр хута милицие чупаççĕ, унтан «васкавлă пулăшăва» çитеççĕ. Валерик ниçта та çук. Çĕрĕпе çывăрмаççĕ, арăмĕн чĕри çурăлас патнех çитет, ун патне тухтăр чĕнме тивет...

Ирхине ывăлĕ чип-чипер, тĕрĕс-тĕкелех таврăнать. Пĕрне тулли пулă унăн. Хăй тин çеç çуралнă пекех хаваслă.

— Кам шуйттанĕ мăшкăлларĕ-ши кун пекех?! Ы-ых!..— ниçта кайса кĕме пĕлмеççĕ Гавриловсем.

Ăçтан пĕлетĕн-ха камне? Вăл шўт тунă та ним шутламасăрах çывăрма кĕрсе выртнă ĕнтĕ!

Гаврилов ĕçе пырсан çак тискер шўт çинчен каласа парать те, пурте çав тери тарăхаççĕ.

— Ун пек çынсене, судпа айăпласа, никам çук çĕре инçете ямалла!

— Чĕлхине тăпăлтарса кăлармалла!

Анчах Асколон çав калаçусене хутшăнсах кайман. Вăл е шутсăр тăрăшса ĕçленĕ пек тунă, е чĕлĕм туртма тухнă...

— Унăн ачи-пăчи çук та — ним те мар çав, çавăнпа кичем ăна кун çинчен итлеме,— тенĕ çакăн пирки юлташĕсем.

Пурăна киле Асколон пенсие тухнă, авланнă, çулла коллективлă пахчара каюра пек чакаланнă, çамрăк арăмне улма-çырла çитернĕ, хăш чух хăйĕн продукцине пристань умне кайса самаях сутнă, анчах хутран-ситрен «Тир-сăрана» кĕркелесе тухнă, профсоюз пуххисене çўренĕ.

— Чун туртать, халăхпа пĕрле пулас килет,— тенĕ вăл.

Кантур сотрудникĕсен пурнăçĕнче халĕ те кўренмелли япаласем пулнă-ха — час-часах тĕрлĕ инстанцисенчен жалобăсем тĕрĕслеме пыра-пыра кайнă. Пĕрине кантурти авалхи швейцарски сехете вăрланăшăн айăпланă (сехетне вăл пачах юрăхсăра тухнăшăн списать туса склада кăларса парахнă), тепри — местком председателĕ хăй! — ўсĕрпе çапăçса питне-куçне çĕмĕрсе пĕтернĕ имĕш (çынни урă пуçпах мотоцикл çинчен ўкнĕ), виççĕмĕшĕ техничкăна ача тутарнă та халь пĕр пуспа

та пулăшмасть иккен (техничкин хăйĕн ачи те пулман, ялти аппăшĕнне усрама илсе килнĕ-мĕн...).

Çаксем çинчен илтсен, Асколон та ыттисемпе пĕрлех тарăхнă:

— Мĕн çитмест-ши çавăн пек путсĕр этемсене?! Мĕншĕн вĕсен çын юнне пăсмалла-ши? Эп хам ĕмĕрте пĕр жалобă та, пĕр элек те çырса курман та — тӳсме пултараймастăп çавăн пеккисене. Курита айĕнчи çĕленсем вĕсем, çынсем мар!..

Унтан Асколон вилнĕ. Каларăм-çке, мунчаран тухса пĕр йĕм пĕççине тăхăнсанах тăсăлса ӳкнĕ. Чĕри шарт! çурăлса кайнă унăн.

Ну, паллах ĕнтĕ, вилнĕ çынна йĕркеллĕ пытарас пулать. Уйрăмах — Асколон пек хисеплĕ çынна, пенсионера. Местком комисси тăвать, хаçата хурлăхлă пĕлтерӳ парать: çапла-çапла, Эккеев юлташ вăхăтсăр вилни çинчен хурланса пĕлтеретпĕр... Типографие кайса катан пир тăрăхĕ çине çур метр çӳллĕш саспаллисемпе пичетлеççĕ: Талру çăмăл пултăр, ыра çыннăмăр! Чечек кашăлĕсем тем чухлĕ илеççĕ. Анчах оркестр тытма местком укçи çитмест те, комисси членĕсем Асколон арăмĕпе, Элькка машинисткăпа, дипломатилле калаçу пуçлаççĕ:

— Асколон Иванчăн кăштах укçа юлнă-тăр, тен, оркестршăн çуррине тӳлетĕн, э?

Анчах Элькка вут пуççи пек çӳçне ласт! сулласа илет те пурне те тĕлĕнтерсе пăрахать:

— Тен, юрăпа ташă ансамбльне тара тытас тетĕр? Е пĕтĕм филармоние сĕтĕрсе килес?

— Элькка, эс чипер калаç-ха...

— Халь те пит лайăх калаçатăп! Нимĕнле оркестр та пулмасть! Пумилкки те пулмасть. Çук манăн пĕр пус та!

«Эх, пулать те çын çĕр çинче!—тĕлĕнсе хытсах каяççĕ комиссисем.— Асколонăн пĕтĕм пурлăхне çаварса илчĕ хăй, укçи те сахал мар юлнă пуль-ха, анчах çавăншăн тав тăвас вырăнне вăл ав мĕн хăтланать, хĕрлĕ çӳçлĕ упăте!»

Оркестрсăрах, «типĕллех» пытарчĕç вара Асколона. Чăн та, тупăкне шăтăка антарас умĕн пит хитре сăмахсем каларĕç — тӳрĕ те таса чунлă çын, пурнăçра пурне те ырă тĕслĕх кăтартнă, ырми-канми ĕçчен пулнă тата ыт. те. Анчах «вут пуççи» Элькка хăй сăмахне çирĕп

тытрĕ, вилнĕ çынна асăнма никама та чĕнмерĕ. Çапах та Асколонăн чи çывăх юлташĕсем, улттăн-çиччĕн, пур-çук укçисене пухса ăна-кăна илчĕç те çав-çавах ун хваттерне кайрĕç.

— Йăлине тăвасах пулать...

Хайсем илсе пынине уçрĕç, пĕрер черкке ĕçрĕç. Элькка вĕсене тутăхса ларнă селедкăпа хыт çăкăр хурса пачĕ. Вара вилнĕ çын юлташĕсенчен пĕри, пиçнĕ помидор евĕрлĕрех сăмсаллă завхоз, тăсеймерĕ, пат каласа хучĕ:

— Мĕншĕн кун пекех шăртланатăн вара эсĕ, Элькка? Мĕншĕн упăшкуна вăл вилнĕ-вилменех хисеплеме пăрахрăн? Кăвакарчăнсем пекех пурăнаттăрччĕ мар-и? Сирĕн çине пăхсан чун савăнатчĕ...

— Нимĕнле упăшка та пулман вăл манăн, еркĕн çеç пулнă,—терĕ ăна хирĕç Элькка.— Эпир çырăнман унпа. Çулталăк сĕтĕртĕм ЗАГСа, пымарĕ. Акă, курăр, мĕн çырса хăварнă сирĕн тусăр.— Вăл сĕтел çине перекет кĕнекине ывăтрĕ.— Вулăр!

Завхоз кĕнеке хуплашкине уçса сасăпах вуларĕ:

— «Условие или завещательное распоряжение...» Так. «Эп вилсен, ман укçана никама та памалла мар, унпа пĕр йытă та усă ан куртăр, ни хури, ни хĕрли...»

Сĕтел хушшинчи çынсем пĕр-пĕрин çине тăй-тай пăхса илчĕç.

— Хури — ялти арăмĕ ĕнтĕ, хĕрли, паллах, эпĕ,— ăнлантарчĕ Элькка.

— Укçи чылай-и кĕнеки çинче?

— Çĕннипе пилĕк пин ытла.

— Аллă пин вĕт вăл. Пухнă, эсрелĕ! — пуçне пăркаласа илчĕ завхоз.— Анчах хăй ялан укçа çитмест тесе нăшăклатса çÿретчĕ... Халь, эппин, никама та пулмасть?

— Пулмасть,— çирĕплетрĕ Элькка.— Анчах вăл харама-ха, ку таранччен ун укçипе пурăнман.— Сирĕн тата ак çакна вуласа пăхасчĕ! — Вăл сĕтел ещĕкĕнчен хура сăран хуплашкаллă хулăн тетрадь кăларса лач! пăрахрĕ.— Ятне пăхăр: «Хура кĕнеке», тенĕ. Шуйттан этемми!

— Мĕн вара унта?

— Вăл хăй пурнăçĕнче мĕн чухлĕ ирсĕр ĕç тунă — пĕтĕмпех пур! Хăçан мĕнле жалоба панă, хăçан кам çинчен элекленĕ, кама айăпсăр макăртнă... Йалт! Пин

те тахăр çĕр ватăр çиччĕмĕш çулта пуçланă та мĕн виличченех çырса пынă. Çирĕм пилĕк çул!

— Ан тĕлĕнтер-ха...— пăшăлтатса илчĕç пурте пĕр харăс.

— Хуть те мĕн тăвăр маншăн пулсан, хуть тĕлĕнĕр, хуть макăрăр. Анчах сирĕн çинчен те пур унта. Пурин çинчен те. Никама та сиктерсе хăварман. Ас тăватăр-и, эп ăна качча кайиччен, пĕррехинче, пирĕн кантура леш катăк туталлă шофер арăмĕ чупса пырса мана ал туйипе хĕнерĕ? Çавăн пирки те çырса хунă. Элекне параканни — вăл, Асколон хăй, пулнă. Вăл хĕнеттернĕ мана!

— Кай, кай... Малтан хĕнеттерет, унтан качча илет...

— Эп малтанах хăйне качча пыма килĕшменшĕн тунă вăл çавна, шуйттан! Тарăхнипе элекленĕ. Хуртсем часрах çисе яччĕрах ăна!

— Ну, мыскара... Ай, тĕнче мыскари!..

Асăнма пынă çынсем тек нимĕн те калаçмарĕç, пурте пĕр харăсах тăчĕç те, пуçланă кĕленчисене илсе чиксе, пÿлĕмрен васкасах тухса кайрĕç.

## МИХАЛ МИХАЛЧĂН ИКĔ ПУРНĂÇĔ

*Унăн килти йытти Барс каласа панă тăрăх*



Пёлёнетёп эпĕ сирĕнтен, çынсем!..

Хăвăрăн пурнăçра хăш чух пĕр-пĕр чăрмав пулать-и, ăнсăртран кансĕртерех самант килсе тухать-и (ку шута профсоюз пуххинчи критикăпа самокритикă, арăм мĕншĕн те пулсан пĕр эрне хушши мăртлатса çӳрени, пĕртен пĕр юратнă ывăл умлă-хыçлă ик-виçĕ хут вытрезвителе лекни т. ыт. кĕреççĕ) — ялан пире асăнса ӳпкелешетĕр:

— Ман пурнăç — йытă пурнăçĕ! Тӳсме çук!..

— Хăçан хăтăлас ку анчăк пурнăçĕнчен! — тетĕр.

Час-часах тата, ăçтан та пулин — ĕçрен-и, сакăртăхăр сехете тăсăлнă пухуран-и — хытăрах ĕшенсе таврăнсан, пукан çине лак! ларатăр та, хаш! сывласа ярса:

— Йытă пекех ывăнтăм паян! — тесе хуратăр.

Анчах эсир çавăн пек каланисенче тĕрĕсси пит сахал вĕт! Пĕрре-пĕрре, пушă вăхăтра, эсир юриех шухăшласа пăхăр-ха çавăн çинчен. Тупата туршăн, пирĕн пурнăç эсир шутланă пекех йывăр мар. Тата эсир каланă пекех ывăнмастпăр та эпир. Паллах, пулкалать тепĕр чухне, пурнăç нихçан та пĕр пек килмест вĕт вăл... Ун çинчен каярахпа калăп-ха. Малтан эпĕ сире хампа паллаштарам...

Мана Барс тесе чĕнеççĕ. Вайлă ят! Барс вăл — Тянь-Шаньпе Памир тăвĕсем çинче пурăнакан хăрушă тискер кайăк, эпĕ — килти йытă кăна, çапах та — Барс! Ман анне — дворняжкă, атте — овчаркă пулнă, теççĕ. Метис эппин эпĕ. Гибрид, урăхла каласан. Кирлĕ чух хаяр та, ачаш та пулма пĕлетĕп. Ку вăл пурнăçри ларутăруран килет. Пурăнасса эп Михал Михалч Осламасов патĕнче пурăнатăп. Вăл мана эпĕ суккăр чухнех тăçтан

илсе пынă та хăй ачине пăхнă пекех пăхса ӳстернĕ. Ман телее, Михал Михалчпа Раиса Ивановнăн ача-пăча пулман, çавăнпа та вĕсен пĕтĕм юратăвĕ, ашшĕ-амăш туйăмĕ мана лекнĕ. Пит аван пулнă! Кашнинех тивмест ун пек телей...

Михал Михалч Осламасов — эпĕ пĕлнĕ тăрăххăн — хулара паллă çын, шултра работник пулнă. Ахаллĕн ма-ха ăна, иккĕн çеç пурăнаççĕ пулсан та (манпа виççĕн ĕнтĕ) виçĕ пӳлĕмлĕ, кухньăллă, сарай-нӳхреплĕ уйрăм çурт парĕччĕç? Чăн та, каярахпа эпир, вăл çурта пăрахса, хула варрине, пилĕк хутлă çурта куçрăмăр, анчах унта та виçĕ пӳлĕмлĕ хваттер пулчĕ пирĕн. Пĕр пӳлĕмне эп йышăнтăм— пĕчченех саркаланса пурăнтăм унта. Пули-пулми çынна çавăн пекки ăçтан лектĕр-ха, хăварах шухăшласа пăхăр эсир!

Михал Михалч пит шултра (пысăк мар, ш у л т р а!) çын пулнине çакăнтан та тавçăрса илме пулать: ăна кашни виç-тăват уйăхранах урăх ĕçе куçаратчĕç. Паян акă вăл ата-пушмак çĕлекенсене ертсе пырать, ыран пулă тыттарать, тепĕр кунне хăма-пĕрене, тимĕр-шифер сутать. Таçта та пултарать!.. Пĕррехинче — икĕ эрне хушши — филармони директорĕ те пулса курчĕ! Анчах унтан вăл хăй заявлени парса тухрĕ, юрă юрланипе нумаях малалла каяймăн, ним тупăшĕ те çук, терĕ арăмне...

Вăл мĕн тери паллă çын иккенне эпĕ Раиса Ивановнăран та пĕлеттĕм. Кӳршĕ хĕрарăмĕсемпе ятлаçнă чух (ку вăл кашни кун тенĕ пекех пулатчĕ) ман хуçа майри ялан çапла каласа пăскăртатчĕ вĕсене:

— Кампа çыхланатăр эсир, шăркалчăсем? Ман упăшка сирĕнни пек шалттай-палттай çын мар, макулатурнăй работник! Ăна пĕтĕм хула пĕлет, пирĕн хушамат телефон кĕнеки çинче те пур! А эсир мĕн? Çӳпĕ! Çапах та мана хирĕç çăвар уçма хăятăр, сыснасем!

Характерне кăтартма пĕлетчĕ вара Раиса Ивановна, питĕ пултаратчĕ вăл енчен, пĕр тапранса кайсан вара манран кая мар вĕретчĕ. Вайлăччĕ унăн характерĕ тата... хаклăччĕ, тес пулать. Эпир мăн çурта куçнă хыççăн малтанхи çур çул хушшинчех вăл хăйĕн характерĕшĕн виçĕ хут штраф тӳлерĕ. Анчах манпа вăл яланах кăмăллăччĕ. Ачашлатчĕ, ваннăйра çуса яратчĕ, уйрăм апат пĕçерсе паратчĕç, ир-каç урам тăрăх уçăлтарса çӳретчĕ...

Питĕ тусла пуранаттамар эпир унпа. Пĕррехинче эпĕ — хаман шутсăр выляс килнипе — унан хура-хамăр тилĕрен туна çухавине йалт туласа такрам, ним хăвармарăм, тепри пулсан мана уншăн çаксах вĕлермелле, анчах Раиса Ивановна чĕн пиçиххипе çурăм урла виççĕ туртса çапнипех каçарчĕ...

Çаван пекчĕ манăн пурнăç. Мĕн хурламалли пурха ĕнтĕ унта? Тата мĕн йыварри пур? Хăш енчен тиркемелле ăна? А эсир — «йыта пурнăçĕ», тесе ўпкелешетĕр. Пĕлместĕр хăвăр нимĕн те!

Михал Михалч ялан пысăк выраңсенче ĕçленĕ пирки пулас çав, ăна пурте хисеплетчĕç. Кашни кун пулмасан та, виç кунта пĕрре хăнасем пулатчĕçех пирĕн патра. Пĕри пырать, тепри... Уйрамах Михал Михалч вăрман складĕнче ĕçленĕ чух хăнасем нумай пыратчĕç. Анчах та ман хуçасем — перекетлĕ çынсемччĕ, эрех тавраш ниxçан та илместчĕç, ĕçмелли-çимеллисене хăнисем хăйсем илсе пыратчĕç, Раиса Ивановна вĕсене сĕтел çине майласа вырнаçтаратчĕ çеç. Ку енчен вăл шутсăр ăстаччĕ вара! Тепĕр ресторанта та ун пек илемлĕн хурса памаççĕ пуль ĕçме-çимесене! Эп аякран пăхса лараттăм та, манăн та сурчăк юхса анатчĕ çав... Анчах Раиса Ивановна мана ниxçан та кўрентермен: хăнасем умĕнчех сĕтел çинчи чи тутлă татăксене вилкăпа иле-иле хыптаратчĕ:

— Тутанса пăх, Барсик, çи, çи, Барсик...

Ĕçетчĕç-çиетчĕç те шавлатчĕç вара — тур çырлах! Пуринчен ытларах Раиса Ивановна янратчĕ. Юрлатчĕ — тепĕр качака та ун пек çухăраймасть пулĕ, ташлатчĕ — урай варринчи юман сĕтел те унпа пĕрле сикетчĕ!

Çапах та, хăнисем тухса кайсан, ялан тиркетчĕ вĕсене:

— Сыснасем, шампанскине икĕ бутылкă çеç илсе килнĕ! Кукăлĕ краççын тути калать, канфечĕсем çавар маччи çумне çыпăçаççĕ! Неушлĕ вара вĕсем çаван пек хăналанипех пире юрама шутлаççĕ?! Тепре килсен куçранах калатăп-ха. Намăссăрсем!

Анчах сасартăк хăнасем пач çўреме пăрахрĕç пирĕн пата. Такам тухатса сивĕтрĕ, тейĕн. Тем пулчĕ! Хуçасем хăйсем те ниçта та тухса çўремерĕç. Михал Михалч кашни ир сухалне хырса, хаклă одеколонпа сапăнса, якалса, хулăн портфельне çĕклесе мăнаçлăн

тухса каяканччĕ. Халь, темшĕн, ир-ир ниçта та кайма-рĕ, кивĕ пижамине тăхăнса, леш «вĕтĕ пата» текен йӳнĕ пирус йăсăрлантарса те-ек чӳречерен пăхса ларатчĕ. Унччен мана кашни ир пыра-пыра ачашлаканччĕ, халь çаврăнса та пăхмарĕ. Пĕррехинче эп хам, ачашланас килнипе, Михал Михалч патне пырса пуçа ун чĕркуç-çийĕ çине хутăм, анчах вăл мана пĕррех çупса ячĕ:

— Пшол вон, харам пыр! Сансăр та хăсăк тухать!..

Хӳрене ик ура хушшине хĕссе алăк патне кайса вы-ыртрăм вара. Пи-итĕ хурлантăм хам...

Пĕр икĕ эрне кĕрхи пĕлĕт тĕслĕ пулса çӳрерĕç Михал Михалчпа Раиса Ивановна. Мана çитерме те манчĕç, хырăм выçнипе хам найкăшма тытăнсан тин мĕн те пулин пăрахса паратчĕç. Хăйсем çĕрле те çывăрмастчĕç пулмалла, тек темскер пăшăлтатса выртатчĕç. Хăш чух хам нихçан илтмен сăмахсене илтеттĕм: ОБХСС, следователь, суд, тĕрме, штраф... Унтан иккĕшĕ те таçта кайса çӳрерĕç — ир каяççĕ те сĕм çĕрле тин таврăнаççĕ. Выçсах вилеттĕм çав кунсенче. Пĕр каçхине вара Михал Михалччи вил ӳсĕр таврăнчĕ — ура çинче те тăраймасть. Арăмĕнчен уртăнса пӳлĕме кĕрсенех кăкран кас-са янă юман пек урайне хĕреплетрĕ, хăй çапах та юрлама хăтланать:

Помирать нам рановато,
Есть у нас на свете дела...

Ирхине те, вăраннă-вăранман, вăл çав юррах юрласа ячĕ. Пăхатăп — куçĕ-пуçĕ çиçет кăна хăйĕн, ĕнер кăна авланнă, тейĕн. Йăлт улшăннă ман хуçа, унччен-хи салхулăх таçта шăтăка кайса кĕчĕ. Темле питĕ пысăк савăнăç пулнă пулмалла çав, ахальтен мар!

Ваннăялла пит çума кайнă чух мана сăмсаран шаклатса илчĕ, çурăмран лăп-лăп-лăп ачашларĕ.

— Пурăнар-ха пурнăçне, Барсик! Тĕнчене тĕлĕнтерĕпĕр-ха эпир санпа.. Çапла-и? — терĕ вăл хавассăн.

...Тĕнче тĕлĕннипе тĕлĕнменнине пĕлместĕп, анчах мана хама Михал Михалч шутсăр тĕлĕнтерчĕ вара! Çуркунне, çĕршыв типнĕ вăхăтра, кĕтмен-туман çĕртен вăл мана грузовик çине лартса хуларан чылай инçете, темле вăрман хĕррине, илсе кайрĕ те, çамрăк кăна улма-çырла

йывӑҫҫисем хушшинче ятарласа ман валли тунӑ йытӑ вити, вырӑсла каласан конура, ҫумне тем тӑршшӗ сӑнчӑрпа кӑкарса лартрӗ.

— Малашне санӑн ҫакӑнта пурӑнма тивет, тусӑм,— терӗ мана.— Ҫитет сана тунеядец пулма! Ку — пирӗн сад пулать, эпӗ ӑна пӗр тӑсланкӑ та юлхав поэтран чӗрӗк хакпах илсе юлтӑм. А эсӗ кунта пӗрремӗш хуҫа пулатӑн. Хуть те кам килсен те, тӑрех: хӑр-р... хам! Тыт та ҫур! Чӑн-чӑн барс пек пул, ӑнланатӑн-и? Ас ту, эп сана! — пӑрнипе юнарӗ юлашкинчен.

Ҫав кунах Михал Михалч икӗ трехтонкӑпа хӑма тиесе пычӗ. Хӑми сар ҫу пек, ик енчен те яп-яка савалана. Унтан кирпӗч турттарса килчӗ. Цемент. Хӑйӑр. Шифер. Бетон плитасем. Кантӑк. Пата. Хӑй кашнинчех мана асӑрхаттарать:

— Куратӑн-и, мӗн чухлӗ пуянлӑх шанса паратӑп эп сана? Мотри, лайӑхрах сыхла, бдительнӑ пул! Пӗр кирпӗч те ан вӑрлаттар. Ҫакатӑп!..

«Вӑрра вӑрӑ шанмасть» тенине ҫирӗплетсе пани пулчӗ ёнтӗ ку. Кайран пӗлтӗм эпӗ — ҫак пӗтӗм пурлӑха Михал Михалч хӑй склад заведующийӗ пулнӑ чух вӑрласа тухса пӗр тусӗ патӗнче пытарса усранӑ-мӗн. Ҫаваншӑн пӗр хушӑ арӑмӗпе иккӗшӗ те ОБХССран хӑраса таппа лекнӗ шӑшисем пек чӗтресе пурӑннӑ вӗсем! Те ҫу сӗрнӗ-ха кама та пулин?

Ик-виҫ кунтан рабочисем пычӗҫ — пуртӑсемпе, пӑчкӑсемпе, кӗреҫесемпе. Эрнерен пирӗн садра дачӑ ӳссе ларчӗ — юмахри кермен пек! Йӑлтӑрти-ялтӑрти, пӑхсан куҫ алчӑраса каять. Ун пекки ку тӑрӑхра никамӑн та ҫукчӗ ҫав! Виҫӗ пӳлӗм—кашнин ӑшне урӑх сӑрпа сӑрланӑ, верандӑ, ӑна тӗрлӗ-тӗрлӗ кантӑкпа картланӑ, ҫӳлте — мезонин, аялта — нӳхреп. Ҫук, нӳхреп те мар — бомбоубежище! Ытти дачниксем пыра-пыра пӑхаҫҫӗ те — ах! теҫҫӗ кӑна вӗт!

— Ну, туса лартрӗ те Михал Михалч, пӑх-ха эс ӑна! Эпир пур — йытӑ вити пек будкӑна та виҫӗ ҫул тӑватпӑр... Ҫынсем-и эсир?!

Пурте ырлаҫҫӗ, анчах пӗр ватӑрах ҫын — пенсионер пулмалла — ҫав тери кӳренмелле сӑмах каласа хӑварнине илтсе юлтӑм.

— Михал Михалч мар вӑл, Нахал Нахалч! Пӗлетпӗр вӑл ку дачӑна мӗнлерех тунине. Жулик! — терӗ те ҫав старик, лач! сурчӗ.

Тытман вăра — вăра мар ĕнтĕ. Ку сăмахсем ман хуçана нихăш енчен те кĕçĕттермерĕç. Вăл хайĕннех турĕ, никама та пăхмарĕ...

Пахчари çĕрне темле çынсем пырса чаврĕç. Питĕ тĕплĕн, торфпа, тислĕкпе хутăштарса. Уншăн ман хуçа вĕсене стройкăна юрăхлă пулман хăмасене парса ячĕ. Çимĕçĕсене те — хăярĕ-помидорĕ, кишĕрĕ-çарăкĕ, укропĕ-мĕнĕ — эп палламан ик хĕрарăм лартса-акса пачĕç. Мĕн тăвас тетĕн, Раиса Ивановна пĕшкĕнеймест-çке-ха пирĕн, кĕлеткине тем пекех сыхласа пурăннă пулсан та, хырăмĕ пичке пек пулса кайнă — пĕр виçĕ пăт çу унта. Пахчине те вăл тахçанта пĕрре пырса каятчĕ, ытларах хулари хваттерне сыхлатчĕ.

Анчах Михал Михалч манпа пĕрлех пурăнатчĕ. Тĕлĕнмелле улшăнса кайрĕ çын. Службăра чух яп-яка та çап-çута çӳрекенскер, халь сухалне хырма та пăрахрĕ, питне те ик-виç кунта пĕрре çăвать пулмалла. Таçтан пожарниксенни пек брезент йĕм, çĕтĕк çаналлă пиншак тупса тăхăннă, уринче — пуклак пуçлă кив пушмак. Пĕррехинче эп ăна хам та палламан. Йывăç тĕми хыçĕнчен пĕр çĕклем çапă йăтса тухса тăчĕ те — вăрă пекех туйăнса кайрĕ, пĕррех сикрĕм çакăн çинелле! Пиншак çаннине лар-р! çурса антартăм...

Килте пурăннă чух, ĕçрен таврăнсан, Михал Михалч кашнинчех хаçат пăхкаласа тухатчĕ. Пуринчен ытла хаçатăн тăваттăмĕш страницине вулама юрататчĕ,— унта кам вилни, кам уйрăлни çинчен çыраççĕ, ăна пĕлме питĕ интереслĕ вĕт-ха! Анчах пахчана куçса килнĕренпе ун аллинче хаçат тавраш пĕрре те пулмарĕ...

Лăпкă пурăнтăмăр эпир, таçта урăх тĕнчене лекнĕ пекех.

Анчах çапах та пĕр-икĕ хутчен ЧПсем («чрезвычайнăй происшествисем») пулчĕç-пулчĕçех, ăна пытармалли çук.

Çимĕçсем пиçсе çитме пуçласан, Михал Михалч таçтан пĕр кĕпçеллĕ тутăхнă пăшалпа темиçе гильзă илсе пычĕ.

— Ну, тусăм, эпир халь санпа нимĕнле вăрăран та хăрамастпăр! Кам килсе кĕрет — тӳрех шаплаттаратпăр! — терĕ вăл. Хай çавăнтах гильзăсем ăшне тарпа хутăш шултра тăвар пĕрчисем тултарма тытăнчĕ.

— Вĕлерессе вĕлерместпĕр, ку вăл ытлашши пулĕччĕ, анчах таккойски çухăртатпăр кунпа!

Çакăн хыççăн икĕ кун иртрĕ-и, виççĕ-и, çĕрле пирĕн пахчана чăнах та такам питĕ вăрттăн пырса кĕчĕ. Эп çакна сисрĕм те каçса кайсах вĕрме тытăнтăм. Сăнчăр çитнĕ таранах çав çын патнелле ыткăнтăм. Куçпах куртăм — тĕмĕ хыçĕнче мĕлке тăрать. Манран хăраса тарма мар — вырăнтан та хускалмасть. Кĕç Михал Михалч пăшал çĕклесе сиксе тухрĕ.

— Кам унта? Тух халех! Перетĕп! — кăшкăрчĕ вăл урмăшнă сасăпа.

Тĕмĕ хыçĕнчи çын сас памарĕ. Вара Михал Михалч пĕррех шаплаттарчĕ пăшалпа. Çав самантрах леш çын хăрушла тискеррĕн çухăрса ячĕ:

— Ай-вай-вай! О-о-о!.. Миша, Мишенька, вĕлертĕн эс мана! Вилтĕм, сыв пул!..

Мур çитĕрех! Раиса Ивановна сасси! Мĕне пĕлтерет ку?

Михал Михалч та арăмĕн сассине уйăрса илчĕ курăнать, пăшалне аякалла ывăтса ярса, тĕмĕ хыçнелле вăркăнчĕ те самантранах арăмĕн çичĕ пăт таякан тушкине çĕклесе тухрĕ.

— Ай... ой... ох... вилтĕм эпĕ, вилтĕм...— йынăшрĕ Раиса.— Анчах эс ан авлан... ан авлан... мана асăнса пурăн...

Ним тума аптранă Михал Михалч арăмне верандăри диван çине пырса нач! пăрахрĕ. Ăна хĕрхенесси пулмарĕ унăн, тўрех вăрçма тытăнчĕ.

— Мĕн шуйттанĕшĕн çĕрле сĕтĕрĕнсе çўретĕн эсĕ? Мĕн кирлĕ пулчĕ сана? Эп кăшкăрсан, ма хирĕç сас памарăн, йўтенĕскер?

— Ах, Мишенька...— йынăшрĕ арăмĕ,— мана мĕн... çынсем каларĕç, эс кунта хĕрарăмсемпе аташса пурăнать, терĕç... Килсе курас терĕм, хам куçпа... Анчах эс вĕлертĕн мана... Юри вĕлерес тесех петĕн пуль çав...

— Эх, ухмах! — кăшкăрчĕ ăна хирĕç упăшки.— Никам та вĕлерес темен сана, вилместĕн те эсĕ: мăнтăр пĕççўне темиçе тăвар пĕрчи çеç кĕрсе ларнă. Пит лайăхха вăл, шпиг пулать, тăварланă сала. Анчах çын сăмахне итленĕшĕн сана чăнах та мунчана илсе кайсах пĕçертмелле!

Чылайччен ятлаçрĕç вĕсем, унтан çапах та майлашрĕç те тин çеç авланнă мăшăр пекех вырăн çине кĕрсе выртрĕç.

Кайран-малтан пирĕн пата пĕр вăрă таврашĕ те пыман вара...

Тепĕр «ЧП» тата вăйлăрах пулчĕ. Пахчана темиçе грузовик тислĕк пырса тăкнă пулсан та, ман хуçана ку çителĕксĕр пек туйăннă пулмалла. Пахча таврашĕнче ăçта пĕр ывăç тислĕк курнă — йăлт пуçтарса кĕртрĕ. Хăш чух — хаçатпа, алăра нимĕн те çук пулсан — пуçĕнчи улăм шлепкепе. Пухать те пухать çапла. Унтан тахăшĕ пирĕн пахча хыçне каç-каç ула кĕсре пырса яма пуçларĕ,— курăк пит вăйлăччĕ унта. Хайхи Михал Михалч çак кĕсрене куçран вĕçертмесĕр сыхлама тытăнчĕ. Как лешĕ хўрине çĕклет — Михал Михалч тўрех витре йăтса чупать.

— Ах, лайăх япала! Ылтăн!—тет вара, пăсланакан витрене катка ăшне пушатса.— Çăвĕпех çўретĕрччĕ ку кĕсре!

Анчах ула кĕсрене вăл çеç мар, тепĕр çын та куç хывнă иккен. Вăрманти тăманасен пыйтине тĕпчесе наукăсен кандидачĕ пулнăскер, тет. Вăл та кĕсре патне витре йăтса чупма тытăннă. Швежи, песплатнă тислĕк вĕт-ха! Михал Михалч пĕр ирхине ирех тăрса витрепе чупса каять — лешĕ пуçтарса илме те ĕлкĕрнĕ иккен. Эх, тарăхать вара!

— Эс мĕнле правăпа çын тислĕкне пухса çўретĕн?— хаяррăн ыйтать кандидатран.

— Çынăнне мар, кĕсренне,— тет лешĕ.

— Вăрă эсĕ! Ку тислĕк — манăн!

— Епле сан пултăр-ха вăл?

— Эп ку кĕсре хуçипе калаçса таталнă!

— Контрактаци турăн-им? Кĕсре тислĕкне пуçтарма договор çыртăн-и?

— Хуть те мĕн тунă пултăр, сан ĕç çук унта! Тавăй тислĕке кунта, халех пушат ман витре çине!

Кандидат памасть. Ман хуçа вăйпа туртса илме тăрать. Леш куна тĕртсе ярать. Ку ăна хăлха чикки парать. Пĕрре — иккĕ, виççĕ — тăваттă. Вырăсла каласан, удар — контрудар. Иккĕшĕ те чĕп-чĕр юн пулаççĕ çаксем. Çапах та ман хуçа çĕнтерет-çĕнтеретех... Кандидат витринчи тислĕке туртсах илет, пуш витрине кандидат пуçĕ çине тăхăнтартса ярать. Анчах кун çинчен вĕсем никама та каламарĕç, иккĕшĕ те шăпăртах пулчĕç — çынсем пĕлсен, намăса ăçта чикес?

Тата тепре çавăн пекех питĕ хытă тарăхрĕ ман хуçа,

Раиса Ивановна ăна пĕррехинче темле çыру пырса пачĕ. Местькомран çырса янă иккен: пенсионер пулсан та, профсоюз укçи тӳлес пулать сирĕн, çичĕ уйăхшăн тӳлемен... Çав хута вуласа тухрĕ те Михал Михалч, тăрук кив çăпата тĕслĕ пулса кайса, ăна лăр-лар! çурса тăкрĕ.

— Эккей, нимсĕрех укçа шăйăрасшăн! Тупнă ухмах! Кирлĕ мар мана нимĕнле профсоюз та! Пошол чорту!

Хулари пенсионерсен пуххине чĕнсе янă хута та çавăн пекех урлă-пирлĕ çурса ыватрĕ:

— Çитет, хам ĕмĕрте пухусенче ларса сахал мар йĕм çĕтнĕ!

Анчах пахчара питĕ вăйлă ĕçлетчĕ вăра, ăна пытармалли çук. Шăварать, кăпкалатать, кашни çум куракне, пуçне кăларсанах, татса ыватать... Çимĕçсем пулма пуçласан — кашнине тыта-тыта пăхать, шутлать: миçе помидор, йывăç çинче миçе панулми... Чисти нăрă ĕнтĕ, çĕр нăрри!

Суяс мар, малтанхи çул тупăш пысăках пулмарĕ пирĕн, анчах кайранхи çулсенче ай-ай усси лайăх пулчĕ! Раиса Ивановна май уйăхĕнчех симĕс сухан сутрĕ, унтан çĕр çырли, чие, хăяр, помидор, кишĕр, панулми... Хайсем çиместчĕç те пулмалла, йăлт пасара йăтатчĕç. Укçа! Капиттал!..

...Хура кĕркунне мана киле, хулана илсе кайрĕç. Ну, ыр куратăп ĕнтĕ хĕл каça, тесеттĕм. Анчах ман пӳлĕме çынсем йышăннă иккен — Раиса Ивановна такамсене хваттере янă. Ман пӳлĕме çеç мар, иккĕмĕш пӳлĕмне те,— хайсем пĕр пӳлĕмĕнче çеç юлнă. Чăнах та йытă пурнăçĕ пулчĕ вара манăн, хĕлĕпех алăк патĕнче выртса пурăнтăм. Çăва тухсан каллех пахчана илсе кайса кăкарчĕç. Каллех Михал Михалчпа иксĕмĕр пурăнма тытăнтăмăр. Ăна никам та кăкарман ĕнтĕ, вăл хăй кăкаранчĕ. Ман пек сăнчăрпа та мар, çăтлăх пăявĕпе.

Шеллетĕп эпĕ хамăн хуçана! Чăн та йытă пурнăçĕ вĕт унăн, пĕртте этем пурнăçĕ мар...

## ÇĔР ТЕ ПĔРРЕМĔШ ÇУРТ



Çапла çав, çапла!..

Хамăра тиркенине итлесе таранна ĕнтĕ эпир. Сирĕн шухăшăрпа эпир, строительсем, яланах мĕншĕн те пулин айăпла. Ĕçлетпĕр, ĕçлетпĕр сире валли, çĕрне-кунне пĕлмесĕр тенĕ пек тăрăшатпăр — ах, ку çурта лайăхрах тăвасчĕ, ах, унăн алăкĕсене срокчен уçасчĕ! — анчах çапах та ыр сăмахне пит сайра илтетпĕр...

Çерçи сăмси тăршшĕ пĕр-пĕр кăлтăк тупăнсанах тытăнаççĕ шăл йĕрме: кунта кăвак сăр выранне сарăпа сăрлана, лере алăк хăлăпне вуна сантиметр çÿлерех çапнă, кунта çурт умĕнчи тротуар ансăр...

Тунмастăп,— пирĕн, строительсен, ĕçĕнче çитменлĕхсем пур-ха, вĕсене эпир пытармастпăр, пĕтерсе пыма тăрăшатпăр. Тата вĕсем тепĕр чух пирĕнтен хамăртан та килмеççĕ. Час та часах ака пире ниме юрăхсăр кирпĕч пырса параççĕ — кăшт çумăр çусанах вĕсенчен тинкĕле пулса тăрать; растворĕ те шĕп-шĕвĕ, ним тытмасть, кирпĕчсем хушшинчен йăкăр... юхса тухать; çурт валли кирлĕ тимĕр пайсем те çара тутăх, ăна хуть те кусарпа хыр; чÿрече рамисем, алăксем-мĕнсем чалăштĕлĕш пулаççĕ. Çакă вăл йăлтах «поставщиксен» çылăхĕ... Анчах пулас çуртра пурăнас çынсем ăна-кăна пĕлмеççĕ, тепĕр тесен, вĕсен ун çинчен пĕлме те кирлĕ мар. Вĕсемшĕн çурчĕ, хваттерĕ лайăх пултăр. Тĕрĕс ара, тĕрĕс, хирĕç нимĕн те калаймастăн.

Анчах эпир пур пĕрех лайăх çуртсем тума тăрăшатпăр. Çавăн пек çуртсем тăватпăр та эпир. Пăхăр-ха йĕри-тавралла — мĕн чухлĕ кермен ÿссе ларчĕ юлашки

çулсенче пирĕн хулара! Миçе çемье çĕнĕ хваттере куçрĕ! Пĕр вунă çул ĕлĕкхипе танлаштарсан, хуламăр вуçех те палламалла мар пулса тăчĕ вĕт!.. Кам тунă çав çуртсене, çав пĕтĕм пуянлăха? Эпир тунă, строительсем — каменщиксем, платниксем, штукатурсем, малярсем! Татах таватпăр-ха. Çĕнĕ пилĕк çуллăх планпа мĕн чухлĕ çĕнĕ çурт пулассине хăварах пĕлетĕр ĕнтĕ...

Анчах ман сăмахăм ун çинчен мар-ха. Пуласси вăл пулатех, пирĕн халăхăн йăли çапла: мĕн шутласа хунă — çавна тăватех вăл.

Эпĕ, юлташсем, хальхинче сире хăвăра лайăх кăна ятласа илесшĕн-ха. Эпĕ, Петр Иванч Топоров, тава тивĕçлĕ строитель, хамăн пĕтĕм çилле пухса вăрçасшăн. Çапла!

Мĕншĕн, тетĕр-и? Сăлтавне пĕлесшĕн-и эсир?

Сăлтавĕсем пур, юлташсем. Тата сахалах та мар вĕсем. Пурне те шута илсен, виçĕ сехет хушши пĕр канмасăр кĕрлеттерме пулать сире. Ытла пурсăра та мар пулсан та — нумайăшне.

Акă мĕнле япала. Итлĕр. Тĕслĕхрен пуçлăп.

Пĕлтĕр çуркунне Ирĕклĕх урамĕнче эпир пĕр çурт турăмăр. 101-мĕш номерлĕ çурт пулчĕ вăл. Питĕ чаплă ĕнтĕ, каламалли те çук. Кирпĕчĕ те çирĕп йышши—шур кирпĕч. Купалана чухнех карнис айĕн чăваш тĕррисемпе эрешлесе пытăмăр. Çурчĕ пĕр квартал таршшĕ. Пилĕк хутлă. Çĕр çирĕм хваттер. Кашни валли — балкон. Тух та — сывла уçă сывлăшпа, кăмăлу пулсан — хĕвел çинче пиçсе кайиччен хĕртĕн.

Май уявĕ умĕн çĕр çирĕм çемьене савăнтарас тесе, çав тери хытă тăрăшрăмăр. Канмалли кунсем çинчен те мантăмăр, апатне те çавăнтах çикелетпĕр—васкамалла! Лайăх ĕçлерĕмĕр ĕнтĕ, ним мухтанмасăр калатăп. Çурчĕ те питĕ шеп пулчĕ, никам та тиркеме пултарас çук. Çурт мар — картинкă! Хамăр мĕнле сăмах панă—çавăн пекех пулса тухрĕ çав, уяв умĕн çурта çынсем пырса кĕмелле турăмăр. Комисси пирĕн ĕçе питĕ ырласа йышăнчĕ.

— Маттур, строительсем! «На пять» тунă!

Пире çав çĕнĕ çурт умĕнче ўкерсе илсе, Май уявĕ кун хаçатра пичетлесе кăларчĕç. Чи лайăх ĕçленисене трест премисем пачĕ. Музыкă кĕрлерĕ, шăпăр-шăпăр алă çупрĕç...

Савантамăр! Премисемшĕн те мар, хамăран ĕç лайăх пулнăшăн, хамăр çынсене савантарма пултарнăшăн савантамăр!..

Унтан, паллах, эпир тепĕр çурт тума тытăнтамăр. Хулан ту вĕçĕнче. Çаван пекех чаплă çурт. Эпир заводсенчи рабочисем пек ялан пĕр вырăнта тăмастпăр вĕт: пĕр объектра ĕç пĕтет те тепĕр объекта куçатпăр. Тĕрĕссипе калас-тăк, çаван пек пурнăç мана хама питĕ кăмăла каять...

...Кайран эпĕ пĕр çулталăк хушши пулаймарăм çав Ирĕклĕх урамĕнче. Пирĕн, строительсен, яланах ĕç нумай вĕт. Ерçместпĕр эпир унта-кунта сулланса çӳреме. Ĕçрен ывăнса таврăнатăн та — канас килет. Ирхине, çиччĕпе, каллех ĕçе каятăн. Кашни кун çапла. Канмалли кунсенче кил таврашĕнче мĕн те пулин тумалла.

Анчах пĕррехинче мана Кирилл Федăрч Чаплашкин, вăрçăра хампа пĕрле çапăçнă юлташ, урамра тĕл пулчĕ те хăй патне хănана чĕнчĕ:

— Туя пыр-ха ыран, Петька,— терĕ вăл.

— Мĕнле туя? — тĕлĕнтĕм эпĕ.— Хĕр паратăн-и, ывăлна авлантаратăн-и?

— Çук, хамăн туя чĕнетĕп...

— Чим-ха ара... Праски пур вĕт санăн! Ăна ăçта чикетĕн? Темиçе арăмпа пурăнма пĕр-пĕр мулла мар пуль эсĕ?

— Кĕмĕл туй пулать пирĕн. Праскипе пурăнма пуçланăранпа ыран шăп çирĕм пилĕк çул çитет...

— Э-э, апла пулсан — ăнланатăп!

— Пыратăн-и?

— Пымасăр!

— Арăмна та манса ан хăвар.

— Вăлах хăйне мантарас çук-ха, манран малта тĕпĕртеттерсе пырĕ. Анчах эп санăн адресна пĕлместĕп-ха, ăçта пурăнатăн эс халь? Çĕнĕ хваттере куçнă терĕç пулас?

— Ирĕклĕх урамĕ, 101-мĕш çурт, 99-мĕш хваттер. Икĕ цифрине пĕр-пĕрин çумне хушсан 200 пулать — питĕ ансат, нихçан та манса каяс çук. Пурне те çапла калатăп эпĕ.

— Ара, тусăм... вăл çурта эп тунă вĕт! Ак çак хамăн аласемпе купаланă ăна! — савăнсах кайрăм эпĕ.— Сан валли тунă эппин!

— Питĕ аван,— кулса илчĕ Кирилл Федăрч.— Тав-

тапуç сана вăрçări юлташу пирки тăрăшнăшăн! Унччен эпĕ питĕ хĕсĕк пурăнаттăм, анчах халь вара — фон-барон пекех. Ну, пыр, пыр!

— Юрать, тусăм. Пĕр кĕленче шампански кĕтсех тăр манран.

Тепĕр кунне эп ун патне чăнах та кайрăм. Фронтри тусăмăн «кĕмĕл туйĕнче» пулнисĕр пуçне, манăн хам тунă çурта курас килчĕ. Тĕрлĕ йышши писатель-художниксем пек каласан, вăл çурт — манăн творчестваă, манăн произведени çке-ха. Епле курас килмĕ ăна?..

Çитрĕм хайхи. Урамран тўрех кĕрес тесеттĕм,— пĕлетĕп, урамалла ултă алăк вăл çуртăн, ултă хитре подъезд,— анчах мур пĕлет, темшĕн, эп пынă чух улттăшне те тул енчен у-усал горбыльсемпе хĕреслесе шаплаттарса лартнă. Çав тери илемсĕр кăна мар, çав тери тискер!

— Ку мĕнле фокус-ши? — шухăшларăм хам ăшăмра, ним ăнланмасăр. Çав вăхăтрах чĕрене темле аван мар пулса кайрĕ.

Ним тума та çук, кĕтесрен пăрăнса картишĕпе çаврăнса кĕмелле пулчĕ.

Картишне эпир асфальт сарса хăварнăччĕ. Яп-яка, çатма пек. Анчах халь тўрех куçа курăнса кайрĕ: асфальта темиçе çĕрте виçшер-тăватшар метр тăршшĕ тăпăлтарса кăларнă, ун айĕнче такам ылтăн шыранă, тейĕн. Ванчăкĕсем çавăнтах сапаланса выртаççĕ.

— Мĕн пулнă кунта, асфальта ма çĕмĕрнĕ? — ыйтрăм картишĕнче ача тытса ларакан пĕр карчăкран.

— Çуркунне водопроводчиксем темскер шырарĕç те, çавсем çĕмĕрчĕç, анчах хăйсем кайран сапласа хăвармарĕç. Калатпăр, калатпăр — усси çук...— терĕ карчăк.

Манăн чун тўсеймерĕ, блокнот кăлартăм та çакăн çинчен кайран аса илме çырса хутăм.

Анчах çав самантрах ман куçа иккĕмĕш подъездăн (шăп Кирилл Федăрч пурăнакан подъездăн) чул карлăкĕ ишĕлсе анни курăнса кайрĕ. Виçĕ кирпĕч хулăнăш тунă карлăк тăпăлса аннă та патĕнчех хăяккăн выртать!

— Ку мĕнле япала тата? — каллех çав шăлсăр карчăкран ыйтмалла пулчĕ манăн.

— Халь мар вăл, пĕлтĕрех,— ассăн сывласа илчĕ карчăк.— Виççĕмĕш хутра пурăнакан пĕр çын хаклă

йышши шкапсем, кравачьсем, сĕтел-пукан тиесе килчĕ. Япалисем тąçта Германирех тунăскерсем, кив укçапа вунă пин ытла тăраççĕ, терĕç. Вĕсене антарма ансатрах пултăр тесе, машинине крыльца çумнех чакарса пыма хушрĕ те вăл, карлăк пĕррех хĕреплетсе анчĕ. Хамах куртăм, эп шăпах ачапа тухнăччĕ те...

— Çĕмĕрессе çĕмĕрчĕç, анчах юсама шутламарĕç эппин? — тарăхса ыйтрăм эпĕ.

— Э-эй! — аллипе сулчĕ карчăк,— юсасси çинчен каларĕ-ха тата! Кам юсатăр? Хуçи çук вĕт кунта, кашни хăйшĕн кăна тăрăшать. Авă, пăх-ха эсĕ...

Карчăк çурт тăрринчен çумăр шывĕ юхса анмалли труба çинелле тĕллесе кăтартрĕ. Вăл шăп варринчен, виççĕмĕш хут тĕлĕнчен таталнă та, тем пысăкăш кăлпасси пек авăнса аялалла усăнса тăрать.

— Мĕн пулнă ăна?

— Çултен юр ыватнă чух татса пăрахрĕç. Халь пĕтĕм çумăр шывĕ стена тăрăх шарлаттарать. Куртăн-и, вăл тĕлти пĕтĕм шкатуркă хăйпăнса укрĕ, чулĕ те кăвакарса кайрĕ. Часах стени те ишĕлме пуçлать пуль ĕнтĕ. Пурте кураççĕ çавна, анчах пĕри те хăнк та тумасть! Ним совеç та çук çынсен!..

Те мана пĕр-пĕр начальник выранне шутларĕ çак карчăк, те чунĕ çав тери кутсе çитнĕ унăн — хĕрнĕçемĕн хĕрсе пычĕ.

— Тĕлĕнсех каятăп çав, ачам, тĕлĕнсе хытсах каятăп кунти çынсенчен! — терĕ вăл.— Хăйсем пурте шутсăр чапла пуранасшăн, тем шуйттанĕ те илеççĕ, кашни хваттертех елевизăрсем, шăнтмалли арчасем, теприн патне кĕретĕн те — отне кавир, отне кавир, стенасем çинче те, урайĕнче те, тула тухмалли çĕрте те! Анчах çурт тăррине çав елевизăр шалчисене лартса йăлт шăтарса пĕтерчĕç, лăпăс-лăпăс çумăр çусанах, шыв анать. Такамăн сапламалла? Акă, пăх-ха тата эсĕ... Кур-ха пĕрре килнĕ чух...

Карчăк мана аларан çатăрах тытрĕ те çуртăн тепĕр вĕçнелле туртса кайрĕ.

— Куратăн-и — алăк? Чалăшса кайнă, пĕр петле çинче аран-аран çаканса тăрать.

— Куратăп. Пăхма та ирсĕр!

— Ирсĕр пулмасăр! Ăна çаканта пуранакан икĕ фулиган-пĕр тăвансем çĕмĕрчĕç. Тем пирки çапăçса кайнă та... Пĕри алăка ку енчен тĕкĕлесе лартрĕ, тепри леш

енчен такам илсе пăрахнă батарейă тимĕрĕпе шанлаттарать... Лешĕ йывăр вĕт вăл, пĕр пăт та ытла пулĕ...

— Унпа çапсан йывăç алăка мар, чул стенана та çĕмĕрме пулать,— терĕм эпĕ.— Кам çĕмĕрнине пĕлсе тăнă çĕртех, ма-ха вĕсене хăйсене юсаттармаççĕ?

— Уй, кам сăмах хуштăр! Хăраççĕ кунта вĕсенчен. Лешсем чиччас тытса шаккама пултараççĕ вĕт!

— Хăвăр килти çынсенченех хăраса пурăнатăр апла?

— Мĕн тăвас тетĕн! Пирĕн кунта пĕр милици те пурăнать, анчах вăл та лешсем мĕн хăтланнине курмиш пулса иртсе каять...

Эп çаврăнтăм та васкасах Кирилл Федăрч пурăнакан подъезд еннелле утрăм. Унта мана арăм кĕтетчĕ. Эп çак карчăкпа ытлашши калаçса кайнăшăн тарăхма та пуçланă пулас, темиçе хут та кăчăк туртрĕ. Хăнана килнĕ вĕт-ха эпир, ревизи тума мар! Анчах карчăк та манран юлмарĕ, унăн мана татах тем те пĕр каласа парасси килчĕ пулмалла — темиçе хут та, сăмах пуçлама пикенсе, аллипе сула-сула илчĕ. Унтан çапах та пуçларĕ:

— Хамра влаç çук, çав касать, атту-тăк тыткалăттăм эпĕ кунти хăш-пĕр çынсене! Уйрăмах килтеларакан майрасене ташлаттарăттăм! Хăйсен пусмине шăлса тухма та ÿркенеççĕ вĕт, халерсем! Кавирсене силлеме те картишне тухмаççĕ, балкон çинченех урамалла, çынсен пуçĕсем çине силлеççĕ. Тепĕр чух тата балкон карлăкĕ çине шăп-шăкăри аялти кĕпи-йĕмĕсене типĕтме çакса тултараççĕ... Тьху! Ним намăс-симĕсĕ те çук çав ниçта ĕçлемен çынсен...

Эпир подъезда кĕтĕмĕр.

Тур çырлах! Пĕрре пăхсах куртăм: стенасем çинче çара шăтăк,— вĕтĕ осколкăсем лекнĕ пек, штукатуркă пĕр вăтăр-хĕрĕх çĕрте лаптăкăн-лаптăкăн каталса ÿкнĕ.

— Ку мĕнрен пулнă тата? — çилле аран шăнарса ыйтрăм пирĕн хыççăнах кĕнĕ карчăкран.— Кунта кам та пулин гранатă килсе пăрахман пуль вĕт?!

— Мĕн йыт хÿри кранатти пултăр!—пит-куçне пĕркелесе илчĕ манăн «экскурсовод».—Ачасем ашкăнаççĕ! Рогаткăсенчен пăтасемпе персе шăна вĕлереççĕ.

— Ашшĕ-амăшĕсем чармаççĕ-им вĕсене?

— Ма чарччĕр! Хăйсен хваттерĕнче мар вĕт, коридорта, шăлккă-им? Ав, пĕркун пĕри футбол тапса аялти

кантăка чăнкăртаттарчĕ, халь те çаплипех. Эс тата çакна пăх-ха, çакна кур...

Карчăк иккĕмĕш хут пусмин картлашкисем çине кăтартрĕ. Çич сакăр картлашка йăлт ваннă, темĕн пысăкăш катăкăн-катăкăн хайпăнса ӳкнĕ.

— Çӳлте музыкă калаканни пурăнать, кăмпаçитăр теççĕ-и çав! Пĕр уйăх каялла çĕнĕ струмент илсе килчĕç ун валли, чăн пысăккине. Çавна сĕтĕрсе хăпартнă чух катса пĕтерчĕç пусмана. Анчах вăл хаш! тесе те сывламарĕ уншăн.

Эпĕ ĕнтĕ, ытларах та ытларах тарăхса, карчăк мĕн каланине те итлеме пăрахрăм. Çав тери çилĕ килсе кайрĕ!

«Мĕн тери чунсăр çынсем, мĕн тери... намăссăрсем! Вĕсене халăх чăн-чăн керменсем туса парать, анчах вĕсем ун çине сураççĕ!» — шухăшласа пытăм эпĕ.

Виççĕмĕш хут площадкинче, эпир çав тери хитре сенкер сăрпа илемлетсе хăварнă панель çине «Оля+Коля=юрату» тесе çырнине куртăм. Пурăпа мар, кăранташпа та мар... Темле çивĕч тимĕрпе, пăтапа е çĕçĕ вĕçĕпе чавса, шăйăрса çырса хунă! Халь çав тĕле темиçе хут сăрласан та палăрми тăваяс çук, малтан асбестпах шăлса лартас пулать. Ну, пулаççĕ те вĕт сыснасем!..

Çавăнтах тата урайĕнче шыв кӳлленсе тăни курăнса кайрĕ. Нумай та мар ĕнтĕ, пĕр стакан пек çеç, çапах та шыв. Унпа юнашарах — темле хура муклашка. Чышкă пысăкăш. Шăрш кĕрет. Турăçăм, мĕн вара ку?!

Карчăк çине ăна çисе ярас пек, халех çапса ярас пек пăхса илтĕм те, вăл тӳрех ăнланчĕ.

— Йытă хăтланнă куна...—хăй айăплă пулнă пекех пăшăлтатса илчĕ вăл.

— Мĕнле йытă тата? Кам йытти? — кăшкăрсах ятăм эпĕ.

— Çӳлте... мĕн... пĕр уни-куни йышши çын пурăнать, эрни-эрнипе урăлманскер, çав йытă усрать.

— Вăл мĕн, сунарçă-им?

— Çук, сунарçă мар. Йытти те сунар йытти мар,— хăварт-хăварт ăнлантарма тытăнчĕ карчăк.— Овчаркă, кашкăр пекскер. Пĕркунне сĕт сутма килекен майрана тулланăччĕ-ха. Суда парасшăнччĕ те лешĕ, укçа тыттарса ирттеркелесе ячĕç пулмалла...

— Мĕн валли усрать вара вăл ăна?

— Ывалĕ шутсăр йытăшăн, тет. Йыттипе пĕр чашăкран çиме те хатĕр, тет. Тем те пĕр вĕрентет тет ăна...

— Вăл мĕн, салтака кайсан пограничник пуласшăн-им? Е уголовнăй розыскра ĕçлеме ĕмĕтленет?

— Э-эй, мĕн салтакĕ пултăр унтан! Куççăр вĕт вăл, темле çич хут пысăклатакан куçлăхпа çӳрет, куçлăхсăр йĕмне те тупса тăхăнаймасть.

— Мĕн тума кирлĕ эппин ăна йытă?

— Так ахаль ара. Ĕççĕр аптранипе. Мантăрпа.

— Апла-тăк, йыттине юратать пулсан, йытти вараласа хăварнисене те тасаттăр! Хăй курмасть пулсан, ашшĕ-амăшне çутартăр!

Эпĕ, тарăхнăскер, ытлашширех хытă калаçрăм пулмалла. Площадкăна тухакан алăксем пĕрин хыççăн тепри уçăла-уçăла хупăнчĕç — хуçисем кунта кам шавланине пĕлесшĕн пулчĕç курăнать.

— Йăслама урăх вырăн тупаймарăр-им? — терĕ пĕр алăкран пуçне кăларнă милĕк пек çӳçлĕ тăваткал майра.

— Никам та йăсламасть, эп сирĕн подъездри йĕркесĕрлĕхсем çинчен калаçатăп,— татса хутăм çавна.— Пахăр-ха, акă, сирĕн алăк умĕнчех мĕн выртать? Мĕнле тӳсетĕр эсир çавна? — кĕтесселле кăтартрăм çакна.— Ма тасатмастăр?

— Эпир неприччом унта,— тутине пăрса илчĕ майра,— кам вараланă, çав тасаттăр!

Çапла каларĕ те алăка шалт! хупрĕ.

...Кирилл Федăрч патне эпĕ çурăлса каяс пек тарăхса пырса кĕтĕм. Паллах, хăнана ун пек кăмăлпа каймаççĕ те ĕнтĕ, мĕн тăвас тетĕн, енчен те манăн темĕн тĕрлĕ ирсĕрлĕх курмалла пулчĕ пулсан... Кирилл Федăрч çавна тӳрех сисрĕ.

— Мĕн пулчĕ, тусăм? — хыпăнсах ыйтрĕ вăл.— Эс халь çеç такампа питĕ хытă тӳпелешнĕ пекех курăнатăн... Çул çинче пĕр-пĕр хулиган çулăхмарĕ пуль те?

— Халлĕхе тӳпелешмен, анчах сирĕн çуртри хăшпĕр ханттарсене çурса тăкма та хатĕр! — терĕм ăна хирĕç.— Пар-ха пĕр курка шыв, тарăхнипе пĕтĕм ăш-чик хыпса тухать...

Вăл мана килти сăра ярса пачĕ.

— Чип-чипер çурта пĕр çулталăк хушшинче юхăнтарса янă вĕт! — хам сисмесĕрех сĕтел çине шалт! çапрăм эпĕ.— Мĕн тери лайăх çурт тусаттăмăр! Халь пи-

рӗн пӗтӗм ӗҫе пӑсса, ҫӗмӗрсе, вараласа пӗтерне!.. Мӗне пӗлтерет ку? Мӗн темелле ун пек ҫынсене? Ку ҫуртра вӗсем хӑйсем ҫеҫ мар, вӗсен ачисем те ӗмӗр ӗмӗрлемелле вӗт-ха, ма-ха эппин ҫуртшӑн пӗрре те хыпмаҫҫӗ вӗсем? Ма вараласҫӗ ӑна, ма ишӗлтереҫҫӗ, юхӑнтараҫҫӗ?!

Эп сывлӑш ҫаварса илтӗм те малалла татах хаяртарах калама тытӑнтӑм.

— Халӑх укҫипе, хысна шучӗпе тунӑ ҫакӑн пек лайӑх ҫуртсенче этемле пурӑнма пӗлмен ҫынсене ҫав ҫуртсенчен тапса кӑларса ямалла, хуть те ӑҫта пурӑнччӑр! Эп хам пулсан, тупата туршӑн кӑлара-кӑлара ыватмалла ун пеккисене! Никама та хӗрхенсе тӑрас ҫук!

Кухньӑран хӗрарӑмсем чупса пычӗҫ.

— Ай-уй, Петӗр, эс кӗнӗ-кӗменех ӗҫсе лартрӑн мар-и? Намӑса пӗл! — терӗ ман арӑм, хӑранипе куҫӗсене мӑч-мӑч тутарса.

— Эсӗ ху ӗҫсе лартнӑ пулинех, эпӗ пӗр черкке те тытман-ха,— ҫилӗпе ал султӑм ӑна.— Кай кунтан, ан чӑрмантар, эпир патшалӑх ыйтӑвӗсене сӳтсе яватпӑр!

Ман арӑм тутине тӑсрӗ те пӑрӑнса кайрӗ.

— Ну, мӗн калӑн ӗнтӗ эс мана ҫакӑн пирки? Кала! — Кирилл Федӑрч ҫине шӑтарас пек пӑхрӑм эпӗ.

— Тӗрӗс калатӑн, патшалӑх ыйтӑвӗ ку, пӗтӗм халӑх чунне пырса тивекен ыйту,— терӗ вӑл кӑшт шухӑшласа ларсан.— Вӗрентмелле пирӗн ҫынсене халӑх пурлӑхне упрама, кашни ҫур пуса, кашни кирпӗче, кашни ҫӑкӑр таткине тирпейлӗн тытма, перекетлеме! Пӗчӗкренех вӗрентсе пымалла ҫакна...

— Маннисем, ҫав пӗчӗккисен ашшӗ-амӑшӗсем иртӗнеҫҫӗ пулсан, халӑх пурлӑхне ним выраннe хумаҫҫӗ пулсан, мӗн тумалла? Сӑмахран, ак ҫак 101-мӗш ҫурта пуринчен ытла вӗсем, маннисем, юхӑнтараҫҫӗ-ҫке!

— Мӗнех вара! Сӑмахпа этемле каланине ӑнланмаҫҫӗ пулсан, вӗсене валли пирӗн саккунсем пур,—терӗ Кирилл Федӑрч.— Саккунсене ҫирӗпрех тытса пырас пулать. Ҫавӑ ҫеҫ юлать...

## КУКША КУÇМА АВЛАНАТЬ



Ку вăл ик-виçĕ çул каялла, çуркунне, пирĕн кăвар чĕреллĕ поэтсем Атăл пăрĕ кайни, йăлăмра çеçпĕл çурăлни, хура кураксем чĕпĕ кăларни тата кĕмĕл уйăх çутинче каччăсемпе хĕрсем хăйсем загса хăçан каяс ыйтăва хĕрӳллĕн сӳтсе явни çинчен хальччен тĕнче курман чаплă сăвăсем çырнă вăхăтра пулчĕ.

Эпĕ ирхине хулан аслă урамĕпе пыраттăм. Паллах, урам варрипе мар, тротуарпа. Хăвăртрах туса пĕтермелли ĕçсем пурччĕ те, хамăрăн кантура малтарахран каяс терĕм — саккăр та çитменччĕ-ха. Шухăша путнăскер, унталла-кунталла пăхмасăрах утатăп. Урамра ытлашши шăв-шав çукчĕ, уçă чӳречесенчен ирхи гимнастикă музыкипе шăнкăрав пек саслă хĕрарăм командисем çеç илтĕнетчĕç:

— Аллăрсене çĕклĕр... тăрăнраххăн сывлăр... халь ĕнтĕ пĕр вырăнта сикĕр... Раз-два-три, раз-два-три!

Питĕ аван, калама çук кăмăллă...

Çав самантра, сасартăк, таçтан çӳлтен ман ума кивĕрех простыньпе чĕркенĕ тем пысăкăш çыхă лаплатрĕ. Бомбă ӳкнĕ пекех пулчĕ вăл — пар-р! тусан çĕкленсе хăпарчĕ çав çыхă йĕри-тавра.

Хăранипе тăпах чарăнса тăтăм. Мĕн амакĕ ку? Эпĕ çӳлелле пăхма ĕлкĕртĕм çеç — шăп ман тĕлти балконран хамăн пуç çинелле тăваткал хура чăматан вăркăнса аннине куртăм. Чут çеç пĕтеттĕм, аран аяккалла сиксе илтĕм.

— Мĕнле хулиганствă ку? — кăвар пек вĕриленсе

кайрӗ ман ăш-чик.— Кам эсрелӗ ашкăнать? Халех ответ тыттарас пулать куншăн!

Куҫа ҫак ҫурт номерӗ курăнса кайрӗ — вăтăр виҫҫӗмӗш. Чим-ха, ара кунта эп питӗ лайăх паллана Куҫма Кирилч Лысов пурăнать-иҫ! Кукша Куҫма! Пуҫӗ яп-яка пулнипе уйăх пекех ҫуталса тăнă пирки ҫавăн пек калатпăр эпир ăна. Тахăш трестра снабжени начальникӗ пулса ӗҫлет вăл...

Анкетă енӗпе илсен, Куҫма ытла ҫамрăках та мар ӗнтӗ, ҫӗр ҫинче ҫур ӗмӗр пурăнса ирттернине пилӗк-ултă ҫул каярах уявларӗ. Хула хӗрринчи пӗр столовăя икӗ кунлăха хуптарсах питӗ вайла ӗҫкӗ турӗ, терӗҫ. Урăх ҫӗршывсенчен илсе килнӗ эрехсем те шыв пекех юхнă имӗш. Мана та чӗннӗччӗ те, кăвапа ҫумне юман кăмпи пекех тухса ларнă пӳсӗре кастарнă пирки каяймарăм унта — питӗ шел пулчӗ.

Анчах анкетă вăл — анкетă. Ăна ытла пур чух та ӗненме ҫук. Калăпăр, Кантра Кӗркурин хӗсӗр арăмӗ— точнă пӗлетӗп! — манпа тантăш, ҫут тӗнчене Христос ҫуралнă хыҫҫăн 1910 ҫултан сиксе тухнă, анчах анкетăсенче 1925 ҫулта ҫуралнă тесе ҫырать, ма тесессӗн упăшки ҫамрăк та, ăна ҫынсем умӗнче намăса кӗртес килмест унăн. Кукша Куҫма ун пек хăтланмасть, хăй утмăлалла ҫывхарнине пытармасть, анчах сăнран ăна ниепле те ун чухлӗ пама ҫук. Кукши — кукша ӗнтӗ, анчах пӗр пӗркеленчӗк те ҫук вӗт, пит ҫăмартисем — тин ҫеҫ уҫланă услам ҫу пек, кăкăрӗ атлетăнни евӗр малалла пӗкӗрӗлсе тăрать, кӗлеткине йăрст! тӳрӗ тытать, аршăн ҫăтнă, тейӗн, сывлăхне илес-тӗк — нихҫан та «ӗххӗм!» тесе ӳсӗрмен пуль, хăямат!

Тумланас енчен вара... мӗн каламалли, шутсăр шукăль ҫӳрет, хуть те мӗнле пижон та ăмсанмалла. Костюмӗсем вуннă та пулӗ, галстукӗсене виҫӗ кунта пӗрре улăштарса тăрать, йӗлтӗр пек вăрăм пушмакӗсем — тӗкӗр евӗр йăлтăртатаҫҫӗ. Ҫынсем хушшинче вăл яланах хисепре, паллакансем ăна курсан урам урлах саламлаҫҫӗ, тӗлме-тӗл пулсан, аллине силле-силлех пăчăртаҫҫӗ, ма тесессӗн — ҫав тери кирлӗ ҫын вăл. Пурнăҫра сана мӗн кирлӗ — пурне те, тем те тупса пама пултарать. Арăму валли хаклă йышши кӗрӗк, дачă тăррине витме толь, автомашинă валли ҫӗнӗ мотор е Чехословакире тунă сӗтел-пукан кирлӗ-и сана — Куҫмапа тӗл пулса пӗрер сехет ресторанта лар кăна, вара йăлт пулать.

Чăн та, эс ăна тыттарнă укçана хăй мĕнле расхутлани çинчен авансовăй отчет памасть, хăйĕнне хăй пĕлет ку тĕлĕшрен, анчах ун пирки эсĕ нимĕн те шарлаймастăн...

Çавăнпа та паллана çынсем Куçмана мухтаççĕ кăна: ой, маттур, ой, пултарать! Ним çуккине çĕр айĕнчен тупса кăларать вĕт! Жуликĕ жулик те ĕнтĕ, анчах та мĕн тăвăн, аллинчен никам та ярса тытман! Икĕ хĕрне умлă-хыçлă качча пачĕ те кашнинех икшер пӳлĕмлĕ çĕнĕ хваттер туянтарчĕ вĕт. Жилкооператци урлă мар, çук, исполкомран ордерсем илсех! Теприсем, авă, улттăн-çиччĕн те вун икĕ метр çинче çирĕмшер çул пурăнаççĕ, ку пур... Асамçă! Темле куçа курăнман хăват пур унăн!..

Пытармастăп, хулара ун çинчен кăшт урлăрах, ытла çăвар туллин каламалла мар халапсем те çӳретчĕç. Вăрттăн кăна кула-кула калаçатчĕç:

— Кашни урамрах пĕрер ăшă йăва, мамăк тӳшек пур унăн... Хăйма вăрлама вĕреннĕ кушак аçи вĕт вăл!

Теприсем ун хутне кĕнĕ пек те пулатчĕç:

— Ара, арăмĕ ватă та-ха...

Çавăн пирки килĕнче скандалсем пулкалани çинчен те илткелеттĕмĕр. Пĕррехинче, командировкăна каятăп тесе, çичĕ кун çухалса пурăннă çак Куçма. Тахăшĕ систернипе арăмĕ йĕрлесе кайнă та, пĕр буфетчицă хваттерне дворникпе пĕрле чĕр-çилом çĕмĕрсе кĕрсе, Куçмана тумтирсем çакса усрамалли шифоньертан труççиксĕр-мĕнсĕр туртса кăларнă, терĕç. Ах, тӳнккенĕ тет вара арăмĕ иккĕшне те — алла мĕн лекнĕ, çавăнпа! Пӳлĕмре тĕрĕс-тĕкел япала та хăварман, тет. Хăйĕн «фотографийĕ» йăлт пăсăлса пĕтнĕ пирки (кунта кăвак, унта çурăк...) Куçма, чире персе, тепĕр эрне килте выртнă. Анчах «песплат» мар, паллана тухтăр ăна чип-чиперех бюллетень çырса панă...

Тепринче тата, ура тупанне кĕсен тухнă пирки кăштах больницăра выртса тухсан, Куçма пĕр уйăх хушши ĕç хыççăн укола çӳренĕ. Анчах темшĕн-çке уколне поликлиникăра мар, вут пуççи пек çӳçлĕ медсестра хваттерĕнче тумалла пулнă. Каллех тахăшĕ (пур вĕт усал çынсем) çакăн çинчен Куçма арăмне пăшăлтатса панă та, лешĕ çав сестра патне пырса кĕрсе унăн тӳшекĕпе çитарĕсене йăлт çура-çура чӳрече витĕр тулалла силле-

нĕ. Пĕр эрне хушши урамра юр çунă пек мамăк вĕçнĕ, тет...

Халăх çинчи сăмах — тĕтĕм мар, куçа çимест, çавăнпа та Куçма хăй çинчен çӳрекен халапсем çине сурнă çеç. Ку çеç те мар, хăй çинчен çынсем нумай калаçни ăна савăнтарнă, хăпартлантарсах янă. Чап вĕт! Пулипулми çынсем çинчен калаçмаççĕ, мĕнпе те пулин уйрăмах палăрнисем çинчен кăна калаçаççĕ, сăмахран, лайăх роман çырнă писатель çинчен, çирĕм километр çӳллĕшĕнчен сикнĕ парашютист çинчен... Халь акă ун пирки, арăмне улталаса пурăнакан Кукша Куçма пирки, каçса кайсах сӳтсе яваççĕ: ирхине «на троих» тума эрех лавкки умне пухăнса чĕтресе тăракансем те, пасарта сухан сутакансем те, трестри машинисткăсем те, местком членĕсем те. Реклама! Мухтав! Авторитет!..

Анчах эпĕ ытлашши аяккалла пăрăнса кайрăм пулмалла-ха, каçарăр. Эпĕ хамăн пуç çинелле таçтан çӳлтен хура чăматан таталса анни çинчен каларăм вĕт-ха. Бомбардировкă кунпа пĕтмерĕ. Чăматан хыççăн тротуар çине темле карçинкка лачлатрĕ. Вăл çирĕпех пулман курăнать, ӳксенех арканса кайрĕ те, асфальт çине пĕр купа хĕрарăмăн аялти кĕпи-йĕмĕ тухса выртрĕ.

Куç-пуç чарăлсах кайрĕ манăн. Мĕнле ЧП ку чăнах та? Мĕншĕн урамалла вăраççĕ килти япаласене? Ахăртнех, ку хваттерте пушар пуçланнă пуль, çавăнпа та унта пурăнакансем хăйсен пурлăхне çăлма тăрăшаççĕ. Тепĕр тесен... нимĕнле тĕтĕм те тухмасть-çке? Тен, кайри пӳлĕмсем çунаççĕ, тĕтĕмĕ тепĕр еннелле тухать?..

Эпĕ ĕнтĕ, хамăн васкамалла пулин те, Куçма хваттерне çăлас тесе, шалалла чăмма шутласаттăм, анчах шăп çав вăхăтра крыльцаран мана хирĕç Куçма арăмĕпе унăн кĕçĕн хĕрачи сиксе тухрĕç. Иккĕшĕ те макăраççĕ... Пăлханса кайнăскерсем, тăруках мана та паллаймарĕç курăнать вĕсем.

— Софья Иваннă, мĕн пулса иртет сирĕн? Çунмастăр пулĕ те? — васкаса ыйтрăм эпĕ.

— Çунатпăр çав... пĕтĕм пурнăç çунса кайрĕ, пĕтрĕмĕр! — ӳлесех ячĕ хĕрарăм.

— Тĕтĕм тухни курăнмасть-çке? Пожарниксене чĕнтĕр-и?

— Тĕтĕмне Куçма кăларать, анчах ăна чарма пожарниксем мар, милици кирлĕ...

— Мĕн пулнă вара?

— Вăл мĕн хăтланса пурăннине пĕлетĕр пуль? Чупать-чупать те аçа йытă пек, киле килсен йăлт çĕмĕрме тытăнать. Ак халь те ик каç таврăнмарĕ, паян вара тул çутăласпа килсе кĕчĕ те пире хăвалама тапратрĕ. Тухса кайăр, çухалăр, атту-тăк эп сире иксĕре те халех балконран кутăн чăмтаратăп, тет. Кирлĕ мар эсир мана, йăлăхтарса çитертĕр, эпĕ паянах ака урăх арăм илсе килетĕп, çирĕм çулхине, тет. Хĕнеме тапратрĕ, япаласене каларса ыватрĕ ав...

— Ӳсĕр-им хăй?

— Аçтан ура пултăр, ĕçме тытăнни вунă кун та çитрĕ пуль ĕнтĕ.

— Ĕçе çӳремест-им?

— Кам пĕлет ăна, те ĕçлет вăл, те ĕçлемест, ун укçине эпир çур çул курман, хамăн хĕрĕх тенкĕпех пурăнатпăр. Аннесем патне каятпăр ĕнтĕ, тек тӳссе пурăнма çуках...

Эп ним калама пĕлмесĕр тăтăм. Манăн хĕрарăма лăплантармалли сăмахсем те тупăнмарĕç — ытла та тĕлĕннипе, пуçран çапнă така пекех анра-сухра пултăм пулмалла. Анчах тепĕр самантранах такам кăшкăрса яни мана карт! сиктерчĕ.

— Ас ту, Сухви! Юлашки хут асăрхаттаратăп: тек ман куçа та ан курăн, çак урампа та ан çӳре, курсанах урусене çапса хуçатăп, ăçта та пулин жалобă çырсан — тытса майна пăратăп! — кĕрлерĕ хулăн сасă.

Куçма! Балкон çинчен çухăрать. Çанталăк сулхăнтарах пулин те, çаппа-çарамас хăй, пĕр труççикпе çеç. Пичĕ-куçĕ мухмăрпа шыçса кивĕ футбол мечĕкĕ пек пулса ларнă. Хура шурă сухалĕ шăрт пек.

— Куçма Кирилч! Эс мĕн хăтланатăн çак? Ухмаха ертĕн-им? — кăшкăртăм ăна.

— Ним те хăтланмастăп! Хамăн килти шуйттана хăваласа ятăм çеç,— кĕрлесе илчĕ вăл.— Тахçанах тапса кăларса ямаллаччĕ те — ку таранччен хĕрхенсе пурăнтăм, ухмах пулнă.

— Халь ăслантăн эппин?

— Сто процент!

— Тăхăр вун тăххăр мар-и? — шĕвĕр пӳрнепе хама тăнлавран пăраланă пек турăм эпĕ.— Ӳкĕнмĕн-ши кайран?

— Эпĕ-и? Ха-ха-ха! — шыçмак хырăмне ик аллипе тытсах ахăрса ячĕ Куçма.— Шутник эсĕ, Караçăм, ей-

пох юморист! Çав ват качакашăн ÿкĕнетĕп пулать!.. Эс кĕр-ха луччă, манăн кунта пуçламан «зверобой» пур, ĕçер пĕрре эп чуралăх санчăрне татса ирĕке тухнă ятпа!

— Пуçна пултăр, пĕчченех кÿп,— ал султăм эпĕ.

Куçма арăмĕпе хĕрачи вăл урама кăларса ыватнă япаласене пуçтаркаласа çĕклерĕç те анаталла утрĕç. Çав вăхăтра Куçма соборти чечук сасси пек хăватлăн сасăпа юрласа ячĕ:

Ан ава-а-ан, шĕшкĕ, ан авăн та,
Ан авăн, шĕшкĕ...

Çав тери çилĕ килсе кайрĕ манăн. Куçма хам çумра, юнашар тăнă пулсан тÿсейместĕм, пĕррех лайăх кăна хăлха чикки парса чикелентерсе яраттăм пуль. Юратьха çÿлте тăчĕ вăл.

— Тăхта пăртак, шĕшкĕрен те лайăхрах авĕç-ха ак сана,— шухăшларăм хам ăшра,— нумаях юрлаттармĕç, юрлас выранне ÿлесе макăрмалла та пулĕ, намăссăр карма çавар.

Унтан пуça çÿлелле çĕклерĕм те:

— Подлец эсĕ, Куçма, и... вообще йытă! — тесе кăшкăртăм, вара çавăнтах, ним тăвайманнипе, чышкăпа юнаса илтĕм. Анчах вăл ман сăмахсене илтмерĕ те пулмалла, ма тесессĕн каçса кайсах юрларĕ:

— Ан çилле-е-ен, савни, ан çиллен те,
Ан çиллен, савни...

* * *

Куçма килĕнче çакăн пек ахăр самана пулса иртни çинчен часах пĕтĕм хулана хыпар сарăлчĕ. Юратаççĕ вĕт ун йышши сенсацисене. Хăшĕсене çакăр ан çитер те эсĕ — çын çемйинчи лапра-çĕпре çинчен каласа пар. Упăшкипе арăмĕ çапăçни е судра пĕр-пĕрине тем те пĕр каласа уйрăлни теприсемшĕн темле чаплă киноран та, этем уйăх çине вĕçсе кайнинчен те интереслĕрех. Хăйсем те тасах мар ĕнтĕ, хайсен кил-йышĕнче те тем шуйттанĕ те пулса иртет, анчах вĕсем ун çинчен шутламаççĕ, урăххисен шăммисенех кăшлаççĕ, вĕсен лапарчăк кĕпи-йĕмнех кутăн-пуçăн тытса силлеççĕ...

Паллах, Кукша Куçма мĕн-мĕн хăтланни çинчен радиорепортаж та пулман, ăна телевиденипе те кăтарт-

ман, çапах та тепĕр кунне пурте пĕлчĕç: арăмĕпе хĕрачине хӳтерсе янă хыççăнах Куçма урăххине илсе пынă. Вăл, çав урăххи, парикмахерскинче ĕçлет иккен, çирĕм иккĕре кăна, шутсăр хитрескер. Ун çинчен çапла каларĕç: пĕчĕкçеç çап-çаврака питлĕ, анчах куçĕсем пысăк, паранкă пекех, çунса кăна тăраççĕ, çын çине çывăхарахран пăхсассăн, çунтарса яма та пултараççĕ. Шăлĕсем пуç тури шăлĕсем евĕр вĕтĕ, бритвă пекех çивĕч, пĕрре çыртсассăнах тăнсăр тăвать, теççĕ. Сап-сар çӳçне кăпăшкалатса пуç тăрне утă капанĕ пек купаласа хунă, çур метр çӳллĕшĕ те пулĕ. Картинкă ĕнтĕ! Канфет хучĕ çинче те тепĕр чух ун пек хитре картинкăсем ӳкерейместĕ... Вăт еплерех кайăк тупнă хăй валли алларан иртнĕ Кукша Куçма,— такам та ăмсанмалла!..

Çамрăк пулин те, çак сар кайăк питĕ опытлăскер, терĕç. Куçман кукша пуçне çавăриччен малтан вăл темиçе хут та качча кайнă. Анчах темшĕн ăнман-çке унăн пурнăçĕ: малтанхи упăшки çакăнса вилнĕ, иккĕмĕшĕ таçта Сахалина тухса тарнă, виççĕмĕшне (вăл магазин директорĕ пулнă) иртнĕ уйăхра çеç сакăр çуллăха хупса лартнă. Çавăн хыççăн вăл хăйсен янахсене якатакан мастерскойне час-часах сухал хырма кĕрекен Куçман шыçмак пит çăмартисене тĕлĕнмелле ачашшăн массаж тăва-тăва янă та — пĕррехинче хăйĕн хваттерне кĕрсе курма чĕннĕ имĕш...

— Ним те калаймăн, чаплă мăшăр тупнă Куçма!

— Ку ăна тĕнче çути кăтартать-ха эппин,— терĕç çынсем.

Çак сăмахсене икĕ майлă та ăнланма пулнă: «чаплă» тени — «путсĕр» тени, «тĕнче çути кăтартать» тесе калани — «ун пурнăçне пĕтерет» тени пулма пултарнă. Анчах Куçма хăй çав сăмахсене мĕнле илтнĕ — çавăн пекех тӳррĕн ăнланнă та хăй ăшĕнче тем пекех савăннă.

— Ну, Куçма Кирилч, çамрăк пурнăç мĕнлерех пырать? — тесе ыйтсан, вăл тӳрех сылтăм аллин пуç пӳрнине çӳлелле çĕклесе кăтартнă та йăл та йăл кулса илнĕ. Кулнă чух унăн куçĕсем тин çеç хăйма çисе тăраннă кушакăнни пек çуталса тăнă...

Малтанах чăрмавсем те, кăшт кӳренмеллисем те пулкаланă-ха унăн. Качча кайнă хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем ăна пачах хисеплеме пăрахнă. Аслă хĕрĕ тӳрех: сан пек аскăна эпĕ атте теме те пултараймастăп, ачамсене те сана «асатте» тетерместĕп, нихçан та! — тенĕ пулать.

Унтан Куҫмана хăйĕн арăмĕпе ачине хăваласа ярса саккун тăрăх уйрăлмасăрах тепре авланнăшăн пĕр ҫĕре чĕнтерсе питĕ хытă пăскăртнă, юлашки хут асăрхаттарнă: тата тепре мĕн те пулин ҫавăн пекки туса хурсан— хăвна ҫеҫ ӳпкеле, хĕрхенсе тăмастпăр! Кĕҫех тата суд пулнă та, Куҫмана ку хваттертен ҫамрăк арăмĕ-мĕнĕпех кăларса ямалла, хваттерне малтанхи арăмĕпе ачине памалла тунă. Тем пекех кутăнланнă кун пирки Куҫма, анчах саккуна хирĕҫ мĕн тăваятăн-ха?..

Куҫса кайнă вара пирĕн Куҫма хăйĕн сар кайăкĕн амăшĕ патне, вунă метрлă пӳлĕмре виҫҫĕн пурăнма. Кунта тата ҫакна та хушса калас пулать: пӳлĕмĕ пĕчĕккĕ пулнă пулин те, унта темиҫе пин хăнкăла чиперех вырнаҫса пурăннă, тет. Хăнкăласем ют ҫынна уйрăмах юратаҫҫĕ, ҫавăнпа та Кукша Куҫмана вĕсем малтанхи каҫхинех кăтăкласа чут ҫеҫ ухмаха ертсе яман...

Анчах Кукша Куҫма ăна-кăна майлама, тем тума та ăста пулни ҫинчен малтанах каларăм-ҫке сире. Ҫавăнпа та вăл ҫак хăнкăла патшалăхĕнче нумай пурăннă тесе ан шутлăр эсир. Тепĕр икĕ уйăхранах вăл ҫĕнĕ ҫуртри виҫĕ пӳлĕмлĕ ҫĕнĕ хваттере куҫнă.

Пĕҫҫисене шарт! ҫапрĕҫ ăна паллакансем.

— Ну, Кукша-тăк Кукша! Аҫтан кăна майне тупать пуль, шуйттан этемми!..

— Шутлăр-ха эсир: путлĕн алă пусма та пĕлмест вĕт хăй, тăвать клас та пĕтермен, теҫҫĕ ăна...

— Мĕн тăвас тетĕн... талант!

— Талант мар — чăн-чăн прохвост вăл!

Калаҫкаларĕҫ-калаҫкаларĕҫ те ҫавăн пек — шăпланчĕҫ. Куҫми вара, ĕлĕкхилле каласан, улпут пекех пурăнчĕ. Хамах кĕрсе курман та, ҫынсем каланине илтнĕ: ун хваттерĕ хаклă япаласен склачĕ пекехчĕ, тет. Телевизор унта, холодильник, пианино, пылесос, кĕпе ҫумалли машинă, электричествăпа ĕҫлекен ҫĕвĕ машини тата тем те пĕр; стенасем ҫинче те, урайĕнче те кавирсем. Икĕ шифоньер — тăп тулли тумтир, тет...

Малтанхи арăмĕпе Куҫма урампа юнашар утнине те никам та курман, анчах хальхи сар кайăкпа таҫта та курма пулатчĕ ăна: Атăл хĕрринче, театрта (яланах пĕрремĕш ретре), кинора, Шупашкара арăслан-слонсене кăтартма килекен зоопаркра. Час-часах ресторанта та ларатчĕҫ. Ҫулла — Атăл леш енче, вĕри хăйăр ҫинче хĕртĕнеҫҫĕ.

— Ну, пурӑнать, шельмӑ, ну ыр курать!..

Ун пирки ҫапла каланине яланах илтме пулатчӗ. Анчах мӗнле укҫапа пурӑнать вӑл, ӑҫтан тухать унӑн юмахри пек пуянлӑхӗ — ун ҫинчен никамах та шарламастчӗ.

— Тупать пуль... снабжени начальникӗ вӗт, пӗтӗмпех хӑй аллинче. Улма пахчинче ӗҫлекен улмана укҫа парса илни хӑҫан пулнӑ? — тенисем ҫеҫ пулкалатчӗҫ.

* * *

...Вӑхӑт тени малалла сиккипех ыткӑнать, ӑна эсӗ нимӗнпе те чараймастӑн. Кунсем мар, уйӑхсем мӗнле иртнине те сиссе юлаймастӑн тепӗр чух. Кукша Куҫма парикмахерскинчи сар кайӑкпа ыр курса пурӑнма пуҫланӑранпа та икӗ ҫул вӑшт кӑна иртсе кайрӗ. Ҫав хушӑра Куҫман кукши тата ытларах саралчӗ, хырӑмӗ йывӑрланчӗ, хӑй тӑвалла утнӑ чух кивӗ пӑравус пекех хашкакан пулчӗ. Анчах арӑмӗ ватӑлма шутламарӗ-ха. Каккуй унта ватӑлмалли! Кӗрхи панулми пек тулса, пур енчен те ҫавракаланса, арҫынсене антӑхтарса ямалла илемленсе пычӗ вӑл. Куҫман халӗ ӗҫ хыҫҫӑн ытларах диван ҫинче канса, хырӑмӗ час-часах ыратнипе ун ҫине грелкӑ хурса выртас кӑмӑл пулнӑ, анчах сар кайӑкӑн ялан халӑх хушшинче, театрта, концертсенче, тӗрлӗ вечерсенче пулас килнӗ.

— Манашкӑ мар вӗт эпӗ пӗрмай тӑватӑ стена хушшинче пӑнтӑхса ларма! — пӑта пек кӗлӗллӗ пушмакӗпе шак! тапса илнӗ вӑл, Куҫма унта-кунта тухса ҫӳреме килӗшмесен.

Куҫма вара ирӗксӗрех диван ҫинчен тӑрса, эхлетеэхлете тумланма тытӑннӑ. Пуринчен ытла уншӑн пушмак шнурокӗсене ҫыхасси йывӑр пулнӑ — хырӑмӗ хытӑ кансӗрленӗ. Йӗп-йӗпе тара ӳкнӗ вӑл ҫак ӗҫе тунӑ чухне. Арӑмӗ вара, тӳсейменнипе, лайӑх йышши электрочейник пекех вӗреме тапратнӑ:

— Хӑҫанччен кӗтмелле сана, кукша шуйттан! Тумлан хӑвӑртрах, атту-тӑк пӑрахса хӑваратӑп ак сана, пӗчченех каятӑп!..

Тӗп-тӗрӗссипе каласан, ҫамрӑк арӑм хӑй Куҫмана епле хытӑ юратнине халь самаях интереслӗ сӑмахсемпе палӑртнӑ. Вӑл ӑна кивӗ чӑматанпа та, ҫӗтӗк пушмакпа та, чуман лашапа та танлаштарнӑ, ватӑ шуйттан та,

вилĕмсĕр Кащей те тенĕ. Çав сăмахсене вăл çилленсех, ура тапсах калană, анчах, упăшкин чĕри тăрук çурăлса каясран шикленсе, тем те пĕр каласа тултарнă хыççăн çийĕнчех ун патне чупса пырса çап-çутă кукшинчен чуп туса илнĕ те, Куçма тарăхас выранне ирĕлсех кайнă...

Çапла пуранна пирĕн хисеплĕ Куçма Кирилч.

Тата каштах вахат иртсен, Куçма пилĕкĕ ыратнипе аптраса ӳксен, унăн сар кайăкĕ вечерсене-мĕнсене упăшкисĕрех çӳре пуçлана. Анчах чее пулна: усал сăмах-юмах тухасран сыхланса, вăл хăй валли юлташлăх пĕр хусах арăм тупнă. Килтен вара вĕсем пĕрлех тухса кайнă — Куçма ăна хăй куçĕпех курса юлнă, çĕрле те пĕрлех тавраннă, леш хусах арăм сар кайăка яланах ăсатса янă, анчах хăй курман чух сар кайăк кампа çӳренине, кампа ташланине, кам ытамĕнче пулнине Куçма пĕлмен, пĕлме те пултарайман. Хĕрарăм пĕр улталама тытăнсан, унăн çулне-йĕрне эсĕ ĕмĕрне те тупаймастăн, теççĕ.

Паллах, сар кайак вахата ытла кичемех иттермен...

Çав çулсенче эпĕ Куçман малтанхи арăмĕпе те тĕл пулкаларăм. Пĕррехинче хире-хирĕç тăрсах пуплерĕмĕр.

— Мĕнле пуранатăн, Софья Иванна?

— Турра шĕкĕр, аванах пуранатпăр-ха,— терĕ вăл.— Выçă лармастпăр, çĕтĕк-çатăках çӳреместпĕр, сывлăх пур-ха. Хама ĕнтĕ цехра аслă мастер турĕç, укçине лайăх параççĕ, хампа пуранакан кĕçĕн хĕр кăçал института кĕчĕ, инженер пулатăп, тет...

— Пит аван апла пулсан. Эсĕ ху... качча каймарăн-и-ха?

— Уй, лапра çăвар!—кулса ячĕ Софья Иванна.—Эсĕ мĕн, çĕр çинче пурте Кукша Куçма пекех ухмах, тетĕн-и? Мĕн каччи пултăр ĕнтĕ маншăн? Кукамай вĕт халь эпĕ, виçĕ хут папăшка! Таккойски мăнуксем çитĕнеççĕ — слон çурисем пек, ытармалла мар! — чышкине чăмăртасах кăтартрĕ хĕрарăм.

— Куçма Кирилчпа тĕл пулса калаçкалатăр-и?— юриех ыйтрăм эп.

— Курман, илтмен. Мĕн тăвас ман унпа? Этем мар вĕт вăл. Пурантăрах хăйĕн пĕт-пĕлтĕкĕпе.

— Анчах та, енчен... вăл сан патна таврăнма шут тытсан? Пулать вĕт пурнăçра çаван пекки: темиçе çултан та пĕрлешеççĕ.

— Пулать те пуль те, анчах эп ун йышши çын мар. Каçарма пултараймастăп. Ман çур ĕмĕре çисе ячĕ вăл, эсремет... Çук, çук!

* * *

Калаван çак сыпăкĕнче автор хăйĕн геройне, Кукша Куçмана, ним мар тĕрмене хупса хума пултарать. Саккунла та пулать ку. Ара, хăварах сисрĕр пулĕ, жулик вĕт-ха вăл, чăн-чăн махинатор-комбинатор, темелле. Эсир мĕн, килĕнчи пĕтĕм пуянлăха, хакла япаласене вăл хăйĕн ĕç укçипе туянса тултарнă, тетĕр-и? Çамрăк арăмне тĕрлĕ пальто-мантосем шалу укçипе илсе панă-и? Ас ту, апла пулмасăр! Вĕсем пурте Куçма килне кукăр-макăр çулсемпе пырса кĕнĕскерсем вĕт! Анчах тытман вăрă — вăрă мар, теççĕ те, автор Куçмана ытла тӳрех тĕрмене питĕрсе лартасшăн мар-ха. Малалла мĕн пуласси кайран курăнĕ унта...

Халлĕхе эпир ăна больницăна выртарапăр. Чирленĕ-çке вăл юлашки вăхăтра, хавшатса çитернĕ ăна çамрăк арăмĕ. Чĕри те йĕркеллех тапман, пилĕкĕ те аптратнă, пӳри те шыçнă. Утмăлалла çывхарнă çын пурнăçĕ çавăн пек ĕнтĕ!

Виçĕ уйăх ытла выртрĕ Куçма больницăра. Пĕр чирĕ иртсе кайнă пек пулать — тепри пуçланать, ку кăштах лăпланать — виççĕмĕшĕ антратма тытăнать. Тем пекех хăтăлас килчĕ унăн тухтăрсен тыткăнĕнчен, анчах ниепле те май килмерĕ. Пуринчен ытла хăйĕн сар кайăкĕ пирки тунсăхларĕ вăл...

Чăн та, суймалли çук, ытарайми арăмĕ çӳрерĕ ун патне. Малтан кашни кун тенĕ пекех пычĕ, унтан эрнере пĕрре, кайран вунă кунта, ик эрнере. Анчах нумайшар лармарĕ упăшкин кравачĕ çумĕнче. Пĕчĕкçеç ылтăн сехечĕ çине пăха-пăха ялан хыпаланчĕ вăл:

— Ах, ман паян çĕвĕç патне çитмелле, костюм виçмелле! Ах, виççĕ тĕлне шăл тухтăрĕ патĕнче пулмалла, асав шăл çинчи коронкă ванса кайрĕ! Ах, театра билет илме чупмалла, паян унта чикансен ансамблĕ...

Вăл çавăн пек васканă пирки Куçма унпа нимех те калаçаймарĕ, арăмĕн мамăк пек çемçе аллине чуп туса юлчĕ, вăл хакла йышши духипе тутлантарса хăварнă сывлăша чылайччен çăтса выртрĕ çеç.

Пĕррехинче сар кайăк ăна тĕлĕнсе хытса каймалла хыпар пĕлтерчĕ:

— Эпĕ, Куçма асатте (вăл халь ăна час-часах «асатте» тенĕ), кĕçех артистка пулатăп пулмалла!

— Мĕнле артистка?!— пилĕкĕ ыратни çине пăхмасăрах вăшт! тăрса ларчĕ Куçма.— Ăçта?!

— Халăх хорĕ çумĕнчи ташă группине илеççĕ мана,— пăрçа сапнă пек кала пуçларĕ сар кайăк.— Ташлама вĕрентекенне, балетмейстера, ман фигура питĕ шутсăр килĕшнĕ. Кун пек кĕлеткене сая ярса пуранни — преступлени, эпир санран прима-балерина тăватпăр, пĕр çулталăкран тава тивĕçлĕ артистка ятне илетĕн, тет. Вайпах заявлени çыртарчĕ. Кĕçĕр пирвайхи репетици пулать. Эс хирĕç мар пуль вĕт? Ма чĕнместĕн? Ну, кала ĕнтĕ!

Куçма чăн та çийĕнчех нимĕн те калаймарĕ. Унăн чĕлхи çăвар маччи çумне çыпăçса ларчĕ пулмалла, калама тăнă самахĕ пыр шăтăкĕнче путланчĕ.

— Эс тем ан шухăшла, асатте, халăх хорне унта сан пек ват стариксем те çÿреççĕ,— Куçма çывăхнерех куçса ларса малалла пакăлтатма тытăнчĕ сар кайăк.— Ара, санăн та сассу лайăх вĕт-ха, кăшт сыпсассăн леш «Ан авăн, шĕшкĕ!» тенине еплерех янрататăн! Пÿлĕмри кантăксем чĕтреççĕ!.. Больницăран тухсан эп хăвна та илсе каятăп ак унта. Иксĕмĕр пĕрле çÿрĕпĕр. Çапла-и? Юрать-и? Ну?

Ăнран тухса каяс патне çитнĕ Куçма пĕр сăмах çеç калама пултарчĕ ăна хирĕç:

— Юрать...

— Ух, ăсла-çке эс манăн! Темиçе сăмах каласанах ăнланатăн! — упăшкин кукшине чап! чуп туса илчĕ те сар кайăк, пукан çинчен тăчĕ.— Ну, халь каям-ха эпĕ, каçчен манăн ваннăйĕнче çăвăнса тухас пулать, репетицинче çарамаслантараççĕ тет унта...

— Епле çарамаслантараççĕ?!— куçĕсене чарса пăрахса, хăйăлтатса илчĕ Куçма.

— Ан хăра, асатте! Пĕтĕмпех мар. Майкăпа, труççикпе ташлаттараççĕ. Сывă пул! Тепрер эрнерен килсе курăп-ха, ун чух йăлт каласа парăп. Интерессем нумай пулма пултараççĕ.

Кайăк пекех пăр-пăр-парр... вĕçсе тухса кайрĕ вăл палатăран.

Унччен те пулмарĕ, Куçмапа юнашар койка çинче

выртакан çурхи мулкач пек ырхан бухгалтер тăрса ларчĕ те пуçне кăтăрт-кăтăрт хыçкаласа илчĕ.

— Арсăр арăм — йĕвенсĕр кĕсре, тенине илтнĕ-и эс, хисеплĕ Куçма Кирилч? Илтнĕ-и, тетĕп!

Куçма ним те чĕнмерĕ, куçĕсене пĕр мăчлаттармасăр маччаналла пăхса выртрĕ. Хăйĕнчен мĕн ыйтнине илтмерĕ те пулмалла вăл. Шухăшларĕ ĕнтĕ, шеремет, хыытă шухăшларĕ...

Ырхан бухгалтер вара ассăн сывласа илчĕ те каллех тăсăлса выртрĕ. Кăшт тăрсан тепĕр сăмах хушса хучĕ:

— Арăм тени çăпата мар, хывса ывăтаймăн, теççĕ çав...

Çак кунран пуçласа Куçма сывлăхĕ тÿрленес вырăнне начарлансах пычĕ. Ыйхи те çухалчĕ унăн — нăйăклатакан койкă çинче çĕрĕпе енчен енне çаврăнса хашш! хашш! сывласа выртрĕ. Кăшт тĕлĕрнĕ пек пулсанах, хăйне такам пусма тăнă пек, шари! кăшкăрса ячĕ. Апат та çиме пăрахрĕ. Тек шыв ĕçет, тек ĕçет, кунне ик-виçĕ графин лăнкăртаттарса ярать. Ăшĕ хыпнă пуль ĕнтĕ...

— Нервăсем пуçĕпех пăсăлнă санăн,— терĕç тухтăрсем.— Лăпланса пурăнма тăрăш, унсăрăн сана психиатрическине куçармалла пулĕ...

Анчах епле лăпланатăн-ха? Артисткă пулатăп, тенĕренпе Куçма арăмĕ пырса та пăхмарĕ вĕт, пĕрререн пĕрре çеç телефонпа ик-виç сăмах каларĕ:

— Ĕçсем лайăх пыраççĕ, ташлатăп, маншăн ан кулян, ан тунсăхла, сывлăхна тÿрлет, вăл сана кирлĕ пулма пултарать-ха! Салам!

Арăмĕ калаçнă хушăрах трубкăра арçын сасси илтĕнсе тăчĕ, тет...

Тÿсеймерĕ юлашкинчен Куçма, тухтăрсене тапăнмаллипех тапăнчĕ:

— Кăларса ярăр мана, урăх пĕр кун та выртаймастăп!

— Ара, сывалса çитмен вĕт-ха эсĕ,— терĕç лешсем.

— Мана ирĕк кирлĕ, сывлăш! Вольăра эпĕ луччă вăй илетĕп, татах кунта пурăнсан — чăнах та ухмаха ерсе кайма пултаратăп. Халь те çур ухмах ĕнтĕ эпĕ...

— Ну, хăвăн кăмăлу эппин. Анчах кайран-малтан пире ан ÿпкеле. Урампа пынă çĕртех тирĕнсе кайсан — çылăхĕ хăвăн çинче пултăр.

— Юрать! Килĕшетĕп! Подпискă паратăп!..

* * *

Бюрократизм тени министерствăсенче çеç мар, больницăсенче те пайтах-ха. Çынна кăларса яма тăрсан та — унта çыраççĕ, кунта çыраççĕ, алă пусаççĕ, пичет хураççĕ... Кашнинех кĕтмелле, нихăшĕ те васкамасть. Çавăн пирки Кукша Куçман больницăра кăнтăрла иртичченех тытăнса тăмалла пулчĕ. Унтан хăйĕн тумтирне илсе тăхăнасси çеç юлнăччĕ — тепĕр инкек сиксе тухрĕ: кладовщицă çук, терĕç. Чирлисен тумтирĕсем упранакан пӳлĕме питĕрнĕ те çăраççине чиксех тухса кайнă шуйттан хĕрарăмĕ! Ăçта кайнă? Никам та пĕлмест. Пĕрисем вăл аякри хурăнташăн пумилккине кайнă, теççĕ, теприсем пачах урăхла калаççĕ: пумилккене мар, туя чĕннĕ ăна, аслă мăн аппăшĕн кĕçĕн шăлнĕ авланать, теççĕ.

Ай, тарăхрĕ те вара Куçма!..

Тытăнчĕ кăшкăрма, çухăрма, аслăраххисене шыраса этажран этажа арăслан пек чупма. Пĕртте чирлĕ çын пек мар...

— Халех тупса килнĕ пултăр вăл чупкăн эсреле! Атту-тăк пуртă илетĕп те кладовăй алăкĕнчен йăлт турпас тăватăп! Эп халь психически, мана ним те пулмасть! Шырăр, тупăр ăна, майĕнчен шăршлă вĕренпе кăкарса килĕр! Сей минут! — çухăрчĕ вăл.

Вăл пуçĕпех урса каясран хăрарĕç пулмалла, кладовăй çăраççине çĕмĕрсех кĕчĕç. Йăпăр-япăр тумланнă хыççăн Куçма хăйне виçĕ уйăх ытла пăхнăшăн, сиплесе усранăшăн никама та тав тумасăрах тухса кайрĕ. Сыв пуллашмарĕ те вĕт.

— Ну, пулать те çĕр çинче сысна... Кун пеккинех курманччĕ-ха! — тесе юлчĕç кăна сестрасемпе санитаркăсем.

...Киле вăл пĕр сакăр сехет тĕлнелле çитрĕ. Тĕттĕмленнĕччĕ ĕнтĕ. Тăваттăмĕш хута мĕнле хăпарнине те сисмерĕ. Хашкама та ермерĕ темшĕн. Хĕпĕртенипех пуль çав. Акă, халех шăнкăрав тӳми çине пусать те, ăна хирĕç арăмĕ сиксе тухса тӳрех майĕнчен ыталаса илет, каçса кайса чуп тăвать. Унтан хăналама тытăнать... Виçĕ уйăх килте пулман вĕт, кĕçĕр кăштах «столичнăй» ярсан та кансĕрлемест — кăмăла çĕклемелĕх, вăй кĕртмелĕх. Çылăх мар!

Куçма тӳме çине пусрӗ. Шалта шăнкăрав сасси вăраммăн янраса кайрӗ. Анчах урăх сас пулмарӗ. Тепре пусрӗ. Каллех алăк патнелле никам утни те илтӗнмерӗха. Виççӗмӗш, тăваттăмӗш хут шăнкăравланинчен те усси пулмарӗ.

— Килте çук... Эп таврăнасса пӗлменнипе ăçта та пулин кайнă ӗнтӗ. Пӗр-пӗччен камăн ларас килтӗр?— арăмне тӳрре кăларса шухăшларӗ вăл.— Анчах мӗн тăвас-ха?..— Куçма тăркаларӗ-тăркаларӗ те тăрук саванса кайрӗ: — Э-э, манăн ара хам çумрах саппас уççи пур-иç! Епле манса кайнă эп ăна? Склероз, теççӗ тухтăрсем, çавă пуль ӗнтӗ... Ку тата интереслӗрех пулать вӗт! Вăл килсе кӗрет—эпӗ диван çинче выртатăп... Суприз, теççӗ пулас хранцуссем ун пеккине.

Иккӗ сывласа илнӗ хушăрах Куçма алăка уçса малти пӳлӗме кӗчӗ те электричествă çутса ячӗ. Тӳрех куç умӗнче, стена çинче, темле пысăк çутă япала йăлтăртатса илчӗ. Чим-ха ара, мӗн ку? Куçма куçӗсене мăч-мăч тутарса лайăхрах пăхрӗ... Стена çинче труба çаканса тăрать иккен. Духовăй оркестрти чи мăн труба. Бас. Мӗнле лекнӗ вăл кунта, кам илсе çакнă? Арăмӗ тахçанах пӗрре унăн куккăшӗн ывăлӗ музыкант, тенӗччӗ. Тен, çав килнӗ? Кайран палла пулӗ-ха...

Куçма пальтине хыврӗ те ăна пăта çине çакма каранчӗ. Ха, кунта та ют япала — темле арçын плащӗ! Ак тата симӗс шлепке. Куçма ун пеккине нихçан та тăхăнман. Урайӗнче — икӗ мăшăр ют пушмак, хӗрӗх пиллӗкмӗш номертен те кая мар.

— Тем тесен те, çав куккăшӗн ывăлӗ килнӗ...—шухăшларӗ Куçма.— Çавăнпа пырайман вăл ман пата, ерçмен, хăнана пăхнă. Енчен тăванӗ мар-тăк?

Куçмана самантлăха чӗринчен çӗлен сăхнă пекех туйăнчӗ. Çапах ку шухăша вăл çийӗнчех сирсе яма тăрăшрӗ.

— Пулма пултараймасть... Ухмах эпӗ!

Вăл малалла иртрӗ. Сӗтел çинче пепельницă, унта хӗррипе танах пирус тӗпӗсем тултарнă.

— Туртать иккен куккăшӗн ывăлӗ... Аван мар ку, чӗлӗм тӗтӗмӗ стенасене саратать,— пуçне пăркаласа илчӗ Куçма.

Унтан буфет çинелле пăхрӗ те перцовкă кӗленчине курчӗ. Çурри таран пушатнă. Юнашарах черкке, закускă.

— Еçет-ха эппин вăл...

Халĕ унăн пĕтĕм хваттерне пăхса тухас килсе кайрĕ. Виçĕ уйăх курман вĕт! Çывармалли пӳлĕмре нимĕн те улшăнман, анчах темшĕн кравать айĕнче хĕрарăмпа арçын тапочкисем юнашар тăраççĕ. Унтан вăл кухньăна кайрĕ те сават-сапа лартакан шкапа уçса пăхрĕ. Тур çырлах! Шăкăрах пуш кĕленче! Персе янă снаряд гильзисем пек тăраççĕ. Тем тĕрли те пур: столичнăйĕ, старки, чие эрехĕ, хăмла çырли эрехĕ, армути эрехĕ... Шутне те пĕлес çук!

— Тăванĕ килнĕ ятпа хăнасем пухнă пулмалла. Укçине хĕрхенмен вара...— хаш! сывласа илчĕ те Куçма, больницăри ырхан бухгалтер каланине аса илчĕ: арсăр арăм — йĕвенсĕр кĕсре...

Вăл пысăк пӳлĕме тавăрнчĕ те буфет умĕнче кăшт тăркалана хыççăн пĕр черкке перцовкă ярса ĕçрĕ. Питĕ лайăх пек туйăнчĕ, çавăнпа та тепре янклаттарчĕ. Унтан «тур калашле — виççĕ пултăр», терĕ. Вара диван çине тăсăлса выртрĕ. Пуçĕнче тĕрлĕрен тĕрлĕ шухăшсем явăнма пуçларĕç. Тепĕр вунă минутран хăй сисмесĕрех çывăрса кайрĕ. Лăпкăн, пĕчĕк ача пек...

...Ăна такам ураран карт! туртса вăратрĕ. Хытă хăранипе, Куçма пăтăл-патăл тăрса ларчĕ. Ун умĕнче— темле питĕ çӳллĕ çын. Икĕ метр та пулĕ. Çăнĕ-пичĕ хĕп-хĕрлĕ, курпун сăмси айĕнче хăрăмпа варалана йĕр пек усси курăнать. Куçĕсем чăх çăмарти пысăкăш. Кĕске çанăллă кĕпепе. Пуленке пек аллисем хуп-хура çăмпа витĕннĕ. Чисти упăте. Çаксене Куçма пурне те пĕрре пăхсах асăрхаса юлчĕ.

«Хайхи ман арăм куккăшĕн ывăлĕ, музыкант...» — шухăш вĕçсе илчĕ те Куçма пуçĕнче, хăйĕн сăнне-питне кулăпа çемçетме пикенчĕ. Анчах лешĕ ăна çисе ярас пек пăхрĕ. Чышкисене те чăмăртаначчĕ пулмалла вăл.

— Эс кунта мĕнле лекрĕн? — хăйăлтатакан сасăпа ыйтрĕ çав хĕрлĕ питлĕ çын.

— Хам уççипе уçса кĕтĕм. Больницăран таврăнтăм та, арăм çук та...— айăпа кĕнĕ пекрех хуравларĕ Куçма.

— Кам вара эсĕ çын хваттерне çĕрле çăраççи юраттарса кĕрекенскер? — сассине хытарчĕ леш çын.

— Епле кам? — куçĕсене мăчлаттарчĕ Куçма.—Çак хваттер хуçи, Куçма Кирилч Лысов.— А эсир... эсир ман арăмăн тăванĕ пулас-ха, ун куккăшĕн ывăлĕ, çапла-и? Каланăччĕ вăл мана... Маруççи хăй ăçта вара?

— Унӑн нимӗнле куккӑшне те палламастӑп. Эпӗ— Маруҫӑн упӑшки. Ака кам эпӗ! — Улӑпла этем ҫапла каларӗ те хайне кӑкринчен чышса илчӗ.

— Мӗнле упӑшка?! — хыҫалтан йӗппе чикнӗ пекех сиксе тӑчӗ Куҫма.—Каҫарӑр та... мӗн калаҫатӑр эсир? Ун упӑшки эпӗ вӗт, эпир унпа икӗ ҫул ҫура пурӑнатпӑр ӗнтӗ. Ан шӳтлӗр-ха тархасшӑн, йӗркеллӗрех калаҫӑр!— Ун сасси темле ҫинҫелсе, чӗтрекен пулса кайрӗ.

— Питӗ йӗркеллӗ калаҫатӑп! — Палламан ҫын ларчӗ.— Тӑнла лайӑххрах! Эсӗ нихҫан та унӑн упӑшки пулман. Икӗ ҫул ытла эсӗ унӑн еркӗнӗ пулса кӑна пурӑннӑ. Ӑҫта сан документ? Ӑҫта авланнине пӗлтерекен свидетельства? Ҫук вӑл санӑн. Пурри пур та ӗнтӗ... урӑх хӗрарӑмпа ҫыраннн. Анчах та манӑн пур! Ака свидетельства, ака паспорт ҫине паллӑ туни... Виҫӗм кун ҫеҫ ҫырӑнтӑмӑр эпир. Кухньӑра куртӑн пуль — мӗн чухлӗ кӗленче унта? Пӗтӗмпех туй юлашки. Ӑнланатӑн-и? Кала эппин: кам халь Маруҫ упӑшки? Эсӗ-и, эпӗ-и?

Куҫма кӑвак хут тӗслӗ пулса кайрӗ, алли-урисем сиксе чӗтрерӗҫ унӑн.

— М... М... Маруҫҫи хӑй ӑҫта? Эп ӑна халех... халех... ташлаттаратӑп! Вӗрентӗп эп ӑна хам куҫ умӗнчех качча кайма!..

— Маруҫ сансӑрах лайӑх ташлать. Ансамбльпе гастроле кайнӑ,— терӗ те Куҫма арӑмӗн ҫӗнӗ упӑшки, буфет патнелле пычӗ.— Перцовкине эс хыпса ятӑн-и? — ыйтрӗ Куҫмаран.—Ухмах, пирӗн ӑна пӗрле, черккесене шаклатса ӗҫмеллеччӗ!

— Апла пулсан, сирӗн халех ман хваттертен тухса каяс пулать!— кӑшкӑрса ячӗ Куҫма.— Халех! Паянах! Вон!..

— Ан ҫухӑр, старик,— терӗ леш ҫын самаях лӑпкӑн,— ку хваттер нихҫан та сан пулман. Ордерне Маруҫ ячӗпе ҫырнӑ. Ӑна панӑ ку хваттере, ма тесессӗн санӑн урӑх хваттер пур. Пӗр ҫынна кам ухмахӗ ик хваттер парать, шухӑшла-ха эсӗ кукша пуҫупа! Ҫапла вара, ку ыйту татӑлнӑ, тесе шутламалла.

— Япалисем пурте манӑн! Эп илнӗ, хам укҫапа!— аптранӑ енне тепре кӑшкӑрса ячӗ Куҫма.— Йӑлт илсе тухса каятӑп, пӗр ҫӳпӗ те хӑвармастӑп ҫав сучка валли!..

— Ку та кирлӗ мар калаҫу, старик,—терӗ Маруҫӑн ҫӗнӗ упӑшки.— Кунти япаласене пӗрне те эс илмен, пур-

не те ман арӑм илнӗ. Свидетельсем пур, эпир вӗсене ала пустарна ӗнтӗ...

— Укҫи, укҫи камӑн пулнӑ?!

— Укҫи вӑл... патшалӑхӑн, совет укҫи.

— Кам ӗҫлесе илнӗ ӑна?

— Вӑт, сан вырӑнта пулсассӑн, эп ку ыйтӑва вуҫех те хускатмӑттӑм, старик. Вӑл укҫана эсӗ ӗҫлесе илменнине пӗтӗм тӗнче пӗлет, темелле. Хальччен эсӗ мӗншӗн тӗрмере марри кӑна тӗлӗнтерет ҫынсене...

Ҫапла сӑмахсемпе ҫӗнӗ хуҫа кухньӑна кайса пуҫламан эрех кӗленчи илсе тухрӗ.

— Телейлӗ эсӗ, старик! — терӗ вӑл, вӑрттӑн кула-кула.— Пӑх-ха ара, арӑмун туйӗнчен ҫак армути эрехӗ пытанса юлнӑ... Ӗҫер-ха иксӗмӗр паллашнӑ хыҫҫӑнах тинӗсри карапсем пек уйрӑлса кайнӑ ятпа!

Куҫма пуҫне пӗксе, кукшине ик аллипе ик енчен пӑчӑртаса лартрӗ. Хӑй ыванса ҫитнӗ лаша пек хашкарӗ.

— Ӗҫ, старик! Ак, ятӑм сан валли...

— Ӗҫместӗп, аюк. Эрехсӗр те йӳҫӗ,— терӗ Куҫма.

— Ухмах пулатӑн. Ун пек чухне эрех чуна епле ҫӗклентерсе янине мантӑн-им? Арӑмна пӑрахнӑ чух ӗҫнӗ-ҫке эсӗ, ма-ха арӑму хӑвна пӑрахсан ӗҫмелле мар? Тавай, тавай, яра пар!

Куҫма ӗҫрӗ те вӑрахчен тӑнсӑр пулнӑ така пек пӑхса ларчӗ. Унтан тӑрук сиксе тӑрса сӗтел ҫинчи йывӑр пепельницӑна тытрӗ те хирӗҫ стена ҫинче ҫакӑнса тӑракан арӑмӗн портретне шаплаттарчӗ. Чӑнкӑр-р! турӗ портрет ҫинчи кантӑк.

— Йыта! Хура юн! Ҫӗлен!..— куҫне-пуҫне чарса пӑрахса, урисемпе тӑпӑртаттарса ҫухӑрчӗ вӑл.— Пӗтертӗн ман пурнӑҫа, явӑлтан ҫуралнӑскер!

— Ҫитӗ, старик! — пукан ҫинчен тӑрса ун патнелле пычӗ Маруҫӑн ҫӗнӗ упӑшки.—Ман хваттерте кун пек харкашма юрамасть, пускилсем илтсен тем калӗҫ. Эп культурнӑй ҫын, музыкант, ман арӑм — артисткӑ, ху пӗлен... Эпир санпа ӗнтӗ пурин ҫинчен те калаҫса татӑлтӑмӑр, пӗр-пӗрине ӑнлантӑмӑр, ҫапла-и?

— Ӑнланман эпӗ нимӗн те! Мӗн пулса пырать ман пурнӑҫра? Мӗншӗн телейсӗр эпӗ?! — каллех ҫухӑрса ячӗ Куҫма.

— Сӑмахпа каланине ӑнлансах ҫитеймерӗн пулсан, ак ҫакӑнпа ӑнлантарма пултаратӑп...— Маруҫӑн ҫӗнӗ упӑшки хӑйӗн чукмар пек ҫӑмлӑ чышкине ун сӑмси

умнех илсе пычĕ.— Анчах ыраттарасран хăратăп. Хăнăхман эпĕ стариксене хĕнеме. Атя, тумлан та часрах — тухса вĕçтер хăвăн çулупа. Атту ытлашши каç пулса ларĕ, хăрамалла.

— Эсĕ мана хăвалатăн-и?

— Халлĕхе ырăпа калатăп, анчах кăшт тăрсан тапса кăларса яма та пултаратăп. Кун пирки иккĕленмелли çук.

— Åçта каям-ха эпĕ, тусăм? Åçта кая-а-ам?!— макăрса ячĕ Куçма.

— Ана-кăна пĕлместĕп, анчах санăн хăвăн килӳ, арăму, ачу пуррине илтнĕччĕ. Çапла-и?

— Кĕртмеççĕ вĕсем мана! Çывăха та ямаççĕ, пĕлсех тăратăп!..

— Вăл енне кайсан, Маруç та сана текех кунта кĕртме хушмарĕ. Хваттер хуçи вăл вĕт, эпир санпа иксĕмĕр мар? Атя, тепрер черкке ĕç те — яра пар, старик!

Куçма ĕçрĕ те макăра-макăра тумланма тытăнчĕ. Ана часрах кăларса ярас тесе, Маруçăн çĕнĕ упăшки унăн пушмак шнурокĕсене те хăех çыхрĕ.

— Ну, старик, çулу такăр пултăр. Пит лайăх паллашрăмăр, çавăн пекех ыррăн уйрăлар эппин...

Вăл Куçмана çурăмĕнчен хуллен тĕрте-тĕрте алăкран пусма çине кăларчĕ. Унтан хăй йăпăрт кăна каялла кĕрсе леш çап-çут мăн трубана çĕклесе тухрĕ те аялалла анма пуçланă Куçмана хыттăн кăшкăрчĕ:

— Эй, старик! Эпĕ сана музыкăпах ăсатас терĕм-ха! Ака, итле! Эсĕ чи юратнă кĕвве калатăп!

Мăн трубăран çав тери хулăн сасăсем кĕрлесе тухма пуçларĕç: норт-норт-норт, норт-норт-норт...

— Ан çиллен, савни, ан çиллен те
Ан çиллен савни... норт-норт-норт!

Асĕ-пуçĕ йăлт саланса кайнă Куçма ним шухăшлама пĕлмесĕр утрĕ, çӳлте çаплах труба сасси кĕрлерĕ.

## МАН КУКАМАЙ АКРАППИН...



Кукамай тени вӑл ытла сайра тӗл пулакан кайӑк мар, кашниннех пур (е пулнӑ), ҫавӑнпа та унпа мухтанмаллиех ҫук. Паллах, кукамайсем тӗрлӗрен пулаҫҫӗ. Хӑшӗ ватӑрах, хӑшӗ кӑшт ҫамрӑкрах — кӗҫӗн хӗрӗпе тупӑшсах каччӑ кайма пултарать-ха; пӗрисем йӑваш, шутсӑр ырӑ кӑмӑллӑ, мӑнукӗсене пахаҫҫӗ, вӗсене алран ямасӑр ачашлаҫҫӗ, теприсем хаяр, пулчӗ-пулмарӗ хӑр-хар тӑваҫҫӗ, мӑнукӗсене канфет е тутлӑ кукӑль ҫитерес вырӑнне чӗн пиҫиххи ытларах тутантараҫҫӗ. Ҫут тӗнчере эпӗ вун пилӗк ҫул кӑна пурӑнатӑп пулин те — пӗлетӗп, куркалана ун пеккисене...

Ман кукамая вара ун пек те, кун пек те теме пулать. Хӑш чух майсӑр йӑваш вӑл, ҫав тери йӑпӑлти тата — тӳсме ҫук, тепӗр чух арҫури пекех ахӑрса каять, пӗр вӗреме тытӑнсан, ҫӑл шывӗпе сапса та сивӗтейместӗн ӑна, чӑн тилхепепе ҫыхса пӑрахсан та чараймастӑн — ним пысӑклатмасӑр калатӑп!

Хай калама та ҫук ҫивӗч вара, ҫав тери ҫивӗч. Утмӑлалла ҫывхарса пырать пулсан та — тепри, ватӑр ҫулхи, ниепле те утса ҫитеймест ӑна, сывлӑшӗ пӳлӗнсе ларать унӑн ман кукамайпа тан пыма тӑрӑшнипе. Калаҫас-пуплес енпе илсен те, унпа танашма йывӑр. Кӑшт тӑрӑхсанах сӑмахсене пӑрҫа пек сапать, чӑх та сӑхса ҫитерес ҫук. Хальччен ӑна никам та тавлашса ҫӗнтереймен пуль ҫав!.. Ҫавӑн пек шутсӑр ҫивӗч пулнӑшӑн ман атте ӑна «казак», тет, хаяр пулнӑшӑн вара «сик-сик, тыллӑм, сик, тыллӑм!» тесе тӑрӑхлать.

Эпир Шупашкарта пуранатпар, аттепе анне заводра ӗҫлеҫҫӗ, эпир йамакпа иксӗмӗр шкулта вӗренетпӗр. Кукамай ялта пуранать — хуларан пӗр хӗрӗх километрта. Кукаҫи ҫук пирӗн, варҫаран йывар аманса тавраннаскер чылай хуша чирлесе пуранна та вилнӗ. Вал питӗ лайах ҫын пулна, теҫҫӗ, колхоз валли чапла сад тата утар туса хаварна, вӗллисене те хаех таватчӗ, тет. Никампа хирӗҫмен, ятлаҫман тет вал хай ӗмӗрӗнче, анчах та кукамая час-часах ҫухартатчӗ, тет. Ахальтен мар пуль ӗнтӗ, салтавӗ пулна пуль. Пӗррехинче аттепе анне пӗр-пӗринпе кула-кула калаҫнине ас туса юлтам эпӗ. Кукаҫи пуранна чух пирӗн кукамай курше хӗрарамӗсене ҫапла калана пулать:

— Якур мана эрӗере пӗрре тытса пӗҫертмесен, манан пӗтӗм ҫан-ҫурам кӗҫӗтме тытанать, ниҫта кайса кӗмелли ҫук...

— Тытса пӗҫертсен иртсе каять-и вара? — тесе ыйтна лешсем.

— Лаштах пулать, мунчара ашши парса ҫапанна пекех!

— Лайах эмел эппин вал саншан?

— Ан та кала, ытармалла мар...

Кукаҫи вилсен пӗр ҫулталакран кукамай хайӗнчен вун улт ҫул кӗҫӗн арҫыннах киле кӗртнӗ-мӗн, анчах лешӗ пӗррехинче, кукамай пасара кайсан, хайне юлташлах тепӗр ҫынна чӗнсе кӗртсе, тӗп сакайӗнчи икӗ четвӗрт самакуна шампарт! типӗтсе хуна та кил хушши варрине, сыснасене ҫитерекен валашкапа юнашар тасалса выртна. Вал мӗншӗн ҫаван пек усӗр пулнине кукамай турех тавҫарса илнӗ те упашкине ик уринчен тытса урама сӗтӗрсе каларса парахна. Ҫавантан вара пурте мар, картишне те кӗртмен ана.

Пӗччен пуранма кичем пулнипе тата пӗтӗм хуҫалаха тытса тама кансӗррипе, вал халхи пит витӗрех илтмен пӗр талах хӗрачана усрама илнӗ пекки туна, халь ҫавапа иккӗшӗ пуранаҫҫӗ. Тӗрӗссипех калас-так, вал ана тарҫа выранче усрать.

Пирӗн пата кукамай час-часах пырса каять. Кашни шаматкун тенӗ пекех — вырсарни пасарӗ умӗн. Ана сутмалла унан, куна илмелле... Миххи-кутамккисене, пӗрни-карҫинккисене алак патне вырнаҫтарса кухньана кӗрсе ларать те вӗҫӗмсӗр янрама тытанать. Малтан ял хыпарӗсене йӗркипе каларса хурать — кам ывалне ав-

лантарнă, кам хĕрне панă, туйĕнче миçе витре эрех ĕçсе янă, кампа кам çапăçса кайнă; ялта кам чирленĕ, кам вилнĕ, кам ача çуратнă,— йĕкĕреш пулнă пулсан, ун çинчен ытларах калать, çав мăшăрăн мĕншĕн йĕкĕреш пулма пултарнине ăнлантарса пама тăрăшать...

Унтан хăйĕн пурнăçĕ пирки ÿпкелешме тытăнать. Ку çитмест те унăн леш çитмест, хуйхă çине суйхă тупăнса пырать иккен: иртнĕ эрнекун такам шуйттанĕ пĕр хур чĕппине çапса пăрахнă, пуріннă пулсан, кĕркунне ăна сахалтан та çичĕ тенке сутма пулатчĕ-ха; виçĕм кун тулти чăлана темле ют кушак пырса кĕнĕ те чĕрес хуппине уçсах пĕр кило таран услам çу çисе янă, вилменскер. Çуне пасара кайса сутасшăнччĕ —пулмарĕ!

Кукамая кÿршĕсем те курайман ççĕ имĕш, кашни утăмрах такăнтарма тăрăшаççĕ ăна. Юнашарах пурăнакан Листрат, колхоз шоферĕ, пĕркун ăна, чип-чипер Ильинкă пристăнне çăмартапа чăкăт сутма кайма тухнăскере, уй варринчех машин çинчен антарса хăварнă. «Спекулянтсене илсе çÿреместĕп колхоз машинипе!» — тесе каларĕ тет вăл. Ну, куншăн кукамай каçармастех-ха ăна, тытатех хăçан та пулин, тавăратех! Кун пирки кукамай турăш умне тăрсах тупа тунă. Турă пулăшатех çав Листрата тавăрма.

Колхоз председателĕ те, бригадир та темшĕн яланах хĕсеççĕ ăна. Хĕлле хăнана кайма та лаша паман, хăйсем машинăпах кĕрлеттерсе çÿреççĕ. Кил вырăнне те чăн кайран, пурин хыççăн тин, сухаламалла пулнă кăçал. Колхозра япăх ĕçлетĕн, минимум та тултармастăн, тесе калаççĕ тет. Леш усрав хĕрача ĕçлени çитмест пек вĕсене. Кукамайăн хăйĕн колхозра ĕçлеме вăхăчĕ çитменнине ниепле те тăна илесшĕн мар тет анра-сухрасем.

— Виçĕм çулхи председателех пит лайăхчĕ,— тет кукамай, ассăн сывласа илсе,— унпа хуть те хăçан та ĕç тума пулатчĕ! Урампа иртсе пынă чух йыхăрса кĕртсе ик-виç стакан тултарса паратăн та ăна — саншăн нихăш енчен те чару çук... Хуть те виçĕ лаша тытса кÿл. Атту-тăк машиннех парать. Анчах ку, хальхи, çывăха та ямасть. Таçтан мурĕнчен ĕçмен председатель тупăнчĕ-çке! Бригадирĕсене те йăлт улăштарса пĕтерчĕ вăл, хăй пекех ĕçмен çынсене лартрĕ. Хамăр ялти бригадир — хĕрача, комсомол, бригадир пулма хулара пĕр çулталăк вĕренсе килнĕскер. Чĕлхи çава пек касать.

Карахтерĕ — чисти вĕре çĕлен, никама та хĕрхенсе тămасть: кам халăхпа пĕрле ĕçлемест — пирĕнтен ыррине ан кĕттĕр! — тет.

...Тиркет-тиркет те çавсене кукамай, юлашкинчен хаш! сывласа ярса хăй шухăшне çапла пĕтĕмлетсе хурать:

— Тепĕр чух тикĕс çĕрте чупакан лаша та такăнать, теççĕ. Кусем те такăнĕç-ха вăхăчĕ çитсен. Киремет пулăштарах вĕсене!..

Хăш чух, праçник тĕлнелле лексен, атте ăна ик-виç черкке эрех парать. Çавна ĕçсен вара кукамайăн кăпшекрех пит çăмартисем такам юри сăрласа тухнă пекех лаптăкăн-лаптăкăн хĕрелеççĕ, ахаль чухне хĕсĕкрех куçĕсем чарăлса каяççĕ те — ну тытăнать вара «вырăнти влаçсене» çунтарма! Ну айăплать! Пурте путсĕр иккен вĕсем, пурте вара, колхоз пурлăхне сылтăмалла та, сулахаялла та ярăнтараççĕ. Пĕр пирĕн кукамай çеç таптаса, тĕп-тĕрĕс пурнăçпа пурăнать. Ака, халь унăн кӳрши, леш Листрат шофер, кукамая уйваррине тăратса хăвараканни, колхоз председателĕн пуçани пулнă май, клуб пысăкăш пӳрт лартать. Никĕсĕ—кирпĕч, тăрри—шифер, тĕп сакайне те темле плитасем сарса тăвать. Аçтан тупнă вăл çав хатĕр-хĕтĕре? Йăлтах колхозăнне вăрлаççĕ! Лешкасри бригадир тата... вăл еплерех пуйса кайрĕ! Ку таранччен мотоциклпа çӳретчĕ, халь ĕнтĕ машин туянчĕ, чăн-чăн аптомопил! Мĕн калаçмалли! Эх, арăмĕпе иккĕшĕ кĕрсе лараççĕ те вара, сăмсисене пĕлĕтелле каçăртса кăна пыраççĕ. Тьху, куçăм та ан куртăрччĕ çавăн пеккисене! Камсем ара вĕсем ытла ун пекех курнăçланма? Ялта вĕсене халь те Çĕтĕк Кĕркури тавраш, теççĕ, вĕсен аслашшĕ ĕмĕр-ĕмĕр çитмĕл çичĕ саплăклă йĕмпе çӳренĕ, кĕпи витĕр кăвапи куранна унăн. Анчах кусем — машинăпа çӳреççĕ! Тупăнна улпутсем!

— Çав лайăх та ĕнтĕ,— терĕ атте ăна хирĕç,— ĕлĕкхи саманара аслашшĕ ялти чи чухăн та пĕр хисепсĕр çын пулнă, мăнукĕ халь хăйĕн машинипе çӳрет...

— Мĕн лайăххи пултăр унта? Курнăçланни çеç вĕт вăл, çынсем умĕнче мухтанни! — парăнасшăн пулмарĕ кукамай.— Эс мĕн тата, çав аптомопиле вăл ĕçлесе тупнă укçапа илнĕ тесшĕн мар-и? Ас ту! Йăлтах бригадир аллинче вĕт — тырри-пулли те, выльăхĕ-чĕрлĕхĕ те, улми-çырли те,— темпе те майлаштарĕç вĕсем!

— Çук пуль, анне, сирĕн бригадира пĕлетĕп эпĕ, варлакан йышши çын мар вăл. Тата шутла-ха эсĕ, анне: кăмăлу пулсан, эсĕ ху та ун пек машин туянма пултаратăн вĕт, ахалех кĕвĕçсе ларатăн,— терĕ атте кулакула.

— Эпĕ-и? Мĕнпе-е? Пыйтăпа-и? Ан палка-ха эсĕ кирлĕ мара! — ун çине сиксе ӳкрĕ кукамай.— Ман укçа хам валли тупăклăх хăма илме те çитес çук. Эп никамăнне те вăрламастăп вĕт! Маши-ин тата...

— Пĕлетпĕр, анне, пĕлетпĕр! Панулмипе Атăл тăрăх анаталла миçе кайнине те, паранкă мĕн чухлĕ ăсатнине те ас тăватпăр, тата... санăн килти спиртзавод çинчен те илткеленĕ. Тупăшлă ĕçлет, теççĕ.

— Суя! Элек вăл! Курайманнипе калаççĕ! Эсир кунта ĕненсе ларатăр. Эх, тура-ă!..— Кукамай сасартăк саппун аркине куçĕсем патне тытрĕ.— Хамăн тăван ачасем те ĕненми пулчĕç... Мĕнле пурăнмалла-ши манăн çут тĕнчере?!.

Ӳлесех макăрма тытăнчĕ карчăк. Тепĕр пысăкрах черкке тултарса парсан тин лăпланчĕ вăл.

* *
*

...Пĕлтĕр çуркунне çак пирĕн кукамай пач çухалчĕ. Пымасть те пымасть пирĕн пата. Унччен, каларăм-çке, кашни эрнере тенĕ пекех çӳретчĕ, халь ик эрне те иртрĕ, уйăх та, иккĕ патне те çывхара пуçларĕ — пĕр сас-хура та çук карчăк пирки. Ăçта кайса кĕчĕ пирĕн юратнă кукамай, мĕн пулнă ăна?

Анне хытах пăшăрханма пуçларĕ: чирленĕ-ши ку? Е тата мĕн те пулин, унтан та усалтараххи пулнă-ши?

Атте тăрăхласа та илчĕ:

— Тен, хупса лартнă сан аннӳне? Тен, тимĕр решетке хыçĕнче хысна çăкрине кавлесе пурăнать? Пулма пултарать, вĕт, э?

— Ан лăпăртат кирлĕ мара! — кăшкăрса пăрахрĕ анне.— Çав ват карчăка мĕншĕн хупчăр? Саккуна хирĕç мĕн тума пултарать вăл?!

— Турă çулĕсене пĕлме çук, тенĕ ăслă çынсем... Сăлтавĕ тупăнма пултарать вăл. Акă, хăвах шутла: аншарли юхтарса пурăнни — пĕрре, вĕт-шак спекуляципе хăтланни — иккĕ, халăх пурлăхне хăйĕн пурлăхĕнчен уйăрса илеймесĕр киле сĕтĕрсе пыни — виççĕ,

чĕлхи лезвирен те çивĕчрех пулни — таватта, çынпа хĕрсе калаçнă чух жестикуляци ытлашширех туса леш çыннине ăнсăртран çуталтарса яни — пиллĕк...

— Чарăн! — урайне кĕрс! тапрĕ анне.— Ун пек-кун пек ним те пулма пултараймасть! Чирлĕ вăл, вилес пекех выртать, тен ку таранччен вилсе те кайнă-и...

— Ан хăра,— ал сулчĕ атте ăна хирĕç,— сан аннÿ, урăхла каласан, манăн хаклăран та хаклă хуняма карчăкĕ халлĕхе трактор айне пулсан та аптрас çук-ха. Анчах вăл чип-чипер пурăннине куçпа курса ĕненессÿ килет пулсан — лар та вĕçтер ун патне. Ак, кайăр Ванюшкăпа иксĕр, унăн халь каникул вĕт, пурĕ пĕр кунĕ-кунĕпе йытă хăваласа чупать, кайса пурăнтăр яла пĕр хушă!

Ванюшка — эпĕ вăл. Анчах атте ман пирки ытла тĕрĕсех каламарĕ: каникул вăхăтĕнче эпĕ нихçан та йытă хăваламан, ир пуçласа каçчен хамăр çурт картишĕнче футбол хăвалана. Йытă хăваланинчен те ытларах ывăнтарать вăл, тусăмсем!..

...Çав кунах эпир аннепе иксĕмĕр кукамай патне кайрăмăр. Автобуспа та мар, такси тытсах. Анне чăнах та хытă пăшăрханчĕ пулас çав,— темле пулсан та, ман кукамай унăн тăван амăшĕ-çке-ха, хăйĕн кăкрине ĕмтерсе ÿстернĕ ăна. Пĕчĕккĕ чух çурăмĕнчен те сахал мар ачашлană пуль — хăш чух ал лаппипе, хăш чух хулăпа.

Эпир пырса кĕнĕ чух кукамай кил хушши варринче сыснасене çитерсе тăратчĕ. Икĕ сысна иккен унăн, иккĕшĕ те пăру çÿллĕш, тăршшĕ вара сахалтан та метр çурă. Кукамай вĕсене вăлашкана темле пит тутлă апат ярса пана пулмалла, хыпаççĕ анчах, пирĕнпе юнашар пурăнакан пĕр артист мухмăрла чух эрех тĕлне пулнă пекех...

Анне хапхаран кĕрсенех аллисене çÿлелле çĕклесе ун патнелле чупрĕ:

— Ах, анне!.. Шивой-и-ке эсĕ? Чун юлманччĕ...

— Шивой та-ха, хĕрĕм... Аса илтĕр пуль çапах та, килтĕр?

Вĕсем ыталашăнса илчĕç, темшĕн иккĕшĕ те макăрма тытăнчĕç, пĕр-пĕрине çурăмĕсенчен лăпкаççĕ — çирĕм çул курман, тейĕн! Ĕмĕрте те шутламан эпĕ ман анне кукамая çав териех юрататъ тесе. Килте тепĕр чух тем те каласа вăрçать ăна: хыт кукар, вупăр карчăкĕ,

шуйттан спекулянчĕ... тата ытти те. Халь ака чи ачаш сăмахсем калать хăй.

— Мĕн пулчĕ, аннеçĕм, ăçта çухалтăн эс, чунăм?

— Пулкаларĕ çав, хĕрĕм, тем те куртăм ку хушăра...

— Ма пĕрре те пымарăн, çут хĕвелĕм?

— Ялтан тухма хушмарĕç...

— Камсем? Кам чарма пултарать ирĕклĕ çынна?

— Пур çав ун пек çынсем, хĕрĕм, килтен ниçта та каймастăп тесе, шур хут çине ала та пустараççĕ!

— Ан тĕлĕнтер-ха эсĕ, ылтăнăм! Каласа пар-ха эппин...

Чăнах та, тем те пĕр пулса иртнĕ иккен пирĕн кукамайпа çак икĕ уйăх хушшинче. Пурте кĕрсе сĕтел çине пĕр какшăм сăра каларса лартсанах каласа пачĕ вăл ун çинчен. Питĕ интереслĕ пулчĕ ăна итлеме. Хăй питĕ тарăхса, хушшăн-хушшăн хурланса, куçĕсене тутăр вĕçĕпе шăла-шăла каларĕ, анчах манăн ăна итленĕ чух пĕрмай кулас килчĕ. Аран-аран чăткаласа лартăм...

* * *

...Колхоз председателĕ пирĕн кукамая шалт тарăхтарса çитерне. Пĕрмаях вăрçнă ăна — çынсем хĕрсе ĕçленĕ чух пасарсем тăрăх çÿретĕн, çум çумлама та, паранкă купалама та тухмарăн, хăвăн пахчунта çеç чаваланатăн, тенĕ. Сăмакун пирки те хытă асăрхаттарнă. Хăй ĕçекен çын пулнă пулсанах ун çăварне хуплама май килетчĕ ĕнтĕ, анчах пĕр тумлам та сыпмасть те — мĕн тăвăн ăна? Мĕнле çемçететĕн ун кăмăлне? Мĕнле çăвăратăн хăвăн майлă?

Кукамай çакна тавăрма шут тытнă. Епле пулсан та тавăрмалла — хăйне кÿрентернĕшĕн те, çынсем умĕнче намăслантарнăшăн та...

Кăçал çуркунне вĕсен колхозне çĕнĕ агроном ярса панă иккен — сап-сар çÿçлĕ, ытармалла мар илемлĕ хĕр. Паллах, председательпе агроном час-часах пĕрле пулаççĕ. Правленире те, уйра та, тĕрлĕ канашлусенче те. Кукамай çакна асăрхать те, ун пуçне питĕ ăслă шухăш пырса кĕрет:

— Сыхлас! Сыхлас та, мĕн курни-илтнине йăлт председатель арăмне каласа парас. Сан упăшку... агро-

номпа... çынсем пуплеççĕ... апла та капла... Ах, лайăх пулать вара! Пулни çумне пулманнине хушса калама та май пур — ытларах тарăхтарма...

Пĕррехинче, каçалапа, кукамай çаксем правление пĕрле кĕнине курать те хыççăнах чупса каять. Питĕ ша-аппăн пырса кĕрет вăл. Правленире никам та çук иккен, пуш-пушах. Шăп. Председатель пÿлĕмĕнчен кăна мăр-мăр-мăр... калаçни илтĕнет. Сывламасăр итлесе тăрать пирĕн кукамай — мĕн калаçаççĕ-ши кăвакарчăнсем? Анчах пĕр сăмахне те уйăрса илеймест. Унтан, кăшт тăрсан, шăши тытма хатĕрленнĕ кушак пек чĕрне вĕççĕн утса пырать те алăка карт! туртса уçса ярать...

Председательпе сап-сар çÿçлĕ агроном сĕтел хушшинче темле пы-ысăк хут çине пăхса лараççĕ иккен. Питĕ çат лараççĕ, пĕр-пĕрине хул пуççисемпе тĕртĕнсех. Алăк сасартăк уçăлса кайсанах вĕсем пирĕн кукамая кураççĕ те ура çине сиксе тăраççĕ.

— Мĕн пулнă, Акраппин инке? Кама шыратăн? — ыйтать çакăнтан председатель.

Анчах пирĕн кукамай ним те каламасть, алăка çавăнтах шарт! хупать те тухса ута парать. Председатель ун хыççăн крыльца çине сиксе тухать.

— Акраппин инке, ма ним каламасăрах кайрăн тата? — кăшкăрса ыйтать вăл.

Кукамай ун çине çаврăнса та пăхмасть...

Ку пĕрре пулнă-ха ĕнтĕ, кукамайшăн пит лайăх пулнă. Анчах пĕрре — сахал вăл. Элеклемеллĕх çук. Татах мĕн те пулин тупас пулать. Шыракан — тупатех. Чăнах та тупнă кукамай. Тепрер эрнерен район салине пасара кайнă та пĕр курка кăвас ĕçес тесе чайнăя кĕнĕ çак. Пăхать — чи аякри кĕтесре председательпе агроном лара параççĕ. Апат çиеççĕ, шăкăл-шăкăл калаçаççĕ. Хайсен умĕнче икĕ ситро кĕленчи. Кукамай чылай пăхса тăнă та çаксем çине — часрах яла таврăннă. Килне те кĕмен, тÿрех председатель арăмĕ патне кайнă. Лешĕ вăл пынă чух çине тăрсах урай çăватьмĕн.

— Ман килес-ха. Вăй патăр, — тенĕ кукамай çав тери йăваш та çепĕç сасăпа.

— Килех, Акраппин инке. Лар çавăнта выран туп. каласа, — кутнĕк сакки çинелле кăтартнă кил хуçи. — Хăй çук-ха паян, агрономпа иккĕшĕ района канашлăва

кайрӗҫ, каҫсӑр та килейменҫҫӗ пуль. Санӑн тем калаҫмалли пурччӗ пуль те ӗнтӗ?

— Калаҫасси-мӗнӗ... пур та-ха вӑл...— Кукамай, милици аллине лекесрен хӑракан вӑрӑ пек, унӑн-кунӑн пӑхкаласа илнӗ.— Килте урӑх никам та ҫук-и сан?

— Ҫук-ҫке, пӗчченех эпӗ. Ма вара?

— Сӑмахӗ манӑн сан валли ҫеҫ, ют ҫын илтсен, аван мар пулма пултарать...

— Мӗнле ун пекех вӑрттӑн сӑмах-ши тата? Кала-ха эппин, итлем.—Председатель арӑмӗ йӑл кулса илнӗ те урайне ҫума пӑрахсах пукан ҫине ларнӑ.

— Эс ман пирки тем ан шутла, Таис...— питӗ вӑрттӑн сасӑпа кала пуҫланӑ кукамай.— Элекҫӗ выӑнне ан хур, ун йышши ҫын мар эпӗ. Хӗрарӑм сӑмахӗ-ха ку. Пурнӑҫра хам та куркаланӑ та ун пеккине... Сана хӗрхенсе, сан хутна кӗрес тесе калатӑп...

— Тӳрӗрех кала, Акраппин инке, мӗн пулнӑ? Тем, хӑрамах пуҫларӑм-ха эпӗ.

— Ара, мӗн... Ҫынсем те калаҫҫӗ те-ха ун ҫинчен...

— Мӗн ҫинчен? — сассине тӑрук хытарнӑ председатель арӑмӗ.

— Ара... Сан старикку па агроном, леш купӑста пуҫ, ытлашши ҫывӑх, теҫҫӗ. Ӑнланатӑн пуль...

— Кам калать?

— Илтӗнкелет ялта, илтӗнкелет. Лӑх-лӑх кулакансем те пур, ачам. Илтнӗ кӑна пулсан татахчӗ-ха, ҫын сӑмаххине ӗненмесен те юрать, анчах эп хам та куртӑм-ҫке! Темиҫе те куртӑм...

— Мӗн куртӑн? — Председатель арӑмӗн куҫӗсем темшӗн хаяррӑн ялкӑшса илнӗ. Пирӗн кукамая вӑл ӗнтӗ хӑйӗн упӑшки ҫине ҫилленме пуҫланӑ пек туйӑннӑ та, малалла питӗ хӑвӑрт калама тытӑннӑ...

— Калас теменччӗ те, каласах пуль ӗнтӗ. Арҫынсене чармасан, вӗсем таҫта та пырса ҫапӑнӗҫ. Аларичӗлпӗре карӑнтарсах тӑрас пулать, тепӗр чух вӗсене ҫӑварлӑхлани те кирлӗ...

— Кала тата, мӗн куртӑн? — хыттӑн ыйтнӑ ҫамрӑк хӗрарӑм.

— Ара, иртнӗ эрнекун, каҫ кӳлӗм, ӑнсӑртран правление пырса кӗтӗм те, ӑна-кӑна пӗлмесӗрех сан старикку пӳлӗмӗ алӑкне уҫса ятӑм та... иккӗшӗ лараҫҫӗ! Эх, лараҫҫӗ... тӗлӗнмелле!

— Ларaҫҫӗ пулсан — мӗн-ха вара?

— Ара, ахаль лармаççĕ-çке! Ыталашанса лараççĕ! Пĕр-пĕрине майĕсенчен çатарах яваласа илнĕ те — тракторпа туртсан та уйарас çук! Эпĕ алак уçса янине те сисмерĕç вĕт, эх, чуп тавaççĕ, эх, çуллаççĕ пĕр-пĕрне, ĕне хай парушне çуллана пек! Хама та намас пулса кайрĕ вĕсем çине пахса, алака хупрам та тухса тартам часрах... Вĕсем вара чуп тусах юлчĕç, намассарсем! Çаван чухнех килсе каласшанччĕ те, сана кўрентерес килмерĕ, хĕрхентĕм... Анчах паян чун тўсмерĕ, каллех куртам та вĕсене...

— Аçта куртан? — тата хаяртарах, шал витĕр ыйтна председатель арамĕ.

— Районта ара, чайнайра. Пĕр кĕтесе пытанса ларна та иккĕшĕ, апат çиеççĕ. Анчах çининчен ытларах—ĕçеççĕ. Старикку хĕрлĕ эрех илсе лартна, ик çур литр! Черккисене шаклата-шаклата ĕçеççĕ, леш купаста пуç тиха пекех кĕçенет, никамран та ватанмасть, питне кĕççе çĕленĕскер! Хай ўсĕрĕлнĕ пулмалла, памитур пек хĕрлĕччĕ ĕнтĕ...

Кукамай калама чаранна та председатель арамне куçĕнчен пахна. Мĕнлерех пырса тивет-ха сана эп юмах ярса катартни? — тесе шутлана пуль ĕнтĕ.— Мĕн калан-ха эс çакан пирки?

Анчах лешĕ нимĕн те чĕнмен, ман кукамай çине шатарас пек чарлаттарса пахна çеç. Унан тути хĕррисем сиккелесе илнĕ. Вара каллех кукамай калама тытанна:

— Чар эс вĕсене, Таис, халех чар, леш купаста пуçне тытса ласка пĕрре ĕмĕр асанмалах, тухса кайтар вал йĕпе арка пирĕн ялтан, стариккуна вара çирĕпрех йĕвен тахантарт, атту-так çамраклах ман пек талах арам пулса юлатан, ĕмĕр таршшипех куççуль юхтармалла пулĕ, ачам! Хавна хĕрхенсе, тĕп-тĕрĕссине калатап, эпĕ вĕт пуранса курман çын мар...

Председатель арамĕ, ана хирĕç мĕн те пулин калас выранне, пĕшкĕннĕ те урай çумалли кипкене витрери лапра шыв ашне чиксе каларса партак парса илнĕ, унтан пат, пат, пат! утса кайса алак умне пырса тана.

— Каламалли тата пур-и сан. Акраппин инке? — ыйтна вал, йĕпе кипке тытна аллине хыçалалла ярса.— Пур пулсан, кала тавай, пĕтĕмпех кала, питĕ хыта тав тавап эп сана уншан. Шухашласа калар тата мĕн те пулин! Татах суйса пар!

— Эп... эп нимĕн те шухăшласа кăларман, тĕрĕссине çеç каларăм, хам мĕн курнине çеç...— тенĕ кукамай, кăштах шикленме пуçласа.— Ĕненместĕн пулсан — ан ĕнен ара, мана мĕн? Анчах çынсем те калаççĕ... Хăвна хĕрхенетĕп...

— Урăх каламалли çук эппин? — кукамай патнелле икĕ утăм ярса пуснă председатель арăмĕ.— Ман старикпе агроном çинчен урăх ним те пĕлместĕн?

— Ç-çук... урăх пĕлместĕп,— каялла чака пуçлană кукамай.

— Апла пулсан — мана итле халь, эп калам сана. Тĕп-тĕрĕс пулать ман сăмахăм...

— Кала ара, кала...— тем ыра мар пуласса сиссе, куçĕсене мăчлаттарса илнĕ кукамай.

— Пÿтсĕр çын иккен эсĕ, Акраппин инке! Тÿсме çук пÿтсĕр! — тата ун патнерех пынă председатель арăмĕ.— Элекçĕ! Çĕлен! Вĕре çĕлен! Сан пекки пинре мар, вунă пинре те пĕрре кăна пулать пуль...

— Ак тата... ак тата! Мĕншĕн ун пекех кÿрентеретĕн çынна, хĕрĕм? Пĕр айăпсăр, ним çукран? — куçнепуçне чарса пăрахнă та кукамай, часрах тухса шăвăнас шутпа алăк патнелле пынă. Анчах председатель арăмĕ ун çулне пÿлсе лартнă.

— Тăхта, ан васка,— тенĕ вăл,— эс нумай каларăн, чармарăм сана, халь мана та калаттар ĕнтĕ! Мĕншĕн кÿрентеретĕн, тетĕн-и? Çук, эп мар, эсĕ мана чĕрене тивмеллех кÿрентертĕн, эсремет хăраххи!

— Ара, эп сана хăвна ним те каламарăм-иç?

— Ман упăшка çинчен тем те пĕр лĕпĕртетни — мана кÿрентерни пулмасть-им вăл? Тасаран, чип-чипер пурăнакан, çĕрне-кунне пĕлмесĕр, халăхшăн çеç тăрăшакан çынна шăршлă тикĕтпе сĕретĕн вĕт эсĕ, ăнланатăн-и çавна?!

— Епле тасаран? Хам куçпа куртăм пулать те...

— Суятăн! Нимĕн те курман эсĕ!..

— Ĕненместĕн эппин? Кур, акă, сăхсăхатăп!

— Сăхсăхма мар — хуть те кутăн тăр ман умра, анчах санăн пĕр сăмахна та ĕненместĕп! Мĕншĕн тесен ĕненмелли нимĕн те çук унта. Çав эс тем те пĕр калакан хĕр-агроном камне пĕлетĕн-и? Пĕлетĕн-и, тетĕп! Ну, кала! Кала!..

— Мĕн пĕлмелли пур ăна? — тутине пăркаласа илнĕ кукамай,— Хуларан ярса пана йăх-ях... йĕпе аркă..,

Хулара нумай ун пеккисем, кăнтăрла та арçынсенчен уртăнсах çÿреççĕ. Ашшĕ-амăшĕ сисиччен вунна качча кайнă пуль-ха, халь ака сан упăшкуна илĕртет...

— Хуп çăварна, çĕр çăтманскер! — Председатель арăмĕ ана аллинчи йĕпе кипкепе хăмсарса илнĕ.— Нимĕнле йăх-ях та мар вăл, манăн тăван кин, ман шăллăмăн саккунлă арăмĕ, институтра пĕрле вĕреннĕ вĕсем, унтах пĕрлешнĕ, ака шăллăм Алтайран таврăнсанах туй тăватпăр. Ăнлантăн-и? Ăнлантăн-и, тетĕп, лапра çăвар! Епле хушма пулать-ха ăна ман упăшка çумне?!

Кукамайшăн ку ытла та кĕтмен хыпар пулнă. Пĕлмен-çке вăл ун çинчен. Çапах та, чĕрре кĕрсе кайнăскер, паранасшăн пулман. Тата тепре çыртса илме шут тунă...

— Хальхи вăхăтра кинсене те шанма çук! Ыталанса ларнине хам куртăм-иç, чуп тунине те куртăм! — лаплаттарса хунă вăл ним калама аптранă енне.

— А-ах, эс çаплах чарăнаймастăн-и?! — кăшкăрса янă та çавăн хыççăн председатель арăмĕ, кукамая лапра кипкепе пĕррех питĕнчен лачлаттарнă.— Ак сана чĕлхÿне чарма пĕлменшĕн, ак сана элекшĕн, ак тата тепре!..

Лач, лач, лач!..

— Краву-ул! Краву-ул, çапса пăрахаççĕ! — çухăрса янă та кукамай, урамалла тухакан чÿрече патне чупса пырса ăна пĕррех уçса янă.— Краву-ул! Пулăшă-ăр!..

Председатель арăмĕ çынсем пирĕн кукамая пулăшма пырасса кĕтсе тăман, ăна ĕнсинчен çавăрса тытнă та, ун пуçне пĕксе, çурăмĕнчен аяларахран, çемçе вырăнтан тапа-тапа урамах кăларса янă. Урамра кукамай кăшкăрман вара, намăс пулнă пулмалла...

— Анчах ку нимех те мар-ха, пулнă та — иртнĕ, хуйхи те пĕтнĕ,— хаштах сывласа ячĕ кукамай çак ăнаççăр истори çинчен каласа пĕтерсен.— Тепĕр ĕçĕ пирки темле пулать-ха вăт, çавăншăн хăраса пуранатăп. Ахалех иртсе каймасть пулĕ...

— Татах тем пулнă-и вара? — ыйтрĕ анне.

— Пулчĕ çав. Хама хамах, пурăнма пĕлменнипех тĕрмене хуптаратăп пулмалла. Ухмах пуçпа.., вĕри çатма çинех лартăм. Çавăн пирки сирĕн пата та пырса çÿреймерĕм вĕт. Ялтан ниçта та тухмастăп, тесе алă пустарчĕç те...

— Кай, мĕн вара ун пекех?! — хыпăнса ÿкрĕ ман анне.

Эпě те, тепěр интерес илтетěп ěнтě, тесе, кукамай çывăхнерех куçса лартăм...

— Мана çак хамăр çумри Листратсемех пěтереççě мар-и! — хурлăхлăн сывласа ячě кукамай. — Çавсемшěнех тип шарсем пулаççě манăн... Хальхи ěçě те ним çукран, пěр пустуй япаларан пуçланса кайрě. Вěсен сар автанě ман чăхсем патне çÿреме вěреннěччě... Автанě хамăн та пур-ха, маттур автанах, чăх çăмартисем пěрре те тăрă пулмаççě, анчах лешě те кашни кунах килет, каттăршнăй. Чăхсене апат пана-паман хÿме урлă вěçсе каçать те вěсемпе пěрлех хыпма тытăнать. Хамăн автана вара çывăха та ямасть, пырсанах хěнесе тăкать. Шалт аптраса çитрěм. Çилле ниçта кайса чикме çук: хăваласа яратăп — каллех пырать, шуйттан тытманскер, каллех вěçсе каçать... Пěррехинче вара тÿсеймерěм — алла лекнě сулăмлăрах патакпа яра патăм çакна! Палтăрт! кайса ÿкрě те сар автан... урăх тăмарě. Ытлашширех пулчě пулмалла çав... Çакна вěсен пěчěк ачи курса тăнă иккен, часрах киле чупса кайнă та асламăшне каласа панă. Леш тÿрех чупса пычě, тытăнчě ятлаçма. Тем те пěр калать, тÿсмелле мар! Ну, эпě те шарламасăрах тăмарăм, хăйне автан виллипе пěр-икě хут çапкаласа та илтěм пулмалла... Эпир йăсланине илтсе унăн кинě, Листрат арăмě, чупса пычě. Тата хытăрах пуçланчě пирěн. Урампа иртсе пыракансем сапур витěр пăхаççě, эпир пěр-пěрине мěнлерех ыр сăмахсем каланине итлеççě.

— Суда паратпăр, тěрмене хуптаратпăр! Вăрă, спекулянт, сăмаконщěк! — тет мана Листрат арăмě.

Хам килтех тем те пěр илтес пулать! Хута кěрекен çук. Ирěксěрех алла виçě юплě сенěк тытма тиврě. Халех тухса кайăр, чиксе пăрахатăп! — тетěп. Листрат арăмне кăкринчен кăшт лекрě те пулмалла, халь ас тумастăп, анчах питě хытă çухăрса ячě. Çавăн хыççăн тин тасалчěç ман патăмран...

Çынсем каланă тăрăх, вěсем мана çав кунах суда парасшăн пулнă. Свитетлěсем нумай ара, Листрат арăмě хăйне кăкăрěнчен сенěкпе чышни çинчен хвершăлтан справка та илнě, автан виллине ял Советне кайса кăтартнă. Тыт та ярăнтар суда! Анчах Листрачě хăй ал сулнă кăна.

Мěн çыхланмалли пур çав ухмахпа? Тăрри шăтăк вěт унăн, ăсě çук, намăс-симěсе пěлмест, судра та тем

шуйттанĕ те илтес пулĕ унран, çыхланиччен — çыхланманни! — тесе каларĕ тет...

Çак самах мана тата ытларах тарăхтарса ячĕ. Пăхха эс вĕсене, çын выранне те хумаççĕ мана! Суда пама та тивĕççĕр иккен эпĕ! Эккей! Катартатăп эп сире хаман тăрри мĕнле шатаккине!..

Виç кун шухăшласа çўрерĕм çаксене мĕнле майпа тавăрасси çинчен. Виçĕ кун пĕтĕм шамшак кĕçтерĕ. Апат та çиместĕп, хутран-ситрен пĕрер çур стакан лешне тултарса ĕçетĕп çеç.

Кĕçнерникун, пасара кайсан, милицине кĕтĕм те каларăм: ман кўршĕсем клуб пысăкăш пўрт лартрĕç, анчах хатĕрĕ-хĕтĕрĕ йăлт варланăскерсем, терĕм, пĕренихăмине те, кирпĕчĕ-шиферне те çĕрле таçтан варлаварла пычĕç, хам та нумай курнă, çынсем те калаççĕ, терĕм...

Эп каланисене йăлт çырса юлчĕç, пырса тĕрĕслетпĕр, терĕç. Чун тинех вырана ларчĕ манăн.

— Килсе ласкаççĕ-ха кусене, сĕтĕреççĕ унта-кунта!..

Анчах темшĕн-çке час килмерĕç тĕрĕслеме. Листратсене хайсене чĕнтерни те илтĕнмерĕ, ăна эпĕ сăнасах тăтăм. Эрне иртсе кайрĕ çапла, иккĕ те çите пуçларĕ— нимĕн сас-хура та çук. Манчĕç-ши кусем эп каланисене, тен, тепре кайса калас? — тетĕп. Пĕрер эрне кĕтсе пăхас-ха тата, терĕм юлашкинчен.

Çав вăхăтра çырма леш енчи Оптиркка Ехремĕ ывăлне авлантарма тытăннă. Туй пулмалла унăн. Пĕр каçхине çак ман пата пычĕ те: «Пулăш-ха, Акраппин, пĕр виç-тăват витре аншарли юхтарса пар-ха, эс маçтăр вĕт, чăрманнăшăн ахаль тумăп»,— терĕ. «Юрĕ ара, ыр çынна ма пулăшас мар»,— терĕм. Çав каçах вăл мĕн кирлине — çăнăхне, паранкине — лашапах кўрсе пачĕ.

Тытăнтăм йўçĕтме, унтан юхтарма. Çĕр çывăрмасăр ĕçлетĕп. Четвĕрт хыççăн четвĕрт тулать. Ехрем хăй пыра-пыра тутанса çеç пăхать — хаяр-и, таса-и? Илсе те каймасть эрехне, туйччен кунтах пултăр, тет.

Виççĕмĕш кунĕнче çавăн пек ир-ирех тăтăм та аппарата чĕртсе хута ятăм. Хуранти пăрака сиксе вĕрет, эрехĕ пĕр чарăнмасăр шăнкăртатать... Хушшăн-хушшăн сыпса пăхатăп — аван мур! Каштах хĕртĕм те пулмалла, юрлама та пуçларăм. Пĕр виçĕ четвĕрт тултарсан, вĕсене вырнаçтарма тĕп сакайне кĕтĕм. Унтан, каялла тухас тесе, пуçа каларсаттăм çеç — апайтурух, тур çыр-

лах!.. Урай варринче, самакун аппарачĕ çумĕнче, икĕ милици, ял Совет председателĕ, партейнайсен секретарĕ тата хамаран леш хĕр-бригадир тара параççĕ! Вĕсене курсанах манан куç та хуралса килчĕ, пуç та çавранса кайрĕ, чĕре те тапма чаранчĕ пулмалла. Лап! таталса антам каялла, тĕп сакайнелле...

Тем самант выртна эп унта — пĕлместĕп. Мана вĕсем хайсем йатса каларса выран çине хуна. Эп куç уçсан, лешсемсĕр пуçне, ман умра тата колхозри медсестра Марине таратчĕ. Аллинче — тем таршшĕ йĕп, лешĕ, чирлĕ çынсене унтан-кунтан тирмелли. Укол туна вал мана. Çалас тенĕ ĕнтĕ. Аппарат çине пахрам — ана сўнтернĕ, паштах ларать.

Пĕр хуша нихашĕ те чĕнмерĕç. Чан малтан самаха Марине пуçларĕ:

— Халь аптрамастан-и, Акраппин инке?

— Чĕре тапать пулас,— терĕм эпĕ.— Вилнĕ пулсан авантарахчĕ, пустуй чĕртнĕ эс мана...

— Ак, каларĕ тата! — ман паталла кула-кула утса пычĕ ял Совет председателĕ.— Ара, вилнĕ пулсан, пĕтĕм пуянлаху сая каятчĕ вĕт! Сак айĕнче вун икĕ четвĕрт ларать, кама юлатчĕ-ха вал? Виличчен ĕçсе ярас пулать вĕт ана, çапла-и?

— Ман мар вал эрех,—терĕм ана хирĕç,—Оптирккка Ехремĕн, çав хушрĕ... туй валли...

— Ехремĕн, тетĕн? Пит аван. Чĕнтерер-ха эпир ана, мĕн калĕ вал!

Хĕр-бригадира çавантах Ехрем патне чуптарчĕç, пĕр милицийĕ ман пуç вĕçне пырса ларчĕ, тухтар пек, ал тымарне тытса пахрĕ.

— Эпир сан шалапа тарах тĕрĕслеме килтĕмĕр, инке,— терĕ вал.— Тĕплĕрех каласа парас пулать санан...

— Мĕнле шалапа тата? — тўрех плахая петĕм эпĕ.— Нимĕнле шалапа çинчен те илтмен, пĕлместĕп.

— Епле пĕлместĕн? Леш эрнере эсĕ пирĕн пата, районтделенине пырса пĕр çын варлана хатĕр-хĕтĕрпе пўрт лартни çинчен калана-çке?

— Çук, эп ниçта та кайман...

— Эсĕ Егорова Агриппина вĕт-ха?

— Çава. Анчах эп шалапа тавраш паман. Мана курайманнипе, ман ятпа кам та пулин ураххи пына пулинех...

Хам çакăн пек лекнĕскер, кӳршĕсем пирки мĕн калама пултарнă-ха эп халь? Тата эпĕ милицисем кайран çакăн пек килсе хамран тĕпчессине те шутламан. Çавăнпа та пĕтĕмпех тунас, терĕм.

— Çук-çук, эп пулман вăл, такам улталанă сире...

Анчах эп çапла каласанах ман пата тепĕр милицийĕ пырса тăчĕ.

— Ан суй, инке, намăса пĕл,— терĕ вăл,— эс пирĕн начальнике хăвăн кӳршӳ çинчен каласа панă чух эп унтах пулнă, сана пит лайăх ас туса юлтăм. Эс сар тутăрпа, кĕрен саппунпаччĕ. Акă, вĕсем халь те кунтах çакăнса тăраççĕ.— Вăл чăлан çумĕнчи пăта çине кăтартрĕ.— Çапла-и? Ма-ха тунатăн халь?

Эп нимĕн те тупса калаймарăм...

— Яснă,— терĕ кăшт ларсан тепри,— ним çук çĕртенех пырса элеклесе панă та, халь уншăн ответ тытмалла пуласран хăрать. Элекшĕн тепĕр чух виçĕ çул таран параççĕ...

— Ну, ытах каламасть пулсан — хăйĕн ирĕк, анчах эпир килни çапах та усăллă пулчĕ-ха, вун икĕ четвĕрт тупрăмăр,— терĕ манпа юнашар лараканни,— кун пирки вара тунса тăма май çук, калаçмаллах пулать!

Эпĕ таппа лекнĕ шăши пек чĕтресе выртрăм...

Кĕçех бригадир Оптиркка Ехремне илсе пычĕ.

— Эс хушнă-и Акраппин инкене темиçе витре эрех тума? — тӳрех ыйтрĕ унран ял Совет председателĕ.

— Мĕнле эрех? — куçне чарса пăрахрĕ Ехрем.— Пуçласа илтетĕп!

— Аншарли ара, сăмакун! Акраппин калать — туй валли эсĕ заказ панă, тет. Вун икĕ четвĕрт ларать тĕп сакайĕнче сана кĕтсе.

— Ак тата япала, карчăк валли çăпала! — пĕççисене шарт! çапрĕ Ехрем.— Тупнă та вĕт каламалли, э? Пĕртен пĕр ывăла авлантарнă чух хăнасене çав шăршлă шыва ĕçтеретĕп пулать! Туйĕ валли эпĕ тахçанах пилĕк ещĕк московски тата тепĕр ещĕк коньячнăй напиткă илсе лартнă, ĕненместĕр пулсан — пырса пăхăр, пĕрер çĕр грам ярса пама та пултаратăп. Ха-ха-ха! Мана валли — сăмакун! Тĕлĕнсе вилсе выртмалла-иç!..— ахăрса ячĕ вăл.

Шарт та пат тунса лартрĕ проклятăй этемми!

Çилĕ килнипе тӳсеймерĕм, сиксе тăтăм, чупса пытăм çакăн патне.

— Ара, Ехрем, соваç пур-и сан, çук-и?! Тавата витре тума хушран-иç, çанахне те, паранкине те хавах илсе килтĕн, ĕç мĕнле пынине кашни кун килсе тĕрĕслерĕн, ма-ха тунатан халь?

— Çук-çук, пулман ун пек япала, кливитта ку!— алли-урипех тапкаланма тытанчĕ çак.— Ничево та не снаю! Хай лекнĕ те, эккей, ман çине ярасшан. Не пойдет капла, елки-палки кантар варри! Санпа тĕрмене кайса ларма не соклаç эпĕ, манан ывал авлантармалла, ерçместĕп эпĕ!

Нимĕнпе те ĕнентереймерĕм милицисене. Пĕтĕмпех ман çине çырса хучĕç. Хама ялтан ниçта та тухмастап тесе ала пустарчĕç...

...Кукамай куçĕсене шалкаласа илчĕ.

— Пĕччен çынна темле те хĕсĕрлеме пулать çав. Хута кĕрекен çук. Темле пуранмалла малашне, тем тумалла! Судĕнче те тем таваççĕ-ха тата...

— Пĕтĕмпех ху айапла та ĕнтĕ,— терĕ анне чылай хуша чĕнмесĕр ларна хыççан,— шалапине те кайса памалла мар мĕн, унта эсĕ тĕрĕссине ним те каламан, тарахнипе элеклене çеç, эрехне юхтарма та килĕшмелле пулман! Пурнаçа пĕлсе пуранас пулать пуль ана? Мĕн çитмест сана? Пурте пур. Тата мĕн кирлĕ-ши? Э-эх, атте çукки касать, вĕрентĕччĕ вал сана!..

Кукамай самсипе тапак шаршларĕ те виçĕ хутчен а-апчхи! терĕ.

— Тĕрĕс, хĕрĕм, ас паратчĕ вал мана...

— Ĕçне-пуçне йалтах ху тапратса яна та, ответне те хаваннах тытас пулать ĕнтĕ, эпир сана халь тин нимĕнпе те пулашма пултараяс çук,— терĕ анне.

— Çапла ара, çапла... Ачасенчен ку таранччен уса курманнине халь тин курас çуках çав,— мартлатса илчĕ кукамай.

* * *

Тепĕр кунне анне хулана тавранчĕ, эп юлтам. Шапах çырла вахачĕччĕ ун чух: хамла çырли те пĕтмен, чие те, слива та пиçет, çĕмĕрт те хуп-хурах.

— Çырлине хыраму параппан пек караниччен çи, анчах татма та пулаш, пасара кайса сутас, укçа тавас пулать,— терĕ кукамай.— Маюк ерçмест, колхоза çÿрет. (Маюк — кукамайан леш усрав хĕрачи вал.)

Юрать ара, ҫырла татасси ытла йывăр ĕҫех мар! Майран пĕр пĕчĕкрех чĕрес ҫакатăп та ҫатăр-ҫатăр хăпарса каятăп йывăҫсем ҫине.

— Анчах ас ту эсĕ, тураттисене хуҫса ан пĕтер!— чышкипе юнасах асăрхаттарчĕ кукамай.

Ку вара юри тухатса каланă пекех пулчĕ. Малтанхи куннех эпĕ пĕр ватă чие йывăҫҫин тем пысăкăш туратне шатăрт! хуҫса антартăм. Ах, вĕресе кайрĕ кукамай ҫакна курсан! Тытса хĕнет пуль, тенĕччĕ. Сăнĕпичĕ кĕл тĕслĕ пулса тăчĕ, куҫĕсем сиксе тухас пек чарăлчĕҫ, йăлтăрт та ялтăрт тăваҫҫĕ, тута хĕррисем тăрт-тăрт-тăрт чĕтреҫҫĕ.

— Каларăм вĕт сана, мошельник, чипер тат, тураттсене ан хуҫ, терĕм! Ай тур-тур, ку турат ҫинче килес ҫул мĕн чухлĕ ҫырла пулатчĕ, сахалтан та ҫур витре, пĕр ватăр-хĕрĕх стакан, ăна вуншар пуспа сутсан та, виҫ-тăвата тенкĕ вĕт вăл!..

Каҫ пуличченех лăпланаймарĕ карчăк, хăй сăмахĕпе каласан — песпрестань мăкăртатрĕ.

— Йывăҫа ăна хисеплес пулать, хуҫса-амантса пĕтерсен, чирлет те вăл, юрăхсăра тухать. Эсир, хула ҫыннисем, ăнланмастăр ҫавна, тăмсайсем. Сире ҫырлине хыпса пултăр, намăссăрсене!..

Татса тултарнă ҫырлана кукамай кун сиктерсе Ильинкă пристанне сутма чупрĕ. Пĕррехинче таврăнчĕ те питĕ хавасланса ҫапла каларĕ:

— Ну, ҫĕмĕрт куртăм паян вăрманта! Хуп-хура, пĕлĕт пек! Атя, ачам, кайса татăпăр ҫавна...

— Ҫĕмĕрчĕ килте те нумай-иҫ? — терĕм эпĕ.

— Килти вăл — килте, ниҫта та тармасть, анчах вăрмантине пĕр-пĕр шивотьор пĕр наччасра сăптăрса кайма пултарать!

— Мĕн тума кирлĕ вара сана ун чухлĕ ҫĕмĕрт?

— Мĕнле мĕн тума? Типĕтетĕп те хĕлĕпе сутатăп. Майрасем каҫсах каяҫҫĕ уншăн. Аптек та илет, хуть те мĕн чухлĕ илсе пыр — шăнкăрт! укҫа кăларса хураҫҫĕ. Манăн сирĕнни пек шалнă тухса тăмасть вĕт, темрен те укҫа тума тивет!

— Юрĕ, кайăпăр эппин,— килĕшрĕм эпĕ. Чăнах, манăн хамăн та вăрманта уҫăлса ҫӳрес килетчĕ.

Ирхине кукамай мана хĕвел тухнă-тухман вăратса сив турăхпа сухан ҫитерчĕ те хайхи вăрмана, хăй тĕл-

ленĕ çĕре илсе кайрĕ. Хы-ытă утать, хайне хыçалтан такам пушăпа хăваласа пынă пекех!

Çитрĕмĕр хайхи. Пĕр пысăках мар уçланкă хĕрринче, чăнах та, питĕ хитре çĕмĕртсем лараççĕ иккен. Çырли вара — çулçи курăнмасть, хуп-хура шерепесем лакпа сăрлана шăрçасем пек çакăнса тăраççĕ. Ытармалла мар!..

— Чиччас майлаштаратпăр,— чĕлхине кăларса тутине çуласа илчĕ кукамай.— Йалт тататпăр, пĕр çырла юлмиччен!

Унтан хайĕн çуллĕ пĕрнинчен пуртă туртса кăларчĕ те, ик ал лаппи çине те лач, лач! сурса илсе, пĕр çĕмĕрт йывăççине кăкăнченех нач! тутарчĕ. Эп тĕлĕнсе хытсах кайрăм...

— Кукамай, мĕн хăтланатăн эс?! — кăшкăртăм çакна.

— Курмастăн-им? — терĕ вăл, пуртăпа тепре лартса.— Касатăп!

— Мĕншĕн?!

— Йывăçне касса ямасан, çӳлти туратсем çинчи çырлисене мĕнле татас тетĕн? Пăх-ха, мĕн чухлĕ унта!

Вăл татах нач, нач! тутарчĕ. Çамрăк хитре йывăç сив чир тытнă пек чĕтренсе тăчĕ... Эп тӳсеймерĕм, кукамая аллинчен çавăрса тытрăм.

— Юрамасть кун пек хăтланма! Чарăн!..

— Мĕншĕн юрамасть пулать? Вăрманти йывăç шалккă-им сана?

— Шалккă пулмасăр? Эс хăвах: йывăçа ăна хисеплес пулать, терĕн вĕт-ха? Килти пахчара пĕр чие тураттине хуçнăшăнах кунĕпе вăрçрăн мана, халĕ ху йывăçа тĕпрен касатăн! Мĕне пĕлтерет ку?! — Ун аллинчи пуртта карт! туртса илтĕм эпĕ.

Кукамай ман çине ухмаха ернĕ çын çине пăхнă пек пăхрĕ.

— Килти вăл — килти, эп ăна хам лартса ӳстернĕ, тем чухлĕ шăварнă, тислĕк тăкнă, кукаклана. Епле хĕрхенместĕн-ха ăна? Анчах вăрманти йывăçа никам та лартман, ăна тур пана, вăл хăех ӳснĕ, эппин мĕн хĕрхенмелли пур ăна? Айван эс, нимĕн те ăнланмастăн,— шатăртаттарса каласа тăкрĕ кукамай.— Пар пуртта!

— Памастăп! Ним тусан та, памастăп! Вăрмана пĕтерме юрамасть, пире шкулта та çапла вĕрентеççĕ, вăрман — халăх пурлăхĕ, унăн пуянлăхĕ, теççĕ...

— Ик-виç йываç каснăшăн вăрман пĕтет-им?

— Пĕтет! Кашни çавăн пек киле-киле касма тытăнсан, пĕр çултах темиçе пин йываç сая каять! — хытăран хытă кăшкăртăм эпĕ.

— Э-эй, ачупа! Вĕрентет тата! — çилленсе хĕрелсех кайрĕ кукамай.— Тупнă халăх пурлăхĕ! Каснă выранне татах çитĕнеççĕ вĕт. Кӳр пурта, ухмах ача, кам та пулин килсе тухĕ тата! Васкас пулать!

Эп аяккалла сиксе илме ĕлкĕреймерĕм — кукамай ман алăри пурта каялла туртса илчĕ те çĕмĕрте тата хытăрах касма тытăнчĕ.

— Манран тухнă йăла мар ку, пурте çапла тăваççĕ,— çилĕпе мăкăртатрĕ хăй.— Майăр вăхăтĕнче шĕшкĕсене те çакăн пек каса-каса яраççĕ...

— Эс те касатăн-и?

— Ма касас мар? Çынсенчен мĕнрен кая эпĕ? Е вăрманта ман тӳпе çук-и?

Çамрăк çĕмĕрт ласт! ӳкрĕ.

— Тат çырлисене! — командă пачĕ те мана кукамай, хăй тепĕр йывăçне касма тапратрĕ.

— Чарăн, кукамай! — тепĕр хут кăшкăртăм эпĕ, макăрас патнех çитсе.— Чарăн, тетĕп, атту эп халех вăрман хуралçине шырама чупатăп! Е киле пырсанах ял Советне кайса калатăп сан çинчен!

— Ан янра кирлĕ мара, тăнсăр ача! — терĕ те кукамай ман çине пăхмасăрах, йывăçа эхлете-эхлете касрĕ.

Çав вăхăтра, сасартăк, кĕтмен çĕртен, çывăхри лăпсăркка йывăç тĕми хыçĕнчен пĕр çын кăштăрт! тухса тăчĕ. Пĕрре пăхсах ăнлантăм — вăрман хуралçи! Хурарах карттусĕ çинче, çăлтăр выранне, икĕ юман çулçи, хул пуççинчен ик кĕпçеллĕ пăшал çакнă. Кукамай ăна курмарĕ-ха, çаплах касрĕ. Çак арçын вара ун патне хыçалтан пычĕ те пĕтĕм ал лаппипе çурăмĕнчен шап! тутарчĕ.

— Стоп, машинă! — терĕ вăл.— Ан тăрăш урăх, çитет!..

Эпĕ çакăншăн çав тери хĕпĕртерĕм!

Кукамай аллинчи пурта шăнкăртах тухса ӳкрĕ, унăн урисем лĕнчĕрех кайрĕç те, вăл чĕркуçленсех ларчĕ.

— Э-э... Эсĕ-çке ку, Панкăрат...— терĕ хуллен, тутине аран хускатса.

— Эпӗ ҫав, эпӗ, Акраппин инке! Порупкӑ тӑватӑн апла? Ҫӗмӗрт ҫиес килчӗ пулать? Кўр-ха кунта пуртине! — Вӑл ӑна илсе чӗн пиҫиххи хыҫне чиксе хучӗ.— Ну, халь ӗнтӗ акт ҫырӑпӑр, рас на месте преступлени тытрӑм сана. Саккунлӑ тӑвӑпӑр, инструкци тӑрӑх...

— Ӑна ҫырма ан васка-ха, Панкӑрат, курман-палламан ҫынсем мар,— йӑпӑлтатма тытӑнчӗ кукамай,— малтан кӑштах калаҫса ларар-ха... Ак кунта сан валли пур манӑн...

Вӑл пӗрни ӑшӗнчен сӑмакун туртса кӑларчӗ.

— Акӑ... Ҫыртмалли те тупӑнать...

Эсрел карчӑкӗ, пурне те малтанах шухӑшласа хунӑ!

— Ӗҫ тухмасть пулӗ ун пек,— терӗ ӑна хирӗҫ вӑрман хуралҫи,— службӑра эрех те ӗҫместпӗр, взяткӑ та илместпӗр. Ҫу сӗрме хӑтланакансене тополнительнӑ айӑпласа ҫырса хума пултаратпӑр.— Вӑл ҫумӗнчи сӑран сумкӑран хулӑн тетрадьпе авторучкӑ кӑларчӗ те пӗр йывӑҫ кӑкӗ ҫине ларчӗ.

— Так сначчӑт... Вамили, имя, отечествӑ мӗнле пулать-ха санӑн, Акраппин инке? Вырӑсла чухлатӑн пуль? Кала тавай...

Кукамай сӑнӗ ҫул ҫинчи тусан тӗслӗ пулса тӑчӗ.

— Эс чим-ха, Панкӑрат, чипер хӑтлан-ха, ан шўтле...

— Питӗ чипер эпӗ халь те, Акраппин инке. Эсӗ вӑт чӑнах та сысналла хӑтланнӑ кунта, пӗр кило ҫӗмӗртшӗн икӗ йывӑҫ касса янӑ. Ответ тыттарма тивет, ним тума та ҫук. Саккун. Инструкци. Тата Уголовнӑй кодексри тепӗр статья...

— Ан кўрентерсемччӗ тӑлӑх карчӑка, ахаль те аран-аран пурӑнатӑп-иҫ! — хурлӑхлӑн тархаслама пуҫларӗ кукамай.— Каҫар пӗррелӗхе, туршӑн та, хӗвелшӗн те урӑх ун пек хӑтланмастӑп... Ахаль тумӑп сана уншан, иртсе ҫўренӗ чух хуть те хӑҫан кӗрсе тухма пултаратӑн, тӗлне пӗлетӗн вӗт...

— Не выйдет,— терӗ вӑрман хуралҫи.— Ҫыратпӑр. Кала — вамили, имя, отечествӑ? Хамӑр пек калаҫтӑк — хушамат, ят, аҫу ячӗ. Миҫе ҫулта? Мӗн ӗҫре? Тавай, тавай, тытса ан тӑр, манӑн васкас пулать! Вӑрманта сан пеккисем татах ҫўреҫҫӗ пуль-ха, манӑн вӗсем патне те ҫитсе салам каламалла...

Кукамай ни чĕрĕ, ни вилĕ ларчĕ. Ик куçĕнчен те куççулĕсем юхса анчĕç, нăшăклама тытăнчĕ...

— Крокодил,— тесе калас килчĕ ман ăна.— Макăранçи тăвать-ха тата!

Ирхине ирех эпĕ автобус çулĕ еннелле тухса утрăм. Кукамай йăмăксем валли çырла илсе кайма хушрĕ, анчах эпĕ пĕр çырла та илмерĕм. Йĕрĕнтĕм. Йӳçĕ ун çырли. Пыра ларать...

●



Пусăмçăм, Колька, чунтан-вартан юратнă шатраллă шуйттан!..

Кăварла салам сана! Çĕр хут, пин хут салам!

Эпĕ-ха ку, Вася Влашкин. Ну, Влашка Ваççи эппин...

Чăрмантарнăшăн каçар эс мана, ăçти-çука. Питĕ лайăх пĕлетĕп, сирĕн халь унта, Алтайра, çурăм хыçса илме'те вăхăт çук. Эсир кăвак çутăпах хире тухатăр та сĕм-тĕттĕм пулса лармасăр та ĕçрен таврăнмастăр, пĕтĕм вайăра хурса унти пуян тыр-пула пуçтаратăр. Эсир, чăваш студенчĕсем, хамăр халăх ятне чапа кăларса ĕçлени çинчен темиçе хут та савăнсах вуларăм ĕнтĕ, уйрăмах малта пыракансен ячĕсем хушшинче санăн ятна курсан вара, тупата туршăн, тăпăртатса ташласа илтĕм! «Пирĕн институтри бокс чемпионĕ Колька Шатров тырă вырнă çĕрте те пĕрремĕш категорипе ĕçлет»,— тесе пĕлтертĕм хамăрăн студенткăсене. Вĕсем те чунтанах савăнчĕç саншăн, çĕклеме кĕрейми салам калама хушрĕç.

Шел, питĕ шел — сирĕнпе пĕрле пыраймарăм. Эпĕ те — хам суккăртарах пулсан та — юлташсенчен юлмастăмччĕ ĕнтĕ. Эпир хресчен ачи-пăчи вĕт, тырра-пулла мĕнле тыткаламаллине лайăх пĕлетпĕр! Мĕн тăвас тетĕн, чирлерĕм-çке-ха вăл вăхăтра, йĕп-йĕпе тарланăскер, сивĕрех шыва кĕтĕм те — кăвапа йĕри-тавра пĕр харăсах тăхăр çăпан тухса ларчĕ. Ас тăватăн пуль, хăвна уçса кăтартсан, эсĕ çавăнтах, кравать çине каска

пек йӑванса кайса, ик аллупа варна тытса, урусемпе тапӑлтатсах кулма тапратрӑн...

— Уникум! Ҫӗр ҫулта пӗрре пулакан япала! Сан хырӑм тирне касса илсе халех краеведени музейне памалла! — тесе ахӑртӑн.

Анчах эпӗ ун чухне выртса макӑрма та хатӗрччӗ...

Ну, халӗ ку хурлӑх тахҫанах иртсе кайрӗ ӗнтӗ, халь ман хырӑм мӑлированнӑй турилкке пекех яп-яка та тап-таса. Тен, ҫуралнӑ чух та ун пек пулман-и вӑл...

Сывалса ҫитсенех, хӑш-пӗрисем пек ӗҫсӗр сулланса ҫӳрес мар тесе, эпӗ редакцие кайса вырнаҫрӑм. Литература факультетӗнче вӗреннӗ тата хам та хӑш чух кӑшт ҫыркаланӑ май, мана унта пӗр сӑмахсӑрах илчӗҫ—ҫулла отпуска каякансем, пулла ҫӳреме юратакансем вырӑнне ӗҫлеме ӗнтӗ.

— Санӑн хула тӑрӑх ҫӗн хыпарсем, тӗрлӗ информаци пухса ҫӳреме тивет,—терӗ секретарь.—Тепӗр чух ҫӗнӗ спектакльсемпе концертсем ҫинчен те ҫырмалла пулать... Ҫулла час-часах ытти тӑванла республикӑсенчен тӗрлӗ ансамбльсем килеҫҫӗ, вулакансене вӗсем пирки те каласа кӑтартмалла...

Пӗчӗк ача хитре теттесемшӗн хӗпӗртенӗ пекех савӑнса кайрӑм ҫакнашкал «инструктажа» итлесе пӗтернӗ хыҫҫӑн! Эпӗ театршӑн мӗнле ҫуннине пӗлетӗн вӗт-ха эсӗ. Ялта вӗреннӗ чух манӑн хамӑн та чаплӑ артист е паллӑ юрӑҫӑ пулас ӗмӗт пурччӗ. Шупашкара килсен, хама тӗрӗслеттерсе те пӑхрӑм эпӗ, анчах кӳренмелле пулчӗ: санӑн хӑлху ҫине упа пусса кайнӑ, «слух ҫук», терӗҫ. Ҫапах та куншӑн эпӗ театра юратма пӑрахмарӑм. Ас тӑватӑн пуль, ҫӗнӗ спектакль пуласси ҫинчен пӗлсен, эпӗ ыран ҫиес ҫӑкӑр укҫипех билет илеттӗм...

Халь вара ку тӗлӗшрен эпӗ кӗтмен ҫӗртенех рая кӗрсе ӳкрӗм, темелле, пурнӑҫ кайрӗ манӑн! Паян — спектакль, ыран — концерт, виҫмине цирк е пӗр-пӗр фокусник «куҫ пӑвнине» кур. Пур ҫӗре те ахалех кӗрсе каятӑн — манӑн кӗсъере укҫаран та вайлӑрах пӗчӗк ҫеҫ хӑмӑр кӗнеке пур: «спецкорреспондент»!..

Анчах та, тусӑм Колька, темле ырӑ япалан та тӳнтер енӗ пур иккен ҫав! Ҫавӑн пек «туйран туя» ҫӳресех асаплӑх тупрӑм хам валли. Пӗр уйӑх ҫурӑ ытла чӗрем вутпа хыпса ҫунчӗ, ларма-тӑма пӗлмерӗм, ҫӗрле выртсан ыйхӑ килмерӗ, ҫиме ларсан та апат анмарӗ, ҫӑра чей ӗҫнипе кӑна тытӑнкаласа пурӑнтӑм...

Эсӗ ку тӗлӗшпе манран опытлӑрах ҫын, манпа мӗн пулнине чухласа илтӗн те пуль ӗнтӗ, вулана май шӑл йӗрме те тытӑнтӑн пуль-ха:

— Эпир кунта ҫӗрне-кунне пӗлмесӗр ӗҫлетпӗр, ҫӗр-шыв валли миллионшар пӑт тырӑ хатӗрлетпӗр, анчах пирӗн Влашка Ваҫҫи, путсӗрскер, ҫав вӑхӑтра темле ҫӑвӑр така пек кӑтрашка пуҫлӑ, пӗветсе лартнӑ туталлӑ та кӗске аркӑллӑ майрушкӑ пирки антӑхса вилсе кайма тытӑннӑ... Ха-ха!

Ан кул, Колька, шӑлна ан йӗр, мӗншӗн тесен: 1) ун пекки пӗлтӗр санӑн хӑвӑн та пулса иртрӗ, виҫҫӗмӗш курсри Маша Арзюкова пирки ухмаха ерсе кайса ҫине-ҫине двойкӑсем илме тытӑннине эпир пит лайӑх ас тӑватпӑр; 2) эп сасартӑк юратса пӑрахнӑ хӗр — ашшӗ-амӑшӗн ӗнси ҫине хӑпарса ларса «а ну, пошол!» тесе хӑвалакан ӑратӑран мар, вӑл — стройкӑра малта пыракан работницӑ, штукатур.

Паллашасса эпӗ унпа ак ҫапла паллашрӑм. Пӗрре-хинче театрта ҫамрӑк строительсен каҫӗ пулчӗ, мана ҫавӑн ҫинчен репортаж туса пама хушрӗҫ. Анчах, хамӑрӑн мӗшӗлти мӑнтӑр фотографа пула, эпир кӑштах кая юлса ҫитрӗмӗр. Ҫак хӗр президиумра Обком секретарӗпе юнашар ларатчӗ. Куҫӑмсем витӗрех мар пулин те, эпӗ, иккӗмӗш ретрех ларнӑ май, вӑл ытармалла мар хитрине лайӑхах куртӑм. Чӑп-чӑмӑр питлӗ, хуп-хура куҫлӑ, тутисем ҫӳхе, шӑлӗсем шап-шурӑ та тип-тикӗс... Чӑн-чӑн чӑваш илемӗ ӗнтӗ!

— Ҫав хӗр — кам вӑл? — ун ҫине тӗллесе ыйтрӑм юнашар ларакан каччӑран.

— Палламастӑп, президиума суйланӑ чух тахӑш СМУри штукатур тенине ҫеҫ илтсе юлтӑм,— терӗ ҫак мана хирӗҫ.

— Хитре хӗрача...

— Аптрамасть...

— Чӑваш-ши?

— Эрмен мар ӗнтӗ, куран — сӑмси каҫӑр,— хуллен кулса илчӗ каччӑ.

— Эппин, чӑвашах пуль ҫав...

Темшӗн-ҫке, пӗлместӗп, манӑн ҫав хӗрпе тӳрех паллашас килсе кайрӗ. Пулать вӗт-ха ҫавӑн пекки: ҫынна эсӗ пӗрререн пӗрре куратӑн, анчах санӑн чуну ҫав самантрах ун патнелле туртӑнма тытӑнать. Магнит тимӗре хайӗн патнелле туртнӑ пек...

Унтан çав тери кĕтмен япала пулса тухрĕ: пуху хыççăн концерт пуçланас умĕн çав хĕрача сасартăк манпа юнашар пушă вырăна пырчĕ ларчĕ! Паллах, вăл ман çинелле çавăрăнса та пăхмарĕ, тӳрех пирĕн умри ретре ларакан хĕрсемпе калаçма тытăнчĕ. Анчах эпĕ вара ăна питĕ хытă сăнаса лартăм...

Чăнах та ытармалла мар кăмăллă хĕр иккен, хăямат. Пичĕ-куçĕ — юмахри пикесен пек, сасси те çепĕç, кулли вара — чисти шăнкăрав! Вăл юлташĕсемпе калаçнă хушăра унăн ятне пĕлсе юлма та ĕлкĕртĕм — Анюк ятлă иккен. Анна... Чăваш хушшинче пит нумай тĕл пулакан ят ĕнтĕ ку, анчах та мана темшĕн пĕр çак хĕрача çеç Анна ятлă пулма пултарнă пек туйăнчĕ. Нина, Роза, Светлана тата ытти çавăн пек ятсем ун çумне ниепле те çыпăçас çук, Анна çеç пулма пултарать вăл!..

— Каçарăр,— терĕм çакна хуллен, вăл юлташĕсемпе калаçма чарăннă самантра,— президиумра эсир лартăр вĕт-ха?

Вăл ман çине тĕлĕнерех пăхса илчĕ.

— Эпĕ... Мĕн вара?

— Нимех те мар... Эпĕ хаçатра ĕçлекен çын та, манăн сирĕн çинчен пĕлес пулать... Çырмалла...— мăкăртатма тытăнтăм эпĕ.— Сирĕн хушаматăр мĕнле-ха çав?

— Павлова Анна,— терĕ хĕр, çавракa куçĕсене мăчлаттарса.

— Хăш трестра ĕçлетĕр? Мĕнле ĕçре?

— СМУра. Штукатурсем эпир. Коммунизмла ĕç бригади пирĕн.

— Эсир бригадир пуль ĕнтĕ?

— Çук-ха, унтах çитеймен. Стройкăна килни те пĕр çулталăк кăна та-ха...

— Унччен ăçта пулнă?

— Унччен-и? Ялта вĕреннĕ. Пĕлтĕр вунă клас пĕтерсе тухрăмăр та, райкомол пире стройкăна кайăр, терĕ...

— Питĕ аван ку! Стройкăсенче халь çав тери çын нумай кирлĕ...

Халь шутлатăп та, çавăн чухне эпĕ питĕ ухмаххăн курăннă ĕнтĕ, хĕр çине те ăнран тухса кайнă така куçĕсемпе пăхса ларнă пулмалла, ахальтен мар вăл, эп пăхнине тӳсеймесĕр, пуçне тепĕр еннелле пăрчĕ.

Антракт вăхăтěнче эпě çапах та Аннапа пěрле пултăм, ăна та, унăн икě юлташне те ирěксěрлесе тенě пекех лимонад ěçтертěм (вăтанаççě вěт чăваш хěрěсем — буфет патне ним тусан та пырасшăн мар!..). Çав хушăра тата ытларах пěлтěм: вěсен бригадинче йăлтах хěрсем иккен, пурте çичě е вунă клас пěтернěскерсем, бригадирě кăна качча кайнăскер, Хула Совечěн депутачě. Обком членě, тет. Пурте пěрле, общежитире пурăнаççě, театра, концертсене те ялан пěрле çÿреççě...

— Апла пулсан, авланма сирěн пата пырас пулатьиç? — шÿтленě пек турăм та эпě, Анна юлташěсенчен пěри, сап-сар çÿçне арçын ачалла кастарнă, пěрмай йăл-йăл-йăл кулса тăракан пысăк кăвак куçлăскер, ман çине пуçне чалăштарарах пăхрě те:

— Хăрамастăр пулсан, пырса пăхăр, анчах кайран ÿкěнмелле ан пултăр! — терě. Хай çавăнтах чăх-чăх-чăх кулса ячě.

— Çав териех хаяр-и вара эсир? Çыртмастăр пуль вěт?

— Çыртасса çыртмастпăр та — хамăра кÿрентерме те памастпăр. Сирěнпе, арçынсемпе, веле-селе пулма юрамасть вěт. Ултавçăсем эсир пурте. Çавăнпа та, кам та пулин пирěн бригадă членě çине куç хывсан, ун патне чечек çыххисемпе духисем илсе пыма пуçласан, эпир пурě пěрле пухăнса канаш тăватпăр: тивěçлě çын-и вăл е хывăх вěçтерекенскер кăна? Общежитине кěртме юрать-и ăна, çук-и? Вот вопрос! Пěркунне пěрине таккуйски тăн кěртрěмěр — ěмěр манмě, ÿлěмрен ачипăчине те каласа парě!..

— Мěншěн вара ун пекех?

— Ÿсěр пырса кěчě пирěн пата! Çитменнине тата, «хěр çураçма килтěм» тесе, ик çур литр кăларса лартрě. Тÿрех пăсăрлантарса кăларса ятăмăр ачана. Иккěмěш хутран чупса аннă чух пусма вěçěнче такăнса ÿксе кěленчисене те шăнкăрттин! çěмěрсе пăрахрě. Коридор сарлакăшпе эрех юхрě çав...

— Ытлах-çке апла эсир...—кулам пекки турăм эпě.

— Çапла çав эпир! — пуçне ухса илчě сар çÿçлě хěр.— Пирěн пата çÿреме пěлес пулать.

— Тавтапуç, эппин, асăрхаттарнăшăн...

— Сывлăха пултăр!

Кайран, зала таврăнсан, Анюкпа каллех юнашар лартăмăр та, эп унтан:

— Мĕнле хĕрача, кам вăл сирĕн, çав сар çӳçли? — тесе ыйтрăм.

— Пирĕн бригадăри комсорг,— терĕ Анюк.— Леш ӳсĕр каччи шăпах ун патне пынăччĕ...

— Ай-вай, çирĕп кăмăллă хĕрача пулмалла!

— Пирĕн никам та çемçешке мар,—терĕ ман хĕр.— Ĕçре те, пурнăçра та хурçă пекех пулма тăрăшатпăр.

Çапла калаçнăçемĕн вăл мана ытларах та ытларах килĕшсе пычĕ. Чунăм ун патнеллех туртăнчĕ. Хуть те мĕн кала та эс мана, тусăм Колька, çав «пĕрре курсах юратса пăрахасси» — «любовь с первого взгляда» — пурах вăл, пур! Çав каçхине манпа шăп çавăн пек пулса тăчĕ, вилесле юратса пăрахрăм эпĕ çак çамрăк хĕре!..

Анчах манăн ĕçсем ăнсах пымарĕç çав. Концерт хыççăн эпĕ Анюка епле пулсан та килне çитиех ăсатса ярасшăнччĕ, театртан ăна хулĕнчен тытсах тухрăм — кăлăхах пулчĕ! Хĕрсене хăйсен автобусĕ кĕтсе тăратьмĕн. Пурте шăкăр-шакăр кĕрсе ларчĕç те — эпĕ хамăн хĕрпе сыв пуллашма та ĕлкĕреймерĕм — кĕрлеттерчĕç кăна!

Ирчченех çывăраймарăм вара ун çинчен шухăшласа... Хăçан тĕл пулас-ши унпа тепре? Мĕнле çывăхрах паллашса туслашас? Кинора, театрта иксĕмĕр пĕрле пулас, канмалли кун Атăл леш енне каяс... Анчах çапла ĕмĕтленсе выртнă вăхăтрах хам çав тери ухмах пулнине ăнланса илтĕм: ара, манăн Анюк адресĕ те çук вĕт-ха! Тахăш СМУра ĕçлет, тахăш стройкăра! Общежитийĕ ăçта вĕсен? Мĕн пĕлетĕп-ха эп ун çинчен? Тĕрĕссипе каласан, нимĕн те пĕлместĕп!

Павлова Анна... Штукатур. Комсомолкă. Коммунизмла ĕç бригадин членĕ. Пĕтĕмпе те çавă çеç паллă маншăн...

Эх, пăхăр çамка, тăм писмен! Чăн та Валашка Васçи ĕнтĕ!..

Хама хам хĕнесе тăкас патнех çитрĕм çав каçхине...

Ир пулчĕ, ĕçе кайрăм. Анюксăр пуçне, пуçра урăх нимĕн те çук манăн. Çынсемпе те калаçмастăп, çăвара шыв сыпнă пек. Асăрхарĕç çакна — мĕн пулнă сана, Влашкин, чирлемерĕн пулĕ-çке? — тесе ыйтаççĕ. Тем, кăштах пуç ыратать-ха, тетĕп.

Каçалапа Атăл хĕррине тухрăм. Халăх калле-малле кумать кăна, темиçе пин çын та пулĕ. Паллах, пурин-

чен ытла — каччăсемпе хĕрсем. Пурте хаваслă, калаçаççĕ, кулаççĕ. Пĕр эпĕ кăна кикен çинĕ пек çӳретĕп. Анчах çав вăхăтрах хамăн куçсем ăста сыщикăнни пекех унăн та кунăн пăхаççĕ—Анюка шыраççĕ. Ара, кам пĕлет, тен, вăл та хăйĕн юлташĕсемпе çакăнта уçăлса çӳрет? Пулма пултарать вĕт ун пекки! Тепĕр чух этемĕн телейĕ хăй кĕтмен çĕртенех сиксе тухатьçке!..

Çук, курăнмарĕ. Киноран тухакансене те йĕркипех пăхса тăтăм, ку та ахалех пулчĕ. Унтан Крупская садне кайса çӳрерĕм — усси çав-çавах пулмарĕ. Питĕ шутсăр кӳренсе таврăнтăм. Анчах ним тума та çук — хам айăплă!

Çапах та шанчăка çухатмарăм-ха. Ĕç хыççăн кашни каç Атăл тăрăх сулланса çӳретĕп. Пĕррехинче чăнах та куртăм хайхискере, анчах... автобус чӳречи витĕр кăна. Эпĕ Атăл хĕрринелле утаттăм, автобус площаделле килетчĕ. Хĕре курсанах манăн чĕре сӳ! туса илчĕ. Вăл та мана палларĕ пулас та, шап-шур тикĕс шăлĕсене кăтартса, кăмăллăн кулса, пуçĕпе сулса иртсе кайрĕ... Ах, пĕлесчĕ санăн эпĕ çав самантра епле пăлханса кайнине!..

Анюк ман тĕлпе çăмăл çунатлă кайăк пек вĕçсе иртсе кайрĕ çеç пулин те, чĕрене тепĕр хут хускатса, ман юратăва тата ытларах хĕрӳллентерсе хăварчĕ.

— Тупатăп! Епле пулсан та, тупатăп эп ăна, çĕр айĕнчен чакаласа кăларатăп! — терĕм вара хама хам, темле пит паттăр ĕç тума хатĕрленнĕ пекех шăла çыртса, чышкăсене чăмăртаса.—Çав хĕре шыраса тупас мар тăк — çĕр çинче те пурăнас мар!..

Мĕншĕнне пĕлместĕп, анчах малтанхи вăхăтра эп ăна ăçта та пулин театрта, кинора е концертра тĕл пуласса шаннăччĕ. Çавăнпа та кашни каçах ăçта мĕн кăтартаççĕ — пур çĕре те çитеттĕм. Вунă кун пĕр лăш курмасăр чупрăм çавăн пек — Анюкăн тĕсĕ те курăнмарĕ... Çук, капла май килмест, ăна ĕçре, стройкăсенче шырас пулать, тесе шут турăм вара çавăн хыççăн.

Анчах... Ним тĕлли-паллисĕр, адрессĕр шыраса пăхха эс Шупашкарти стройкăсенче пĕр-пĕр çынна! Хăвах пĕлетĕн вĕт-ха, мĕн чухлĕ çĕнĕ предприяти, пурăнмалли çурт, шкул, больницă тата тем те пĕр тăваççĕ пирĕн хулара! Хуть те ăçталла пăхсан та, башеннăй крансем пĕлĕтелле кармашса тăраççĕ, ăçта çитнĕ унта нумай

хутлă корпуссем купаланаççĕ. Спутник-хула тăваççĕ... Миçе пин çын ĕçлет пуль çав стройкăсенче!..

Çапах та эп пуçа усмарăм. Тĕрĕссипе каласан, эпĕ вăл хушăра вăтам ĕмĕрсенчи рыцарь пек пулса тăтăм. Ара, лешсем хăйсем юратнă хĕрарăмшăн тем тума та хатĕр пулнă вĕт-ха, пин-пин çухрăмлă походсене те çӳренĕ, шыва та, вут ăшне те кĕрсе кайнă. Ан кул, ан ахăр, Колька! Чăн та çапла!

— Манăн стройкăсенче ытларах пулас килет,— терĕм редакци секретарьне пĕр ирхине ĕçе пырсан,— балеринăсемпе упасем мĕнле ташлани çинчен çырса йăлăхрăм...

— Ырлатăп ку шухăша,— терĕ вăл,— стройкăсенче халь шăпах чи хĕрӳллĕ вăхăт... Кĕрлеттер!

Пуçларăм вара... Чăн малтан «тарăн разведкă» турăм: Шупашкарта миçе СМУ? Вĕсем хăш-хăш объектсене тăваççĕ? Унтан çывăхарах пытăм: штукатурсен бригадисем миçе вĕсен? Çак самантра хăш бригадă ăçта ĕçлет? Чăн юлашки пункт вара — хамшăн чи кирличчĕ: бригадăра Павлова Анна ятлă хĕр пур-и?

Эх, Колька, куласса кулатăн та эсĕ (эп ăна пĕлсех таратăп), анчах сана хăвна хушасчĕ çак пархатарсăр ĕçе!.. Пĕр уйăх чупрăм вĕт ирне-каçне пĕлмесĕр, шалт хăшкăлтăм! Каçхине общежитине таврăнсан пĕр пушмакне хыватăп, анчах теприне хывма та ĕлкĕрейместĕп, çаплипех çывăрса каятăп. Эпĕ пĕрмай хам валли савăнăç шырарăм, анчах ун вырăнне кашни кун тенĕ пекех кӳренмелли кăна тупăнса пычĕ!..

Итле акă. Çитетĕп пĕр-пĕр стройкăна, аслине шыраса тупатăп — прораба-и унта, кама та пулин урăххине-и. Паллашатпăр, калаçма тытăнатпăр.

— Сирĕн кунта хальхи вăхăтра штукатурсем ĕçлеççĕ-и?

— Ĕçлеççĕ.

— Коммунизмла ĕçлекен бригадă-и? Хĕрсем-и?

— Так точнă. Хĕрсем. Коммунизмла бригадă.

— М-м... Павлова Анна ятлă хĕр пур-и вăл бригадăра?

— Павлова?.. Павлова пур, анчах та Анна мар, Маргарита.

— Мана Анна кирлĕччĕ...

— Санăн çывăх паллана хĕрӳ пуль ĕнтĕ вăл? — куçне хĕссе илет чеерех прораб, уссийĕсене пĕтĕркеле-

се.— Шел, анчах нимӗнле те пулӑшма пултараймастӑп... Каҫарӑр.

Тепӗр стройкӑна ҫитетӗн — унта та Павлова штукатур пур, коммунизмла ӗҫ ударникӗ, анчах та каллех Анна мар — Серафима. Унтан Леонилӑсем, Феофилӑсем, Маринесемпе Кулинесем, Розӑсемпе Музӑсем нумай тупӑнчӗҫ. Пурте Павловӑсем, пурте ытармалла мар хӗрсем, нормӑсене икшер ҫӗр процент ҫапаҫҫӗ, анчах пӗри те... ман валли мар! Мана Анна кирлӗ, пӗр Анна ҫеҫ! Анчах вӑл — ҫук...

Хуйха ӳкнипе, аптранӑ енне, пӗрехмай пӗр ватӑ поэт сӑввине каласа ҫӳреме пуҫларӑм:

> Юратуҫӑм, юрату,
> Ҫамрӑк чунщӑн — ырату!..

Ҫапах та юлашкинчен телей ман еннелле ҫавӑрӑннӑ пек пулчӗ. Вун ҫиччӗмӗш стройкӑна ҫитсен, ҫамрӑк кӑна техник-строитель, хӗвел ҫинче вут пуҫҫи пек ҫунса тӑракан хӗп-хӗрлӗ ҫӳҫлӗ хӗр, мана савӑнтарсах пӑрахрӗ.

— Павлова Анна? Пур пирӗн ун пекки, пур! — терӗ вӑл.— Тӗп-тӗрӗс ыйтатӑр, штукатур. Комсомолкӑ. Вунӑ клас пӗтернӗ... Ҫапла, ҫапла, коммунизмла бригадӑра. А-ав ҫавӑнта, ҫӳлте ӗҫлеҫҫӗ вӗсем. Атьӑр, халех тупса паратӑп!

Улттӑмӗш хута мӗнле хӑпарнине те пӗлместӗп. Тӗлӗкри пек пытӑм пулмалла. Чӗре пӑнт-пӑнт-пӑнт! туниие ҫеҫ ас тӑватӑп. Ара, епле пӑлханмастӑн-ха? Ҫавӑн чухлӗ ширанӑ хыҫҫӑн тинех тупрӑм пулать те хамӑн чун хыптармӑшне!..

— Павлова-а! Аня-я! — кӑшкӑрчӗ вут пуҫҫи, эпир кирлӗ ҫӗре ҫитсен.— Ӑҫта э-эс? Кил-ха кунта-а!

— А-а-а! — янраса кайрӗ пуш пӳлӗмсем тӑрӑх. Вӑрманти пек!

Эпир урам пекех сарлака коридор тӑрӑх утрӑмӑр. Ик енче те хапха сарлакӑш алӑксем. Шкул тӑваҫҫӗ иккен кунта. Техник кашни алӑкранах пуҫне чикечике пӑхрӗ.

— Аня-я! Павлова-а!..

Кӗҫ пӗр пӳлӗмрен кӑвак комбинезон тӑхӑннӑ, извеҫпе-мӗнпе вараланса пӗтнӗ сап-сар хӗр сиксе тухрӗ.

— Кам чӗнет мана? Эсир-и, Ирина Афанасьевна? — йалт-ялт пăхкаласа илчӗ вăл пирӗн ҫине шуххă куҫӗсемпе.

— Ака, сана ҫак юлташ курасшăн,— пуҫӗпе ман еннелле сулчӗ хӗр-техник.— Редакцирен...

— Каллех редакцирен-и? Ай-уй, пире виҫӗм кун ҫеҫ ӳкерсе кайрӗҫ-иҫ! Пирӗн ҫинчен кун сиктерсе ҫырсан, ыттисем валли выран юлмӗ тата! — ахăлтатсах кулса ячӗ сар хӗр.

Эпӗ хама такам вӗри шывпа сапнă пек тăтăм. Шырасан-шырасан, тупрăм пулать Павлова Аннăна! Ака вăл, ман умра... Ним те калаймăн, хитре. Ытармалла мар. Ҫырла! Пӗр ҫăвар шывпа сыпса ямалла. Каччăсем вилсех каяҫҫӗ ӗнтӗ уншăн. Анчах мана мӗн тума кирлӗ вăл? Эхх!..

— Каҫарăр, йанăш пулнă,— терӗм кăшт тăрсан.— Эпӗ... Урăх Павловăна ыратăп. Мана... урăххи ҫинчен ҫырма хушнă... Сыв пулăр!

Ҫаврăнтăм та утрăм.

Ну, мӗн тăвас-ха ӗнтӗ манăн? Татах шыраса пăхас-и е... сурас пӗрех хут?

Чӗре иккӗлле хушма пуҫларӗ. Пӗрре — сур, тет, тепре — ан сур, кун чухлӗ тертленнине сая ярас мар, ӗҫе вӗҫнех ҫитерес пулать, тет. Атя, терӗм вара, шыраса пăхам тепӗр темиҫе кун!

Каллех тытăнтăм ҫӳреме... Чи инҫетри стройкăсенче пултăм. Вара мӗн тетӗн-ха эс? Ҫичӗ кун хушшинче ҫичӗ Анна Павлова тупрăм. Пурте штукатурсем, пурте питӗ маттур хӗрсем, вуншар клас пӗтернӗ, хăшӗсем каҫ-каҫ строительсен техникумӗнче вӗренеҫҫӗ. Ҫав тери юратмалласкерсем, ӗлӗкхи пек каласан, тыт та тӳрех венчете илсе кай! Ăҫта, хăш вăхăтра ҫуралса ӳсме ӗлкӗрнӗ-тӗр ун пек чаплă хӗрсем, тӗлӗнсе каймалла! Ӗҫӗсем пирки каламалли те ҫук — ӗҫ ҫунса кăна тăрать вӗсен аллинче! Ӗҫне кура, паллах, укҫине те пит лайăх илеҫҫӗ, тепӗр инженертан та юлмаҫҫӗ. Пултаруллă халăх, пӗр сăмахпа каласан!

Ҫав Анна Павловăсенчен чылайăшӗ ҫинчен хаҫатра ҫыра-ҫыра кăлартăм эпӗ. Унсăрăн секретарь кун ҫути памасть-ҫке-ха мана, ӗҫ вăхăтӗнче ҫӳретӗн пулсан, материал туса кил!

Анчах хам юратнине, чăн-чăн Анна Павловăна ҫавҫавах тупаймарăм-ха. Шанми те пулса ҫитрӗм унăн

йёрӗ ҫине ӳкессе. Суйрӗ пуль вӑл мана, ниҫта та ӗҫлеменскер пулнӑ пуль вӑл, тесе иккӗленме те пуҫларӑм...

Ҫук, аплах мар иккен. Чӑн юлашкинчен вӑл та тупӑннӑ пек пулчӗ. «Тупӑннӑ пек», тетӗп эпӗ, мӗншӗн тесен эп ӑна хӑйне мар, унӑн портретне ҫеҫ куртӑм. Хуларан пӗр вун пилӗк километрти стройкӑра, Хисеп хӑми ҫинче ҫакӑнса тӑратчӗ унӑн ытарайми сӑнӗ, йалйӑл кулать, куҫӗсенчен вут-хӗм сирпӗнсе тӑнӑн туйӑнать.

Паллах, ман чӗре те кӑвар пекех пӗҫерсе кайрӗ. Иртсе пыракан икӗ хӗре тытса чартӑм та хӑвӑрт-хӑвӑрт тӗпчеме тытӑнтӑм:

— Ҫакӑ вӑл — Павлова Анна вӗт? Ҫапла-и?

— Ҫавӑ,— терӗҫ хӗрсем.

— Штукатур? Коммунизмла ӗҫ бригадинчен?

— Тӗрӗс, ним чухлӗ те йӑнӑшмастӑр...

— Комсомолка? Ҫапла-и?

— Ку та тӗрӗс...

— Халь ӑҫта-ши вӑл? Ӑна тупса курма пулать-ши? Манӑн унпа калаҫса илмелли пурччӗ... Нумай мар, темиҫе сӑмах кӑна, унӑн ӗҫӗсем пирки...

Хӗрсем пӗрне-пӗри куҫран чӑр-р... пӑхса чеерехххӗн кула-кула илчӗҫ.

— Ҫук-ха вӑл халь, ӑна виҫӗ кунлӑх отпуск панӑ,— терӗ унтан пӗри.— Киле кайнӑ...

— Тем пулнӑ-им килӗнче? Хуйхӑ-суйхӑ-и?

— Ҫук, хуйхӑ мар, пысӑк савӑнӑҫ унӑн,— терӗ тепри.— Качча кайрӗ вӑл пирӗн!

— Качча?! — Эп чӗлхене нӑтӑрт! ҫыртса лартрӑм.

— Ийййа ҫав. Унӑн чун савни салтакран таврӑннӑ та... Туйне ялта, ашшӗ-амӑшӗ патӗнче тӑваҫҫӗ, ҫавӑн пирки отпуск ыйтса илчӗ. Ҫын авланнӑ е качча кайнӑ чух ӑна отпуск памалли саккун пур...

Манӑн сасартӑк ура вайӗ пӗтсе килчӗ. Лак! лартӑм темле чул ҫине. Нума-ай лартӑм вара ним хускалмасӑр. Хамӑн пуҫ чан ҫапнӑ пек янраса тӑчӗ.

— Качча кайнӑ... Анюк качча кайнӑ... Тупрӑм пулать хам мӗн шыранине! Маттур, Влашка Ваҫҫи, кӑвар чӗре, ку чухнехи рыцарь! Ухх... махх! Тӑм... пуҫ! Юратнӑ хӗре куҫран вӗҫертмеҫҫӗ ӑна!

Хама хам чӑнт-чант! ҫупса ятӑм ҫилӗ килнипе...

Ҫапла вӗҫленчӗ манӑн юрату, тусӑм Колька. Пӗр эрне сӗрӗмри пек ҫӳрерӗм. Анчах кайран ҫапах та пу-

çăм майĕпе уçăлма пуçларĕ. Пĕри качча кайнă пулсан, ман валли урăх Анюксем çук-и-мĕн, терĕм. Анюксем те, Павловăсем те нумай. Пурте маттур, пурте хитре. Ĕçре те питĕ хастарлă! Анчах вĕсенчен хăшне юратас? Çакă халлĕхе паллă мар-ха маншăн...

Ну, кун çинчен эпир санпа эс киле таврăнсан калаçăпăр.

## ПӖР ИРХИНЕ, ПАСАРТА



Ҫуллахи ир. Ҫанталӑк ытармалла мар лайӑх, янкӑр уяр. Сенкер тӳпере пӗр пӗлӗт таткиӗ те ҫук, пир-авӑр комбиначӗ хыҫӗнчен йӑраланса тухнӑ хӗвел хӑйӗн ӑшшине хула ҫине ним шеллемесӗр сапать. Пахчасенче кайӑксем чӗвӗлтетеҫҫӗ, радиопа хаваслӑ юрӑсем янӑраҫҫӗ...

Ну, ҫав тери аван ӗнтӗ, ҫав тери!

Кун пек чухне темле чул чӗреллӗ ҫын кӑмӑлӗ те услам ҫу пек ирӗлме пултарать. Ахальтен мар пуль урамри ҫынсен сӑнӗсем те пурин те хаваслӑ паян, пӗрпӗринпе тӗл пулсан, вӗсем ӑшшӑн кулкаласа калаҫаҫҫӗ, пуҫ таяҫҫӗ, аллисене чӑмӑртаҫҫӗ, пӗрне-пӗри ырлӑхсывлӑх сунаҫҫӗ те ҫавӑн хыҫҫӑн тин вара хӑйсен ӗҫӗсемпе малалла васкаҫҫӗ.

Милици сержанчӗ Тимофей Сарсухалов та паян уйрӑмах тулли кӑмӑллӑ. Яланах питӗ типтерлӗ, таса ҫӳрекенскер, дежурствӑна вӑл «пӗтӗм формӑпа» тухнӑ: сухалне яп-яка хырнӑ, китель ҫухави айне ҫӗнӗ катан пир ҫӗлесе хунӑ, купӑс пек хутлам-хутлам кунчаллӑ хром аттисем Шупашкарти «Красный мебельщик» фабрикӑ тӑвакан трюмосенчен те хытӑрах йӑлтӑртатаҫҫӗ, аллисене шур перчетке тӑхӑннӑ. Дежурствӑна мар, пӗр-пӗр бала кайма хатӗрленнӗ ку, тейӗн!

Питӗ илемлӗ каччӑ пек Сарсухалов. Пӗвӗпе ҫӳллӗ, хул пуҫҫийӗсем сарлака, сӑнӗпе сарӑ, куҫӗсем уяр ҫанталӑкри пӗлӗт тӗслӗ. Ҫитменнине тата кӑтра вӑл, ункӑн-ункӑн явӑнса тӑракан ҫӳҫӗсем ним тусан та карт-

тус айне вырнаçасшăн мар, ялан сулахай тăнлав еннелле пĕтĕрĕнсе тухаççĕ. Кун пек каччăсем хĕрсен чĕрисене мĕн тери çунтарма пултарнине эсир хăвăрах пĕлетĕр ĕнтĕ. Темле кутăн хĕр те чăтса тăраймасть Сарсухалов пек каччă умĕнче, епле пулсан та юратса пăрахатех ăна. Каччи хăй ун çине ăшă куçпа пăхмасан е урăххисен еннелле сулăнсан, кĕвĕçме, асапланма, час-часах куçран вĕри шыв юхтарма тытăнать. Тепĕр чух хĕрсем хушшинче ун пек каччăшăн пĕрне-пĕри çилхерен тытса силленисем те пулкалаççĕ.

Пĕлекенсем каланă тăрăх, çак Сарсухалов сержант пирки те çавнашкал «вырăнти çапăçусем» пулкаланă. Пĕр çамрăк парикмахершă тепринне çамки çине кăларса янă кăтра çӳçне пĕр ывăç касса илнĕ, теççĕ — ан тив, тискеррĕн курăнтăр, Тимоша ан юраттăр ăна! Тепĕр сăра сутакан хĕр, хăйĕн юлташĕ çак сержантпа кинона кайма хатĕрленнине сиссе, ăна хăйĕн палаткине чĕнсе кĕртнĕ те унăн витĕр курăнакан кофти çине пĕр кружкă сăра чашлаттарнă, тет. Пĕр-пĕрин пичĕсене маникюрлă чĕрнисемпе тăрмаланисем те пулкаланă, теççĕ...

Çаксем çинчен пĕлсен вара начальник пĕррехинче Сарсухалова хăй патне чĕнтернĕ те çапла каланă пулать:

— Тусăмçăм Тимоша, эсĕ, паллах, питĕ лайăх каччă, службăра та примерлă, анчах та пĕлетĕн-и, сан пирки хулара хулиганства ӳсет! ЧПсем пулаççĕ! Авлан тавай, шуйттан çури! Пĕр эрне срок паратăп сана туй тума. Ас ту, итлемесен, санăн погонусене хывса илме тивет!

Çакăн хыççăн виç кунтанах Сарсухалов авланнă. Хăй пекех сап-сарă хĕр илсе пынă — фабрикăра хĕрарăм тумĕсем çĕлекен çĕвĕçе. Питĕ лайăх пурăнаççĕ, часах акă çĕр çинче тепĕр Сарсухалов хутшăнмалла, теççĕ халь.

Авланнăранпа сержант хăйне хăй çулĕпе аслăрах çын пек, мăнаçлăрах тытма пуçланă, утти те улшăннă унăн, çынсемпе юри хулăнрах сасăпа калаçма тăрăшнă, анчах та хăш чух, çынсем асăрхаман вăхăтра, хитре хĕрсене çав-çавах çурăмран лăпкакаланă. Хăнăхнă япала ĕнтĕ, мĕн тăвас тетĕн!..

Службăра Сарсухалов яланхи пекех йĕркеллĕ те çирĕп кăмăллă пулнă, хăйĕн участокĕнче никама та иртĕнме паман. Сисĕмлĕх тени унăн пур чухне те çите-

лёклĕ пулнă, ку енчен унăн кивçене кайма тивмен. Пурне те сăнанă, пурне те витĕрех курса тăнă вăл.

Нумай пулмасть ăна пасар районне куçарчĕç. Кунта ĕç ытти çĕртинчен нумай йывăртарах, кăткăсрах ĕнтĕ. Пасарта унта тем тĕрлĕ киревсĕр халăх та пулма пултарать вĕт: спекулянтсем те, вăрăсем те, вăрланă япаласене сутакансем те, ĕçсе супакансем те, тепĕр чух çапăçса каякансем те... Пăхсах, асăрхасах тăр эсрелсене!

Анчах пĕр-ик уйăх хушшинче Сарсухалов кунта та çирĕп йĕрке туса çитерчĕ. Паллах, пĕччен мар, халăхпа пĕрле, дружинниксем пулăшнипе. Кам иртĕнме пуçлать, ăна наччас ярса тытаççĕ. Спекулянтсем те питех курăнми пулчĕç—Сарсухаловран хăраççĕ. Вăрлас-тăвас пирки вара сас-хура вуçех те пулмарĕ.

— Маттур, Тимоша,— терĕ ăна начальник темиçе хут та.— Кун пекех ĕçлесен, эсĕ офицер ятне илесси те вăрахах каймĕ, тетĕп.

Çакă вара Сарсухалова тата ытларах хавхалантарчĕ, хăйĕн ĕçĕсене вăл тата тăрăшарах туса пычĕ...

Ак халĕ те вăл пасара пысăк ответлăха туякан çын пек пырса кĕчĕ. Пĕр ретпе утса иртрĕ, тепĕр ретпе... Киосксенчи продавецсем кăна мар, ахаль тĕл пулакансем те ăна ăшшăн саламлаççĕ:

— Ырă кун пултăр, Тимофей Васильч!

— Чунтан-вартан салам сана, сержант!

Çуллахи пасар ирех шавлама тытăнать. Павильонсенче те, пасар варринчи лупассем айĕнче те пĕр пушă вырăн та çук ĕнтĕ. Пăхма хавасла: вĕçĕмсĕр çырла унта, хăяр, ир пулакан панулми, кишĕр, симĕс сухан, редис, помидор, купăста... Лавĕ-лавĕпе, тонни-тоннипе витамин! Хуть те хăшне илсе çи. Яшкалăх та, закускăлăх та пур.

Паллана инкесем пĕрин хыççăн тепри сĕнеççĕ:

— Тимофей Васильч, тутанса пăх-ха ман çырлана...

— Акă, швеши хăяр çисе кур...

Анчах Сарсухалов çăткăн çын мар, тата вăл хăйĕн чысне те çирĕп упрать. Сĕннĕшĕн тав туса пуç таять те аллипе сулса илет:

— Тавтапуç сире, эпĕ тутă-ха! Сутăр тавай, сутăр, анчах хакне ытлашши ан шăйăрăр... Совеçе пĕлес пулать пăртак!

...Варахчен ҫӳрерĕ Сарсухалов пасар тăрăх. Васкамасăр ерипе. Ҫитмен выран та хăвармарĕ, кашни кĕтессех пырса пăхрĕ. Унтан тепре, тата тепре ҫаврăнчĕ. Ҫав хушăра пасар шавланăҫемĕн шавларĕ, суту-илӳ вăйлансах пычĕ, анчах ниҫта та нимĕнле йĕркесĕрлĕх те палăрмарĕ.

Юлашкинчен, сержант кунти столовăйне кĕрсе пăхма шут турĕ. Унта мĕнле-ши? Хĕве чиксе пынă ҫур литрсене виҫҫе пайлакансем ҫук-и? Столовăйĕнче ун пек хăтланма юраманнине пурте пĕлеҫҫĕ ĕнтĕ, анчах ҫапах та час-часах сĕтелсем айĕнче пуш кĕленчесем янраса лараҫҫĕ-ха. Официанткăсем ҫакна курмăш пулаҫҫĕ, ма тесессĕн вĕсемшĕн ку — планпа палăртман тупăш, хăйне майлă калым пулать-ҫке. «Кун каҫа 10—12 кĕленче пухса лавккана кайса сутни япăх-им? Укҫа вĕт вăл!» — теҫҫĕ мар-и вĕсем? Ҫавăнпа та Сарсухаловăн официанткăсене те ҫирĕпрех тыткалама тивет.

Анчах хальхинче сержант столовăйне ҫитеймерĕ ҫав — пачах та кĕтмен-туман ҫĕртен, сасартăк, унăн чăрмавлă ĕҫ сиксе тухрĕ. Пĕр киоск хыҫĕнче, улахрах ҫĕрте, икĕ ҫын шăппăн калаҫса тăнине асăрхарĕ вăл. Иккĕшĕ те вăй питти, пĕр ҫирĕм пиллĕксенче, пĕри тĕксĕмрех кăвак костюмпа, хура куҫ-пуҫлă, кăштах цыган майлăскер, тепри — йĕтĕн пир шăлаварпа, симĕс джемперпа, шап-шакла пуҫĕ ҫине узбексен тюбетейне лартса янă.

Малтанхи хут пăхсанах, сержанта ҫак ҫынсем темле ытла шанчăклах мар пек туйăнчĕҫ. Мĕншĕн-ха вĕсем киоск хыҫне кайса тăнă? Мĕн пирки ҫав териех пăлханнă пек, васкаса калаҫаҫҫĕ? Камсем вĕсем? Ку таранччен Сарсухалов кун пек ҫынсене Шупашкарта курнине ас тумасть. «Гастролерсем» мар-ши?..

Вăл тимлесех сăнама тытăнчĕ.

Леш ҫынсем ҫаплах калаҫрĕҫ, анчах сержант вĕсен сăмахĕсене илтеймерĕ. Унтан кăвак костюмли сасартăк хĕвĕнчен йăлтăркка хура ридикюль — хулари хĕрарăмсем ялан хул хушшине хĕстерсе ҫӳрекен пĕчĕк сумка — туртса кăларчĕ. Ҫав самантрах вĕсем ридикюле уҫса ун ăшĕнче мĕн пуррине тĕрĕслеме тытăнчĕҫ. Ку ĕҫ пĕр минутран ытла пымарĕ — кăвак костюмли кĕҫех ридикюле хупса каллех хĕвне чиксе хучĕ. Ҫакăн хыҫҫăн вĕсем пĕр-пĕрне алă пачĕҫ — уйрăлса каясшăн пулчĕҫ курăнать ĕнтĕ.

Анчах каясси пулмарӗ — вӗсем патне Сарсухалов сержант пат, пат, пат утса пычӗ те, аллине карттус сӑмси ҫумне тытса, хуллен кӑна:

— Сирӗн документсемпе паллашма ирӗк парсамӑрччӗ,— терӗ.

...Кӑвак костюмли хӗвӗнчен хӗрарӑм сумки кӑларнине курсанах сисӗмлӗ сержантӑн чӗри мӑлатукпа ҫапнӑ пек пӑлхануллӑн тапма тытӑнчӗ. Ара, епле пӑлханмастӑн-ха?! Иккӗленмелли ҫук вӗт — вӑрлана сумкӑ вӑл! Мӗнле арҫын кӑкӑр умне хӗрарӑм сумки чиксе ҫӳретӗр? Ӗмӗрне пулман япала-иҫ! Ку сумкӑна вӑл паян пӗр-пӗр сӳтӗк хӗрарӑмӑнне ҫаклатнӑ та, халь, ава, хӑйӗн тусӗ умӗнче мухтанса тӑрать. «Операци» ӑнӑҫлӑ пулнӑ ятпа ӗҫме чӗнет пулӗ-ха. Ак ӗнтӗ, сумкӑра мӗнмӗн пуррине тӗрӗслесе пӑхрӗҫ. Халех каяҫҫӗ... Ҫук, ниепле те вӗҫертес пулмасть вӗсене! Ара, куҫ умӗнчех вӗт, ҫав тери нахальнӑй хӑтланаҫҫӗ!..

Ҫакӑн пек шухӑшсем хӑваланипе утса пырса ыйтрӗ те сержант ҫав ҫынсен документсене.

Лешсем тӗлӗнчӗҫ:

— Мӗн сӑлтавпа?! Пирӗн документсем мӗн тума кирлӗ пулчӗҫ сире?

— Ку ыйту пачах та вырӑнсӑр,— терӗ сержант,— пирӗн кашни ҫынна тӗрӗслеме права пур.

— Мӗн эсир, пире темле вӑрӑсем е рецидивистсем тесе шутлатӑр-и? — кӑмӑлсӑрланса хӗрелсех кайрӗ тюбетейли.

— Нимӗн те шутламастӑп,— ҫав-ҫавах лӑпкӑн хуравларӗ Сарсухалов.— Эсир кам пулни сирӗн паспортсенчен курӑнӗ. Халех кӑтартӑр. Саккун ман енче, хирӗҫсе тӑрса вӑхӑта сая ан ярӑр...

Тавлашнинчен чӑнах та усси пулас ҫуккине курса, лешсем пӗр-пӗрин ҫине пӑхса илчӗҫ те кӗсйисене ухтарма тытӑнчӗҫ. Тюбетейли хӑй паспортне кӑвак костюмлинчен малтан кӑларса тыттарчӗ. Сержант ӑна васкамасӑр, страницӑн-страницӑн уҫса вуласа тухрӗ. Йӗркеллех иккен паспорчӗ, ҫынни Яшков хушаматлӑ, парикмахерта ӗҫлет. Тепӗр ҫынни ҫине сержант пачах шанмасӑр, паспортне илнӗ чух ун куҫӗнчен тӳррӗн, витӗр шӑтарас пек пӑхрӗ — ун ҫумӗнче хӗрарӑм сумки пулнӑ-ҫке-ха, ӑна сержант вӑрӑ тесех шутланӑ.

Мӗн тетӗр эсир, йӑнӑшман вӗт вӑл! Ун умӗнче чӑнах та вӑрӑ тӑнӑ, чӑн-чӑн вӑрӑ! Сержант лайӑхах, ним

иккĕленмелле мар палласа илчĕ: виçĕ çул каялла, хăй тин çеç çартан таврăнса милицие ĕçлеме кĕрсен, вăл çак çынна тĕрмерен суда илсе пынăччĕ, сучĕ ăна икĕ çуллăха хупмалла тусан — тĕрмене каялла леçнĕччĕ. Темскер вăрланăшăн суд турĕç ăна ун чухне. Халь, срокĕ тухнă хыççăн, вăл киле таврăнна пулмалла та ĕнтĕ, тӳрĕ пурнăçпа пурăнас вырăнне каллех çаратма тытăнна! Ну, паян ака çĕнĕрен лекрĕ, хальхинче ăна пĕр пилĕк çултан кая мар параççĕ...

Унăн паспорчĕ çĕнĕ иккен-ха — виçĕ уйăх малтантарах çеç илнĕ. Храбров... «Металлистра» ĕçлет, слесарь. Çынсем сисиччен çăра уççисем тăвать пуль-ха — унта-кунта йăпăр-япăр кĕме! Кăтартăпăр эпир ăна... Храбров! Тупăннă паттăр... хĕрарăм сумкисене вăрлама! Ĕçлесчĕ лайăххрах, тар юхтарса!

Кăвак костюмлин паспортне Сарсухалов каялла таварса памарĕ, хăй çумне чикрĕ.

— Мĕншĕн? — тĕлĕнчĕ лешĕ.

— Мĕншĕнне милици уйрăмĕнче пĕлĕн,— терĕ сержант.— Эс халь мана хĕвне мĕн пытарнине кăтарт-ха!

— Кăтартма пултаратăп, анчах та сире алла памастăп,— терĕ Храбров, хĕвĕнчен сумкă кăларса.

— Паратăн! — сассине хытарчĕ сержант.

— Памастăп, мĕншĕн тесен эп ăна пĕр çур сехет каялла ав, çавăнта, Свердлов урамĕнче тупрăм та, хам алăпа милицине, «стол находока» кайса паратăп!

— Ха! — кулам пекки турĕ сержант.— Тупнă пулмасăр! Такам тăкса çӳрет-ха урамра сан валли сумкăсем! Кала луччă, хăш тĕлте, камăнне çаклатрăн? «Стол находок» тет-ха тата! Хам сана куç кĕрет ярса тытрăм та, мĕн те пулин шухăшласа кăларас пулать çав!..

— Милиционер юлташ, вăл тĕрĕссине калать,— тăрук калаçăва хутшăнчĕ тепри, тюбетейли.— Ку сумкăна вăл чăнах та халь çеç урамра тупнă, мана тĕл пулчĕ те çав «стол находок» ăçти çинчен ыйтса пĕлме тытăнчĕ. Эпир сумкинче мĕн пуррине те тĕрĕслесе пăхрăмăр унпа. Çирĕм тенкĕ ытларах укçа пур, фабрикăна кĕмелли пропуск тата хĕрарăмсен ăпăр-тапăрĕ... Вăрланă пулсан, мĕн тума кăтартса çӳретĕр-ха вăл вĕсене, хăварах шухăшласа пăхăр эсир!

— Кӳр-ха, эп уçса пăхам! — аллине тăсрĕ сержант.

— Памастăп! — сумкăна çурăмĕ хыçнелле тытрĕ Храбров.

— Пар тетĕп!

— Ан кăшкăрăр, калана сире памастăп тесе! «Стол находка» каятăп та, унта хам алăпа начальнике тыттаратăп. Акт çыртăр, мана квитанци патăр! Эсир ман çума ан та çулăхăр — пурĕ пĕр сумкăна илейместĕр манран. Эсир мар, эпĕ тупнă ăна!

Сержант ун çине пĕр хушă тĕлĕнсе пăхса тăчĕ.

— Ай-яй, ытла та çивĕчленсе кайнă-çке эсĕ... лере! Институт пĕтерсе тухнă пекех! — пуçне пăркаласа илчĕ вăл.

— Институт мар, академирен те ытлараххине пĕтернĕ, ăслăланнă, текех ухмах пулассăм çук! — хăй тĕрмере ларса тухнă пирки сăмах тĕкнĕшĕн çилленсе куçĕсене çуталтарса илчĕ Храбров.

— Ну-ну... Çапах манпа пĕрле пымалла пулать, пĕччен ямастăп эп сана!

— Ку мĕншĕн тата? Чип-чипер çынна мĕншĕн конвойпа илсе каймалла? — тарăхса кайрĕ тюбетейли те.— Вăл сирĕнсĕрех унта кайма хатĕрленнĕ вĕт!

— Э-э, шан ун пеккисене! — аллипе сулчĕ сержант.— Пĕр-пĕр тăкăрлăк тĕлне çитсенех сапур урлă сикет те вăл, шыра вара ăна ик-виç уйăх!

— Ан кўрентерĕр çынна!

— Вăл хăй ан кўрентертĕрчĕ. Çак сумкă хуçи, пĕр-пĕр мĕскĕн карчăк, халь те выртса йăваланса макăрать пуль-ха хăйне çаратнăшăн!

— Калана сире — вăрламан вăл ăна, тупнă! Эп хам пыратăп сирĕнпе, свидетель пулатăп! — татăклăн каласа хучĕ тюбетейли.

...Вара вĕсем виççĕшĕ те милици уйрăмне кайрĕç. Çул çинче Сарсухалов сержант текех Храбровпа Яшкин хыççăн утма тăрăшрĕ, чăн-чăнах арестленĕ çынсене илсе пынă пек. Анчах кусем ăна вăрçа-вăрçах хăйсемпе юнашар пыртарчĕç:

— Намăс ан кăтартнă пултăр айăпсăр çынсене!..

Вырăна çитсен вара сержант дежурнăя пĕтĕм йĕркене пăхăнса рапортларĕ:

— Паян, çав сехетре, çав минутра, çав-çав вырăнта маншăн паллă мар икĕ çын киоск хыçне пăрăнса хĕрарăм сумкине уçса пăхса тăчĕç. Хайсем: тупрăмăр, теççĕ, анчах та, ман шутпа, ку вăл юри шухăшласа кăларнă верси... Милици уйрăмне илсе килнĕ çынсенчен пĕри нумай пулмасть колонирен таврăннă, çавăнпа

та шанма çук. Эпӗ темиçе хут ыйтсан та, вещественнӑй доказательствисене ман алла памарӗç...

— Тӗрӗс-и? — ыйтрӗ дежурнӑй Яшковпа Храбровран.

— Тӗп-тӗрӗс,— терӗç лешсем,— сумкӑна вӑрланӑ тесе шутлани çеç тӗрӗс мар!

Унтан Храбров ӗçӗ мӗнле-мӗнле пулни çинчен тӗпӗ-йӗрӗпе каласа пачӗ.

— «Стол находок» ӑçтине пӗлмен пирки кӑна тӳрех сирӗн пата килеймерӗм, ӗненӗр! Мана çын япали те, укçи-тенки те кирлӗ мар, эп халӗ хам та питӗ лайӑх ӗçлесе илетӗп!

— Ну-ка, сумкине курар-ха эппин...

Храбров ридикюле йӑпӑр-япӑр сӗтел çине хучӗ. Дежурнӑй ӑна уçрӗ те шалта мӗн пуррине кӑларма тытӑнчӗ. Ыттисем пурте — Храбровпа Яшков та, Сарсухалов сержант та куç илмесӗр, тимлӗн пӑхса тӑчӗç. Малтан дежурнӑй укçине кӑларса шутларӗ — 23 тенкӗ те 31 пус иккен. Унтан сӗтел çине майрасен яланхи хӗç-пӑшалӗ — тута пӗветмелли, куç харши хуратмалли кӑранташсем, пуç тури, тӗкӗр, сӑмса тутри тухса вырт-рӗç. Чӑн юлашкинчен дежурнӑй ридикюльтен çӗвӗ фабрикине кӗмелли пропуск кӑларса уçрӗ те ун çинчи сӑн ӳкерчӗкне пӑхма тытӑнчӗ. Ыттисем ӳкерчӗке курайма-рӗç-ха. Пӗр çур минут пек пӑхса ларнӑ хыççӑн вара дежурнӑй темшӗн йӑл та йӑл кула-кула илчӗ.

— Н-да, хитре хӗрарӑм, пит те селӗм, ним те калаймӑн! — терӗ те вӑл унтан, çаплах кӑмӑллӑн кулса, пропуска Сарсухалова тыттарчӗ.— Пӑх-ха лайӑххрах, тен, паллатӑн эс ӑна?

Сержант пропуск çине пӑхсассӑнах куçӗсене мӑч-мӑч-мӑч тутарса илчӗ, унтан унӑн куçӗсем тӑрук чарӑлса, пит çӑмартисем хӗп-хӗрлӗ пулса кайрӗç...

— Ну, палларан-и? — ыйтрӗ дежурнӑй.

— П... п-палламасӑр! Ман арӑм ку... Зина! — терӗ Сарсухалов сасартӑк çӗтсе ларнӑ сасӑпа.—Сӳтӗк шуйттан! — хӑй тӗллӗн мӑкӑртатма тытӑнчӗ унтан.— Иккӗмӗш хут пулчӗ ӗнтӗ кун пекки, пӗлтӗр—пӗрре, кӑçал—тепре. Çур уйӑх укçине пӗтӗмпех çухатнӑ... Хӑлхинчен туртатӑп-ха куншӑн!

— Хӑш тӗлте тупрӑр-ха эсир ку сумкӑна? — çырма хатӗрленсе ыйтрӗ дежурнӑй Храбровран.

— Герцен урамӗнчен Свердлов урамнелле пӑраннӑ ҫӗрте,— терӗ ку.

— Тӗрӗс, тӗрӗс, ҫав енче пулма кирлӗ,— ун сӑмахӗсене ҫирӗплетсе, пуҫне темиҫе хут сулса илчӗ Сарсухалов.— Пасарта пулнӑ хыҫҫӑн Зина амӑшӗ патне каятӑп, терӗ, лешсем шӑпах Свердлов урамӗнче пурӑнаҫҫӗ...

Ҫак самантра сержант пӗртте паҫӑрхи пек паттӑр сӑнлӑ пулмарӗ ҫав! Тек куҫӗсене мӑчлаттарчӗ, ҫамки ҫинчи тарне шӑла-шӑла илчӗ, типсе кайнӑ тутисене ҫулларӗ. Питӗ хытӑ пӑлханчӗ курӑнать...

— Эппин, ку юлташ санӑн арӑмун сумкине вӑрламаннине, ӑна чӑнах та урамра тупнине ӗненетӗн эсӗ?— ыйтрӗ унран дежурнӑй.

— Мӗн тӑвас тетӗн? Ӗненесех пулать,— терӗ сержант темле шала кайнӑ сасӑпа.

— Ҫынсене ӗненес пулать ҫав, Сарсухалов юлташ,— ун куҫӗсенчен пӑхса каларӗ дежурнӑй.— Мӗншӗн тесен пирӗн ҫынсен ӑс-пуҫӗ кулленех лайӑх еннелле улшӑнса пырать... Акӑ, иртнӗ уйӑхра пирӗн пата, ҫак «стол находка» пӗр ватӑ цыган лаша ҫавӑтса килчӗ. Атӑл хӗрринче тупрӑм, пӗр эрне ӗнтӗ пӗр-пӗччен ҫӳрет, тахӑш колхоз ҫухатнӑскер пулмалла, тет... Шалт тӗлӗнсе кайрӑмӑр! Ӗлӗк цыган аллине ют лаша лексен, вӑл ӑна ҫитмӗл ҫичӗ тӗслӗ сӑрласа та пулин хӑйӗн лаши пек тунӑ, халь акӑ — кур-ха эсӗ!—милицине килсе пачӗ! Урамра кӑларса ӳкернӗ е автобусра, магазинсенче манса хӑварнӑ япаласене тупакансем вара кунта вӗҫӗмсӗрех килсе тӑраҫҫӗ. Пурин те пӗр юрӑ: «Мейӗр, хуҫисене шыраса тупса тавӑрса парӑр, мана ҫын япали кирлӗ мар, кам ӗҫлесе илнӗ — ҫавах усӑ куртӑр»,— теҫҫӗ... Коммунизм патнелле ҫывхаратпӑр вӗт, Тимофей Васильч! Ҫапла-и?

— Тӗрӗс, капитан юлташ,— терӗ Сарсухалов.— Ӑнланатӑп...

# САЛТАКСЕМ КУЛМА ЮРАТАТЧĔÇ...



## САЛТАКСЕМ КУЛМА ЮРАТАТЧĔÇ...

### *Фронтри фельетонист аса илнисенчен*

*Кулăш — вăйлисен хĕç-пăшалĕ. Мĕскĕн çын, хавшак чунлă та халсăр çын кулаймасть те вăл, ун йышши этем сăмсине шалалла туртса нăшăклама çеç пултарать. Çынсем унтан хăйĕнчен кулаççĕ.*

*Кам вăйлă та хастарлă, кам кĕрешӳре çĕнтерет,— çавă çеç тулли кăмăлпа, тепĕр чух каçса кайса, варĕ ыратакан пуличчен кулать. Хăй çĕнтернĕшĕн те саванса кулать вăл, хăй месерле çаварса çапнă тăшманĕнчен те кулать: «Куртăн-и халь, анра-сухра, манпа çыхлансан епле камит пулса тухать, э? Тата тепре çулăхса пăхма шуту пур-и? Кил ара, çаварса çапам, анчах кайран ан макăр вара! Ха-ха-ха!..»*

*Иртнĕ вăрçăра пирĕн салтаксем çавăн пекчĕ. Çапăçура çав тери хаярччĕ вĕсем, арăслансем пекехчĕ, ним умĕнче те чаранса тăмастчĕç. Çавăнпа çĕнтеретчĕç те вĕсем хамăра вăрă-хурахла килсе тапăннă тискер тăшмана. Анчах çапăçусем хушшинчи пушă вăхăтра (вăрçăра ун пек вăхăтсем те пулкалаççĕ) пирĕн салтаксем пит те хаваслăччĕ вара. Юрлатчĕç те вĕсем, ташлатчĕç те. Кулă вĕсен чи çывăх тусĕччĕ. Вут-çулăмран тухнă-тухман халь çеç иртнĕ çапăçури уйрăм самантсене аса илсе кулатчĕç...*

*«Пăхатăп — траншейăри кукрашка хыçĕнчен пĕр фриц Ивана тĕллет... Пĕррех прикладпа патăм çакна пуçĕнчен! Фриц качака пек «ме-ек!» терĕ те, пăлтăрт! кутăн çавăрăнса ӳкрĕ. Пуçĕ аялта, урисем çӳлелле. Çăлăнас тесе çĕр тĕпнелле чăмасшăн пулнă пек...»*

*«Ав çав пӳрте халь çеç нимĕç чупса кĕрсе кайрĕ,— терĕ мана пĕр карчăк.— Тӳрех сикрĕм çавăн хыççăн.*

*Анчах пӳртре никам та ҫук. Унталла пăхатăп, кунталла. Саксем айне, кăмака хыҫнелле... Ҫук! Суйрĕ мана ку карчăк, тетĕп ĕнтĕ. Ҫавăнтах шухăш пырса кĕчĕ: кăмакана пытанман-ши ку? Питлĕхе илсе пăрахрăм та — апайтурух! Пĕр фриц вырта паратьl Кушак пек хутланнă хăй... А ну, тух кунта, атту-тăк халех улăм чиксе чĕртсе яратăп та, санран окорок тăвататăп, тетĕп. Тухрĕ... Шуйттан тĕслĕ! Ҫара хăрăм, пичĕ-куҫĕ те палармасть. Кулса вилеттĕм вĕт!..»*

*«Сĕтĕрсе тухрăмăр хайхи «чĕлхене» хăйсен траншейинчен. Утмасть, халерă. Те юри хăтланать, те Ванькка ăна пуҫĕнчен кăшт ытлашширех шакканă. Ирĕксĕрех ҫакна михĕ ҫĕкленĕ пек ҫĕклемелле пулчĕ. Унччен те пулмарĕ — шăрш тапса тухрĕ. Тӳсмелле мар, хайхи арийски шăршă... Пĕр ҫырмана ҫитсен вара тăна кĕрткелерĕмĕр те ҫакна, часрах йĕмне хывтарса ҫутартăмăр, атту пăрахса хăварас патнех ҫитрĕмĕр вĕт!»*

*Ҫавăн пек кулăшла историсем вĕҫĕмсĕр каласа паратчĕҫ пĕрне-пĕри.*

*Анчах салтаксем каласа пама кăна мар, тĕрлĕ кулăшсене итлеме те, курма та, вулама та ҫав тери юрататчĕҫ. Пирĕн дивизири художествăллă пултарулăх ансамблĕ тĕрлĕрен пĕчĕк комедисем, сценкăсем, скетчсем лартатчĕ, кулăшла юрăсемпе такмаксем юрлатчĕ. Мĕн тери тулли кăмăлпа йышăнатчĕҫ вĕсене салтаксем! Сценă пекки ҫине (пуринчен ытларах — грузовик кузовĕ ҫине) Гитлер, Геббельс тата ытти «Г»-сем (Геринг, Гиммлер) пек тумланнă «окоп артисчĕсем» тухса ун пек-кун пек хăтланкаласа кăтартсан, ал тупанĕсем ыратакан пуличченех ҫупса кулатчĕҫ, ăнаҫларах пулнă номерсене икшер-виҫшер хут та кăтартттаратчĕҫ.*

*Кулăшла япаласене вулама та питĕ юрататчĕҫ пирĕн паттăр салтаксем. Траншейăсене, блиндажсене фронт, арми е дивизи хаҫачĕсене илсе пырсан, чăн малтан Информбюро сводкине пăхса тухатчĕҫ, унтан тӳрех фельетон шырама тытăнатчĕҫ. Номерте фельетон е кулăшла сăвă-калав пулсан, ăна каҫса кайсах вулатчĕҫ. Сасăпа, пурте илтмелле вулатчĕҫ. Ас тăвататăп, чылай хушă пирĕн фронт хаҫатĕнче «Новые похождения бравого солдата Швейка» ятлă пародилле повеҫ пичетленсе пычĕ. Ну, ахăратчĕҫ те вара ăна вуласа! А. Твардовскин «Василий Теркин» поэми те питĕ хавасла, салтак чунне ҫĕклекен япала та, ăна та салтаксем питĕ*

*кăмăллатчĕç (вăл та пирĕн фронт хаçатĕнче сыпăкан-сыпăкан пичетленсе пычĕ).*

*Эпĕ дивизи хаçатĕнче ĕçлеттĕм. Салтаксем кулма юратнине шута илсе, эпир те хамăр хаçатра тăшмана питлекен, хаярран тăрăхласа кулакан калавсемпе фельетонсем пичетлеме тăрăшаттăмăр. Эп хам та çыраттăм.*

*Тăшман çинчен хаяр фельетонсем çырма материал тупăнсах пыратчĕ. Сăмахран, эпĕ пĕррехинче «Йĕм тăхăнна пуç» («Голова в штанах») ятлă фельетон çырса кăлартăм. Пачах кĕтмен çĕртен çуралчĕ çав фельетон. Пĕр ирхине ирех (1942 çулта, Ржев тăрăхĕнче пулчĕ ку) эпĕ малти линие çитсе хамăр хаçатăн çĕнĕ номерĕ валли материал пухма кайрăм. Пирĕн ĕç йĕрки çавăн пекчĕ: пĕр кун малти линире — траншейăсенче, блиндажсенче материал пухса çÿретĕн, тепĕр кун хаçат тăватăн, унтан каллех малти линие каятăн.*

*Пĕр çунса кайнă ял витĕр утса пыраттăм та — хама хирĕç тыткăна лекнĕ гитлеровецсен чылай пысăк ушкăнне илсе килнине курах кайрăм. Ял варрине çитсен, колоннă темшĕн чарăнса тăчĕ. Эпĕ те чарăнтăм ĕнтĕ, «тĕнчене çĕнтерекенсем» çине пăхатăп. Çĕр çăттăрах! Мĕн тĕслисем çукчĕ пуль унта! Мĕнле тумланман пуль вĕсем пирĕн «Сив мучи-генералтан» хÿтĕленме тăрăшса! Шăши тĕслĕ çÿхе шинелĕсем çĕтĕк-çатăк, лутăрканса, вараланса пĕтнĕ, хăшĕсен урисенче — улăмран тунă «эрзац-çăматăсем», пуçĕсем çийĕнчи пилоткисен хĕррисене таврăрса хăлха çине антарса лартнă, çиелтен хĕрарăм тутрисем, ал шăллисем çыхнă, пĕри вара, çÿллĕ те хытканскер, сухалне нумайранпа хырман, питне тахçантанпах çуман ефрейтор, ним тупайманнипе пулас, пилотки çийĕнчен... хĕрлĕ армеец йĕмне çыхса лартнă. Кулса вилес пулать! Йĕм тĕпĕ — пуç тăрринче, пĕççисем — янах айĕнче... Пĕр-пĕччен кунĕпе кулса çÿрерĕм çавна аса илсе. Редакцие таврăнсан вара тÿсеймерĕм, фельетон çыртăм. Салтаксене кăмăла кайнăччĕ вăл.*

*Тепринче тата çакăн пек пулчĕ. Иртнĕ каç пирĕннисем нимĕçсен разведчикне тытса килнĕ, терĕç. Вăл ÿсĕр пулнă та çĕрле çухалса кайнă пулмалла.*

*— Унăн документчĕсем питĕ чаплă, килсе кур,— терĕ мана телефонпа дивизи штабĕнчи тăлмачă.*

*Чăнах иккен. Çав разведчик çумĕнче, ытти хутсем, вуншар фотоÿкерчĕксем хушшинче... хуть те мĕнле*

*хĕре те (хайне камала кайна тарах ĕнтĕ) чуп тума право паракан документ тупна. Тытсах пахрам эп вал документа. Пĕр-пĕр организацин член билечĕ евĕрлех. Хуплашки çине «Чуп тумалли право» тесе çырна, унтах шуйттан палли — эрешменле свастика. Шалта вара çак «право» хуçи Германин «никам çĕнейми çарĕн» паттарĕ пулни, ана хисеплеме тивĕçли, вал хуть те хаш нимĕç хĕрне те тытса чуп тума пултарни çинчен (куна урахларах та анланма пулать ĕнтĕ...), хĕрĕ килĕшмест, хирĕç тарать пулсан, ана çак фашист ирĕксĕрлесех хай майла çаварма пултарни çинчен çырначчĕ.*

*Епле тÿсетĕн-ха хамар салтаксене çакан çинчен каласа катартмасар? Епле каласа памастан фашистсен çаван пек тискер, выльăхла йалисем çинчен? Тепĕр куннех дивизи хаçатĕнче манан «Право на поцелуй» ятла хаяр фельетон тухрĕ.*

*Çаван пек фельетонсем чылай çырса каларна эпĕ фронтра чухне. Сатиралла калавсем те сахалах мар çырна. Сатира мелĕпе уса курса, салтаксене ташманан тискерлĕхне катартса пама тарашна.*

*Çав хушарах тата хамаран салтаксен кулленхи ĕçĕсем çинчен, вĕсен пурнаçĕнче ансартран сиксе тухакан тĕрлĕ мыскарасем çинчен аша камалпа кулашла калавсем çырна. Ун пеккисене те салтаксем питĕ юратса вулатчĕç.*

*1943 çулта, çур енне, эпир «Курск хысакĕнче» тана чух, пирĕн дивизири пĕр повар, салтаксене вĕри апат çитерме малти позицие кайсан, ахаль карабинран персех фашистсен «мессершмитне» çапса антарначчĕ. Çаваншан ана темиçе кунтанах Отечественнай варçан иккĕмĕш степеньлĕ орденне пачĕç. Кун çинчен хамаран дивизи хаçатĕнче çеç мар, арми хаçатĕнче те çырчĕç. Çаван хыççан ман пуçра Çапала Иванĕн санарĕ çуралчĕ те, эпĕ ана тĕп герой туса темиçе кĕске калав çыртам. Калавсенче катартса пана ĕçсене пĕрне те шутласа каларман, вĕсем пурте пурнаçра пулнаскерсем.*

*Ку калавсене çырнаранпа вахат нумай иртнĕ пулин те, вĕсем вулакансемшĕн (уйрамах — çамраксемшĕн) халь те интереслĕ пулас пек туйанать. Хай вахатĕнче вĕсене профессиллĕ артистсем те, художествалла пултарулах кружокĕсен членĕсем эстрада çинчен нумай вуларĕç. Тен, халĕ те çаван пек вулакансем пулĕç, тесе шанатап...*

# ÇĂПАЛА ИВАНĔ КАЛАСА ПАНИСЕМ

## САХВИНЕПЕ «МЕССЕРШМИТТ»



Хаварах пĕлетĕр вĕт, тăвансем, юптарас йăла пирĕн йăхра çук вăл. Эпĕ хам та ни суякан, ни мухтанакан çын мар, çавăнпа та сире пĕтĕмпех тĕп-тĕрĕссине каласа паратăп...

Мĕнех мухтанас ĕнтĕ — манăн çарти служба ытла анăçлах пуçланмарĕ. Ака, халь эсир манăн кăкăрăм çинче икĕ орден куратăр, медальсем те шăкăриех авă. Анчах та малтанхи вăхăтра эпĕ орден илмелле пуласса пачах та шанманччĕ çав. Шутламан та ун пирки, мĕншĕн тесен шутлама майĕ те пулман манăн. Ăçтан шутлатăн-ха? Ордена ăна пĕр-пĕр паттăр ĕç тунăшăн параççĕ-çке-ха! Ну, калăпăр, эсĕ атака вăхăтĕнче тăшман траншейине никамран малтан сиксе кĕрсе темиçе фашиста леш тĕнчене ăсатнă, е хăвăн çинелле ĕрĕхсе пыракан «тигра» ПТР пăшалĕпе çамкинчен шаплаттарса, ăна спичка коробки пекех çунтарса янă, е тата çавăн пекки мĕн те пулин тунă... Анчах эпĕ малтанхи вăхăтра ни ăна, ни кăна туман, тата... тума та пултарайман, мĕншĕн тесен эпĕ стрелок та, противотанкист та, никам та пулман, манăн специальноç — повар пулнă...

Çапла çав, повар! Пин те çич çĕр çитмĕл çиччĕмĕш полкри иккĕмĕш стрелковăй рота поварĕ! Хама та мана Çапала Иванĕ, теççĕ вĕт-ха, мĕншĕн тесен эпĕ мĕн ачаранпах кухньăра çапăçса пурăннă: паранка шуратнă та купăста туранă, аш ваклана та лапшу çарнă. Эпĕ

варçаччен районри чайнайра повар пулса пураннине пĕлсен, фронтра та мана çав кичем ĕçех хушрĕç...

Эпир — çĕнĕ пополнени ĕнтĕ — фронтра çапăçакан полка çитсессĕнех, старшина ман юлташсене пурне те вĕр-çĕнĕ автоматсем туянтарчĕ, гранатăсем, патронсем пачĕ, а мана... мана вара темĕн пысăкăш çăпала тыттарчĕ — яп-яка аварлă пăхăр çăпала! Ме сана, терĕ, эс çакăнпа çапăç, терĕ. Паллах, стройра тăракан пĕтĕм рота ахăлтатса кулса ячĕ, хам эпĕ кĕрхи помидор пекех хĕрелсе кайрăм, çамка çине пăрçа пек тар тапса тухрĕ, чĕлхе çăвар маччи çумнех сыпăçса ларчĕ... Шутласаттăм пĕрре çав çăпалана пĕтĕм строй умĕнчех сырманалла вăрас тесе, анчах юрать-ха, çарти дисциплинăна пăсма юраманнине вăхăтра аса илтĕм те, тивес мар, терĕм. Атя, мĕн хушаççĕ, çавна тăвас!

Ну, юрĕ... Тытăнтăм ĕçлеме. Тепĕр тесен, фронтра яшка пĕçерни те боевой ĕçех вĕт-ха, çавăнпа та чунтанах тăрăшрăм: епле пулсан та, юлташсене лайăхрах тăрантарас, фашистсене тӳпелеме вĕсен вăй ытларах пултăр, терĕм. Тен, вăхăчĕ çитсен, мана та тав тăвĕç, манăн та саванмалли кун çитĕ-ха, тесе шутлакалаттăм хам ăспа, кăштах ерçнĕ вăхăтсенче.

Çук вĕт! Савăнмалли выранне манăн тăтăшах тарăхмалли те кӳренмелли çеç тупăнса выратчĕ. Ну... Пĕррехинче манăн чип-чипер пиçсе çитнĕ, çулласа лартнă хура тул пăттине — пăтти хуран тулличчĕ! — таçтан мурĕнчен пĕр ухмах снаряд пырса лексе сывлăшалла сирпĕтни çинчен каламастăп та ĕнтĕ. Тепринче тата, вăрман хушшипе малти позици еннелле кайнă чух, асар-писер бомбежка тапранчĕ те манăн кухньăна туртса пыракан ула кĕсрене вĕлерсе пăрахрĕ. Кĕсри çав тери ăслăччĕ, апат юлашкисене пăру пекех çиетчĕ... Питĕ шутсăр хĕрхентĕм. Шӳрпене боецсем патне вăхăтра çитерейменрĕм те, капитан мана уншăн çур сехет хушши тăн кĕртрĕ...

Анчах ку тата нимех те мар-ха.

Пуринчен ытла эпĕ виççĕмĕш ротă поварне, Вася Котлеткина, медаль пани çинчен илтсен хуйха ӳкрĕм. Ман пек телейсĕр çын тĕнчере урăх çук та пулĕ, терĕм хама хам... Малти позицире çапăçакансем медаль мар — темиçешер орден илсен те тĕлĕнмелли çук, ăна тивĕçлĕ вĕсем, анчах та ку... ку ман пекех повар вĕт! Ман пекех паранкă шуратса, концентрат пăтти пĕçерсе

пуранать! Хаш-пĕр енчен илсен, вăл манран каярах та тăрать, темелле. Сăмахран, вăл тĕрлĕ йышши «тефтелисене», «отбивнойсене», «беф-строгановсене» кутăн çаксан та, пĕçерме пултараймасть, шашлык çинчен ан та асăн. Анчах хăй çапах та медаль илнĕ — «За боевые заслуги». А мĕн заслуги пулнă тетĕр унăн? Пĕррехинче передовойĕнчен çурăм хыçне пушă термос çакса таврăнать-мĕн те, вĕт вăрманлă çырма урлă каçнă чух пĕр тĕмĕ айĕнче икĕ фриц лăпчăнса ларнине курах кайнă çак. Ну... тепĕр тыловик хăраса ӳкме пултарнă ĕнтĕ, мĕншĕн тесен фрицĕсем иккĕн, ку — пĕччен пулнă, анчах та Вася çухалса кайман. Карабинне йăпăр-япăр «наперевес» тытнă та, çав фрицсем патнерех шуса пырса, ухмаха ернĕ пекех кăшкăрса янă:

— Руки вверх! Хенде хох!..

Лешсем вара, ниçталла та тарса ӳкес çуккине кура, кĕрхи вĕрене çулçисем пек чĕтресе, аллисене çĕкленĕ те: «Гитлер капут, Гитлер капут... плен, плен...» — тесе мăкăртатма тытăннă.

Нимĕçсем хăйне нимех те тăваяс çуккине туйса, пирĕн Вася татах паттăрланса кайнă.

— Вставай! Снимай штаны! — тесе кăшкăрнă вăл.

Паллах, фрицсем вăл мĕн хушнине ăнланман, вара Вася вĕсенчен пĕрине ĕнсинчен тытса ура çине тăратнă та унăн йĕмне вĕçертсе чĕркуççи таранах антарса лартнă. Ана кура тепри хăех çавăн пек тунă.

Ăсне çитернĕ вара хăй, шельмăскер! Фрицĕсем çул çинче тарасран тунă вăл çавăн пек, хăйсен йĕмĕсемпех тăлласа лартнă вĕсене... Ну, вара иккĕшне те батальон штабне хăваласа пынă та, тепĕр эрнерен полк командирĕ ăна шăнкăрт кăна медаль тыттарнă! Леш фрицĕсем пирĕн командованине пит те кирлĕ сведенисем пĕлтернĕ, тет те, çавăншăн ĕнтĕ...

Мĕн тăвас тетĕн — телей!

Çакăн çинчен пĕлсен, тупата туршăн, темиçе кун хушши темле тĕтре ăшĕнче çӳренĕ пек çӳрерĕм эпĕ. Ма-ха çав телейĕн ман тĕле пулмалла пулман? Эпĕ те передовойне каятăп-çке, эпĕ те çав çулпах çӳретĕп! Тĕмĕ айĕнче çавнашкал тăнсăр фрицсем ларнине курнă пулсан, эп вĕсене хӳтерсе килме пĕлместĕмччĕ-и? Йĕмĕсене антарса кăна мар, эп вĕсен аллисене каялла çыхса, майĕсенчен вĕренпе кăкарса сĕтĕрсе килнĕ пулăттăм! Çук çав, телей çуках манăн, терĕм кăна вара.

Çакăн хыççăн вăхăт нумаях та иртмерĕ — ман пуç çине тепĕр хурлăх татăлса анчĕ. Пачах та кĕтмен çĕртен, çуллахи уяр кун юр çума тытăннă пекех пулчĕ вăл. Темĕн чухлĕ асап кӳчĕ мана...

Çуллахи наступлени пуçланас умĕн пĕр виçĕ эрне малтан пирĕн ротăна çĕнĕ санинструктор ячĕç. Тĕлĕнсе хытсах каймалла, çав тери хитре тутар хĕрĕччĕ вăл — Сахвине ятлăскер. Пĕвĕпе хăй пысăках та мар, анчах калама çук илемлĕ, тăп-тăп станлăскер. Ун пек хĕр эпĕ, тупата, нихçан та курман! Пит çăмартисем пан улми пек, тутисем пиçнĕ хăмла çырли тĕслĕ, куçĕ — шăп та шай хура çĕмĕрт, çунса кăна тăрать: çын çине пĕрре пăхсанах çунтарса, кĕллентерсе яма пултарать. Малтанхи хут курсанах мана та çавăн пек çунтарса ячĕ...

Ахальтен мар çав тепĕр чух: чĕрене приказ пама çук, теççĕ. Чăнах иккен! Ну, хăвăрах шухăшласа пăхăр-ха эсир: таврара кунĕн-çĕрĕн вăрçă кĕрлет, унта та кунта минăсемпе снарядсем çурăлаççĕ, тул çутăлнă вăхăтран пуçласа тĕттĕм пулса ларичченех пĕлĕтре çаханла «юнкерссем» явăнса çӳреççĕ — пуç çине пĕр-пĕр йывăр бомбă татăлса анасса кĕтсех тăр, пĕр самахпа — вилĕм сан хыççăн йĕрлесех çӳрет, анчах санăн чĕрӳ çав вăхăтрах кама та пулин ăс-тăна пăтратса ямалла, чуна вырăнтан хускатмалла юратса лартатъ!.. Мĕн тăвас тетĕн? Мĕнпе чаратăн ăна, мĕнле взыскани хуратăн ун çине? Тӳррипех калатăп: нимĕн те тăваймастăн! Хамăн хурлăхлă опыта шута илсе калатăп эп сире куна, мĕншĕн тесен манăн чĕре çавăн пек туса хучĕ те — нимĕнпе те чараймарăм эп ăна.

Кĕскен каласан, ман чĕре çав Сахвине пирки вутçулăмпах çунма тапратрĕ. Ниçта кайса кĕрейместĕп: унăн сăнĕ кăнтăрла та, каç та, хуран çунă чух та, боецсем валли передовойне апат леçме хырăмпа шуса кайнă чух та куç умĕнчех тăрать. Унăн шăпчăк юрри евĕрлĕ сасси те хăлхаран тухма пĕлмест. Ĕмĕрте те пулманччĕ манăн ун пекки! Хайхи, пирвайхи юрату тени тапранчĕ пулмалла ĕнтĕ...

Хăрушă япала иккен çав пирвайхи юрату!

Ĕçре те кансĕрлеме пуçларĕ мана вăл: пĕринче, ытлашши шухăша кайнипе, пĕр хуран пăтта çунтарса ятăм, тепринче купăста яшкине çăвара сыпмалла мар тăварласа лартрăм. Иккĕшĕнче те, паллах, старшинаран питĕ вирлĕ лекрĕ мана...

Пĕр кун иртет çапла, эрне те иртет... Манăн юрату вайланнăçемĕн вайланса, хĕрнĕçемĕн хĕрсе пырать, ăна ĕнтĕ халь тин нимĕнле вăй та чарма пултарас çук, пушар насусĕнчен шывпа сапсан та сивĕтес çукчĕ...

Анчах хам никама та нимĕн те шарламастăп-ха. Кама калатăн? Çынсем кулма тытăнасран та хăрамалла... Мĕн калĕç вĕсем кун çинчен пĕлсен?

— Ха! Повар хĕре юратса пăрахнă! Поварăн чĕри яшка пек вĕрет! Ха-ха-ха!..

Сахвинене хăйне те каламастăп, шикленетĕп: эп ăна юратни çинчен каланине хирĕç вăл хăр-хар! кăшкăрса пăрахсан, мĕн тăвас? Çĕр тĕпнех анса каяс пулать вара!.. Тусес ĕнтĕ майлăрах самант çаврăнса çитиччен, тетĕп. Çав вăхăтрах чĕре иккĕленсе те илет: ман çине вăл нихçан та çаврăнса пăхас çук пуль çав, ун пек хитре хĕр валли лейтенантсем те, темиçешер орденлисем те темĕн чухлех тупăнма пултараççĕ... А эпĕ кам? Эпĕ пĕтĕмпе те ротнăй повар кăна, Çапала Иванĕ, çитменнине манăн кăкăрăм та çап-çара, орден мар — пĕр-пĕр значок та пулин çук вĕт...

Çапах та шанчăка çухатас килмест: кам пĕлет, тен, унăн кăмăлĕ ытлашши хаярах та мар пулĕ, тен, ăна чиперех çаврма пулĕ? Майне, меслетне пĕлес пулать кăна... Анчах наступление мĕнрен, еплерех пуçлас-ши?

Шухăшларăм-шухăшларăм та, тавай-ха, куна тутлăрах çитерме тытăнас, эп хăйне юратни çавăнтан пуçларма пуçлатăр, терĕм. Ухмах мар пулсан—ăнланатех вăл ăна!

Тытăнтăм вара!

Кашнинчех, Сахвине ман кухньăна котелок çĕклесе пырсанах, эп ăна йăпăр-япăр, черетсĕр-мĕнсĕр ярса паратăп. Ыттисене панă пек-и тата? Ас ту! Çапалана хуран тĕпнелле аври курăнми пуличчен чиксе яратăп та чи çăрине ăсса кăларатăп, çара какай! Ăна котелок ăшнелле тунтерсен, çăпала хĕррипе шурпе çинче çиелтен ярăнса тăракан çăва ăсса илсе ярса паратăп. Ме, çи, çи те — эпĕ хăвна епле савнине сис, тетĕп хамăн ăшăмра.

Анчах... ой, çав «анчах» сăмаха нихçан та каламăттăм!

Тăрăшни кăлăхах пулчĕ вĕт, ахалех сая кайрĕ!

Пĕрре ярса патăм çавăн пек, тепре ярса патăм, чиперех çирĕ манăн савнă хĕр, анчах виççĕмĕшĕнче скан-

дал турĕ хучĕ çав! Хайне котелок тулли какай, çиелтен сап-сар çу ярса парсаттăм кăна, çав самантрах вăл сасартăк: «Эсĕ, прохвост, мĕн хăтланатăн, кам хушрĕ сана кун пек тума?» — терĕ. Малтанах ăнланаймарăм эпĕ, вăл мана мар, кама та пулин урăххине вăрçнă пек туйăнчĕ, анчах та котелокне ман сăмса патне илсе пырса хаярран силлесен, чухларăм вара...

— Эсĕ мĕншĕн мана ыттисенчен раснах çитерме тăрăшатăн? Ытти боецсенчен мĕнрен уйрăм эпĕ? Мĕншĕн эсĕ мана боецсен тӳпине катса паратăн? — тесе кăшкăрса тăкрĕ çак мана. Хĕрсе кайсах, çилленсех кăшкăрать! — Ас ту, ротă командирне пĕлтеретĕп те акă кун çинчен, тыткалĕ вăл сана... Эккей, тупăннă фокусник! — тет.

Алăри пăхăр çăпала шăнкăрт! тухса ӳкрĕ манăн...

Пыр та калаç эс унпа, э? Эп ăна хăйне савнипе пĕтĕм чунтан ыр тăвасшăнччĕ, анчах вăл уншăн... пăскăртма тытăнчĕ мана, ротă командирне каласcипе хăратма тапратрĕ. Вот вĕт тамаша! Пулать те этем çĕр çинче...

Ну ĕнтĕ, хăвăрах чухламалла, кун хыççăн манăн чĕрери пĕтĕм шанчăк пĕрхĕнсе тухса кайрĕ. Мĕн юратăвĕ пулма пултартăр ĕнтĕ çавăн хыççăн?

Шăла çыртрăм та нимĕн те чĕнмерĕм урăх.

— Çил-тăманлă кун çуратнă пуль мана анне, çавăнпа телей çук пуль манăн,— терĕм кăна.

...Анчах йăнăшнă иккен эпĕ. Çавăн пек хурлăхлă вывод тума ытлашши васкалă. Ытлашшиех телейсĕр çын пулман-мĕн эпĕ.

Телей куçа курăнса килмест, теççĕ-çке. Тĕрĕс каланă çавна. Манăн телей те ăнсăртран, пачах та кĕтмен çĕртен йăтăнса тухрĕ. Тĕлĕнсе каймалла!

Акă епле пулчĕ вăл...

Пĕрре, август уйăхĕн вĕçĕнче, пирĕн участокра наступлениллĕ çапăçусем пуçлансан виççĕмĕш кунĕнче, эпĕ, яланхи пекех, малти линири салтаксене апат çитерме кайсаттăм. Ну, окопсене чиперех çитрĕм ĕнтĕ, пурне те пĕрер черкке эрех ĕçтертĕм, какай яшки çитертĕм, унтан термоса çурăм çине майласа çакрăм та каялла кайма тухрăм. Пульăсем ман тавра сăпсасем пек сăрлатаççĕ, утма мар — пуçа çĕклемелли те çук.

Пĕр километр пек хырăмпа шуса кайсан, эп обстрел айĕнчен тухрăм та чиперех тăрса утрăм. Хăрамалли

нимĕн те çукчĕ халь, унта-кунта снарядсемпе минăсем çеç ўккелетчĕç...

Пыратăп ĕнтĕ утса, унталла-кунталла пăхкалатăп. Тип-тикĕс хире снарядсемпе бомбăсем сыснасем пекех чавса пĕтернĕ, кашни темиçе утăмрах воронкă, шăтăк та путăк тĕл пулать... Çапăçăвĕсем пит вăйлă пулнăччĕ çав ун чух, пирĕннисем фашистсене калама çук хытă тўнккерĕç!

Сасартăк çав уй варринче такам хама хушаматпа чĕннине илтех кайрăм:

— Черпаков! Черпаков!

Тĕлĕннипе тăпах чарăнса тăтăм та йĕри-тавралла пăха-пăха илтĕм... Никамах та курăнмарĕ. Мĕн ку, туйăнчĕ-ши мана? — тетĕп. Унччен те пулмарĕ, хайхи сасă каллех илтĕнчĕ:

— Черпаков!..

— Ива-ан! Повар!..

Халĕ уççăнах уйăрса илтĕм: хĕрарăм сасси. Анчах та кам, хăш енчен чĕнет — ниепле те уйăраймастăп...

— Кунта! Кунта кил! Часрах!..— тата тепĕр хут кăшкăрчĕ мана курăнман çын. Эп ăна шырама тытăнтăм, куçа чарса пăрахсах тавралăха ухтаратăп.

Ак тамаша! Пĕр воронкăран Сахвине пуçĕ курăнах кайрĕ. Чунтанах мана кăчăк туртать — кил, кил, тет...

Чĕререн вĕри шывпа сапнă пекех туйăнса кайрĕ. Пит-куç та пĕçерсе илчĕ, çурăм тирĕ те темшĕн сăр-сăрсăр... турĕ. Шуткă-и-мĕн: Сахвине мана хăй чĕнет! Эп ăна тинех кирлĕ пулнă!

Тăруках çунатсем шăтрĕç пулас манăн: вăшт кăна ыткăнса çитрĕм ун патне. Пăхатăп — тарăн воронкă тĕпĕнче икĕ аманнă салтак выртать, вĕсем патĕнче Сахвине тăрмашать...

— Ах, сана курни питĕ аван пулчĕ-ха ку! — терĕ вăл, ман çине шăтарас пек пăхса.— Вĕсем иккĕн, пĕри те утаймаççĕ, эп — пĕччен, ниепле те илсе çитерес çук вĕсене. Пĕрине санăн çĕклесе пымалла пулать. Ăнланатăн-и?

— Ăнланатăп,— терĕм ăна хирĕç,— саншăн пулсан, эпĕ тем тума та хатĕр, эсĕ çеç мана ним выранне те хумастăн, калаçасшăн та мар манпа...

— Ухмах! — лаплаттарса хучĕ çак мана, ырă сăмах калас выранне.— Маншăн мар куна, аманнисен пурнăçне çăласшăн тăвас пулать!

Каллех выранла пулмарӗ манӑн сӑмах. Чип-чиперех, ним сӑлтавсӑрах ухмах ятне илтрӗм. Хай ҫавантах мана ҫине-ҫине командӑсем пама тытӑнчӗ:

— Ҫак плащ-палаткӑна часрах сарса хур! Лайӑхрах сар! Ку салтакне пуҫӗнчен тыт! Хуллентерех! Купӑста пуҫӗ мар вӗт вӑл, этем пуҫӗ! Варт-вартах ҫавранкала, упа пек ан пул! Кай, ӑнаҫсӑр, санӑн аллусене йывӑҫран туна пуль!

Пӗтерет!..

Хама ҫакӑн пек хӑтарна пирки аптрасах ӳкрӗм, ниепле те вӑл хушнӑ пек тӑваймастӑп. Уншӑн вӑл мана тата хытӑрах хӑтӑрать...

Мӗн пулса ҫитетчӗ — пӗлместӗп, анчах ҫав вӑхӑтра пирӗн пуҫ ҫийӗпе сасартӑк фашистсен «мессершмичӗ» ҫил пек ыткӑнса иртсе кайрӗ. Аялтанах вӗҫсе иртрӗ— пӗр ҫӗр метртан та ытла мар пулӗ. Ку ҫав тери кӗтмен ҫӗртен пулнипе эпир, хамӑра такам пуҫран ҫапнӑ пек, воронкӑ тӗпне лӑпчӑнса лартӑмӑр...

Ҫапах та «мессер» пире асӑрхама ӗлкӗрчӗ пулмалла. Ик минут та иртмерӗ-и тен, вӑл калама ҫук хӑвӑрт вӗҫсе каялла ҫавӑнса пычӗ. Пирӗн тӗле ҫитсен, чӗпӗ тытакан хурчкалла пикировать турӗ те пулеметран шатӑртаттарчӗ. Пульӑсем воронкӑ таврашӗнче пӑрҫа пекех тӑкӑнчӗҫ. Эпир ку вӑхӑтра каллех ҫӗр ҫумне лӑпчӑнтӑмӑр...

Анчах та ӗҫ кунпа пӗтмерӗ-ха. Темиҫе минутран фашист ҫӑханӗ каллех таврӑнчӗ. Татах пикировать турӗ, татах пулеметран сапрӗ. Кӑшт тӑрсан, виҫҫӗмӗш хут атакӑларӗ пире!

Ӑнлантӑмӑр — ку «мессер», епле пулсан та, пуҫӗпех «хупласа хурасшӑн» пире. Лектересси лектерейместь хӑй, мӗншӗн тесен эпир кашнинчех воронкӑра вӑл вӗҫсе килнӗ еннелле йӑпшӑнатпӑр, пульӑсем тепӗр енне пырса ҫапӑнаҫҫӗ, анчах шӑтакран тухса каясси ҫинчен шухӑшламалли те ҫук — ҫавӑнтах ҫапса антарма пултарать.

...Вӑхӑт иртет, манӑн ӗнтӗ часрах ротӑна таврӑнса каҫхи апат хатӗрлемелле, Сахвине те пӑлханать, унӑн аманнӑ салтаксене хӑвӑртрах медпункта илсе ҫитерсе тыла ӑсатас пулать, анчах шуйттан «мессерӗ» пирӗнтен ҫаплах хӑпмасть, ҫаплах пыра-пыра тапӑнать!

Мӗн тӑвас? Ниҫта кайса кӗрейми тарӑхса ҫитрӗм ӗнтӗ. Май пулнӑ пулсан, тем туса тӑкаттӑм эсреле!

Аптрана енне, тавай куна персе парахас, терĕм... Карабин пур вĕт-ха манан! Пирĕн дивизире ун пеккисем пулкаланаччĕ, ахаль винтовкăранах ик-виç самолета çапса антарначчĕ. Ман карабин ыттисенчен кая-им? Е эп хам пеме пĕлместĕп-и? Хай, вырăссем калашле, попытка — не пытка! Часрах пăшала çаварса тытрăм та тытăнтăм çакна пеме... Пĕтĕм чĕререн тарăхса, шăла çыртса перетĕп! Пирĕн çине пикировать тума тытăнсанах, тĕллетĕп те — перетĕп, тĕллетĕп те — перетĕп. Пĕрре петĕм, иккĕ петĕм, виççĕ...

Аманнă салтаксенчен пĕри мана: ан пер пустуй, патронсене сая ан яр, пур пĕр нимĕн те тăваймастăн, сан карабину — зенитка мар вĕт, тет. Анчах вăл çапла каларĕ кăна, эп тăваттăмĕш хут персе ятăм та, сасартăк ним ăнланмалла мар япала пулса тăчĕ... Пиккене кĕнĕ «мессер» пирĕн пуçсем çийĕпе ши-и-и! шăхăрса иртсе кайрĕ те, эпир пытаннă воронкăран пĕр çĕр аллă-ик çĕр метр иртсен, сăмсипе çĕре жач! пырса тăранчĕ. Хура çулелле çĕкленчĕ, унтан хăрах çунатти çине тайăнса мук-мукăлчак туса илчĕ те çунма тапратрĕ. Çак пĕтĕм ĕç ик-виçĕ çеккунт хушшинчех пулса иртрĕ...

Ăнлантăр-и? Пире тарăхтарса çитернĕ «мессер» çĕре персе анчĕ те спичка коробки пекех çунма тытăнчĕ!

— Ваня! Мĕн туран эсĕ! — кăшкăрса ячĕ çав самантрах Сахвине.

— Курмастăн-им, персе антартăм-çке,— терĕм эп ăна хирĕç мăн кăмăллăн.— Кур, ав епле çунать...

— Ӳкрĕ-им? Ӳкрĕ-им? — хыпăнса ыйтрĕç аманнă салтаксем, воронка тулашĕнче мĕн пулса иртнине курма пултарайманнипе.

— Ӳкрĕ çав! Чул пекех таталса анчĕ! Ваня персе антарчĕ ăна! — хавассăн кăшкăрса ячĕ Сахвине.

Чухлăр-ха эсир: вăл мана «Ваня» терĕ!..

Тинех эпĕ Черпаков мар, Ваня пулса тăтăм!

Эпир воронкăран сиксе тухса çунакан самолет патнелле чупрăмăр. Анчах ытла çывăхах пыма шиклентĕмĕр: патронсем шатăртатса çурăлма тапратрĕç, хăй те кăвайт пекехчĕ. Ну, кăштах пăхса тăркаларăмăр Сахвинепе иксĕмĕр, унтан: «Мĕн шыранине тупрăн-и? Çав кирлĕ сана, çăхана!» тесе, хамăрăн аманнă салтаксем патне таврăнтăмăр та вĕсене батальона çĕклесе кайрăмăр.

Чӗре хамӑн ҫул тӑршшӗпех кӑкӑртан сиксе тухас пек тапса пычӗ. Пӗлетӗп-ҫке халь мӗн пулассине! Тинех ӗнтӗ мана орден лекет!.. Пӗр-пӗр медаль те мар — орден!

Такам систернӗ — ӑна пӗлместӗп, анчах та ҫав каҫхинех ман патӑма дивизи хаҫачӗн корреспонденчӗсем хашкаса чупса ҫитрӗҫ.

— Каласа пар, Черпаков юлташ, епле турӑн эсӗ ку паттӑр ӗҫе? — теҫҫӗ.— Питӗ тӗлӗнмелле вӗт-ха ку...

— А мӗн пит тӗлӗнмелли пур унта,— терӗм эп вӗсене хирӗҫ,— петӗм те — ӳкертӗм! Ӳкрӗ те — ҫунса кайрӗ, пӗтӗм ӗҫӗ те ҫавӑ ҫеҫ...

Унччен те пулмарӗ, хаҫатра манӑн сӑн йӑтӑнса тухрӗ. «Мессершмита» ҫапса антарнӑ гварди рядовойӗ Черпаков Иван», тесе ҫырнӑ аяла. Ҫавӑн хыҫҫӑн вара... эрне те иртрӗ, те иртмерӗ — мана дивизи штабне чӗнсе илчӗҫ те орден тыттарчӗҫ — «Отечественной войны II степени». Генерал хӑй тытса чӑмӑртарӗ ман алла:

— Маттур, Черпаков юлташ, малашне те ҫавӑн пек паттӑр пул,— терӗ.

— Служу Советскому Союзу! — терӗм эп ӑна хирӗҫ тулли кӑмӑлпа.

Эпӗ дивизи штабӗнчен ротӑна таврӑннӑ тӗле ман кухньӑ патне пӗр ҫирӗм ҫын ытла пухӑнса тӑнӑччӗ: ездовойсем, сапожниксем, ҫӗвӗҫсем, шорниксем, темиҫе повар — пурте мана саламлаҫҫӗ, алла тытса чӑмӑртаҫҫӗ... Вася Котлеткин, хайхи «За боевые заслуги» илни, кӑштах сыпса пынӑ пулмалла та, мана кӳпшек аллисемпе ыталаса илсе чуп тумах тапратрӗ:

— Молодец, Ванька! Спаҫҫипах сана, поварсен ятне манран та ытларах чапа кӑлартӑн, ӗмӗр манмӑп куншӑн! — тет хӑй.

Ыттисем пирӗн ҫине калама ҫук ӑмсанса пӑхса тӑчӗҫ...

Ҫав хушӑра Сахвине те пырса ҫитрӗ. Ӑна асӑрхасан, эпӗ хам пата пухӑннӑ тыловиксене юриех ӑс панӑ пек пултӑм:

— Ан кӳренӗр, тусӑмсем, эсир те кашниех орденлӑ пулма пултаратӑр, паттӑр пулӑр кӑна! Пирӗн Тӑван ҫӗршыв хӑйӗн паттӑрӗсене нихҫан та манмасть...

Сахвине ман ҫине ҫав тери ӑшшӑн пӑхрӗ. Иксӗмӗрӗн куҫӑмӑрсем ӑнсӑртран тӗл пулсан, вӑл ҫемҫен кӑна йӑл-л... кулса илчӗ.

Манăн пит çăмартисем кăвар пек пĕçерсе кайрĕç, чĕрем карт-карт-карт тапма тытăнчĕ.

— Юрататъ! Юрататъ халь вăл мана! Ахаль пулсан мĕншĕн çавăн пек пăхтăр-ха çын? Эх, чунăмçăм!..

Эп çавăнтах ун патне чупса пырса, никамран именсе тăмасăрах, ăна ыталаса чуп тăвасси патне çитрĕм. Юратъ-ха, ухмахланман. Сахвине вăрçă пуçланиччен пĕр эрне малтан качча кайнă пулнă. Фронта та вăл упăшкипе пĕрлех килнĕ-мĕн.

# ТИГР ЧĔЛХИ



Стрелковăй ротăра пĕр çулталăк ытла пурăнтăм эпĕ. Унтан пĕррехинче, кĕр енне, ман пата сасартăк хамăрăн писарь хашкаса чупса пычĕ те:

— Сана батальон командирĕ чĕнет! — терĕ. Тĕлĕнсех кайрăм... Мĕн тума кирлĕ пулнă-ши эп ăна? Эпĕ... командир та мар, строевик та мар, манăн пĕтĕм ĕç — çынсене тăрантарасси кăна... Мĕн хăямачĕ! Шикленнĕ пек те пултăм: мĕншĕн те пулин ĕнсе хыçса ярасшăн мар-и мана? Ун пек те пулмалла мар пек... Хамăн ĕçсене эпĕ яланах йĕркеллĕ туса пынă, орден илнĕ хыççăн пушшех примерлă пулма тăрăшнă...

Нимĕнле ответ та тупайманнипе, тӳсеймесĕр, писарьтен ыйтрăм:

— Ма чĕннине пĕлместĕн-и, тусăм?

Анчах та вăл, мана лăплантарас выранне, хăрах куçне хĕсрĕ те, аяккалла пăхса, хаштах сывласа ячĕ:

— Паллах ĕнтĕ, ырăшăн мар! Штаба унта пирĕн пеккисене мунча кĕртме кăна чĕнеççĕ... Жалобă панă пуль кам та пулсан.

— Ман çинчен нимĕнле жалобă та пулма пултараймасть,— пуçа пăркаласа илтĕм эпĕ.— Апат-çимĕç енчен ку таранччен никама та кӳрентермен!

— Кӳрентернĕшĕн кăна мар, тепĕр чух хăш-пĕрисене ытлашширех тутлă çитерме тăрăшнăшăн те лектерме пултараççĕ,— каллех куçне хĕссе илчĕ çак.— Илтнĕччĕ эпир кăштах...

Вăл мĕн пирки сăмах тĕкнине ăнланса, эп унпа урăх каласса та тăмарăм. Пĕрре çатăр-р! пăхса илтĕм те, саппуна хывса хурса, çи-пуça тӳрлеткелесе, бата

льон штабĕ вырнаçна çырма еннелле уттартăм. Хам вара çул тăршшĕпех пуçа çĕмĕрсе пытăм:

— Мĕншĕн чĕннĕ? Мĕн пирки? Нихçан та чĕнменччĕ-çке! Тен, чăнах та кам та пулин элеклесе панă ман çинчен?

Пĕр çирĕм минутран батальон штабĕн çĕр пӳртне кĕтĕм те, замкомбат умне пырса тăрса, хăюсăртараххăн рапортларăм:

— Капитан юлташ, эсир хушнă тăрăх гварди рядовойĕ...

Анчах вăл мана каласа пĕтерме памарĕ, урайĕнчи каска-пукан çине кăтартрĕ те:

— Лар,— терĕ.

Чĕре тинех кăшт лăпланчĕ... Эппин, нимĕн те хăрамалли çук! Начальник тӳрех ларма сĕнет пулсан, ятлама чĕнмен вăл, ырă ĕçпе чĕннĕ.

— Эсĕ, Черпаков юлташ, чаплă повар,—терĕ унтан замкомбат, мана нимĕçсен сигаретне сĕнсе,— ротнăй кухньăра кăна мар, ресторансенче те ĕçленĕ, çитмĕл те çичĕ тĕслĕ апат пĕçерме пĕлетĕн, теççĕ, хăвăн паттăрлăхна та çителĕклĕ кăтартрăн...

— Служу...— теме пуçланăччĕ эпĕ, анчах вăл мана пӳлчĕ:

— Эпир сана разведчиксем патне куçарасшăн, килĕшетĕн-и?

— Так точнă, килĕшетĕп! — терĕм эпĕ ăна хирĕç, ним шухăшласа тăмасăрах. Ара, хăвна çавăн пек мухтанă хыççăн епле хирĕçсе тăратăн-ха!

— Анчах та ас ту, вĕсене юрама пĕлес пулать вара, ун пек-кун пек пулсан, калăпăр, вĕсем заданирен таврăннă çĕре санăн апат сивĕнсе кайнă пулсан е ывăнса килнĕ çынсем валли пĕрер черкке хатĕрлесе лартман пулсан, вĕсем санăн сывлăхна пăсса хума пултараççĕ. Çакна яланах асра тытас пулать,— калаçăва хутшăнса асăрхаттарма тытăнчĕ штабри писарь.— Питĕ вĕри йĕкĕтсем вĕсем, разведчиксем...

Чухларăм: ку мана кăштах хăратма хăтланать, тăрăхласшăн манран, урăхла каласан, «на пушку» илесшĕн. Çавăнпа та тӳрех татса хутăм ăна хирĕç:

— Ничево, куркаланă хамăн пурнăçра,— терĕм.— Ытлашши хăравçă йăхранах мар, таçта ярсан та, тем хушсан та, аптрассăмах çук.

Йăпăрт кăна замкомбат çине пăхса илтĕм те, вăл кулкаласа ларнине курса, каллех писаре каларăм:

— Ас тăватăн пулĕ, пĕлтĕр «мессершмита» карабинран...

— Вăл санăн ăнсăртран пулнă,— парăнмарĕ писарь.

Ку вара мана тарăхтармаллипех тарăхтарса ячĕ! Хăй паттăр çын пулнă пулсан, татах калаçтăрччĕ хуть, атту хăй вĕт шĕпĕн пек кăна, çитменнине суккăр тата, куçлăхсăр тĕмĕ хыçне те тухса лараймасть, çапах та шăлне йĕрет...

— Эсĕ ху çаван пек «ăнсăртран» пĕр-пĕр самолета персе антар та — кайран калаç! — терĕм çавна, çилĕ килнипе.— Эсĕ мĕн мана разведчиксем патĕнче ĕçлеме йывăр пулассипе хăрататăн?

Тавлашсах каяттăм пулĕ те, замкомбат чарчĕ.

— Шанатпăр сана, шанатпăр, çавăнпа чĕнтĕмĕр...

Анчах эпĕ, хĕрсе кайнăскер, тата персе ятăм:

— Кирлĕ пулсан, эп хам та разведкăна кайса «чĕлхе» сĕтĕрсе килме пултаратăп!

Штабрисем ахăлтатсах кулса ячĕç.

— Ну, куна эс ытлашширех çавăрса хутăн вара, Черпаков юлташ... Загнул пăртак,— терĕ тахăшĕ.

Чăнах та, ку сăмахсем ман çăвартан ытла тăрук тухса кайрĕç ĕнтĕ, кăшт мухтаннă пекрех пулчĕ, анчах та манăн пĕрре каланă сăмахран каялла чакассăм килмерĕ.

— А мĕн? Пултараймастăп, тетĕр-и? Нипоччом та пултаратăп!

— Курăпăр ара, курăпăр, малтанах тавлашмăпăр, туман тиха пилĕкне ан хуç, тенĕ пек,— каллех сăмах тĕкрĕ писарь.

— Кайран, тен, разведчик та пулăн, анчах халь эс вĕсене лайăхрах апат пĕçерсе çитер-ха,— терĕ замкомбат.

— Есть!

...Çак калаçу хыççăн манăн чăнах та разведчик пулас, хама шанманнисене хăçан та пулин чăннипех кăтартса парассăм килсе кайрĕ.

«Эккей,—терĕм ăшăмра,—эпĕ повар пулса служить туна пирки мана чăн-чăн боец выранне те хурасшăн мар... Чимĕр акă, кăтартăп-ха сире хамăн пултарулăха!»

Çынни çаван пек эпĕ: лапка чухне — питĕ лапка, анчах хама чĕререн пырса тивертеççĕ-тĕк — нихçан та манмастăп ăна. Çаван чух батальон штабĕнче хамран тăрăхларах калаçнине те манмарăм вара, асра тытсах пурăнтăм...

...Разведчиксем патне куçсан, эпĕ чăн малтан вĕсем мĕнлерех çынсем иккенне сăнама тытăнтăм. Вĕсем кухньăна апат илме пырсан, кашнин çинех витĕр шăтарас пек пăхаттăм. Вĕсем хăйсем хушшинче калаçнисене пĕр сăмах сиктермесĕр итлеттĕм. Мана вĕсем пачах расна йышши çынсем, герой пулса çуралнăскерсем пек туйăнна-çке-ха!

Анчах пурне те палласа çитрĕм те, тĕлĕнмелли нимех те çук иккен... Ман пек йĕкĕтсемех, темелле: вăрçăччен пĕрисем заводра ĕçленĕ, теприсем колхозра — хăшĕ конюх, хăшĕ бригадир пулнă, пĕри тата темиçе çул хушши парикмахерскинче майрасен çÿçĕсене кăтралатса пурăннă-мĕн. Халь вара кашниннех кăкăр тулли орден та медаль, шăлкеме пек чăнкăртатаççĕ. Чăн та, задание тухса кайнă чух вĕсене пурне те старшинана парса хăваратчĕç, анчах ахаль чухне вара йăлтăртаттарса кăна çÿретчĕç çав...

Хăйсем çав тери чапа тухнă çынсем пулнă пулин те, пĕртте мăнаçланмастчĕç, пурте калама çук уçă кăмăллăччĕ. Разведкăран таврăнса çывăрса тăнă хыççăн пĕри купăс калать, теприсем хавассăн юрă шăрантараççĕ:

Была бы только ночка,
Да ночка потемней...

Ку юрра вĕсем пуринчен ытла юрататчĕç: каçĕ тĕттĕм пултăрах! Е тата хăйсем каçхине постра тăракан фрица сухари миххипе хупласа, сысна тушкине сĕтĕрсе килнĕ пек сĕтĕрсе килнине аса илсе кулаççĕ. Пĕтĕм тавралăх янăратчĕ çав вĕсем кулма тапратсан!

Пĕр уйăх хушшинче вĕсене икĕ хутчен наградӑсем пачĕç. «Чĕлхе» сĕтĕрсе килеççĕ — медаль туянаççĕ, тепре тупса пыраççĕ — орден. Тĕлĕнсе кăна пурăнатăп. Хăйсем те пит чарусăр хăтланатчĕç те ĕнтĕ... Пĕррехинче чип-чипер кăнтăр кунĕнче, çитменнине янкăр уяр, хĕвеллĕ кун, тытса килчĕç фашистсен пулеметчикне. Хăйне кăна мар, пулеметне те çĕклесе килнĕ. Ытти ни-

мĕçсем сиссе те юлайман çавна, пирĕннисем хамăран траншейăсене ытканса çитсен тин пеме тытăнна...

Анчах та эпĕ кăшт аяккалла сулăнтăм-ха. Манăн сире хам çинчен каласа памалла вĕт. Разведчиксемпе пĕрле пĕр тĕлĕнмелли ĕç туса хуни, «тигр чĕлхи» тытса килни çинчен каласа памалла.

...Çапла, пĕрре пирĕн йĕкĕтсем çавнашкал «ухутана» кайма хатĕрленнине сисрĕм. Сисрĕм те çав тери пăлханма тытăнтăм. Мĕншĕн, тетĕр-и? Мĕншĕн тесен эпĕ вĕсемпе пĕрле разведкăна кайма шутласа хунăччĕ. Пĕр енчен, манăн хайхи пĕркун штабра хама шанманнисене «сăмса шăлса» ямалла, тепĕр енчен, манăн пĕрпĕр боевой ĕç тăвас килекен пулса çитрĕ. Пĕрмай пăсланакан хуран кутĕнче тăни, тĕрĕссипе каласан, йăлăхтарса çитерет вăл...

Кăнтăрлахи апат валеçнĕ чухне эпĕ пĕринчен шăппăн кăна ыйтса пĕлтĕм:

— Кĕçĕр каятăр-и?

— Каятпăр,— терĕ вăл.

— «Чĕлхе» тытма-и?

— Точнă.

— Нумайăн каятăр-и?

— Пĕр çиччĕн-саккăрăн...

Эпĕ пĕтĕм кăкăрпа хаштах сывласа ятăм

— Сана мĕн тума кирлĕ ку? — ыйтрĕ разведчик.

— Так ахалех...

Хăрарăм хамăн чăн-чăн шухăшсене каласа пама. Аçтан-ха тӳрех: «Эпĕ те сирĕнпе разведкăна пыма шутлатăп», тесе калатăн? Хăварах пĕлетĕр, манăн должноçĕ çавăн пекрех-çке... Повар вĕт-ха эпĕ. Ĕне чĕлхи тĕлĕшпе пултаратăп ĕнтĕ, ăна тем тĕрлĕ те пĕçерсе пама пĕлетĕп: пăрçапа та, улма нимĕрĕпе те, çупа та, горчицăпа та, анчах тăшман «чĕлхи» тĕлĕшпе хамăн пултарулăха ку таранччен пĕрре те кăтартайман...

Çапах та, хăюлăх çитертĕм-çитертĕмех: апат валеçсе пĕтерсен, хурана часрах çуса тасатса лартрăм та тӳрех командир çĕр пӳртне чупрăм. Задание тухса каяс умĕн вăл тимлесех карттăна вĕренсе ларать-мĕн, ман çине çаврăнса та пăхмарĕ. Чăнах та çав, ăна çак вăхăтра мĕн тума кирлĕ пулнă повар?

Пĕр минут тăтăм алăк патĕнче, ик минут тăтăм, унтан пиллĕк те иртрĕ пулмалла... Чĕрем хамăн тăнк-тăнк-тăнк тăвать. А вăл ман çине куç хĕррипе те пăх-

масть. Вара эпĕ пĕтĕм строевой формăпа юсанса тă-тăм та:

— Лейтенант юлташ, ыйтма ирĕк парсамăрччĕ,— терĕм.

Тинех пуçне ман еннелле çаврăнчĕ çакă.

— Мĕн сана?

— Тĕрĕссипе каласан...

— Тĕрĕссипе кала çав!

— Тĕрĕссипе каласан, лейтенант юлташ, эпĕ кĕçĕр сирĕнпе пĕрле разведкăна пыма шутлатăп,— терĕм хай-хи. Хамăн чĕркуççисем çав самантрах сăр-сăр-сăр... ту-са кайрĕç. Ака ĕнтĕ, хайне çак ответлă вăхăтра килсе кансĕрленĕшĕн ку мана халех пăскăртса кăларса ярать, çиелтен тата пĕр виçĕ черетсĕр наряд шаплаттарса ху-рать, тетĕп. Пыр та типсе ларчĕ.

Анчах лейтенанчĕ пирĕн лайăх кăмăллă çынччĕ те — ун пек тумарĕ. Ман çине чăр-р... пăхрĕ, пĕр-ик ми-нут хушши пулĕ чĕнмесĕр ларнă хыççăн:

— Эсĕ мĕн, паян нормăран ытлашширех сыпмарăн пулĕ те? — терĕ.

— Никак нет, лейтенант юлташ, ытлашши мар, ха-мăн нормăна та çынна патăм. Ĕненместĕр пулсан, хуть те шăршласа пăхăр. Кĕрсен те, манран ыхра шăрши кăна кĕме пултарать, мĕншĕн тесен эп ăна мĕн пĕчĕк-ренпех юрататăп та ялан кĕсъере чиксе çÿретĕп...

— Апла пулсан, епле-ха эсĕ кун пек шухăш тыт-рăн?— каллех ыйтрĕ лейтенант.

— Мĕншĕн тесен манăн боевой ĕç тăвас килет! — персе ятăм эпĕ.

— А-а...— лейтенант ман çине пăхса сассăр кулса илчĕ. Куна курсан, мана чун кĕрсех кайрĕ. Пулчĕ хай-хискер, ман ыйтăва ахаль хăвармасть ку, тесе шухăш-ларăм саванăçлăн.

Анчах та саванма васканă иккен-ха эпĕ.

Лейтенант тата тепĕр хушă ним чĕнмесĕр пăхса лар-чĕ те çапсах хуçрĕ мана...

— Шухăшу аван, çапах та вăл шухăша пуçăнтан кăларса пăрах эсĕ,— терĕ.— Разведкăна çÿресси — по-вар ĕçĕ мар.— Эсĕ лучча эпир «чĕлхе» тытса тавраннă çĕре пĕркунхи пек ĕне чĕлхи шаритлесе хатĕрле, пĕр-кун мана вăл питĕ кăмăла кайнăччĕ...

Ку сăмахсем мана йĕп-йĕпе тара ÿкерчĕç. Халь çеç вĕри мунчаран тухнă пекех пулса кайрăм. Пĕтĕм ĕмĕт

таталчĕ вĕт манăн! Хапха юпи пек кăнт хытса тăтăм та нимĕн те калаймастăп.

— Ăнлантăн-и? — тесе ыйтрĕ лейтенант кăшт тăрсан, малтанхи пекех мана куçран пăхса.— Ăнлансах çитеймерĕн пулсан, тепĕр хут каласа пама пултаратăп, эп мăн кăмăлла çынах мар...

Сасартăк сисрĕм: манпа вăл хаяррăн калаçнă пек курăнасшăн, анчах хăйĕн куçĕсем пур пĕр кулса тăраççĕ. Çавна пула вара эпĕ тепĕр хут хăюланса кайрăм та хам ăшра мĕн пуррине çăтăр-çатăр каласа тăкрăм:

— Лейтенант юлташ, тархасшăн ман ыйтăва хирĕç ан пулăр, ан татăр ман кăмăла! Нивушлĕ вара манăн фронтри пĕтĕм пурнăç паранкă шуратсах иртсе каймалла? Эпĕ, мĕн, воин мар-и? Алла пăшал тытма пĕлместĕп-и? Акă, сăмахран, пĕр виçĕ уйăх каялла эпĕ «мессершмита» персе антартăм... Кирлĕ пулсан, эп хуть те мĕнле вут ăшне те кĕрсе кайма пултаратăп! Илсе кайăр мана разведкăна, тархасласа ыйтатăп. Кайран, тен, хăварах тав тăвăр мана!

Питĕ витĕмлĕ те ĕнентерӳллĕ каларăм пулмалла... Лейтенант мана куçран тепĕр хут шăтарас пек пăхса илчĕ те килĕшрĕ.

— Ну, юрĕ эппин,— терĕ,— илсе кайăп сана разведкăна, анчах ас ту, ун пек-кун пек пулсан...

Вăл мĕн каласшăн пулнине ăнланса, эпĕ ăна сăмахне пĕтерме те памарăм, пӳлсе хутăм:

— Çук, çук, Черпаков çине эсир чул стена çине шаннă пекех шанма пултаратăр. Анне ячĕпе тупа туса калатăп!

— Курăпăр, тенĕ суккăр çын...— кулса илчĕ лейтенант.

— Курăпăр çав! — кăкăра каçăртсах чеç патăм эпĕ.

Тепрер ик сехетрен эпир, маскировочнăй халатсем тăхăнса, гранатăсем илсе, автоматсем валли запаслăх дисксем чиксе, разведкăна кайрăмăр.

Вăрмантан тухса, малти окопсенчен нумай мала шуса иртрĕмĕр те юр çине ним палăрми пулса выртрăмăр. Сăнатпăр. Тĕттĕм пуличчен пирĕн тăшманăн ăçта мĕн пуррине пĕлмелле-çке-ха.

Чылай вăхăт иртрĕ. Унтан сасартăк, пачах кĕтмен çĕртен, нимĕçсен артиллерийĕ ухлаттарма тапратрĕ. Малтан эпир ку вăхăтлăх артналет çеç пулĕ, тесе шутланăччĕ, анчах та вĕсем, çĕр çăтманскерсем, чăн-чăн

артподготовка пуҫласа ячӗҫ. Малти лини тавращӗнче снаряд хыҫҫӑн снаряд ҫурӑлать, осколоксем шӑхӑраҫҫӗ кӑна, малалла кайма мар, пуҫа ҫӗклемелли те ҫук.

— Ырра мар ку, ахӑртнех, наступлени тӑвасшӑн пулмалла,— терӗ манпа юнашар пыракан боец.— Пулмарӗ кӗҫӗр разведкӑ!

— Черпаков айӑплӑ,— хушса хучӗ тепри,— урӑх никам та мар.

— Мӗншӗн эп айӑплӑ пулам? — тӗлӗнтерчӗ ку мана.

— Илтмен-им, тухман ҫын тухсан, яланах тӑман тухать, теҫҫӗ.

Ана хирӗҫ лайӑх кӑна тавӑрса хурасшӑнччӗ те эпӗ, вӑхӑт пулмарӗ, ӗҫсем вӗриленсе кайрӗҫ. Сулахай енчен пирӗн ҫинелле икӗ танкпа виҫӗ самоходкӑ килни курӑнчӗ. Ҫӗр ҫӗмӗрсе, тупписенчен пере-пере ыткӑнса килеҫҫӗ. Унччен те пулмарӗ, вӗсем хыҫҫӑн шур юр ҫине кӑткӑ пек пехотӑ тапса тухрӗ.

— А ну, ребята, держись! — тесе кӑшкӑрчӗ пирӗнтен маларах выртакан лейтенант.

Халь ку иртнӗ япала ӗнтӗ... Ҫавӑнпа та пытармасӑрах калама пулать: малтанхи самантсенчех ҫамка ҫине ай-вай сив тар тапса тухрӗ. Хӑрушӑ пулса кайрӗ. Епле пулсан та, хӑнӑхман-ҫке эпӗ. Танкӗсем те ыткӑнса килеҫҫӗ, самоходкисем те килеҫҫӗ, пехоти те чупать... Пурте сан ҫинелле переҫҫӗ, сана таптаса лапчӑтасшӑн, сан кӗлеткӳне пульӑсемпе шӑтарса ала пек туса хурасшӑн! Акӑ эс ҫак самантра чип-чипер пӑхса, сывласа выртатӑн, анчах самантранах санӑн кӗлеткӳ пӗҫермен отбивной катлет пек пулса выртма пултарать...

Анчах нумая пымарӗ ку. Юлташсем тӑшман еннелле ним хускалмасӑр пӑхса выртнине куртӑм та лӑпланнӑ пек пултӑм. Ҫумри гранатӑсене, унтан автоматӑн затворне тӗрӗслесе илтӗм, пеме лайӑхрах пултӑр тесе майланса выртрӑм.

Фашистсем ҫывхарсах килеҫҫӗ. Инҫе те мар ӗнтӗ вӗсем, пулсан пулӗ пӗр тӑват ҫӗр метр. Асӑрхарӑмӑр: ӳсӗр вӗсем! Уҫӑлса ҫӳреме тухнӑ пекех килеҫҫӗ, пӗшкӗнмеҫҫӗ те! Пӑлхатса янӑ йытӑ кӗтӗвӗ пекех шавлаҫҫӗ тата — тем шуйттанӗ кӑшкӑраҫҫӗ...

— Психически тӑваҫҫӗ! — кӑшкӑрчӗ лейтенант.— Эп командӑ париччен никам та ан перӗр! Ҫывӑхарах килччӗр!

Эпир ĕнтĕ пӳрнесене спусковой крючоксем ҫинчех тытатпăр, хуть те хăш самантра та пеме пуҫлама хатĕр... Анчах пересси пулмарĕ. Сасартăк пирĕн хыҫри вăрманта «катюшă» юрласа ячĕ: кĕмсĕр-р... кĕмсĕр-р... Тупăсем ухлатрĕҫ. Пĕри, тепри, вуннă, ҫирĕм! Ах, тапранчĕ, ах, тапранчĕ! Пĕр хушă хамăр умра эпир вутпа ҫулăм ҫеҫ куртăмăр. «Катюшă» снарячĕсем айне пулнă фашистсем вĕри ҫатма ҫине хунă чĕрĕ картăшсем пекех ашаланма тытăнчĕҫ.

Хыҫалтан тата темиҫе залп пани илтĕнчĕ.

— Ҫунать! Ҫунать, проклятăй! — кăшкăрса ячĕ манпа юнашар выртакан боец, сулахаялла кăтартса.

Пăхрăм та курах кайрăм: пирĕн еннелле килекен пĕр танк ҫурта пек ҫунать, тепри хăяккăн, ним хускалмасăр ларать... Иккĕшĕ те пиҫнĕ! Самоходкисем каялла тараҫҫĕ, вĕсем тавра унта та кунта пирĕн снарядсем ҫурăлаҫҫĕ. Акă, малти чаранчĕ, лекрĕ пулмалла ăна, иккĕшĕ вара, гусеницисемпе юра сирпĕнтерсе, курăнми пулчĕҫ...

— За мной! — хыттăн команда пачĕ те лейтенант, юр ăшĕнчен сиксе тăрса, танксем патнелле чупрĕ. Эпир, паллах, ун хыҫҫăн...

— Пулать пирĕн «чĕлхе»! — чупнă ҫĕртех кăшкăрчĕ лейтенант.

— Пула-ать! — кăшкăрчĕ ун хыҫҫăн тахăшĕ.

Пĕр ҫĕр метр пек юлсан, ҫунман танкран пирĕн ҫинелле пулеметран сапрĕҫ. Пирĕн икĕ юлташ ҫавăнтах ӳкрĕҫ. Вĕсене иккĕшне те урисенчен тивнĕ иккен.

— А-а, эсир капла-и? — тарăхса кайрăмăр эпир. — Ну, тăхтăр!

Пирĕн телее, ҫывăхрах пысăк лупашка пулнă-мĕн, танкран тем чухлĕ персен те, пĕр пульă та лекес ҫук унта. Аманнисене часрах ҫавăнта вырнаҫтартăмăр та ҫунса кайнă танк хӳттипе малалла шума тытăнтăмăр. Перкелерĕҫ-перкелерĕҫ фрицсем, анчах нимĕн те тăвайманĕҫ пире.

— Ну, халь пĕтĕмпех пулчĕ, — терĕ лейтенант, ҫунăк танк ҫумне пырса тăрсан. — «Тигра» йĕри-тавра 9 метр хушши — «мертвое пространство», унта нимĕнле хăрушлăх та ҫук. Шалта ларакансене туртса кăларасси ҫеҫ юлчĕ. Вĕсене ҫунтарса янинчен усси ҫук, пире «чĕлхе» кирлĕ!

Пурте шухăша кайрăмăр... Мĕн тăвас? Ахаль чĕн-

нипе танкран тухас çук-çке-ха вӗсем, çываха пыма та кансӗртерех — пулемечӗ ӗçлет вӗсен...

— Ничево, çиччас!— терӗ пӗр боец.

Çавантах калпак пысӑкӑш юр чӑмӑркки туса хӳтлӗхрен сиксе тухрӗ те леш танкӑн пахмалли шатӑкӗнчен пӗррех шаплаттарчӗ.

— Килӗр кунта-а!..

Темиçе самантран эпир танка йӗри-тавра сырса илтӗмӗр. Автоматсем, гранатӑсем хатӗр. Ним те чӗнместпӗр. Минут иртет, иккӗ, виççӗ. Унтан танкӑн çӳлти люкӗ е-ерипен çӗкленме пуçларӗ. Пирӗн лейтенант вӑшт танк çине хӑпарса тӑчӗ... Люк пӗр чышкӑ кӗмелӗх уçӑлсанах вӑл унта йӑпӑрт çеç «Ф-1» граната чиксе хучӗ.

— Кӗмсӗ-ӗрт! турӗ те шалта, тӗтӗм палкаса тухса кайрӗ...

Халӗ эпир пурте танк çине хӑпарса тӑтӑмӑр. Лейтенант люка кӑшт кӑна уçса: «Выходи!» тесе кӑшкӑрчӗ. Анчах ответ пулмарӗ. Вара эпир люка пӗтӗмпех уçса, çӳлте ларакан фрица тулалла туртса кӑлартӑмӑр. «Чӗлхе» пулма юрӑхсӑр иккен вӑл — чунӗ тухнӑ. Иккӗмӗшне сӗтӗрсе кӑлартӑмӑр—вӑл та сывламасть. Пахатпӑр — аялта виççӗмӗшӗ — водитель, тӗтӗмпе чыхӑнса, авкаланса ларать. Тумтирӗ те çунма тытӑннӑ унӑн. Йӑпӑр-япӑр юр çине туртса кӑларса пӑрахрӑмӑр та çакна — тытӑнтӑмӑр йӑвалантарма, пӑс кӑна тухса тӑрать. Шуйттан! Хӑрӑлтатрӗ-хӑрӑлтатрӗ те лӑпах шӑпланса выртрӗ, ним пӗлми пулчӗ. Ак инкек! Мӗнле тӑна кӗртес кӑна?

Аса илсех кайрӑм: ман кӗсъере нашатырнӑй спирт пурччӗ, кухньӑра сӗрӗм тивес-тӑвасран эп ӑна яланах хам çумра тытнӑ.

— Халех! — терӗм,— калаçакан пулать вӑл манӑн!

Пӗрре шӑршлаттартӑм çак фрица, иккӗ шӑршлаттартӑм, пуçне юрпа сӑтӑркаларӑм та ,куçне уçрӗ хайхискер. Чӗрӗлчӗ пирӗн «чӗлхе»!..

Эпӗ çавӑн пек тӑрӑшнӑ вӑхӑтра ыттисем танка пур енчен те пӑхса, тӗрӗслесе тухнӑ иккен.

— Ку урапапа хамӑр пата кайсан аванччӗ те ӗнтӗ...— терӗ тахӑшӗ.— Пит чаплӑ пулӗччӗ те...

— А мӗн? Кайма та пултаратпӑр,—терӗ лейтенант, ку шухӑша çийӗнчех ырласа.

Нумай та шухӑшласа тӑмарӗ вӑл. Эп чӗртнӗ нимӗçе хӑйӗн выранне кӗрсе лармаʼ хушрӗ, хӑй те унпа пӗрле

кĕчĕ. Унта вăл таталнă темле пралуксене сыптаркаланă та — танк хускалчĕ кайрĕ! Эпир саваннипе «урра» кăшкăрса ярсах хăпарса лартăмăр танк çине.

Анчах ытла саванмаллах пулман-ха. Пирĕн вĕт хамăрăн батарейăсем çинеллех пыма тўр килнĕ-çке. А вĕсем пĕр залп парсанах пире танкĕ-мĕнĕпех сывлăшалла сирпĕнтерме пултарнă. Çавăнпа та эпир тутăрсене кăларса сулма тытăнтăмăр.

— Паранатпăр! — тетпĕр ĕнтĕ...

Унччен те пулмарĕ, çакна хыçалтан нимĕçсем асăрхарĕç пулмалла та вĕсем те тупăсенчен пеме тапратрĕç. Хамăрăннисем çине те шансах каймастпăр, кĕç-вĕç тўнклеттерме тытăнма пултараççĕ. Лару-тăру, хай каларăш, пит те кăткăсланмалла пулса тăчĕ пирĕн!

Юрать, лейтенант ăс çитерчĕ.

Малти люка уçрĕ те вăл:

— Кузькин, Черпаков, Миронов! Халех сиксе анса танк умĕн чупăр!

Сиксе антăмăр та, вăл хушнă пек, танк умĕн ыткăнса пыма тытăнтăмăр: çĕлĕксемпе суллатпăр, кăшкăратпăр. Танк пирĕн хыççăн чăнкăртаттарса пырать...

Мĕн тетĕр эсир? Чип-чиперех çитрĕмĕр вĕт хамăр пата! «Чĕлхе» те пулчĕ пирĕн, «тигр» та тытса пытăмăр. Таврара кам пулнă — пурте чупса тухрĕç пире хирĕç. Çав тери шăв-шав тапранса кайрĕ. Мĕнле кăна ырламарĕç пуль пире!

Халăх хушшинче шăпах батальон писарьне асăрхарăм та, вăл пĕркунне хамран тăрăхласа калаçни аса килсе кайрĕ. Тўрех утса пытăм та çавăн патне:

— Куртăн-и? — терĕм мăн кăмăллăн, пĕрре танк çине, тепре вилнĕ çын тĕслĕ пулса кайнă фриц çине кăтартса.

— Куратăп-çке, — терĕ вăл именерех. — Маттур, маттур эсир... Ним каламалли те çук урăх...

— Тоттă çав! А эс мана: разведчика пултараймастăн, терĕн пĕркун. Çапала Иванĕ тем тума та пултарĕ вăл, хăш-пĕрисем пек мар!

Писарь тек нимĕн те калаймарĕ...



Пулаççĕ тепĕр чух этем пурнăçĕнче çавăн пек мыскараллă кунсем...

Ирхине чип-чиперех, ырă кăмăлпах варантăн, мĕншĕн тесен кĕçĕр питĕ лайăх çыврăнă эсĕ: ни усал тĕлĕксем курман, ни пăрça-хăнкăла тавраш̆ĕ çырта-çырта тарăхтарса пĕтермен сана çĕр каça, анчах çапах та, тăнă-тăманах кўренмелли сиксе тухать те, вара каç пуличченех тупăнса пырать мĕн те пулин. Инкек çине синкек, йĕпе çине сапа!

Хĕрĕх виççĕмĕш çулхи сентябрь уйăхĕнче, Днепр патнелле çывхарса пынă чух, эпир кашни кунах çирĕмвăтăр километр малалла каяттăмăр. Кăшт, темиçе сехетлĕхе, чаранса тăратпăр, лашасене кантаратпăр, хамăр çерçи ыйхине çыврăса илетпĕр те каллех — атя! пошол! Малалла, хĕвеланăçнелле! Ĕретлĕн апат пĕçерсе илме те май килместчĕ час-часах. Пĕçерни те нумай хутчен харама кайрĕ: çиекен çук, пурте таçта малта, тăшмана хăвалаççĕ. Хуса çит-ха вĕсене! Хамăр пĕрмай вăрманпа пыратпăр тата, çулĕсем ним латти çук...

Пĕррехинче çанталăк калама та çук пăсăлса кайрĕ. Каçалапа кăвак тўпене кивĕ салтак шинелĕ тĕслĕ пĕлĕтсем хупласа илчĕç, çил тухрĕ, çумăр кастарма тытăнчĕ. Часах вăрманта пăч-тĕттĕм пулса ларчĕ, çамкаран тукмакпа пырса çапсан та — çапаканне палласа юлас çук. Пирĕн обоз чарăнса ларчĕ. Çакăнтах çĕр выртатпăр, терĕç.

Ну, мĕнех ĕнтĕ, выртмалла-тăк—выртмалла, пĕччен мар, халăхпа. Эпĕ хамăн кĕсрене тăвартăм та кухньă урапинчен кăкарса ута патăм. Хам плащ-палаткăпа пĕркенсе хуран çумне тайăнтăм... Паллах ĕнтĕ, тĕлĕрсе

кайнă. Тул çуталма пуçланă чух вăранатăп та — манăн кухньă патĕнче... кĕсре çук! Ак тамаша! Унталла пăхрăм, кунталла — ниçта та курăнмасть. Часрах сиксе тăр та — шырама. Обоз тăрăх чупса тухрăм (ман кĕсре камăнне те пулин утă вăрлама кайман-ши, тесе) — çук! Çынсенчен ыйткаласа пăхрăм — никам та курман. Апайтурух! Пĕтетĕп вĕт капла, пĕр-пĕчченех тăрса юлма пултаратăп, тетĕп, мĕншĕн тесен ыттисем лашисене кӳлме те пуçларĕç ĕнтĕ. Пĕтĕм пит-куç пĕçерсе кайрĕ. Шуткă-им çак сĕм вăрманта пĕччен юлма? Çынни эпĕ хăраканскерех мар, çапах та шикленмелле: ку таврара нимĕçсен сапаланчăк ушкăнĕсем нумай çӳреççĕ, текен хыпар пурччĕ. Ăçталла та пулин тарса тухмалли май шыраççĕ, тет. Сасартăк çавăн пеккисене тĕл пулсан? Çук, çук, халăхран ним тусан та уйрăлма юрамасть...

Хашкакан пуличченех чупса шыраса çӳрерĕм кĕсрене. Хамран хама тар шăрши кĕрекен пулса çитрĕ. Сахалтан та пĕр пилĕк километр чупрăм йĕри-тавралла. Çук!.. Йĕп пекех пулнă ман кĕсре!

Обоз патне каялла пырса тухрăм та юлташсене ӳкĕтлеме тытăнтăм:

— Тархасшăн, хăшĕ те пулин ман кухньăна çаклатса кайăр!

Ӳкĕте кĕрекен никамах та пулмарĕ. Хамăрăн та йывăр, лашасем ыванна, теççĕ. Хăвăн лашунах шыраса туп, ниçтах та кайман-тăр вăл, тăрать пулĕ-ха пĕр-пĕр тĕм хыçĕнче...

Шалт аптраса ӳкрĕм. Хай каларăш — ни туди, ни сюди. Ывăнса çитнĕскер, пĕр тунката çине лартăм та шухăша кайрăм. Мĕн те пулин шухăшласа тупасах пулать-çке!

Çав вăхăтра обоз патне хамăрăн полк почтальонĕ, шĕвĕр сăмсаллă, хĕп-хĕрлĕ сăн-питлĕ, яланах хаваслă Вакула, юлан утпа çитсе тăчĕ.

— Ăçтан килетĕн, тусăм? — тесе ыйтрăм çакăнтан.

— Тылран килетĕп,— тет.

— Çул çинче, ăçта та пулин, лаша курмарăн-и?

— Лаша нумай курнă эпĕ, ак халь те обозĕпех куратăп,— кулса илчĕ Вакула.

— Çук, эпĕ хамăн лаша çинчен ыйтатăп. Çĕрле вĕçерĕнсе кайнă, эсрелĕ, хăмăчĕ-йĕнерчĕкĕпех... Аптрал халĕ...

Вакула самантлăха шухăша кайнă пек пулчĕ, сăмси вĕçне кăтăрт-кăтăрт хыçса илчĕ те, манран:

— Çÿренскер, хушка çамкаллăскер-и? Хăмăчĕ çĕнĕ, сар сăранпа витнĕскер... Çапла-и? — тесе ыйтрĕ.

— Тĕп-тĕрĕс! Çапла! — саванса кайрăм эпĕ.— Хăш тĕлте куртăн эсĕ ăна? Инçе-и?

— Ытла инçех мар, пулсан пулĕ пĕр километр. Çырмара, тăрăхла уçланкăра, курăк çисе çÿрет...

Чун кĕрсех кайрĕ мана. Вакуларан тек ыйтса та, унпа калаçса та тăмарăм. «Тавтапуç, тусăм, çăлтăн эс мана, ĕмĕрне те манмăп куншăн», терĕм те тÿрех çул тăрăх тыл еннелле ярăнтартăм. Теприсем кросра та ун пек чупмаççĕ пулĕ. Хирĕç пулакансем, тĕлĕннипе, каялла çаврăна-çаврăна пăхаççĕ ман çине.

— Ухмаха ернĕ-им ку? — тенине темиçе хут та илтрĕм эпĕ.

— Дезертир мар-и, фронтран тармасть-и? — терĕ тата пĕри.

Анчах вăл маншăн халĕ пур пĕр мар-и? Хуть те мĕн калаччăр ман çинчен, çăва патне, манăн пĕр ĕмĕт: часрах хамăн кĕсрене тупса кÿлесчĕ те юлташсенчен юлас марччĕ!

Акă, çул сулахаялла пăрăнчĕ, акă вăл çырманалла анать. Акă тăрăхла уçланкă... Ăçтарах çÿрет-ши ман кĕсре? Ну, тытсассăн пĕрре паратăп ĕнтĕ эп ăна, вĕрентетĕп çĕрле хуçана пăрахса тарма! Нумайччен ас тăвĕ паянхи куна.

— Машка! Машка!..

Унталла чупса кайрăм, кунталла, лерелле... Чĕнетĕп, шăхăратăп, кăшкăратăп. Ман сасса илтсен, вăл яланах кĕçенсе яраканччĕ. Анчах та халь нимĕнле ответ та пулмарĕ. Ниçта та çук ман лаша. Пĕр сехет пуль ухтартăм çырмара — усси пулмарĕ, тата ытларах ыванса çитрĕм кăна. Те такам тытнă ăна, те хăй таçталла кĕрсе кайнă. Мур пĕлет-и...

Çуранах танккарăм обоз тăнă çĕрелле. Çул тăршшĕпех кухньăна камран та пулин кăкарса малалла илсе каясси çинчен шухăшласа пуçа çĕмĕрсе пытăм, анчах патне çитрĕм те — пат! — юпа пек хытса тăтăм. Обоз çук та иккен, тапранса тухса кайнă, пĕр ман кухньă çеç тăрать сĕм вăрманти шăтăк-путăк çул çинче.

Мĕн тумалла халь?.. Тарăхса, кÿренсе, пĕтĕм чĕрепе вĕчĕхсе, макăрса ярас патнех çитрĕм.

— Кӗтес пулать ӗнтӗ тылран пӗр-пӗр машина килессе. Унсăрăн ниçта та хусканаяс çук...

Кухньă çине хăпарса лартăм та, ним тума аптранă енне, чӗлӗм мăкăрлантарма тытăнтăм. Чыхăна-чыхăна, пирус хыççăн пирус туртатăп. Паллах, эпӗ кухньă çине те, пур продуктăсем çине те ал сулса, обоза çуранах хăваласа çитме пултарнă, анчах та боевой пурлăха пăрахни салтакшăн каçармалла мар çылăх, чăн-чăн преступлени пулать-çке, юрамасть ун пек тума.

— Салам, Çапала! — тени хăлхана кӗрсе кайрӗ сасартăк. Пуçа çӗклесе пăхрăм та хам умах юлан утсемпе икӗ боец çитсе тăнине куртăм. Пӗрин пуçне бинтласа лартнă, тепри сулахай аллине çыхса мăйӗнчен çакса янă. Малти линирен таврăнаççӗ курăнать. Лашисем вара калама та çук тӗреклӗ, слонсем пекех, хӳрисем кăна мулкачăнни евӗр кӗске. Тӳрех тавçăрса илтӗм: вырăс лашисем мар кусем, леш «брабансон» тенисем, Бельгири йăх.

— Мӗн пуçна усса ларатăн? — ыйтрӗ манран вӗсенчен пӗри.

— Хурлăха лекрӗм-ха,— терӗм ăна хирӗç.— Хуть те, аптранă кăвакал пек, кутăн кайса чăм.

— А мӗн пулчӗ вара ун пекех?

— Ларса юлтăм çак вăрманта пӗр-пӗччен, никам пурăнман утрав çинчи пек...

Эпӗ вӗсене хамăн инкек çинчен тӗпӗ-йӗрӗпе каласа патăм. Ман калава итлесе пӗтерсен, вӗсем пӗрре ман çине, тепре пӗр-пӗрине куçран пăхса илчӗç. Пӗр хушă нимӗн те чӗнмерӗç, унтан:

— Юлташа пулăшас пулать пулӗ? — терӗ пӗри теприне.

— Эпӗ те çавăн пекех шутлатăп,— ответ пачӗ лешӗ.— Парас ăна çак фриц лашисене, кӳлсе кайтăр...

Ой, çак сăмахсене илтсен, манăн чӗре мӗнле тапма тытăннине илтесчӗ сирӗн! Савăннипе ним тума пӗлеймерӗм, ниçта кайса кӗреймерӗм çав!

— Чăнах-и? Чăнласах калатăр-и, юлташсем?!

— А мӗн, чăн пулмасăр тата! — терӗ аллине мăйӗнчен çакнă боец.— Эпир вӗсене çул çинче тытса утлантăмăр, пирӗн мар вӗсем. Хамăрăннисем нимӗçсен пӗр-пӗр обозне аркатсан тарнăскерсем пулмалла. Куран, хăматсемпех... Тыт та — кӳл! Медсанбата эпир кунтан çуран та çитме пултаратпăр, пирӗн урасем сывах вӗт.

Вӗсем пӗр харӑсах лашисем ҫинчен сиксе анчӗҫ.

— Ну, тем пысӑкӑш спаҫҫипа сире, тӑвансем!

Ҫав тери тав тӑвас килсе кайрӗ манӑн вӗсене. Тем кӑларса парӑттӑм!

— Хырӑмсем выҫӑ мар-и сирӗн? Манӑн кӑлпасси те, консервӑ та пур, пыра чӳхемелли те тупӑп,— тесе сӗнтӗм ҫаксене.

— Кӑшт ҫырткаласан кансӗрлесех каймасть пулӗ,— килӗшрӗҫ вӗсем.

— Халех хӑналатӑп!

Лашасене йӑпӑр-япӑр кӳлсе тӑратрӑм та кухньӑ ҫумне ҫыхнӑ ещӗкрен мӗн пуррине пурне те туртса кӑлартӑм.

— Ҫийӗр, юлташсем, ӗҫӗр, сирӗншӗн пулсан нимӗн те шел мар! Эсир мана ҫав тери пысӑк хурлӑхран хӑтартӑр вӗт...

Тепӗр ҫур сехетрен боецсем ерипен тылалла уттарчӗҫ, эпӗ кухньӑ ҫине хӑпарса лартӑм та тилхепене тытса карт! туртрӑм.

— Нно, пошол! — терӗм. Ши-и! шӑхӑртӑм тата.

Лашасем... вырӑнтан та хускалмарӗҫ. Хӑлхисене епле урлӑ ярса тӑнӑ — ҫаплипех тӑраҫҫӗ, хӑнк та тумаҫҫӗ.

— А ну, трогай! — тесе кӑшкӑртӑм та тепӗр хут, каллех тилхепене кӑрт-карт турткаласа илтӗм.

Пур пӗр хускалмаҫҫӗ! Мӗн хӑямачӗ! Мӗнле саботаж ку? Нивушлӗ гитлеровецсем хӑйсен лашисене те фашистла воспитани панӑ — совет сыннисене хирӗҫ пымалла? Апла пулсан, эп сире халех ак урӑхла воспитани паратӑп!

Ҫавӑнтах пӗр лайӑх кӑна хурама туратти хуҫса илтӗм те ҫурӑмӗсем тӑрӑх темиҫешер хут сӗвӗнтертӗм. Тӑпӑрт! анчах тапса сикрӗҫ хайхискерсем. Вырӑсла пӗлмен пирки вырӑнтан хускалман иккен вӗсем. Анчах патака часах ӑнланса илчӗҫ.

Ну, пыратӑп ӗнтӗ вӑрманпа... Пӗчченех. Ни малта, ни кайра никам та ҫук. Шӑп. Ҫапӑҫу кӗрлевӗ таҫта малта, питӗ инҫетре илтӗнет. Тен, вунӑ ҫухрӑм та пулӗ. Фрицпа Ганса хӑвалатӑп та хӑвалатӑп. (Лашасене ҫавӑн пек ятсем патӑм эпӗ.) Кайсан-кайсан пӗр уҫланка тухрӑм та сасартӑк хамран сылтӑм енче ҫав тери тӗлӗнмелле япала курах кайрӑм...

Ман еннелле пĕр аллипе хутаç çĕкленĕ, тепĕр аллипе макла пуçла ĕне çаватна старик утса килет, ун хыççан виçĕ нимĕç утаççĕ... Чан кайри — винтовкапа, анчах вал ăна хул пуççинчен çакман, кĕпçинчен тытса сĕтĕрсе пырать.

Мĕн мурне пĕлтерет ку япала? Виççĕн пĕр старике конвойласа пыраççĕ-и? Ахартнех, вал партизан пулĕ?.. Самах майан каласан, вĕсем мана та тытас, тейĕç?

— Ну, çук, шалиш... Чĕррĕнех паранассам çук-ха, çитменнине кунта тăшман йышанна территори те мар! — шухăшларам эпĕ.

Çав вахатрах хайхи старик мана асархаса, мĕн вайĕ çитнĕ таран кашкарса ячĕ:

— Боец, боец! Ан кай-ха, тахта! Пĕр самах кана...

Эп лашасене чарса таратрам та часрах карабина тытса нимĕçсем çинелле тĕллерĕм.

— Ха-альт! Хенде хо-ох!..

Нимĕçсем тапах чаранса аллисене çĕклерĕç, кайри хайĕн винтовкине те парахрĕ. Старик ĕнине вĕренĕпе сĕтĕре-сĕтĕре чупрĕ ман патамалла.

— Хатар мана тархасшан çак наянсенчен! — тесе кашкарать хай.

— Аçта илсе каяççĕ вĕсем сана? — хаярран ыйтрам эпĕ, карабинпа нимĕçсем çине тĕллесех тарса.— Тыткана-и?

— Çук, мана мар,— терĕ старик хашка-хашка.— Вĕсем хайсем тыткана лекесшĕн... Гитлер капут, где плен та где плен, теççĕ! Виçĕ кун çуретĕп ĕнтĕ вĕсемпе варманта, шалт йалахса çитрĕм... Ниепле те хапмаççĕ манран. Пĕр хутаç сухари пурччĕ, веç çитерсе ятам, виçĕ хут ĕне суса сĕт патам. Çисен уйралса кайĕç-ха, тесеттĕм, анчах та çук вĕт — çаплах ман хыççан сĕтĕрĕнсе пыраççĕ...

— Эсĕ ху кам пулатан вара? Аçта тĕл пултан вĕсене?

— Кам пулам-ха эпĕ? Вырас çынни, колхозник... Эсир кунталла çитсен, хамара фашистсем вĕлерсе пĕтересрен пурте вармана тухса тартамар. Ӳплесем туса пурантамар. Унтан ман ĕне çухалчĕ. Ĕне шырама кайрам та, çаксем тĕл пулчĕç... Плен, плен, теççĕ...

Маншан халь ĕнтĕ пĕтĕмпех палла пулчĕ. Ку нимĕç салтакĕсем — пирĕннисем çапса аркатна пĕр-пĕр полк е дивизи юлашки. Тансар сурахсем пекех çухалса кай-

нă, выçса çитнĕ, тыткăна паранса вилĕмрен çăлăнасшăн...

— Илсе кай вĕсене хăвăнпа,— ӳкĕтлерĕ мана старик каллех.—Мĕн тăвас ман вĕсемпе, хăвах шухăшласа пăх-ха...

— Юрĕ,— терĕм старике,— çак самантран вĕсем манăн пленнăйсем пулаççĕ. Штаба кайса леçетĕп.

Эп çапла каласанах, старик сăхха ячĕ.

— Тєв турра, тинех çăлăнтăм явăлсенчен!

Эп алăпа султăм та, шăнса кӳтнĕ, ыйту палли пек кукăрăлса ларнă нимĕçсем ман кухньă патне пычĕç.

— Форвертс! Малта пырăр! —хушрăм çаксене.— Каялла çавăрăнса пăхмасăр пырăр!

Те ăнланчĕç вĕсем мана, те ăнланмарĕç, ăна пĕлместĕп, анчах та эп хушнине тĕп-тĕрĕс туса пычĕç, сăмах та чĕнмерĕç.

Пыратăп ĕнтĕ малалла. Уçланкă пĕтрĕ, каллех вăрмана кĕрсе кайрăм. Çулĕ кунта аван, сарлакаччĕ. Кайсан-кайсан, çырма хĕррине пырса тухрăм. Çакăнта вара манпа тата тепĕр мыскаралла япала пулса тăчĕ.

Сартран анса çитесси инçе те юлманччĕ — сасартăк хамран пĕр çĕр метрта, çул хĕрринче, темиçе нимĕç салтакĕ тăнине курах кайрăм. Полнăй формăпа, майĕсенчен автоматсем çакнă. Ман çине шăтарас пек пăхаççĕ.

— Ак хайхи... Тинех лекрĕм пулас! — шухăш вĕçсе илчĕ те пуçра, хам сисмесĕрех тилхепене кăрт-карт турткаласа илтĕм. Ман лашасем тăпăрт! тапса сикрĕç те малалла — анаталла ĕнтĕ — ыткăнтарчĕç кăна. Те хăйсен халăхне палларĕç, мур пуçĕсем,—тем пек чарма хăтлансан та чарăнмарĕç, нимĕçсем çинеллех илсе кайрĕç мана. Тепри пулсан, паллах, кухньă çинчен сиксе анса вăрманалла пĕрĕхмелле, анчах эпĕ хăракан çын мар çав. Нимĕçсем патне çите пуçласанах пĕтĕм вăйран çухăрса ятăм:

— Сдава-айсь! Бросай оружие! Хенде хо-ох!

Пĕри, малти, çул варрине тухрĕ те хăрах аллине çĕклерĕ, ыттисем вырăнтах тăчĕç. Вĕсем тĕлне çитсен, лашасем те тăпах чарăнчĕç манăн.

— В чем дело? Мĕн кирлĕ сире? — тесе кăшкăртăм çакăн çине хаяррăн. Анчах, тĕрĕссипе каласан, хамăн çав вăхăтра пĕтĕм çан-çурăм пĕрре сивĕнсе, тепре тарласа кайрĕ... Хăвăрах ăнланмалла: эп — пĕччен, вĕсем — пĕр кĕтӳ. Пурте хĕç-пăшаллă тата.

— Ми плен... Германьски зольдат плен... Кушайт нет... Колотно,— макартатса илчĕ нимĕç.

— Аха-а, эсир те çаван йышшисемех иккен,— шухăшларăм та вара эпĕ, хăрасси-тăвасси тӳрех иртсе кайрĕ.

Çав вăхăтра манăн паçăрхи нимĕçсем те, лашасем ĕрĕхсе кайсан таталса юлнăскерсем, çитсе тăчĕç. Тытăнчĕç кусемпе палкама, хур аçисен кĕтĕвĕ какăлтатнă пекех туйăнса кайрĕ, ним ăнланма та çук. Палкарĕç-палкарĕç те, иккĕш-виççĕшĕ вăрманалла кĕрсе кайрĕç.

— Кусем плена пыма килĕшмеççĕ эппин,— терĕм вĕсем çине пăхса. Унтан, малалла каяс тесе, тилхепене тытсаттăм, анчах çул çине малтан тухса тăраканни каллех аллине çĕклерĕ те:

— Не ходи, Иван... Зейчас много зольдат плен...— терĕ.

Чăнах та, вăрмантан кĕçех пĕр хĕрĕхĕн тухрĕç. Апайтурух, мĕнлисем кăна çукчĕ вĕсем хушшинче! Шăлсăрри те, сухалĕ шăтманни те, хăрах куçли те, шакла пуçли те — веçех хайхи «тотальнăйсем», сывви-чирли, ватти-вĕтти çине пăхмасăрах мобилизациленисем. Тата ĕмĕрне те пичĕсене çуман пулмалла,хуп-хура çав, çĕр айĕнчен сиксе тухнă шуйттансем тĕслĕ!..

Мĕн тăвас кусемпе?

Пăхса тăтăм-тăтăм та:

— Сдавай оружие! — тесе кăшкăртăм.

Вĕсем каллех пĕр-пĕринпе пакăлтатса илчĕç те автомачĕсене ман кухньă çине пыра-пыра хучĕç. Пĕр лав автомат тиерĕм вĕт! Çухатса пĕтересрен вĕренпе çыхсах лартрăм.

— А ну, теперь стройся! — командă патăм кун хыççăн.— Юлашки хут салтаксем пек пулăр хуть! Атту сирĕн çине пăхма та йĕрĕнмелле!

Командир пекки те тупăнчĕ, йĕркелесе тăратрĕ çак сурăх кĕтĕвне.

— Форвертс! Малалла! — каллех команда патăм эпĕ, кухньă çине хăпарса тăрса.

Тапранчĕ хай манăн «войско». Ӳсĕреççĕ, сунаслаççĕ, ӳксахлаççĕ, хыçкаланаççĕ... А эпĕ пур — тек кăшкăркалатăп:

— Йĕркеллĕрех утăр! Хăвăртрах! Марш!

Тепĕр сехетрен çаксене чип-чиперех хамăрăн дивизи штабне илсе çитертĕм. Самăй штаб патне çитеспе юриех

ик-виçӗ хутчен «хенде хох!» тесе кăшкăрса, пурне те аллисене çӗклеттертӗм — интереслӗрех тума.

Ну, кулчӗç те вара штаб таврашӗнчисем! Хырăмӗсене тыта-тыта, антăхса кайса кулаççӗ.

— Ак сана Çăпала Иванӗ! Пултарнă, шельмă, пăхха ăна!..

— Яланах мӗнле те пулин номер туса кăтартать вăл,— теççӗ хăйсем.

Вӗсемпе пӗрле эпӗ хам та култăм.

Сире вара кун çинчен мухтанас-тăвас шутпа мар, ахальтен çеç каласа патăм. Хам енчен нимӗнле паттăрлăх та пулмарӗ вăл кун, анчах мыскарисене çителӗклех куртăм çав...



Тепринче тата манпа акӑ мӗнле истори пулса иртрӗ. Пӗр енчен — тарӑхмалла, тепӗр енчен — кулмалла истори, тес пулать. Çав вӑхӑтрах тата савӑнмалли те пулчӗ.

Днепр урлӑ каçсан, эпир белоруссен пӗр пысӑк ялӗнче чарӑнса тӑтӑмӑр. Октябрь уйӑхӗ пуçланнӑ пулин те, çанталăк питӗ лайӑхчӗ, пӗрмай хӗвел пӑхать, ӑшӑ, çилмӗн çук... Пӗр хушӑ кунта ытла вӑйлӑ çапӑçусемех пулмарӗç те, самаях лӑпкӑн пурӑнтӑмӑр. Анчах пирӗн йӗкӗтсен — разведчиксен — çав-çавах ерçӳ çукчӗ, вӗсем пӗрмаях заданисене каятчӗç те тепӗр чух ик-виç кунтан тин таврӑнатчӗç.

Пӗррехинче, темлерен, пурте килте пулчӗç çавсем.

— Паян, атьсемӗр, мунча хутса кӗретпӗр! — терӗ старшина ирхи апат хыççӑн.— Пӗр анкартинче тӗрӗстӗкел мунча тупрӑм эпӗ.

— Ӑшши пама та пулать-и? — ыйтрӗ тахӑшӗ.

— Хуть те антӑхса кайиччен çапӑн!

— О! Апла пулсан, тавай, хутас!

— Хутас!..

Разведчиксем вӗсем çав тери туслӑ халӑх вӗт. Мӗн те пулин тума шут тытсан, карр! пухӑнаççӗ те çав ӗçе наччасра туса хураççӗ. Халь те çавӑн пекех пучӗ: пӗрисем вутӑ тупса татса çурчӗç, теприсем шыв çӗклеме тапратрӗç, иккӗшӗ вӑрмана милӗк хуçма кайрӗç.

Ман хурансенче кӑнтӑрлахи апат пиçиччен мунча пулса та çитнӗ.

— Эс те кӗретӗн пуль? — ыйтрӗ манран старшина, кухньӑна пырса тухсан.— Çапӑнма юратӑтӑн вӗт-ха?

— Епле пултăр-ха тата? Паллах, юрататăп! — терĕм.— Анчах та манăн чăн юлашкинчен каймалла пулать пулĕ ĕнтĕ, ма тесессĕн каçхи апат хатĕрлемелле...

— Ничево,— терĕ вăл,— ĕлкĕретĕн, ăшши те, шывĕ те нумай, пурне те çитмелле. Таса кĕпе-йĕм хăваратăп эп кунта сан валли.

— Тавтапуç!

Унтан эпĕ пурне те апат çитерсе ятăм, шыв ăсса пырса хурансене çуса тасатрăм, каçхи апат пĕçерме вутă хатĕрлерĕм... Вăхăт самаях иртрĕ. Кайран вара хамăн трофейлă автомата хул пуççинчен çакрăм та (хĕç-пăшалсăр эпир пĕр утăм та тумастпăр) мунча еннелле уттартăм.

Мунчи хамăр чăранса тăнă килтен чылай инçетре, ял хĕрринчи пĕр анкарти вĕçĕнче, çурта пек тӳрĕ ӳсекен çамрăк шурă хурăнсем хушшинче ларать-мĕн. Хурăн çулçисем саралнăччĕ ĕнтĕ, хĕвел çутинче вĕсем ылтăн пек йăлтăртататççĕ. Анкарти хыçĕнчи тӳрем улăхра пысăках мар кĕтӳ çӳрет. Çав улăх varrипе пĕчĕк кăна юхан шыв лăпкăн шăнкăртатса выртать, ун леш енче— пĕр çур километртра — вăрман, вăл та ылтăн тум тăхăннă ĕнтĕ, шухăша кайнă пек, ним хускалмасăр тăрать. Аçталла ан пăх — пур çĕрте те чуна çав тери йăпатакан кĕрхи илем...

Мана тăван кил, хам çуралса ӳснĕ çĕршыв аса кил се кайрĕ.

— Эх! Хăçан таврăнмалла пулĕ-ши унта? Хăçан çакăн пек хамăр мунчара çапăнмалли вăхăт çитĕ? Нумаях юлмарĕ те-ха ĕнтĕ...

Çакнашкал шухăшсемпе эпĕ мунчана кĕрсе кайрăм. Унта никам та çук иккен, пурте çăванса тухса кайма ĕлкĕрнĕ.

— Çурăм çуса яракан кирлĕччĕ те... юрĕ-çке, уншăн хама ирĕк! — терĕм.

Салантăм та, чăн малтан çине-çине ăшши парса, питĕ вăйлă тарларăм. Мунча вĕри пулнине питĕ шутсăр юрататăп çав эпĕ, ку енчен хамăрăн асаттене хывнă пулмалла. Ас тăватăр та пулĕ, вăл мунчара ăшши парса тултарса çапăнма тытăнсан, никам та тӳссе тăраймастчĕ вĕт, пурте тухса таратчĕç! Эпĕ те çавăн манерлĕрех... Пĕрре çапантăм, иккĕ çапантăм, унтан пахчана тухса пĕр кăна курăк çинче пăсланса выртрăм... Ах, ырă-çке! Унтан каялла кĕтĕм те тапратрăм çăванма...

Шывӗ нумай, вӗри... Пуҫа ик-виҫӗ хут ҫурӑм, унтан пӗтӗм шӑмма-шакка кӑпӑкласа лартрӑм — ниҫта пӗр ӳт татки курӑнмасть, мамӑк кӗрӗк тӑхӑннӑ пек!.. Фронтра кун пек мунчасем ытла час-часах тӗл пулмаҫҫӗ-ҫке, пӗрре май килнӗ чух ыра курас, терӗм ӗнтӗ...

Анчах ҫав вӑхӑтра маншӑн пачах та кӗтмен япала пулса тӑчӗ: мунча тулашӗнче сасартӑк темскер кӗрс! кӗрс! кӗмсӗрт! турӗ те, мунча чӳречи чӑнкӑр-р! вӑркӑнса тухса кайрӗ...

Мӗн шуйттанӗ? Мӗне пӗлтерет ку? Ниҫта та ним те ҫукчӗ-ҫке?

— Кӗрс! кӗрс! шӑтӑр-шарт! — турӗ каллех. Мунча хӑйне чун кӗнӗ пекех чӗтресе илчӗ, маччаран манӑн тап-таса ҫуса тасатнӑ пуҫ ҫине шӑпӑр! тапрапа тусан тӑкӑнчӗ...

Пӗтрӗм! Ак сана мунча! Вӗри мунча выранне тип мунча!

Пӗррех сиксе тухрӑм тулалла...

Хӑлхана самолет сасси кӗрсе кайрӗ:

— Ӑррр... ӑррр...

Пӑхатӑп — сывлӑшра, шӑп ман пуҫ тӑрринче, нимӗҫсен «хейншелӗ», хайхи, «турчка» текенни, вӗҫе парать! Ху-уллен вӗҫет, пӗр вырӑнта тӑнӑ пекех...

— Кӗрс! кӗрс!

— Кӗмсӗрт!..

Шуйттан пуҫӗ, ҫӗр ҫинче никама та сиен тумалли тупайманнипе улӑхра ҫӳрекен пӗчӗк кӗтӳ ҫине гранатӑсем ывӑтать иккен. Тупнӑ вӗт «объект»! Пирӗн выльӑхсене те пулин вӗлерсе хӑварасшӑн, ҫахан! Ӑнран тухса кайнӑ мӗскӗн ӗнесемпе пӑрусем ниҫта кайса кӗме пӗлмеҫҫӗ, тискеррӗн мӗкӗрсе унталла та кунталла ыткӑнаҫҫӗ, виҫҫӗшӗ-тӑватташӗ вилнӗ е аманнӑ пулмалла, улӑх варринче выртаҫҫӗ.

Ы-ых, ҫилӗ килсе кайрӗ манӑн! Чышкӑсем хӑйсемех чӑмӑртанчӗҫ, шӑлсем шӑтӑртатса илчӗҫ... анчах мӗн тӑватӑн-ха ӑна? Нимӗн те тӑваймастӑп! Тӑратӑп ухмах пек пӑхса... Хам ҫаппа-ҫарамас, ӳт ҫинчи супӑнь кӑпӑкӗ типсе хытса ларма пуҫларӗ, тата ытла ӑшах та мар тес пулать. Анчах, мунчана кӗме шикленетӗп ӗнтӗ: паклаттарӗ те пӗрре, патӗнчех кукӑрӑлса выртӑн!

Унччен те пулмарӗ, ҫак «турчка» пулеметран шатӑртаттарчӗ. Темиҫе пульӑ ман таврашрах ҫӗре тӑрӑнса тусан сирпӗтрӗ...

Аяккалла тапса сикрӗм вара, мӗн тăвас тетӗн? Чипчипер курса тăнă ҫӗртех вилсе выртни е аманни кама кирлӗ вăл? Ăҫта та пулин пытанас пулать кунтан! Анчах ăҫта пытанас-ха? Йӗри-тавра тип-тикӗс, пӗр шăтăкпутăк та ҫук, пӗр лакăм та! Пульăсенчен хăтăлма май пулӗ-ха хуть, анчах та вăл эсремет каллех гранатăсем ывăтма тытăнсан? Тен, унăн бомбăсем те пур, кам пӗлет ăна?

Хăвăрах чухлатăр ӗнтӗ, манăн шухăшласа тăма вăхăт пулман... Эпӗ ҫатан карта урлă яшт! сиксе каҫрăм та юхан шыв еннелле вăркăнтăм кăна — ҫат-ҫат-ҫатҫат... Хыҫалта татах кӗрӗслетрӗ, татах шăтăртатрӗ... Кӗҫ малта пăтранчăк шывлă лупашка пуррине асăрхарăм. Те тарăн вăл, те ăшăх, ăна-кăна шутламарăм, часрах чупса ҫитрӗм те лап! выртрăм ҫавăнта... Ҫулларахпа, шăрăх чух, кунта ăшăпа аптранă кăвакал чӗпписем ыр курнă пулмалла та ӗнтӗ, анчах халь мана та юрарӗ. Лайăхах вырнаҫрăм — ҫывăхрах граната мар, бомбă ҫурăлсан та осколоксем тивес ҫук мана. Ку та темех тăрать ун пек чух!

Выртатăп ӗнтӗ хашкаса... Хӗрсе кайнăскер, малтан нимӗнех те сисмерӗм, анчах та шывӗ сивӗ иккен. Алурана ҫатăрах тытма пуҫларӗ. Туятăп — нумаях тӳссе выртаяс ҫук. Ытларах выртсан, пăсăлма та пулать, мур илесшӗ!

Нимӗҫ тата пӗр-икӗ хутчен печӗ те шăпланчӗ... Хуллен кăна пуҫа ҫӗклесе пăхатăп... «Хейншель» улăх ҫийӗн тепре ҫаврăнчӗ те хӗвеланăҫнелле ҫул тытрӗ. Киле каять... Выльăхсене вӗлерсе, амантса пӗтерчӗ те — чиперех, лăпкăнах каять халь! Никам та тивмест ăна, никам та кансӗрлемест! Эх, ирсӗр!..

Эп лупашкаран сиксе тухрăм. Ну... ним пытармасăрах калас пулать: хам ҫине пăхма та хăрушăччӗ ҫав! Тăп-тăр лапра вӗт! Лупашкинче шывран ытларах йăлмака пулнă та... Ҫав вăхăтра кам та пулин курас пулсан, кулсах вилмелле манран. «Ну, Ҫăпала-а, пи-ит лайăх ҫăваннă иккен эс мунчара! Тепӗр сысна ҫури те кун пекех вараланаймасть!» — тейӗччӗҫ мана.

Тӗрӗс калана пулӗччӗҫ!

Анчах эп хам ҫинчен шухăшламарăм. Эпӗ «турчка» ҫинчен куҫ илеймесӗр тăтăм. Темӗн тӗрлӗ те ылхантăм ăна. Вăл инҫетрен инҫете кайса пырать, часах куҫран та ҫухалать акă... Епле мăшкăл! Епле тарăхмалла ку!

Ним тавайманнипе, чунам пӳлёнсе ҫитнипе, лач! суртам та, каялла, мунча еннелле чупрам.

— Тепре ăшши парса лайăхрах хĕртĕнес те, тасалкаласа часрах ротăна таврăнас...

...Нумай та каяймарам — сулахай енчен самолетсем хыттăн кĕрлени илтĕнчĕ. Камăн-ши кусем? Каллех фашист ҫаханĕсем-ши?.. Ҫук иккен, хамăрăн! Хамăрăн! Вăрман хыҫĕнчен хĕрлĕ ҫăлтăрлă икĕ «хурчка» ҫиҫĕм пек вăркăнса тухрĕҫ те тӳрех хайхи «гурчка» ҫинелле ыткăнчĕҫ.

— Ĕррр... кĕрр... ĕрр... кĕрр...

Иккĕшĕ ик енчен пĕр харăс пырса тапăнчĕҫ фашиста. Пĕри ҫӳлерехрен, тепри аяларахран... Тапратрĕҫ пулеметсенчен ҫунтарма! Кун пек пуласса кĕтмен тăшман унталла пăрăнма тăчĕ, кунталла — ҫук, шалиш!

— Аха-а, лекрĕн-и, бандит! — кăшкăрса ятăм эпĕ, ҫав тери хĕпĕртесе кайса.— Тин вĕҫерĕнеймĕн пирĕн аларан!..

Унччен те пулмарĕ, вут хыпса та илчĕ ҫакна. Малтан ҫулăм курăнчĕ, унтан хура кăвак тĕтĕм палкаса тухрĕ... Ҫав самантрах ун айĕнче шурă чăмăркка курăнчĕ — летчикĕ парашютпа сикрĕ ĕнтĕ...

— Пулчĕ! Капут! — такам илттĕр тенĕ пекех кăшкăртăм та вара эпĕ, мунча еннелле тата хытăрах чупрăм...

— Тытатăпах ку ҫахана! Чĕрĕллех тытса килетĕп!..

Мунчана кĕнĕ-кĕменех хам тăрăх ик-виҫ курка шыв ятăм, унтан, васканипе, ҫара ӳт ҫинех брюки, пуртенкке чĕркемесĕрех ата тăхăнса ятăм та, автомата ҫĕклесе, каялла сиксе тухрăм.

Парашютист вăрман ҫинелле анать... Часах йывăҫсем хушшине кĕрсе куҫран ҫухалма та пултарать. Васкас пулать манăн! Эпĕ мĕнле чупнине хăвăрах чухламалла. Пĕлместĕп, тен, эпĕ нихҫан та ун пек чупман пулĕ...

Эпĕ вăрман патне ҫитеспе парашютист чăнах та курăнми пулчĕ. Анчах куншăн эпĕ пăшăрханмарăм: пĕлетĕп вĕт-ха, парашютран ытла тăруках вĕҫерĕнсе пытанма ҫук. Мана урăххи тарăхтарчĕ: кунта шурлăх пуҫланать иккен... урасем путма пуҫларĕҫ! Анчах ним тума та ҫук, пур пĕрех малалла каймалла, тăшмана тытмаллах манăн. Тĕмеске ҫинчен тĕмеске ҫине, тунката ҫинчен тунката ҫине сиксе, тепĕр чух чĕркуҫҫи таранах

кёрсе ларса, вăрмана çитрĕм. Вăрманĕ ытла çăрах мар иккен — чылай инçетри курăнать. Маншăн ку аван пулчĕ-ха...

Вăрмана кĕрсен, пĕр ик çĕр метр та чупмарăм пулас — йывăçран çакăннă сенкер парашют курăнса та кайрĕ хайхи. Йывăç çумĕнче çын мĕлки тĕрмешет: ахăртнех, парашют строписенчен часрах вĕçерĕнме тăрăшать-тĕр.

— Сто-ой! Ха-альт!..— кăшкăрса ятăм эпĕ.

Фашист, паллах, нимĕн те чĕнмерĕ. Йывăç хыçне пытанчĕ те ман еннелле умлăн-хыçлăн виçĕ хут печĕ. Пĕр пули хампа юнашар йывăçах пырса тиврĕ.

— Чанк! — терĕ те йывăç хуппине вистесе кайрĕ.

«Аха-а, эс капла эппин-ха, парăнма шутламастăн пулать! — терĕм тата ытларах тарăхса.— Юрĕ апла пулсан!..»

— Шатăрр! — тутартăм автоматран.

Пĕр хуша шăп пулчĕ. Эп малаллах пыратăп: пĕр йывăç патĕнчен тепĕр йывăç патне... Унтан нимĕç татах печĕ ман çинелле. Эпĕ те хирĕç петĕм... Вăл перет — эпĕперетĕп.

— Сдавайсь! Ха-альт! — кăшкăртăм каллех.

Анчах та çак нимĕç епле пулсан та хăтăлатăпах тенĕ пулмалла. Чупать те чупать çак. Йывăçсем хушшинче вĕлт те вĕлт кăна тăвать унăн кĕлетки. Эпĕ — ун хыççăн... Чухласа илтĕм: унăн пистолетĕнче патронсем пĕтнĕ, тин ĕнтĕ вăл мана нимĕн те тăваяс çук та, тарса укесшĕн...

Çук, фриц, хăтăлаймăн!..

Чылай хăваламалла пулчĕ çакна. Чупатăп-чупатăп та автоматран çунтарса илетĕп, унтан каллех чупатăп. Патронсем пур-ха манăн, ĕнер кăна диска туп-тулли авăрланăччĕ!

Çав вăхăтра урасем каллех путма тытăнчĕç: татах шурлăх пуçланчĕ. Куратăп — фашист шурлăха пĕçĕ кăкĕ таранах кĕрсе кайрĕ, путасран аллисемпе сывлăшран тытма хăтланнă пек хăлаçланать. Кĕçех манăн та ун хыççăн кĕрсе кайма тивет. Каллех вараланмалла пулать! Тарăхни-мĕнĕпе вара тепре чарăнса тăтăм та лайăх кăна тĕллесе шатăртаттартăм...

Фашист аллисене тăрук çӳлелле çĕклесе илчĕ те, вăраммăн çухăрса ярса, малалла тирĕнсе кайрĕ. Пиçрĕ хайхискер!

Тепĕр минутран, шĕвĕ пылчăка пур еннелле сирпĕнтерсе, ун патне чупса çитсе тăтăм.

— Цурюк, эсрелĕ, цурюк! — автоматпа султăм ун çинелле.

Ман тăшман, этем сăнне çухатмаллах вараланса пĕтнĕскер, ура çине тăма пикенчĕ, анчах çавăнтах ӳкрĕ. Аманнă ĕнтĕ, тăраймасть.

— Мой нога нет...— йынăшса ячĕ хăй.

Уринчен тивнĕ иккен. Утаймасть. Мĕн тăвас-ха кунпа? Тыткăна лекнĕ чĕрĕ тăшмана лачакара пăрахса хăвармастăп ĕнтĕ! «Чĕлхе» вĕт вăл! Епле паха «чĕлхе» тата! Летчик!..

Нумай шухăшласа тăмасăрах, çухавирен çавăрса тытрăм та, çакна шурлăхран типĕрех çĕре сĕтĕрсе кăларса хутăм.

— Нога...— каллех йынăшса ячĕ вăл.

— Кăтарт, хăш тĕлте? — тетĕп.

Вăл чĕркуççисенчен çӳлерех тĕллесе кăтартрĕ. Ăна икĕ уринчен те лекнĕ пулнă. Ним тума та çук, хăйĕн аялти кĕпине çурсах суранĕсене çыхса ятăм. Анчах та ку нимех те мар-ха. Манăн ăна ротăна илсе çитермелле, унтан штаба ăсатмалла вĕт-ха! Таврара никам та çук... Ирĕксĕрех çак ним майсăр вараланса пĕтнĕ фашиста хамăн йăтса каймалла пулчĕ. Паллах, вăл мана çул çинче кансĕрлесрен эпĕ унăн аллисене каялла çыхса лартрăм. Тăшман мĕн шутланине ăçтан пĕлетĕн! Пычĕ вара ман хул пуççи çинче сысна тушки пек силленсе. Йывăр тата хăй. Юрать-ха, хамăн вăй пур та, аптрамарăм...

Вăрмантан тухнă чух ман пата хамăрăн ротăри йĕкĕтсем чупса çитрĕç. Пирĕн «хурчкасем» «хейншеле» çапса антарнине вĕсем те курнă-мĕн, вĕсем те çак парашютиста тытма васканă пулнă.

Хамăр йĕкĕтсем мана епле мухтани çинчен каламастăп ĕнтĕ, вăл ахалех паллă. Вĕсем çавăнтах йывăç тураттисенчен насилкке турĕç те нимĕçе ун çине хурса йăтса кайрĕç. Эпĕ вара, тепĕр хут мунчана тавăрнса, тулли кăмăлпа, питĕ лайăх çаванса тухрăм. Анчах эпĕ лачакара йăваланни çинчен пĕлсен, юлташсем манран нумайччен кулса пурăнчĕç...

## ЧЕЧЕК ÇЫХХИ



Юлашкинчен хам авланни çинчен каласа парам тата сире...

Вăрçă пĕтнĕ хыççăн эпĕ киле тăруках таврăнмарăм, виçĕ çула яхăн сверхсрочнăйра пултăм. Командирсем юрататчĕç те мана шав ÿкĕтлетчĕç:

— Тепрер çул юл ĕнтĕ службăра! Ăçта васкатăн? Килте сан арăму кĕтет-и, ачу-пăчу пур-и? — тетчĕç.

Старшина званине çитерчĕç, офицерсен столовăйĕнче начальник помощникĕ турĕç, ĕç укçи те лайăх тÿлеççĕ. Васкамарăм вара, служить турăм та турăм. Пур пĕр мар-им, хуть те ăçта ĕçлесен те — çĕршыв валли!

Анчах пĕр-ик çултан анне киле чĕнме пуçларĕ: ваталатăп ĕнтĕ, кил-çуртăмăр пушă пек туйăнать, сăнпа пĕрле кайнисем тахçанах таврăнса арлă-арăмлă, ачаллă-пăчаллă пулса пĕтрĕç, манăн çеç кин те, мăнуксем те çук, çавăншăн питĕ кÿренетĕп, тет...

Шел пек туйăнчĕ карчăка. Хăçантанпа пĕччен пурăнать вĕт. Атте 1941 çултах, Мускава хÿтĕленĕ чух, пуçне хунă, аппан хăйĕн çемйи пур, эпĕ те килтен кайни нумай пулать.

Таврăнтăм вара. Çуркунне, çутçанталăк илемлĕ ешĕл тум тăхăнсан, çарансем çинче чечексем çурăлма тытăннă вăхăтра çитрĕм. Ну... паллă ĕнтĕ, анне çав тери хĕпĕртерĕ, сăра турĕ, тăвансем пыра-пыра кайрĕç, хăйсем патне те чĕнчĕç. Йăлине хăвăр пĕлетĕр.

Çапла ик-виç кун иртрĕ кăна, анне мана авлантарасси çинчен калаçма тытăнчĕ. Вăхăчĕ çитрĕ ĕнтĕ, çирĕмултта çине пусрăн, атту тата ват хусах ячĕ тухĕ, текелет.

Ана хирĕç таруках нимĕн те каламарăм. Кулкалатăп çеç:

— Халь те тиркеççĕ пуль ĕнтĕ мана,— тетĕп.

Çак вăхăтра, утта тухиччен, пирĕн тăрăхра «пухăсем» йышлă пулаççĕ: Ишлей пуххи, Ишек пуххи, Храути пуххи, Мамăш пуххи... Çуллахи ярмăрккăсем ĕнтĕ вĕсем. Хăш-пĕр çĕрте вĕсене çимĕк теççĕ пулас.

— Хамăр ялта кăмăла каяканни çук пулсан, пухăсенче лайăхрах пăхса çӳре,— вĕрентет мана анне.

— Лайăхраххине тĕл пулсан, вăрласа килес-и? — каллех кулатăп эпĕ.

— Вăрлама саккун çук-ха вăл, ун пек тăвас мар, анчах пĕрре паллашсан, кайса калаçма юрамасть-им? Сан пек каччăнах тиркес çук-ха,— тет анне.

— Юрĕ, шыракалăп. Пĕр-пĕр чалăш куçли тупăнĕ-ха...

Ман хыççăн пĕр эрнерен хамăн ача чухнехи тусăм пулнă Христофор та çартан таврăнчĕ. Шкулта вĕреннĕ чух эпир ăна «Христофор Колумб» тесе чĕнеттĕмĕр, ма тесессĕн вăл çырмари пĕвере кĕпе çумалли валашкасене пухса «флот» тума юрататчĕ. Эпир пĕр çыранта индеецсем пулаттăмăр, унăн «флочĕ» çине ухăсемпе переттĕмĕр, вăл испанецсен командирĕ пулса пире тапăнатчĕ. Вăрçă вăхăтĕнче çак Христофор флота лекнĕ те чăнах та Америкăра пулса курнă иккен. Ик-виçĕ кун хушши каласа кăтартрĕ вăл Америкă çинчен, хăй сура-сура вăрçать; пуринчен ытла унта негрсене этем выранне хумании тарăхтарнă-мĕн ăна.

Анчах ку сăмах майĕн кăна-ха.

Çак «Колумб» та ман пекех хусахчĕ. Ăна та амăшĕ авлантарасшăнччĕ. Ман аннерен те ытларах хистетчĕ:

— Ĕç çине тухиччен кин тупнă пултăр ман валли!

Хайхи, тытăнтăмăр çакăнпа пухăсене çӳреме. Ятарласа хĕрсем тупас тесех мар, халăхпа пĕрле пулма, вăл савăннине курма. Ну... хĕрсемпе калаçма та хирĕçех пулман ĕнтĕ. Каччăсем вĕт.

Чăн малтан Ишлее кайрăмăр. Христофорăн кунта аппăшĕ пур, почтăра ĕçлет. Иртерех ситнипе вăл мана ун патне илсе кĕртрĕ. Хăна тукаларĕç пире. Эпир сĕтел хушшине ларнă чух темле икĕ хĕр пырса кĕчĕç. Пĕри — сап-сарă, пысăк кăвак куçлă, вырăсла тумланнă, тепри — хурарах сăнлă, куçĕсем те хура хурлăхан пек, пĕвĕпе сарринчен лутрарах, ялти пек тумланнă: кĕрен

тутăр, шап-шур катан пир кĕпе, симĕс пурçăн саппун, уринче хура туфли. Иккĕшĕ те çав тери кăмăла каймалласкерсем...

Пире паллаштарчĕç.

— Тоня,— терĕ сарри, пире алă парса.

— Вера,— пуçĕпе сулса илчĕ хурараххи.

Вĕсене те сĕтел хушшине лартрĕç. Эпир ĕнтĕ ку хĕрсемпе сăмах-юмах пуçласа ярасшăнччĕ, анчах Христофор аппăшĕсем патне татах эпир палламан çынсем пырса кĕчĕç те, калаçасси пулмарĕ. Вара эпир ярмăрккăна кайса çавăрнса çӳрес терĕмĕр.

— Атьăр пирĕнпе,— чĕнтĕмĕр хĕрсене.

Вĕсем килĕшрĕç. Урама тухсан, Христофор саррипе юнашар утрĕ, эпĕ — хурараххипе. Хĕрсем енĕпе морякнсем хăюллăрах çав — Христофор тӳрех ыйтса пĕлме тытăнчĕ:

— Ăçтисем пулатăр эсир, хитре хĕрсем? Пĕлме ирĕк парсамăрччĕ...

— Эп кунтисемех,— терĕ Тоня.

— Ăçта ĕçлетĕр?

— Почтăра, сирĕн аппупа пĕрлех, телефонисткăра ĕçлетĕп.

— Эсир тата? — ыйтрăм эпĕ те Вера тенинчен.

— Çĕньялсем...

— Ĕçлетĕр-и?

— Ĕçлемесĕр кам çăкăр çиет?—темшĕн Вера хăйĕн юлташĕ çине чăрр... пăхса илчĕ. Унăн илемлĕ пит-куçĕ çинче вăрттăн кулă палăрчĕ.

— Секрет эппин?

— Ним секречĕ те çук. Колхозра ĕçлетĕп.

— Мĕнле ĕçре? Сирĕн пек çамрăк пикесем ку чухне фермăсенче ĕçлекен...

— Çук, унта мар. Пожарникре ĕçлетĕп.—Вера, хăйĕн хитре тутисене тутăр вĕçĕпе хупласа, сасăпах кулса илчĕ. Тӳрех сисрĕм: улталать ку, анчах сисмĕш пултăм.

— Пур йышши пушарсене те сӳнтеретĕр-и вара? — ун куçĕнчен пăхса ыйтрĕ Христофор.

— Пурне те,— терĕ Вера.

— Калăпăр, пĕр-пĕр каччăн чĕри çунма тытăнсан, ăна та сӳнтерме пултаратăр-и?

— Ун пеккинех сӳнтерсе курман та, анчах пит кирлех пулсан, сӳнтерме пулать те пулĕ.

— Пултармалла пек çав...

Чылай çӳрерӗмӗр çакӑн пек калаçкаласа, кӑмӑллӑн кулкаласа. Çав хушӑрах хӗрсене грецки текен мӑйӑр илсе çитертӗмӗр, вӗсемпе пӗрле карусель çине ларса çаврӑнтӑмӑр, цирк курса тухрӑмӑр, унтан тухсан кремсода ӗçрӗмӗр.

Ун пек чух вӑхӑт иртни сисӗнмест вӗт: каç пулма та пуçларӗ.

— Ну, вӑхӑта лайӑх ирттернӗшӗн тавтапуç сире, манӑн каяс пулать,— терӗ Вера, аллинчи сехечӗ çине пӑхса илсе.— Сыв пулӑр...

— Чимӗр-ха, мӗншӗн пит час?

— Ултӑ сехетре пирӗн колхоз машини каять. Машинран юлсан, çуран утмалла пулать...

— Ан васкӑр ӗнтӗ! — Хам сисмесӗрех, çакна ик аллинчен те ярса тытрӑм.— Çӳрер кӑштах!

— Çук, çук... Ан та ӳкӗтлӗр...— ман çине çав тери ӑшшӑн пӑхса, пуçне пӑркаласа илчӗ хӗр.

— Эппин, тата хӑçан курӑп-ха эп сире? — чӗрем сикме тытӑннине туйса ыйтрӑм эпӗ.— Çитес вырсарникун Мамӑш пуххине пымастӑр-и?

— Пӗлместӗп... Тен, пыратӑп та-и...

— Эппин, тӗл пулатпӑр? Тупатӑп эп сана!

— Халӑх нумай пулать те унта, ӑçтан шыраса тупӑн?

— Эс карусель патне пыр!

— Каруселӗ пулмасан?

— Епле пулмасть? Пулать!

— Ну, сыв пулӑр...— Вӑл мана юлашки хут куçӗпе çунтарса илчӗ те, татах сехечӗ çине пӑхса, халӑх хушшине кӗрсе кайса çухалчӗ.

— Тарчӗ пулать? — кулса илчӗ Тоньӑна хулӗнчен тытса тӑракан Христофор.— Эх, эсӗ те çав... кавалер! Хам пулсан, ниепле те вӗçертессӗм çук...

— Нимех те мар,—терӗм эпӗ,—тен, вӗçернеймӗ-ха!

Сисетӗр пуль ӗнтӗ, çак хура хӗр ман чӗрене хытах хускатрӗ. Киле таврӑннӑ чух та куç умӗнчех тӑчӗ вӑл, çӗрле тӗлӗкре те курӑнчӗ, ир тӑрсан та тӳрех ӑна аса илтӗм. Хам унӑн ятне кӑна пӗлетӗп те-ха ӗнтӗ... Паллах, пожарник пирки юри каларӗ вӑл. Хӗрсен йӑли çавӑн пек вӗт: хӑйсем çинчен ытла тӑруках каласа памаççӗ... Тепӗр тесен, вӑл ӑçта тата кам пулса ӗçлени пур пӗр мар-и? Çынни лайӑх пултӑр! Ытти — тарам.

Эрнипех шухăшласа пурăнтăм çак Вера çинчен. Хăçан çитĕ-ши ку вырсарникун! Тÿсме çук курас килет вĕт... Христофора кун çинчен тĕп-тĕрĕссипе, ним пытармасăрах каласа патăм. Анчах вăл кулчĕ çеç:

— Швартовать туса[1] лартрĕ эппин сан чĕрÿне! Полундра,[2] старшина!..

— Ан кул, санăн хăвăн та ĕçсем çавăн пекрех-ха,— терĕм ăна хирĕç.— Çак эрне хушшинче Ишлее мĕншĕн виçĕ хут кайса килнине чухлатпăр!

— Аппа патне кайрăм...— каллех кулчĕ вăл.

— Ас ту, аппу патне пулмасăр!

Вырсарникун ир-ирех кайрăмăр Мамăша. Эпир çитнĕ чух ярмăркки тин çеç пуханма пуçланăччĕ-ха. Тÿрех карусель патне пырса тăтăмăр. Вера курăнмарĕ.

— Улталанă сана хура куç,— йĕкĕлтесе илчĕ Христофор.

— Пулма пултараймасть! — терĕм ăна хирĕç.

— Пултарать çав; пĕлетĕн-и, вырăссен çавăн пек такмак пур: не влюбляйся в черный глаз, черный глаз — обманчив...

Чăнах, мана хама та Вера улталанă пек туйăнма пуçларĕ. Вун ик сехет çитрĕ, пĕрре... Темиçе хут та çаврăнса пытăмăр карусель патне — ман хура куç пур пĕр курăнмарĕ. Çиллĕм те килме пуçларĕ: мĕнле тивĕçпе кун пек турĕ вăл? Мана, гварди старшинине, хăйĕнпе çав тери ырă кăмăлпа калаçнă çынна...

Çÿресен-çÿресен, Христофорпа иксĕмĕр малтан калаçса татăлнă вырăна тата тепĕр хут пытăмăр та, карусель тавра тăракан çамрăксем хушшинче эпĕ сасартăк Вера майлăрах хĕре асăрхарăм: çавăн пекех çавракা питлĕ, хуп-хура куçлă... Анчах ку... чăвашла мар, вырăсла тумланнăччĕ. Чечеклĕ крепдешин платйĕпе, çÿçне ĕнси таран кастарнă та кăтралатнă, аллинче пĕчĕкçеç ридикюль... Шăтарас пек пăхатăп. Вăл-ши, вăл марши? Хĕр те ман çине темиçе хутчен пăхса кула-кула илчĕ. Кулли Верăннах! Вера ку! Ак сана... пожарник!

Вара çынсене сиркелесех ун патне пырса тăтăм та хăюллăнах ала патăм:

— Ырă кун пултăр!

[1] Моряксен чĕлхипе — кăкарса лартрĕ, тени пулать.
[2] Сыхлан!

Ман хыççăн Христофор та çитсе тăрса сывлăх сунчĕ ăна.

— Тупрăмăр хайхи таркăна! Ăçта çухалса пурăнтăр паян? — терĕ вăл ман хĕре.

— Нимĕнле таркăн та мар,— кулса илчĕ Вера,— çухалса та çӳремен. Сире эпĕ паçăрах куртăм... Хăвăр палламастăр та, эп айăплă-им уншăн?

— Артисткă пулмалла эсир, мĕн тери улшăнма пултаратăр!

— Урăх тум тăхăнни — улшăнни пулать-и вара?

Христофор, мана шелленĕ пек, ассăн сывласа ячĕ:

— Эх, Ваня, Ваня! Хăвна ху разведчик тетĕн, анчах пĕрре курнă хĕре паллаймастăн!..

Унтан вăл нумай та тăмарĕ, таçта пăрăнса çухалчĕ. Пире кансĕрлес мар, терĕ пулмалла ĕнтĕ. Паллах, тĕрĕс турĕ, ун пек чух — виççĕмĕш ытлашши, теççĕ...

Каçченех çӳрерĕмĕр вара Верăпа... Питĕ уçăмлă хĕр пек туйăнчĕ вăл мана. Эп ун çинчен ытларах та ытларах ыйтса пĕлме тăрăшрăм, хам пирки те чылай каласа патăм. Пĕр-пĕринпе çывăхрах паллашас пулать-çке! Анчах хăй çинчен вăл ытлашши нимех те каламарĕ çав. Хĕрсем вĕсем — именекен халăх...

Хальхинче эпĕ ăна машинăпа ямарăм, хăйсен ялне çитиех хам ăсатрăм. Ешĕл вăрман витĕр тухрăмăр эпир, чечеклĕ улăхсем тăрăх, тинĕс пек хумханакан хирсем урлă утрăмăр... Ман чĕрем тулнăçемĕн тулса пычĕ. Юратса пăрахрăм эпĕ ку хĕре: фронтра пĕррехинче Сахвине ятлă тутар хĕрне юратнă пекех хĕрӳллĕн юратрăм...

Ял хыçне çитсен, Вера чарăнса тăчĕ:

— Урăх ан пыр... аван мар...

Вăл ман алла тытса чăмăртарĕ. Ку вара мана кăварпа тĕртнĕ пекех пулчĕ.

— Вера!..

— Мĕн? — куçран çав тери йăвашшăн пăхрĕ хĕр.

— Эпĕ... Эпĕ ыранах сирĕн пата пыратăп!

— Мĕн тума?

— Аçу-аннӳпе калаçма! Ăнлан эс мана...

— Çук, Ваня, ун пек пулма пултараймасть.

— Мĕншĕн? Нивушлĕ эс мана ним чухлĕ те килĕштерместĕн?

— Ыран ирех эпĕ Шупашкара тухса каятăп...

— Мĕн тума?

— Эп Шупашкарта ĕçлетĕп вĕт. Отпуск пĕтрĕ манӑн.

— Ӑçта ĕçлетĕн? — тĕлĕнсех кайрӑм эпĕ.

— Ун çинчен сана пĕлме кирлех те мар.

— Мĕншĕн апла?

— Ахалех.

Пĕр хушӑ эпĕ ним калайми пулса тӑтӑм. Чĕре пӑчӑртанса илчĕ: эппин, ку хĕр ман валли мар, хулара унӑн урӑххи те пулма пултарать!

— Анчах сана Шупашкара пырса курма пулать-и? — ыйтрӑм чылайран тин.

— Ма юрамасть пуль? Ӳркенмесен — пыр: Белинский урамĕ, 22. Яланах хавас пулӑп сана кĕтсе илме...

— Çак кунсенчех пыратӑп! Мĕншĕн тесен малашне эпĕ сансӑр... пултараймастӑп!..

— Юрĕ, пыр... Анчах та халь кай... Çынсем курсан, аван мар! Сыв пул!

Вӑл ман алла икĕ аллипех тытса чӑмӑртарĕ те пахчаналла вӑшт кӑна кĕрсе кайрĕ. Эпĕ чылайччен хама такам тухатнӑ пек пулса тӑтӑм...

— Белинский урамĕ, 22, 22...—пӑшӑлтатса илтĕм те, унтан хамӑр ял еннелле тӳрĕрен тӳрĕ утрӑм. Хамӑн çав тери юрлас килчĕ...

* *
*

Хӑвӑрах чухлама тивĕç, халь ĕнтĕ эпĕ кунĕн-çĕрĕн Вера çинчен кӑна шухӑшласа, ӑна хам майлӑ çавӑрса çитерес ĕмĕтпе çеç пурӑнтӑм. Тепĕр шӑматкун, вырсарние хирĕç, каç пулсан, Шупашкара персе те çитрĕм. Ыран — канмалли кун, хамӑн савнӑ хĕрпе тĕл пулса калаçмалӑх вӑхӑт çителĕклех пулать...

Автобус çинчен ансанах, Хĕрлĕ площадь варринче постра тӑракан яштака милиционер патне пытӑм та Белинский урамне мĕнле тупмалли çинчен ыйтрӑм.

Вӑл мана чеç парсах ӑнлантарчĕ:

— Çапла хӑпармалла та çавӑнта пӑрӑнмалла...

— Тавтапуç! — тесе, хам та чеç патӑм.

Анчах эпĕ темиçе утӑм тусан, вӑл мана каялла чĕнсе илчĕ:

— Хӑш çурт кирлĕ сире?

— 22.

— Пĕлетĕп вӑл çурта. Кама курасшӑн унта эсир?

— Хамӑр ялсене,— терĕм те уттара патӑм. Анчах

хам ăшăмра: «Верăна паллаканскер мар-ши ку? Каччи аптрамасть так-тă...» — тесе шухăшларăм. Анчах кĕвĕçес-тăвас кăмăл пулмарĕ.

Çитрĕм çитес çĕре. Крыльца çине хăпарса шаккарăм. Мана хирĕç шап-шур çӳçлĕ, питĕ кăмăллă карчăк тухса тăчĕ.

— Вера Петрова сирĕн патăрта пурăнать-и, асанне?

— Пирĕн патра та-ха, халь килте çук-ха вăл, ывăлăм. Вун иккĕччен дежурстăра пулать.

— Дежурстăран тӳрех киле килет-и?

— Ăçта кайтăр ĕнтĕ тата?

Анмарĕ ман ĕç. Ну, юрĕ, тăхтăпăр, текелесе, крыльца çинчен хуллен кăна каялла антăм.

— Ыран ирпе килĕр эппин! — терĕ карчăк.

— Тавтапуç.

— Кам килчĕ тесе калас Верăна?

— Хăвăр ялсем, те...

Эпĕ Хĕрлĕ площаде анса Атăл хĕрринелле утрăм. Тротуарсем çинче лăк тулли халăх — ĕç хыççăн пурте уçăлма тухнă ĕнтĕ. Çамрăк мăшăрсем питĕ нумай, ман пек салтак пулнисем те хĕрсене çавăтнă, шăкăл-шăкăл калаçса пыраççĕ. Эп кăна пĕччен...

Атăл çине тухрăм — унта та кунта халăх тем чухлех, анчах паллани пĕр çын та çук. Кичем пулма пуçларĕ. Аптранă енне, кино кĕрсе курас терĕм. Унтан пĕр вунă сехет тĕлĕнче тухрăм та сада кайса лартăм — музыкă итлес кăмăл пулчĕ. Анчах хамăн шухăш Вера çинчех, урăх ним çинчен те шухăшлама пултараймастăп.

— Вун иккĕ тĕлне вĕсен крыльци çине кайса ларатăп... Мĕнле тĕл пулăпăр-ши, мĕн калĕ вăл мана?..

Чĕре хытăран хытă тапать хамăн...

Вун пĕр сехет иртсен, садра халăх сахалланчĕ. Унта-кунта, йывăç тĕмисем айĕнчи саксем çинче, кăмăллăн пăшăлтатакан мăшăрсем çеç юлчĕç.

— Каяс ĕнтĕ,— терĕм те тăрса утрăм...

Кукăр аллейă мана чечексем патне илсе тухрĕ. Пысăк, илемлĕ клумбă. Электричествă çутинче хĕрлĕ, кăвак, сенкер чечексем тĕлĕрсе лараççĕ. Сасартăк таçтан шухăш пырса кĕчĕ мана:

— Вера валли лайăх кăна букет туса каяс! Ăна чечек çыххипе кĕтсе илес... Питĕ лайăх пулать вĕт!..

Пĕлетĕп-ха ĕнтĕ кун пек çĕрте чечексем татма юраманнине, анчах... мĕн тăвас тетĕн? Юрату вĕт! Çав шар кăтартать çынна час-часах!

Унталла-кунталла пăхса илтĕм те, хӳтĕрех вырăна кукленсе ларса, çăтăр-çатăр, çăтăр-çатăр татма тытăнтăм... Сылтăм алăпа тататăп, сулахай алла пухатăп... Хитре букет пулать! Анчах...

— Мĕн тăватăр эсир кунта, гражданин? — терĕ хыçалта хулăн сасă.

Эпĕ вăшт кăна сиксе тăтăм та букета çурăм хыçне тытрăм. Ман умра милиционер тăра парать.

— Мĕн тăватăр, тетĕп!

— Нимĕн те тумастăп-çке...

— Çурăм хыçне мĕн пытартăр?

— Нимĕн те мар...

— Чечек татрăр эсир! Тӳлĕр 15 тенкĕ штраф! *

— Мĕншĕн? — тĕлĕннĕ пек пултăм эпĕ.— Çак куракшăн 15 тенкĕ-и? Чипер калаçăр... Пасарта уншăн пĕр тенкĕ памаççĕ!

— А эсир чипер хăтланăр! — сассине хытарчĕ милиционер.— Тӳлеместĕр? Апла пулсан, атьăр отделенине.

— Тӳлеместĕп те, отделенине те пымастăп,— татса хутăм эпĕ. Манăн, айванăн, укçа кăлармалла та тыттармалла пулнă, ĕçĕ те пĕтетчĕ, анчах... характер вĕт! Салтак-çке, гвардеец! Кайран ӳкĕнтĕм те çав...

Милиционер пĕррех шăхăртрĕ.

— Кайрăмăр! Утăр малтан! Чечекĕсене пăрахса хăвармă ан шутлăр тата! — асăрхаттарчĕ вăл мана.

Мĕн тăвас тетĕн? Влаç представительне хирĕç каятăн-им? Утрăмăр. Эпĕ — малта, ман алăра чечек çыххи, вăл — ман хыçра. Каялла çаврăнса пăхма та хушмасть, чăн-чăн преступнике илсе пынă пекех илсе пырать урампа!

Çитрĕмĕр отделенине. Кĕрсенех, алăкран сулахаялла, çамрăк кăна кĕçĕн лейтенант темскер вуласа ларать. Мана илсе килекенни ун умне тăчĕ те хăвăрт кăна рапортларĕ:

— Ак çак паллă мар гражданин обществă йĕркине пăсрĕ... Садра чечексем татрĕ!

---

* Çапала Иванĕ çакăн пек милици аллине лекнĕ чух кивĕ укçа пулнă-ха.— Автор.

— Докуменчĕсем пур-и?

— Тĕрĕслемен. Вăл штраф тӳлесшĕн пулмарĕ.

— Гражданин, паспорт кăтартăр!—терĕ дежурнăй.

Эп маларах, çута çĕререх тухрăм та, ман сывлăш пӳлĕнсех ларчĕ... Дежурнăй кĕçĕн лейтенант — манăн савнă Вера иккен! Вера! Çĕр çăттăр!

Паспорта кăларса тыттартăм. Хамăн пĕтĕм пит-куç вутпах çунать, хăлхасем те пĕçерсе кайрĕç. Паллать те акă, мĕн тери намăс пулать мана!..

— Паспорчĕ тĕрĕсех,— терĕ те Вера, ман çине куç харши айĕн пăхса, чутах кулса яратчĕ, темле тытăнса тăчĕ кăна.— Анчах штраф тӳлеттерес пулать.

Мана илсе килекенни хăйĕн сумкинче квитанци кĕнекине шырама пĕшкĕнчĕ, çав вăхăтра эпĕ, пĕр-ик утăм малалла ярса пусса:

— Вера, эп куна сан валли вĕт...— терĕм шăппăн.

Вăл мана пӳрнипе юнаса илчĕ:

— Бун иккĕччен кĕт!

Урăх нимĕн те каламарĕ. Ну, паллах ĕнтĕ, штрафне тӳлерĕм эпĕ, квитанци пачĕç мана...

— Кайма пултаратăр,— терĕ хама илсе килекенни. Эп алăк патне çитсен: — Букетне илсе кайăр, 15 тенкĕ тăрать вĕт, пăрахма шел,— тесе кулса илчĕ.

Эп урама тухрăм. Хам йĕп-йĕпе тарланă иккен...

Çӳрерĕм вăра вун иккĕччен каллĕ-маллĕ, алăри чечексен ырă шăршипе киленсе. Унтан Вера та тухрĕ. Питĕ шутсăр хытă кулчĕ манран...

Майĕпе Атăл хĕррине çитрĕмĕр, кăвак çута киличчĕнех шăкăл-шăкăл калаçса çӳрерĕмĕр. Юлашкинчен сăмах пине çитрĕ пулмалла, сак çине лартăмăр та пĕр хушă нимĕн те чĕнмерĕмĕр...

Эп ăна пĕрремĕш хут пит çăмартинчен чуп туса илтĕм.

— Каллех штраф тăвасран хăрамастăн-и? — хуллен ыйтрĕ вăл, пуçне ман кăкăр çине хурса.

— Çук, хăрамастăп, хуть те вунă квитанци çыр, çирĕм, вăтăр çыр,— терĕм те эпĕ, хĕре тутинченех чуп турăм.

...Çав ирхине вăра пирĕн чĕресем ĕмĕрлĕхех пĕрлешрĕç.

1944—1954

## ПĔР ÇАМКА ИСТОРИЙĔ



«Мертвая голова» дивизинчи Ганс Шпанке ятлă обер-ефрейторăн çамки тĕлĕнмелле çирĕп пулнă. Ун çамкине пит лайăх йышши чугунран е çирĕп металран тунă пекех туйăннă.

Шпанке тусĕсем каçса кайсах мухтанă ăна:

— Эх, пирĕн те сан çамку пек çамка пулсассăнччĕ! Вара вăрçăра та хăрушă пулас çукчĕ!..

Пытармасăрах калас пулать: çакăн пек ăмсанма сăлтавĕ те пулнă çав. Ганс Шпанке хăй те ахальтен мар ырланă хăйĕн çамкине. Хăй ĕмĕрĕнче ун çамки нумай хĕн-хур тÿссе ирттернĕ, анчах тÿсмеллисем темле йывăр пулсан та, вăл яланах çĕнĕ чÿлмек пекех тĕрĕс-тĕкел те çирĕппипех тăрса юлнă, ниçтан та ванман, катăлман, çурăлман.

Вулакансем мана: «Ку юри юптарать» тесе каласран, манăн çав Шпанке çамки шуйттанла çирĕп пулнине кăтартакан тĕслĕхсемпе усă курмалла пулать пулĕ.

Ефрейторăн çамки мĕн тери çирĕп пулни чăн малтан Берлин урамĕсенче тĕрĕсленнĕ. Ун чухне Ганс Шпанке ытти штурмовиксемпе пĕрле рабочисен демонстрацине хăваласа салатнă. Хăйне шăл çеммирех пултăр тесе, вăл пĕчĕк ачалла пĕр ватăрах хĕрарăма çавăрса тытнă та ăна çав тери тискеррĕн хĕнеме тапратнă. Анчах çав хушăра тахăшĕ ăна çамкинчен чулпа шатлаттарнă. Çав чула Шпанке ашшĕн аш-какай лавккинче тараса çине хурса турттарса пăхнă пулсан, вăл виçĕ килограмран кая мар туртнă пулĕччĕ. Çапах та — Шпанке çамки çурăлман. Куç харшисенчен пуçласа çÿçĕ патне çитичченех чĕнтĕр евĕрлĕ çĕвĕк пулса юлнă кăна. Урăх — хуть ĕненĕр, хут ан ĕненĕр — нимĕн те пулман!

Тепӗр ӗҫӗ ресторанта пулса иртнӗ. Рабочисем пурӑнакан районра погром туса таврӑннӑ хыҫҫӑн штурмовиксем ӗҫме тытӑнса кайнӑ. Сыснасем пек пуличченех кӳпсе лартнӑ. Кӳпсен-кӳпсен вара икӗ пая уйӑрлнӑ та пӗр-пӗрин ҫине наступлени пуҫласа янӑ. Тарелкӑсем, графинсем, чечек чӳлмекӗсем — пӗтӗмпех хӗҫ-пӑшал вырӑнне вӑркӑнма тытӑннӑ. Ганс Шпанке сӑнчӑрта тӑракан йытӑ пекех хаярланса, урсах кайнӑ. Вӑл рояль ҫине сиксе хӑпарнӑ та хӑйне майлӑ «корректировщик» пулса тӑнӑ — камӑн ӑҫталла пемеллине кӑтартнӑ. Шӑпах вара ҫак «высота» ҫинче ӑна пӗри пит пысӑк чечек чӳлмекӗпе ҫамкаран ярӑнтарнӑ. Ганс ҫамкине пырса ҫапӑнсан, чӳлмек пӑрккин арканса кайнӑ, анчах ҫамкана нимӗн те пулман. Ванман та вӑл, ҫурӑлман та! Эрешмен евӗрлӗ тепӗр ҫӗвӗк ҫеҫ хушӑннӑ ун ҫинче...

1939 ҫулта вӑрҫӑ пуҫланнӑ. Шпанкепе унӑн юлташӗсем хӑйсене «Европӑ тӑрӑх ҫӳрекен туристсем» тесе мухтаннӑ. Вӗсем Франци эрехне ӗҫсе Норвеги консервисемпе ҫырткаланӑ. Югослави сӑрине пехлесе Голланди чӑкӑтне ҫинӗ. Ӗҫсе ӳсӗрӗлмесӗр вӗсен пӗр кун иртмен. Вара кашнинчех, тахӑшӗ юри тӗллесе кӑтартнӑ пекех, кам та пулин Ганс Шпанкене ҫамкинчен пӗр-пӗр йывӑр япалапа лектернӗ. Ганс ҫамки эрешлӗ чӗнтӗр пекех пулса тӑнӑ вара,—ун ҫинче тӗрлӗ-тӗрлӗ ҫӗвӗк ҫав тери йышланса кайнӑ.

Пӗррехинче, ӗҫсӗр аптранӑ хушӑра, Ганс бухгалтери ӗҫне тытӑнса ҫакӑн пек шутласа кӑларнӑ: икӗ ҫул хушшинче унӑн ҫамкине 11 графин, тӗрлӗ калибрлӑ 17 бутылкӑ тата 33 турилкке ним юлми арканнӑ.

Анчах ҫапах та ҫамка ҫӗмрӗлмен. Тепӗр тесен, бутылкӑсемпе графинсем — мӗнех вӑл? Грецири пӗр хулара, музее пырса кӗрсен, Ганс Апполон Бельведерский скульптурине автоматран персе унӑн хӑрах аллине татса антарнӑ. Хӑй ӳсӗр пулнипе, вӑл аяккалла пӑрӑнма ӗлкӗреймен... Апполонӑн йывӑр алли тӳрех Ганс ҫамки ҫине шачлатнӑ. Ҫапах та — ӑна мӗн те пулин пулнӑ тетӗр-и эсир? Ҫук, нимӗн те пулман!.. Чӑнах та, Ганс пӗр ҫур сехет хушши ҫӑварӗнчен кӑпӑк кӑларса выртнӑ ӗнтӗ, анчах тӑна кӗрсессӗнех эрех ыйтса ӗҫнӗ те чип-чиперех чӗрӗлсе тӑнӑ.

Ак епле ҫамка пулнӑ Гансӑн! Акӑ мӗншӗн мухтанӑ унӑн ҫамкине хӑйӗнпе пӗрле иртӗнсе, ӗҫсе-супса ҫӳрекен тусӗсем!..

Тĕрĕссипе каласан, Ганс тусĕсем те ăна-кăна сахал мар куркаланă, вĕсем те ытла тĕрĕс-тĕкелех çÿренĕ темелле мар. Европăри нумай çĕршывсене çăмăллăнах çĕнтерсе пынă пулин те, унта та самаях тÿскелеме тивнĕ, мĕншĕн тесен чĕнмен «хăнасене» никам та ыталаса-чуп туса кĕтсе илмен. Вĕсене чуп тăваканнисем ытарма çук хитре пикесем мар, вĕри тăхлан пульăсем пулнă. Кашни çĕршыврах куçа куранман, ниепле те тытма май килмен партизансем шакканă вĕсене...

Хуть те ăçта та, кулленех, Ганс тусĕсен речĕ сайралнă, «тимĕр хĕрес» çинчен ĕмĕтленекен фашист бандичĕсем хуранран тунă хĕрес çеç туяннă. Тепĕр чух, каç-каç, ятарласа хăйсене валли уçнă хупахсенче ĕçсе супса, сутăнчăк йышши хĕрарăмсемпе ашкăннă вăхăтрах, вĕсем хупахĕ-мĕнĕпех сывлăшалла сирпĕннĕ. Кĕлпе тĕтĕм çеç юлнă вара фюреран вăрă-хурахĕсенчен! Çамкисене çурнисен, ал-урисене хуçса янисен шучĕ те пулман. Каччисем пуйса таврăнасса чунтан кĕтекен Мартăсемпе Бертăсен ĕмĕчĕсем çĕрĕк кантра пекех таталнă...

Анчах малашне тата ытларах шар курмалла пулнă-ха вăл амасен.

1941 çулта питех те инçетри, анчах калама çук илĕртекен Хĕвелтухăçне поход пуçланнă. Ганс Шпанке ним майсăр хавасланнă — вăл çĕнтерÿ çăмăллăнах пуласса, хăйĕн мăнтăр кĕсре пек Матильди валли темĕн тĕрлĕ хаклă япаласем çаратса тултарасса шаннă... Вăл хăйĕн çĕвĕклĕ çамкине каçăртса, мăн кăмăллăн утнă.

— Нах Остен! Нах Москау!

— Хĕвелтухăçнелле! Мускав çинелле!..

Çĕвĕкĕсем питех ан курăнччăр тесе, Ганс çамки урлă вăрăм çÿç пайăрки усăнтарнă — шăпах хăйсен «фюререн» пек. Анчах çамки пирки вăл пĕртте шикленмен: ăна никам çĕмĕрме те, шăтарма та пултарас çуккине шаннă.

Анчах, кĕр еннелле сулăнсан, çав çамка сасартăк... шăнма тытăннă. Ганс, сивве юратмансккер, пилоткине аяларах пусса лартнă. Усси пулман. Ирĕксĕрех пĕр вырăс карчăкĕн пуçĕнчен ăшă тутăр сĕвсе илме тÿр килнĕ. Анчах çанталăк тата ытларах сивĕтнĕ те çамка тата хытăрах шăннă, тÿсмелле мар шăннă, хăш чухне вăл пăрланса ларнă пекех туйăннă. Халь вара ăна та-

руках виçĕ тутăрпа тата тепĕр кофтăпа чĕркемелле пулнă...

Сивĕсем пуçланнипе пĕрлех, ку яхăнта тата Хĕрлĕ Çар питĕ хăватлăн çите-çите çапнă. Кун пек пуласса чугун çамкаллă Ганс пачах та кĕтмен, шутламан та ун çинчен. Çавăнпа та вăл халь хытах шикленме тытăннă. Каçсерен, çўç тăрăх шуса анакан пыйтăсене ывçи-ывçипе шăлса тăкса, ку çĕршывран епле те пулсан тарса çăлăнасси çинчен кăна шутлана вăл.

«Çăлăнăç» хăех пырса тухнă. Пĕрре, питĕ сивĕ, çилтăманлă каç, Гжатск хули таврашĕнче, вĕсен роти йышăннă яла совет пехотинецĕсем сасартăк пырса атакăланă. Хĕрлĕ çăлтăрлă çынсем, хăлха хупланмалла «урра» кăшкăрса, Ганссен траншейне сиксе кĕнĕ. Ганс вĕсене хирĕç пеме тăнă, анчах çав вăхăтра Сизов хушаматлă тĕреклĕ хĕрлĕ армеец ыткăнса пынă та, пĕтĕм вăйне пухса, Ганс çамкинчен прикладпа çапнă. Гансăн чапа тухнă арийски çамки кивĕ чўлмек пек арканса кайнă...

Çапла вара «Мертвая голова» дивизинче тата тепĕр... вилĕ пуç хушăннă.

1942.



## ФРИЦ МЮЛЛЕРӐН ПУРНӐҪӖПЕ ВИЛӖМӖ

Хайӗн ӗмӗрне Фриц Мюллер юрласа та ташласа кӑна ирттернӗ. Пурнӑҫӗ ытлашши савӑнӑҫлӑ пулнӑ пирки мар ташланӑ вӑл. Ҫук. Ташланипе хӑйӗн валли ҫимелӗх ҫӑкӑр ӗҫлесе тупнӑ. Хайӗн валли, тата хӑйӗн арӑмӗ — фрау Берта валли...

Сӑмах килнӗ май, фрау Берта пирки ҫакна калас пулать. Фрицпа малтанхи хут паллашсанах вӑл ун умне ҫакӑн пек татӑклӑ ыйту лартнӑ:

— Эпӗ ман валли кунне пӗр килограм ҫӑкӑр тата тепӗр турилкке яшка тупма пултаракан ҫынна ҫеҫ качча тухма килӗшетӗп...

Кун пек каччӑсем вӗсен пӗчӗк хулинче сахалтарах пулнӑ, ҫавӑнпа та Фриц Мюллер, хӑй хӑрах куҫлӑ пулнӑ пулин те, Бертӑшӑн питӗ килӗшӳллӗ мӑшӑр пулса тӑнӑ. Хӑй ӑна чунтан-вартан юратни ҫинчен тупа тунипе пӗрлех, Фриц ак ҫапла систернӗ ӑна:

— Эп юрласа ташлакан хупахра хӑнасем хыҫҫӑн сӗтел ҫинче тӗрлӗ татӑксем юлаҫҫӗ, вӗсене яланах кӗсъене пуҫтарса чикме май пур... Ӗнер те акӑ икӗ кукӑль татки илсе килнӗччӗ-ха. Урӑхла калас-тӑк, эп сана нихҫан та выҫӑ лартассӑм ҫук!..

Ҫак сӑмахсемпе вара Фриц хӑйӗн шӗвӗр сӑмсаллӑ Бертин чӗрине ирӗлтерсех янӑ. Ҫавӑнтанпа хӑрах куҫлӑ вӑтӑ хусах Фриц Мюллер саккунлӑ упӑшка пулса тӑнӑ, хӑйӗн хытӑ кравачӗ ҫинче иккӗн ҫывӑрма тытӑннӑ. Эрешлӗн ҫырма юратакан писательсем пек каласан, ун чух илемлӗ ҫуркунне пулнӑ, шӑпчӑксем юрланӑ...

Фрау Бертӑн ҫак ҫӗнӗ упӑшки (йӗркипе шутласа пырсан, вӑл унӑн улттӑмӗш номерлӗ упӑшки пулнӑ) ытти арҫынсенчен нумай малта тӑни уйрӑммӑнах 1941

çулхи çулла лайăх палла пулнă. Ун чухне пур арçынсене те Российăна хирĕç вăрçа илсе кайнă, анчах Фриц Мюллер малтанхи пекех «Ĕçер-ха Гитлершăн!» ятлă хупахра юрласа, ташласа пураннă. Фронта илсе кайман ăна — унăн сылтăм куçĕ выраннe кантăкран тунă протез кăна пулнă-çке.

Фрау Берта куншăн çĕрĕн-кунĕн саваннă, хăйне çакăн пек хăрах куçлă упăшка тупса панăшăн турра тав тунă, чиркĕве кайса çуртасем лартнă. Унăн кўршĕ арăмĕсем вара, Бертăпа Фриц çакăн пек телейлĕ пураннине кура, хăйсен çамрăк чухнехи йăнăшĕсемшĕн çав тери тарăхса ўпкелешнĕ:

— Епле ухмах пулнă эпир! Епле айван! Мĕншĕн-ха çавăн чух эпир Гитлер пек хăрах куçлă е Геббельс пек хăрах уралла упăшкасем тупман пуль? Паян кун та мăшăрпа пурăнмалла...

Анчах праçник яланах пулмасть çав. Фрицшăн та хура кун çитсе тухнă. Ăна та вăрçа илсе кайнă.

Ку ĕç пĕтĕмĕшпех чăн-чăн нимĕçле меслетпе пулса иртнĕ.

Пĕр каçхине Фрицсен хупахне ăратлă айăрсем евĕрлĕ виçĕ эсэсовец пырса кĕнĕ. Вĕсем Фриц пыршисене таварса кăларас пек мекĕрленсе юрласа тăракан эстрадăна хирĕç пырса ларнă та, шнапс ĕçе-ĕçе, ун çине шăтарас пек пăхма тытăннă. Фриц тўрех сиснĕ вара кунта темле ырă мар ĕç пулма пултарассине. Юрласа пĕтернĕ-пĕтерменех, çак шанчăксăр хăнасене юрас шутпа, вăл: «Хайль Гитлер!» тесе кăшкăрасшăн пулнă. Анчах ĕлкĕреймен. Пĕр эсэсовецĕ ăна аллинчен çавăрса тытнă та хăйсен сĕтелĕ умне сĕтĕрсе пырса тăратнă.

— Ĕç! — тенĕ ăна.— Фюрер сывлăхĕшĕн, Германи çĕнтерĕвĕшĕн!

— Ырă кăмăлпа ĕçтеретпĕр сана!..

Фриц пĕр сăмахсăрах ĕçнĕ. Хăйне çавăн пек чыс тунăшăн питех те савăнса кайнă вăл. Анчах самантрах унăн çан-çурăмне сив тар тапса тухнă...

— Фюрер сана Хĕвелтухăçне кайма, Германи валли çĕнĕ çĕрсем тытса илессишĕн çапăçма сĕнет,— тенĕ ăна пĕр эсэсовецĕ, пуринчен те самăртараххи тата хаяртарах сăнли.— Хăвăн ирĕкўпе, чăн-чăн ариец, тап-таса юнлă нимĕç пулнă май...

— Эп хавас... Эп яланах хавас...— ăнланмалла мар мăкăртатма тытăннă Фриц,— анчах ман сулахай куç

кăна... Эп пăшал пеме пултараймастăп. Мана халь те çавăн пирки хăварнă...

— Çитĕ,— сăмахне шăл витĕр сăрхăнтарса кăларнă çакна илтсен тепĕр эсэсовецĕ.— Эхер те эсĕ, йытă вилли, фронта хам ирĕкпе каятăп тесе çак самантрах хут çырса памасан, эпĕ санăн юлашки куçна та çапса шăтаратăп!

Çавăнтах вăл хăйĕн танксене хирĕç кĕрешмелли гранатă пысăкăш чышкине Фриц пичĕ умĕнче çавăркаласа илнĕ.

— Анчах та вăл саккунсăр пулать...—кăшт çеç илтĕнекен сасăпа юлашки хут мăкăртатса илнĕ Фриц. Ку вара унăн чи пысăк йăнăшĕ пулнă. Çав самантрах ăна эсэсовец мĕн пур вăйĕпе икĕ куç хушшинчен питĕ лайăх панлаттарнă та, вăл палтăрах йăванса кайнă...

Тăна кĕнĕ çĕре вăл сборнăй пунктра пулнă. Сысна шăрчĕ пек уссиллĕ, хĕрлĕ сăмсаллă фельдфебель ăна мундир тыттарса, пилĕк минутран хатĕрленсе çитме хушнă. Ĕнерхи пекех хĕнесе тăкасран хăраса, Фриц пырне лартнă курак пек кранклатма тапратнă:

— Хайль Гитлер! Хайль, хайль, хайль...

Çапла вара вăл салтак пулса тăнă.

Çав кунах, арăмĕпе сыв пуллашма та ĕлкĕреймесĕр, хăйсен хулинчен тухса кайнă. Ун чухне кĕркунне пулнă, çумăр çунă...

Анчах та ĕçе пуçлама йывăр, пĕр пуçласан каfive вара, теççĕ. Фриц хуть те мĕне те хăвăрт хăнăхакан çын пулнă та, часах, хăйĕн Берти пирки хуйхăрма пăрахса, нимĕç салтакĕн пур йăлисене те вĕренсе çитнĕ. Вăл питех те ăста çаратма, ачасемпе хĕрарăмсене, ват стариксемпе карчăксене вĕлерме, мирлĕ ялсене вут тĕртсе çунтарма хăнăхнă. Кĕскен каласан, чарусăр мерзавец пулса тăнă.

Çав вăхăтрах хĕл çывхарса килнĕ.

...Фриц Мюллер ялсем тăрăх чăх майĕсене пăрса нумаях пурăнайман. Смоленск таврашĕнче пĕр-ик эрне тăнă хыççăн вĕсен батальонне Мускав еннелле куçарма тытăннă.

Вокзалта темле обер-офицер, Гитлер пек пулма тăрăшса сăмси айне пĕр чĕптĕм хура усси ӳстернĕскер, питех те хаяр сăмах каланă:

— Российă пĕтесси нумай юлмарĕ! Тепрер хут хыттăн пырса çапсассăн, эпир большевиксен столицинче

парад таватпӑр. Вара вӑрҫӑ пӗтет те — эпир хамӑран гретхенсемпе медхенсем * патне таврӑнатпӑр, ҫавӑнпа пӗрлех хамӑр ӗмӗрлӗхе чапа тухатпӑр!..

Салтаксем ҫав обера итлесе сурчӑкӗсене ҫӑтса тӑнӑ. Кашниех хӑйӗн валли Мускаври магазинсемпе хваттерсенчен епле пуян трофейсем сӗтӗрсе кӑларасси ҫинчен ӗмӗтленнӗ. Вӗсемпе пӗрлех Фриц Мюллер та савӑнса тӑнӑ. Ун кӗсйинче Российӑра ҫаратса киле ямалли япаласеч списки те выртнӑ. Пурӗ унӑн 250 тӗслӗ япала «организацилемелле» пулнӑ — тилӗ тирӗнчен ҫӗленӗ кӗрӗкрен пуҫласа хӗрарӑм йӗмӗсем, ача юласран сыхланмалли резин япаласем таранах...

Ҫул ҫинче Мюллер телейлӗ тӗлӗксем курнӑ. Вӑл ӗнтӗ Хӗвелтухӑҫӗнчен таврӑннӑ пек... Ӑна фрау Берта ывӑнма пӗлмесӗр ачашлать. Кӳршисем Фриц Российӑран илсе килнӗ хаклӑ пурлӑх ҫине ӑмсанса пӑхаҫҫӗ. Кӑмӑлӗ тулса ҫитнипе Фриц ирӗлсех кайрӗ. Анчах сасартӑк темскер кӗрӗслетрӗ, кӗмсӗртетрӗ, ишӗлсе анчӗ, пуҫран пырса ҫапрӗ... Ҫӳлти сак ҫинче выртса пынӑ Фриц тӑруках урайне татӑлса анчӗ, сӑмсинчен ҫурхи шыв пекех юн юхма тапратрӗ. Вӑл ура ҫине сиксе тӑрасшӑн пулчӗ, тахӑшӗ ӑна атӑ кӗллипе тапса каялла ӳкерчӗ, тепри ҫавӑнтах унӑн хырӑмӗ ҫине пусрӗ, вара вӑл хӑйӗн урлӑ пӗтӗм ротӑ чупса каҫса кайиччченех урайӗнче пӗрене пек выртрӗ...

Кайран тин пӗлчӗ Фриц: вӗсен эшелонне совет самолечӗсем бомбӑсемпе ӑшаланӑ иккен. Фрицӑн нумай юлташӗсен ҫавӑн чух мӗн курмалине курма тивнӗ: хӑшин аллисем, хӑшин урисем, теприсен пуҫӗсем те татӑла-татӑла ывтӑннӑ.

Ҫав каҫах вӗсене малти линие, сивӗ те тарӑн окопсене илсе пынӑ.

— Ҫакӑнтан эпир Мускав ҫинелле тухса каятпӑр,— тенӗ ротӑ командирӗ.— Ан хӑрӑр, пирӗн пӗтӗмпе те пӗр вӑтӑр километр ҫеҫ каймалла. Хӗрлӗ Ҫар ҫук ӗнтӗ, ҫул уҫӑпа пӗрех. Ҫӳлерех каҫӑртӑр пуҫӑрсене! Хытӑрах чӑмӑртӑр пӑшалсене! Хайль!

Пӗр виҫӗ кун хушши ӗҫсем аванах пынӑ. Фриц, ку хушӑра лӑпланма ӗлкӗрсе, хӑйӗн пулас трофейӗсен спискине тата тепӗр хут вуласа тухнӑ.

* Арӑмсемпе хӗрсем (нимӗҫле).

Унтан сасартӑк нимӗнле ҫамахсемпе те каласа памалла мар ӗҫсем тапранса кайнӑ. Вырӑссен артиллерийӗ нихҫанхинчен те хытӑрах пеме тапратнӑ, пӗлӗтре хӗрлӗ ҫалтӑрлӑ самолетсем вӗҫӗ-хӗррисӗр вӗҫнӗ, бомбӑсем тӑкнӑ, танксем ҫӗр кисрентерсе ыткӑннӑ, тем те, тем те! Вырӑссен пӗр юрринчи пек — нимӗҫсен пуҫӗсемпе кӗлеткисем унталла та кунталла сирпӗннӗ, вӗсем шӑнтакан чир тытса пӑрахнӑ чухнехи пек те мар чӗтресе выртнӑ.

Фриц хӑйӗн винтовкине пӑрахнӑ та тарма пикеннӗ. Вӑл каялла пӑхмасӑр чупса ытти нумай салтаксенчен, лашасенчен, тепӗр чух машинсенчен те иртсе кайнӑ. Фриц нихҫан та спортсмен пулман, анчах халӗ ӑна пӗр чемпион та хӑваласа ҫитеймен пулӗччӗ. Этем майсӑр хытӑ чупнӑ! Анчах ҫапах та хурлӑхран тарса хӑтӑлайман: пиллӗкмӗш километртра ӑна совет снарячӗ хӑваласа ҫитнӗ те пӗр осколокӗпе урине хуҫса пӑрахнӑ...

Малалла мӗн пулнӑ, тетӗр-и?

Нумай вӑхӑт госпитальте выртнӑ хыҫҫӑн, Мускава ҫавӑрса илеймесӗрех, текех ӗнтӗ трофейсем ҫинчен те шухӑшлама пӑрахса, Фриц тӑван хулине таврӑннӑ— ӑна отпуск панӑ.

Юлашки портсигарне сутсах арӑмӗ патне телеграм ҫаптарнӑ пулин те, вокзалта ӑна никам та кӗтсе илмен. Хула тӑрӑх унӑн пӗчченех танккама тӳр килнӗ. Тепрер ик сехетрен вӑл хӑй хваттерне ҫитсе алӑк ҫумӗнчи шӑнкӑрав тӳми ҫине пуснӑ. Вӑл ҫав самантрах хӑй патне Берта сиксе тухса ыталаса илессе кӗтнӗ. Анчах Берта тухман...

Вара Фриц аллинчи костылӗпе шаккама тапратнӑ. Ҫавӑн хыҫҫӑн тин шалта тахӑшӗ кӑмӑлсӑррӑн мӑкӑртатни илтӗннӗ.

— Мӗнле йытӑ ҫӗмӗрлет унта? Мӗн шуйттанӗ кирлӗ-ши ӑна?!.

Фриц чӗри картах тунӑ. Ытла та паллана пек туйӑннӑ ӑна ҫак хулӑн сасӑ...

Вӑл йӑнӑшман: пӳлӗм алӑкне уҫса кӗртсен, вӑл хӑйне темиҫе уйӑх каялла хупахра хӗнесе «доброволец» туса хунӑ эсэсовеца курнӑ. Вӑл ерипен кӑна тумланнӑ, фрау Берта ҫӳҫӗсене тирпейлесе тӑнӑ.

Фриц пӗтӗмпех ӑнланса илнӗ... Тарӑхнипе ниҫта кайса кӗрейми чӗтресе, вӑл эсэсовец патне сиксе пынӑ та ӑна туйипе пуҫӗ урлӑ ҫапнӑ. Анчах ҫав самантрах

хирĕç туяннă — эсэсовец ăна пĕркунхи пекех икĕ куç хушшинчен панлаттарса алăк патнелле вăркăнтарнă та, Фриц тăнсăр пулса выртнă.

Ирхине ăна гестапона илсе кайнă, «влаçсене пăхăнманшăн» суд тунă та икĕ эрнерен, туясăр утма тытăнсан, каллех малти линие янă.

Ăна паллана çынсем каланă тăрăх, вăл çапах та пур хуйха-суйха манса кайса, часах каллех совет çĕрĕнчи пуянлăхсем çинчен ĕмĕтленме тытăннă, тет. Анчах пуянлăх выранне пĕр çапăçура совет пулине туяннă та тахçанччен Ржев хыçĕнче йытă вилли пек йăваланса выртнă.

Ку вара 1942 çулхи кĕркунне пулнă...

1942.

# ЛИТЕРАТУРĂПА ИСКУССТВĂ КАРТИШĔНЧЕ



*...Литературăпа искусствă картишĕнче те тепĕр чух ытла тап-таса та яп-яка пулмасть. Унта та час-часах тарăхмаллисем те, вар тытса кулмаллисем те тупăнаççĕ. Хăшĕсем, ава, виç-тăват сăвă пичетлесе кăларсанах хăйсене классик теме тытăнаççĕ. Пур çĕрти пекех, кукăр алăллисем те тупăнаççĕ — çын çырнисене шăхăрткалаççĕ. Халтурă та сахалах мар-ха. Театр таврашне илсен, унта пенсие кайма вăхăт çитнисем те Нарспипе Сетнере вылясшăн харкашаççĕ. Художниксем хăлĕ те-ха тарăн çырмасенчи тӳнме пуçланă кив мунчасене ӳкерме ытларах кăмăллани палăрать...*

*Пур çитменлĕхсем, пур!*

*Ма-ха эппин вĕсен тĕлĕпе курмиш пулса иртес? Мĕншĕн кулас-тăрăхлас мар вĕсенчен?*

# ХӐРУША ИР



Шӑрша-маршӑ тӗрлӗрен пулать. Кашниех тата хӑйне уйрӑм шӑрша юрататъ. Пӗри, сӑмахран, хуран тӗпне ҫунса ларнӑ пӑтӑ шӑршине ытараймасть, ҫав ҫунӑк пӑтта вӑл кусарпах хырса илет те вӑрахчен сӑмси умӗнче тытса киленет, унтан вара хаклӑ йышши канфет ҫинӗ пекех ҫиет ӑна. Тепри эрех лавккинчи шӑрша юрататъ — унта вӑл кунӗпех сӑмсипе нӑш-нӑш туса тӑма хатӗр, виҫҫӗмӗшӗ пачах урӑхла — санитарипе гигиенӑ магазинӗ тӗлӗпе каллӗ-маллӗ уткалать. Тата тула тухмалли вырънсене сапакан хлоркӑ шӑршишӗн каҫса каякансем те пур, теҫҫӗ.

Манӑн хамӑн та юратнӑ шӑрш пур. Эпӗ типографи сӑррин шӑршине ытараймастӑп.

Калӑпӑр, журнал («Ялав-и» унта, «Капкӑн-и», пурӗ пӗр) пичетленсе тухать те, ӑна ир-ирех почтальон сан патна пырса хурать. Тытӑнатӑн ун страницисене уҫма. Вӗсем лайӑххӑн типсе те ҫитмен-ха, вырӑнӗ-вырӑнӗпе типографи сӑрри йӑлтӑртатсах тӑрать. Ах, ытла та лайӑх шӑрш кӗрет-ҫке ҫав страницӑсенчен! Ун пек тутлӑ шӑрш тӗнчипе те урӑх ҫук пуль ҫав! Пуринчен ытла — ҫав страницӑсем ҫинче санӑн хӑвӑн калаву пичетленнӗ пулсан!..

Пӗрре, ҫавнашкал, тин ҫеҫ ҫапӑнса тухнӑ журнала алла тытрӑм та хамӑн калава курах кайрӑм. Паллах ӗнтӗ, шутсӑр савӑнтӑм! Малтан журнал страницисене каҫса кайса шӑршларӑм, унтан калавӑн пирвайхи йӗркинчен пуҫласа ун вӗҫне ҫитиччченех, мӑнтӑрккa хура саспаллисемпе пичетленӗ хамӑн ятӑмпа хушаматӑм та-

ранах пӗр точкăпа запятойне те сиктермесӗр вуласа тухрăм.

Аван...

Мана паллакан ҫын сахал мар, как-никак район центрӗнче пурăнатăп, ЗАГСра делопроизводительре ӗҫлетӗп, унта халăх пырсах тăрать — ача ҫуралсан та, ҫӗр ҫулхи карчăк хăйӗн ывăлӗ-хӗрӗсемпе йышлă мăнукӗсене ҫӗр ҫинче нумай-нумай пурăнма хушса хăварса леш тӗнчене ăсансан та, авланас килсен те, упăшкипе арăмӗ пӗр-пӗрине юратма йăлăхса ҫитнипе уйрăлма кăмăл тусан та, пирӗн пата пыма тивет-ҫке!

— Ман клиентсем пурте вулаҫҫӗ ӗнтӗ... Анчах мӗн калӗҫ-ши вӗсем ку калав пирки? Ах, ҫавна пӗлесчӗ! Вулакан — писательшӗн чи аслă судья, теҫҫӗ вӗт-ха! — Ҫакăн пек шухăшласа, эпӗ ҫăвара пирус хыпрăм та хамăн хыта диван ҫине тăсăлса выртрăм. Паш! паш! тутаратăп пируса, ҫăра кăвак тӗтӗме ҫăвартан ункăн-ункăн кăларса яратăп, темшӗн кӗҫӗтме тытăннă хыръма хыҫкаласа илетӗп...

Ҫавăн пек ырă, тулли кăмăлпа выртнă вăхăтра сасартăк ман хваттер алăкӗ уҫăлчӗ те пӳлӗме районри универмагăн эрех сутакан секцинче ӗҫлекен Мăн Якур кӗрсе тăчӗ. Пит хаваслă хăй, куҫӗсем йăлтăр-ялтăр тăваҫҫӗ, сăнӗ-пичӗ ҫав тери савăнăҫлă, тути йăл та йăл кулса илет.

— Салам, писатель, ырă кун пултăр сана, хамăр районри Чехов-Тургенев! — алăк патӗнченех аллине ҫӗклесе утрӗ вăл ман патăмалла.— Вуларăм, ёлки-моталки! Вуларăм та питӗ хӗпӗртерӗм, тавтапуҫах сана!..

— Мӗн вуларăн?— ыйтрăм эпӗ, вăл мана мӗншӗн тав тунине ăнлансах ҫитеймесӗр.

— Калавна вуларăм ара! Ак ҫакна!— Вăл ҫур метр сарлакăш галифе кӗсйинчен тăватта хутлатнă журнала туртса кăларса сӗтел ҫине ҫатлаттарчӗ.

— Маттур эсӗ, ёлки-моталки, ей-по пултаратăн! Ытама кӗми спаҫҫипă сана!— ывăҫ тупанӗсене сăтăркаласа илчӗ кӗтмен хăна.— Пӗлетӗп, чылайăшӗ юратмаҫҫӗ мана, тиркеҫҫӗ, тепӗр чух шалăп кӗнеки ҫине те ҫыраҫҫӗ ман ҫинчен — ӳсӗртерех ҫынсене улталатăп иккен эпӗ, укҫа каялла тӗрӗс таврăрса памастăп, тепӗр чух руп-твацăть тăракан кӗленче выранне руп-тве тараканнине тыттарса яратăп имӗш, пичкепе илсе килнӗ эрехе шывпа хутăштаратăп пулать. Анчах эсӗ пачах

урăхла çырнă ман çинчен! Вуласа саванччăр халь. Кӳрха аллуна, таванăм! — вăл хайĕн алтăр пек аллипе ман алла ярса тытрĕ те çатăрр! пăчăртарĕ. Шатăрах турĕç ман мĕскĕн пӳрнесем, пĕр шăмă та юлмарĕ пуль, терĕм, ик куçран та куççулĕ шăпăртатса анчĕ.

— Пин хут спаççипа!— мĕкĕрсе илчĕ Якур. Ахаль тумастăпах сана куншăн, ёлки-моталки, эпĕ хама ыр тунине манакан çын мар!..

— Чим-ха, Якур, ăнланаймастăп-ха эпĕ, мĕншĕн тав тăватăн эс мана? — ыйтрăм çакăнтан.

— Епле мĕншĕн пулать? — тĕлĕнчĕ Якур. Унтан хăрах куçне хĕсе-хĕсе чеереххĕн кулса илчĕ.— Юри пĕлмĕш пулса ан лар эсĕ. Чухламастăн пулать?

— Тупата нимĕн те пĕлместĕп!

— Ман çинчен ырласа çырнăшăн тав тăватăп!

— Ăçта? Ăçта çырнă эп сан çинчен?

— Ак тата, ёлки-моталки! Журналта çырнă-иç? Эп ĕнтĕ ним ăнланман çын та мар, куçсем те лайăх кураççĕ... Хăвăн калавăнти фермă ĕçне çĕклесе яракан Якур кам вăл? Эпĕ вĕт, ман çинчен çырнă ăна! Ытла точнах мар, çапах та — эпĕ вăл. Ман пекех тĕреклĕ, хул пуççийĕсем — аршăн сарлакăш, куçĕсем симĕс, çӳçне каялла, ĕнсе çинелле тураса хурать...

— Эп хам калава çырнă чух сан çинчен аса та илмен,— тĕрĕссипе каласа хутăм çакна.

Анчах Якур мана итлесшĕн те пулмарĕ.

— Епле аса илмен пулать? — терĕ вăл.— Ăçтан-ха эппин сан калавăнти Якур ман пекех пулса тухнă? Каснă-лартнă ман пек! Ячĕ те манăн, пĕвĕ те... Тата пĕр çĕрте, бухгалтерпа ятлаçнă чух, «ёлки-палки», тет, ку вăл «ёлки-моталки» тенипе пĕрех вĕт?

Эп тӳсеймерĕм, кулса ятăм.

— Сан пекех чăвашла калаçать тата, çапла-и?

— Вăл та пур. Анчах эс ан кул-ха çапах та, тунма ан тăрăш! Эп сана халех тытатăп ака — ниçталла та пăрăнаймастăн вара, йышăнмаллах пулать эпĕ тĕрĕс каланине...

— Мĕнпе тытăн-ши?

— Ак мĕнпе! — Якур журнала уçрĕ те, шĕвĕр пӳрнине шутарса пырса, пит хăвăрт тем шырама тытăнчĕ.— Ака, тупрăм! Во! — терĕ те унтан, журнала ман сăмса умнех илсе пычĕ.— Çакă мĕн вăл, ёлки-моталки? Сан Якурăн утти те ман пекех, урисене ак çапла

урларах ярса пусать вăл. Тата... ха-ха-ха, маттур та çав эсĕ! Янах айĕнчи шĕпĕн çинчен те манман! Çавăнтан тĕлĕнсех кайрăм...

— Мĕнле шĕпĕн тата? — çилĕ киле пуçларĕ манăн.—Санăн унта нимĕнле шĕпĕн те çук-иç, янахху яп-яках!

— Халь çук, анчах пулнă. Эсĕ иртнĕ вăхăт çинчен çыратăн вĕт-ха? Ас тăватăн-и, виçĕм çул манăн янах айне тем пысăкăш ӳпне çăпан тухрĕ те эп уйăх ытла асаплантăм, кайран çав тĕлте пĕр муклашка пулса юлчĕ... Ас тăватăнах ĕнтĕ! Çав муклашка халь те пур, пӳрнепе кăшт хыпаласанах тупănать. Акă, ху та тытса пăхма пултаратăн. Халь кала ĕнтĕ — çăпан йĕрĕпе шĕпĕн хушшинче мĕнле уйрăмлăх пур? Çук вĕт нимĕнле уйрăмлăх та! Тытрăм вĕт сана хайхи, ха-ха-ха! Ну, писателех çав эсĕ, чисти Толстоевский, икĕ çул ас туса пуранна ман шĕпĕн çинчен! Тата тепĕр хут тав тăватăп сана çавăншăн, ёлки-моталки, ĕмĕрлĕх чапа кăлартăн! Халь ĕçме иртерех-ха, анчах вара, ĕç хыççăн, пĕр кĕленчине хĕстерсе кĕретĕпех сан патна, манăн леш пилĕк çăлтăрла коньяк пур — çĕнĕ çултах пытарса хăварнăччĕ... Яратпăр пĕрре! Писательпе ĕçсе курам хуть...

— Йăнăшатăн эсĕ, Якур! Сан пирки мар вăл калав! — аптранă енне кăшкăрсах ятăм эпĕ.— Самахран каласан, эсĕ колхоз ферминче нихçан та ĕçлемен вĕт, ĕнесем патне пырса та курман!

— Э-э, вăл ниме те пĕлтермест! — ал сулчĕ алăк патне çитнĕ Якур,— ялта пуранна чух фермăра пулкаланă эпĕ, унти хĕрсем патне те чылай çӳренĕ. Ăшă сĕт те сахал мар ĕçнĕ. Ну, халлĕхе сывă пул-ха эппин... Каçхине кĕретĕп, закуски те хамăннах пулать. Эх, ёлки-моталки, Чехов-Тургенев!..

Якур мана тата тепре вĕл-вĕл ал сулчĕ те ахăлтатса кулсах тухса кайрĕ. Эп ним тума пĕлмесĕр лартăм. Лайăх-ши ĕнтĕ ку, япăх-ши? Ăçтиçук Якур ман калаври чи ырă героя йышăнса илнĕ. Килĕшнĕ эппин вăл ăна... Анчах кам та пулин калаври киревсĕр çынсене хăй пек туса шутлама тытăнчĕ-тĕк? Пулма пултарать вĕт ун пекки? Якурĕ, саваннипе, мана коньяк ĕçтеретĕп, терĕ-ха, анчах лешсем мĕн калĕç? Вĕсенчен ыррине кĕтме çук вĕт!..

Çапла шутласаттăм çеç, ман алăк чĕрик! туса уçăлчĕ те... пӳлĕме райпотребсоюз магазинĕн заведующийĕ,

таршшӗ те урлӑшӗ те пӗрешкел. Паранкӑ пек самси тахҫанах виноград эрехӗ тӗслӗ пулса кайнӑ ҫын кӗчӗтӑчӗ. Вӑл ман патӑмра ӗмӗрне пулман ҫеҫ мар, эп унпа ҫак тарана ҫитсе хире-хирӗҫ тӑрса та каласман. Нихҫан та кӑмӑлламан эп ӑна. Анчах халь акӑ...

— Мӗн кирлӗ-ши куна? — тӗлӗнсех кайрӑм эпӗ. Темшӗн, хамӑн чӗре те пӑчӑртанса илчӗ пӑртак.

— Килех, Куколев юлташ...— терӗм ҫапах та.— Иртсе лар малалла... Диван ҫине лармa та юрать...

Анчах вӑл мана хирӗҫ нимӗн те чӗнмерӗ, алӑк патӗнчи хыҫҫӑр пукан ҫине ларчӗ те мана темле кашкӑр пек пӑхса илчӗ, унтан васкасах пирус тивертсе ячӗ. Эп те чӗнмерӗм хайхи, вӑл та ҫавар уҫмасть. Пӗр икӗ минут иртрӗ ҫапла.

— Ырра мар ку...— шухӑшларӑм хам ӑшра.

Чӗре тӗрӗссинех сиснӗ манӑн. Куколев пирусне ҫине-ҫине ӗмсе пӳлӗме хура мунчари пек тӗтӗм тултарчӗ те, тӗпне урайне пӑрахса таптарӗ, сурчӗ, вара хашш! сывласа ячӗ.

— Так, значит, ҫыратӑн, да?—куҫӗсемпе тӑрӑнчӗ вӑл ман ҫине ҫавӑн хыҫҫӑн.— Хӑварӑн кооператорсене, хӑвӑра ҫӑкӑр-тӑвар ҫитерекенсене лапӑртататӑн?! Сан шутпа эпӗ ӗҫетӗп, значит, лайӑх таварсене пытарса усратӑп, вӗсене хамӑн ҫывӑх ҫынсене хыҫалти алӑкран парса яратӑп? Ҫапла-и? Анчах хӑҫан куртӑн эс ӑна? Тытрӑн-и мана? Тытса акт ҫыртӑн-и? Кала!

— Эс кирлӗ мара ан калаҫ-ха, Куколев юлташ...— хама тӳрре кӑларма сӑмах пуҫларӑм эпӗ, анчах та темшӗн манӑн тӑруках сас ҫӗтсе ларчӗ — эрнипе мухмӑр уҫнӑ пек.

— Мӗнле кирлӗ мара?! — кӑшкӑрса пӑрахрӗ вӑл мана.— Суйса ҫыртӑн, ҫынна вараласа хутӑн пулать те, халь тата тунса, тап-таса пулса юлас тетӗн-и? Чӑн та ӗнтӗ, питӗ чее ҫырнӑ эсӗ, ним палӑрми тума тӑрӑшнӑ, анчах эпир те чухлатпӑр ҫав, пире те пулчӗ-пулмарӗ улталӑйманӑн, тӗнчере пурӑнса курнӑ эпир те! Вуласанах тавҫӑрса илтӗм эсӗ кам ҫине шак хунине, кама чӗпӗте-чӗпӗте илнине!

— Сана вара эпӗ сан ҫинчен ҫырнӑ пек туйӑнчӗ-и? — чӗтреме тытӑннӑ сасӑпа ыйтрӑм эп унран.

— Ман ҫинчен пулмасӑр, шуйттан ҫинчен-им? Йалт ман пек туса пынӑ, юри мӑшкӑллама тӑрӑшнӑ! — чышкипе тӳнк! тутарчӗ комода.— Ман хуша-

мат — Куколев, кукӑль сӑмахран пулнӑ вӑл, эсӗ хӑвӑн кооператорна Пирожков хушаматлӑ тунӑ. Хам ятпа атте ячӗ те пӗр майлӑ — эп Ярмулай Иванч, санӑн — Иван Ярмулайч... Манӑн виҫ ача—унӑн та виҫҫӗ, манӑн арӑмӑн малти шӑлӗсем ылтӑн — ун арӑмӗн тимӗр... «Кӑкрисем малалла мӑкӑрӑлса тӑраҫҫӗ...» тенӗ тата. Мӗн ӗҫ пур санӑн ҫын арӑмӗсен кӑкрипе? Ма ҫыратӑн эс ун ҫинчен? Хӑвна хӗрарӑм кӑкрисем питех илӗртеҫҫӗ пулсан — тыт та авлан! Илсе яр авӑ пирӗн чайнайри Мархва-поварӑ, ку енпе вӑл тепӗр фермӑри ӗнерен те ирттерет!..

— Ытлашши калаҫатӑн, Пирож... Куколев юлташ! — халь ӗнтӗ хӑрама пӑрахса тарӑхма пуҫларӑм эпӗ.— Ним ҫукран ан кӳрентер ҫынна!

— Епле ним ҫукран, епле ним ҫукран?! — пукан ҫинче хӑйне аялтан йӗппе чикнӗ пек сиксе илчӗ вӗресе кайнӑ кооператор.— Пӗтӗм республикӑ умӗнче намӑс кӑтартрӑн та, ҫав вара «ним ҫукран» пулать-и? Картинкӑ ҫинчи пек ӳкерсе кӑтартнӑ-иҫ ман сӑна? Халь ӗнтӗ кашни паллакан ҫын кулать манран! Шупашкартисем мӗн калӗҫ? Акӑ, ҫитес эрнере унти пуҫлӑхсем мана отчетпа чӗнеҫҫӗ. Вӗсен куҫӗнчен мӗнле пӑхас манӑн, э? Эс ҫырса кӑларнӑ та — санӑн ӗҫӳ пӗтнӗ, анчах манӑн ӗмӗр тӑршшипе намӑс курас пулать. Мӗншӗн? Мӗн турӑм эп сана? Ман арӑм мӗнрен айаплӑ пулчӗ?!

— Итле-ха, Куколев юлташ,— епле те пулин лӑпкӑрах пулма тӑрӑшса калама тытӑнтӑм эпӗ,— ӑнлан-ха... Эп журналта ҫырни вӑл — ялкор заметки мар, пурнӑҫри чӑн фактсене илсе такама тӑрӑ шыв ҫине кӑларас шутпа ҫырнӑ материал мар, ку вӑл — художествӑллӑ произведени. Ӑна литературӑ, теҫҫӗ. Хамӑн геройсене эпӗ темӗн тӗрлӗ те туса кӑтартма пултаратӑп. Вӑл манӑн, авторӑн, ирӗкӗ.

— Пултараймастӑн, ун пек саккун ҫук!— урипе пат! тапса илчӗ Куколев.— Пурнӑҫра мӗнле пулнӑ — ҫапла ҫеҫ ҫырмалла, неччу унта хӑвӑнтан шухӑшласа кӑларма! Не имеешь правӑ вулакансен ӑсне-пуҫне пӑтратма!

— Литературӑ вӗт-ха вӑл, Куколев юлташ! Унта авторӑн фантазийӗ те, шухӑшласа кӑларни те пулма пултарать... Тавҫӑрса ил-ха эс ҫавна!— ӳкӗтленӗ пекех каларӑм эпӗ.

— Тавҫӑрса илнӗ ӗнтӗ, ак ҫак таранах!— Куколев

шĕвĕр пӳрнипе хайне майĕнчен çĕçĕпе касна пек туса илчĕ.— Элекçĕ эсĕ! Йалт суятан! Эп никама та хыçалти алакран тавар парса яман! Хаш-пĕр начальниксен арамĕсене ана-кана базаран парса янисем пулкалана, ана тунмастап, анчах лавккан хыçалти алакĕнчен — çук, паман, паман! Ухмах мар вĕт эпĕ халах умĕнче çаван пек хатланма, йӳтемен покалĕ. Ун пек тусан наччас лекме пулать, анчах базаран панине никам та асархамасть. Турра шĕкĕр, торговльара çирĕм çул ĕçлетĕп, тем тĕрлине те курна, анчах пĕрре те лекмен-ха!.. Ĕçет, тенĕ тата. Хаçан куртан эсĕ мана ӳсĕр çапкаланса çӳренине? Пĕлессӳ килет-тĕк, эпĕ çулталакра иккĕ ĕçетĕп, ревизи хыççан остаткасем снимать тусассан. Итту пĕччен мар, пĕтĕм ревизи комиссипе пĕрле. Чухлатан-и?

Куколев çак монолога калана чух манан вай пĕтсех килчĕ. Мĕнле анлантарас ана, мĕнле тан кĕртес? Аптрана енне, тата тепĕр хут:

— Литература вал, донос та, жалоба та, прокуратурана çырса пана заявлени те мар!— терĕм.

— Мана мĕн ĕç? — siксе тачĕ вал.— Литература, литература!.. Тупна пĕр самах! Такама кирлĕ пуль санан литературу! Эпир унпа лавккасенче селедка чĕркетпĕр çеç! Ĕнер кана кĕнеке магазинĕнчен пĕр лав сава кĕнеки тиесе пытамар — уценĕннайсене, пĕр штукĕ виçĕ пус. Ме, çи хаван литературуна!—Куколев хай аллинчи журнала лар-лар! çурчĕ те мана питрен печĕ.— Клеветник! Суда паратап ак сана, катартĕç унта... Çирĕм пилĕк процент тӳлесе тамалла принуд параççĕ те— пулать вара... фантази!

Куколев алака шалт-шалт уçса хупса тухса кайрĕ.

Хаман мĕскĕн пуçам чан пек янрама пуçланипе, кашт та пулин лапланас тесе, эп пӳлĕм алакне çаклатрам та каллех диван çине выртрам. Юрать-ха ĕçе каяс çукчĕ — вырсарникун пулчĕ ку. Канмаллаччĕ ĕнтĕ паян, анчах ун выранне ав епле калтармач пулса пырать!

Мачча çинелле ним тĕлсĕр пахса выртсан-выртсан, сисмесĕрех тĕлĕрсе кайна. Тĕлĕк курма та тытанна — суд умĕнче таратап пек. Мана çынсем çинчен элек сарнашан айапласçĕ. Судйи — леш Ман Якур, заседателĕсем — Куколевпа арамĕ. Ман Якур пĕрмай чышкипе сĕтел çине шанлаттарса варçать мана, анчах самахĕсене уйарса илейместĕп, сĕтеле çапни çеç пырса кĕрет ман халхана. Хытаран хыта шаккать...

Сасартăк варт! ăаранса кайрăм.

Чăнах та шаккаççĕ иккен. Анчах сĕтеле çапмаççĕ, алăка кĕмсĕртеттереççĕ. Ăна-кăна ним чухламасăрах сиксе тăтăм та кайса уçрăм. Пӳлĕме райисполком конюхĕ, кăвакал ами пек лутака, енчен енне сулăнкаласа утакан Калери кĕрсе тăчĕ. Районта ăна Кавалери теççĕ, мĕншĕн тесен вăл пĕр вунă çул ĕнтĕ лашасем патĕнче ĕçлет тата унăн лайăх пуслăх хулăнăш урисем те кавалеристсен пек кукăртарах. Икĕ ача тунă пулин те, хĕр шутланать-ха вăл, хăй валли кавалерсем те яланах тупать. Ытла тиркесех тăмасть вĕсене — тин çеç сухал шăтма пуçланисене те, пуç тӳпи якалнисене те пĕр пекех хĕрӳллĕн юратма пултарать, теççĕ. Паллах, эп ун çинчен точнă пĕлместĕп.

Вăл алăкран кĕрсессĕнех асăрхарăм: аллине журнал тытнă. Ман калав тухнă журнала... Пĕтрĕм! Ку та çавăн пиркиех килнĕ! Ăçта кайса кĕрес?! Тӳрех тăртăр-тăр чĕтреме тытăнтăм: ку кăтартать мана мĕн кăтартмаллине, кун аллинчен хăтăлаймастăн!.. Çапах та, ним пĕлмен-чухламан пек пулса, эп ăна маларах иртсе ларма сĕнтĕм, пукан та шутарса патăм. Анчах вăл ăна урипе пĕррех аяккалла тапса ячĕ те аллинчи журналĕпе хăйне мăнтăр пĕççинчен шарт! çапрĕ.

— Эсĕ мĕн, анчихрист юлашки, хăвăн йĕпе сăмсуна сысна пек пур çĕре те пырса чикетĕн? Мĕн кирлĕ сана? Мĕншĕн чип-чипер пурăнакан çынсем çинчен журналсенче кăларатăн? — тӳрех сиккипе наступление кĕрсе кайрĕ çак «кавалерист».

— Ăнланмастăп, Калери, мĕн çинчен калатăн эс...— ăна хирĕç чĕнме тăтăм эпĕ, анчах мана сăмах памарĕ вăл.

— Ак çакăн çинчен! — каллех пĕççине журналпа çатлаттарчĕ те вăл, ман паталла пыра пуçларĕ. Эп кăмака хыçнелле чакрăм.— Мĕн ĕç пур сан манпа? Кам эсĕ мана вĕрентме? Эпĕ кăвалярсемпе мар, качака такисемпе çӳресен те, не вашшă делă, понял? Эп тута сăрласа çӳрени сана хăш енчен пырса тĕкет? Краскине сан укçуна вăрласа илмен пуль? Ĕçкĕсенче кам такмакласа ташламасть? Ĕçсен ӳсĕр кам пулмасть? Ют упăшкасене хăçан илĕртнĕ эпĕ? Вĕсем хăйсем ман хыççăн чупаççĕ пулсан, уншăн эп айăплă-и? Э? Мĕн лăпăртаттса тултарнă эсĕ унта, асат çапса хуçманскер? Мĕнле причинпа мăшкăллама шутларăн эс манран, майракаллă

шуйттан? Ма чӗнместӗн? Ак, тытӑп та пӗрре, наччасра ӗмӗрлӗх чӑлах туса хурӑп, шивотьор!

— Сан ҫинчен ҫырман унта...— мӑкӑртатса илме ҫеҫ пултартӑм эпӗ, паҫӑрхи пекех чӗтресе.

— Епле ман ҫинчен мар?!— тата хытӑрах ҫухӑрса ячӗ хӗрарӑм.— Пӗр пуккине ҫеҫ улӑштарса лартнӑ-иҫ, Калери вырӑнне Валери туса хунӑ? Исполком секретарӗ Шаклашкин юлташ мана йӑлт ӑнлантарса пачӗ, сана пардернуть тунӑ, терӗ, улталайман! Каҫармастӑпахха сана куншӑн, тем пулсан та таваратӑп! Акӑ, юриех тепӗр ача тӑватӑп та сан ҫине ҫыртаратӑп, тапкаланӑн вара таппа лекнӗ кушак кайӑкӗ пек. Свитетлӗсем тупатӑп та алимент шайӑрма тытӑнатӑп!..

Эп чӗлхесӗр пулса лартӑм, Кавалери ҫаплах йӑсларӗ, вӑл мӗн кӑшкӑрнине халь ӑнланаймарӑм та ӗнтӗ. Маншӑн халь пурӗ пӗр ӗнтӗ, эпӗ вӑл пӗр-пӗр йывӑр япала илсе пуҫран янклаттарасран ҫеҫ хӑрарӑм, мӗншӗн тесен вӑл ҫак самантра тем те тума пултарнӑ...

Ну, тепӗр тесен, унӑн аллинчен вӗҫерӗнсе тарма та пулатчӗ-ха, ҫапах та вӑл — хӗрарӑм, вырӑссем пек каласан — «слабый пол», ҫапнинчен ытларах вӑл чавсатӑрмаласа пӗтерме пултарать ҫеҫ. Анчах ҫав вӑхӑтра ман хваттере тепӗр ҫын, ветеринари больницинче ӗҫлекен упа тӗслӗ фельдшер Амаев пырса кӗчӗ. Вӑт, унтан хӑрамалла-тӑк хӑрамалла вара!.. Амаев ӗҫмен кун та ҫук. Вӑл пӗрмай ялсем тӑрӑх сысна аҫисене, вӑкӑрсене касса ҫӳрет те, ҫав ырӑ ӗҫшӗн выльӑх хуҫисенчен нихҫан та укҫан илмест, «натурӑпа» тӳлеттерет. Ҫамӑллатнӑ кашни сысна аҫишӗн ҫур литр. Каҫхине вара урам ҫурӑлмалла юрласа таврӑнать. Ӑна никам та нимӗн те каламасть, мӗншӗн тесен ӑнсӑртран сӑмах хушсанах пит лайӑх хӑлха чикки туянма май пур. Пулкаланӑ ун пеккисем. Ҫыхса та пӑрахнӑ ҫавӑншӑн, райотделени ҫумӗнчи тимӗр решеткеллӗ пӳлӗм уншӑн пӗрре ҫеҫ мар гостиницӑ пулнӑ, унтан кӑларса янӑ чух вӑл: урӑх хам вӑя никама та кӑтартмастӑп, тесе тупа та тунӑ, анчах темиҫе кунтанах манса кайнӑ ун ҫинчен...

Чи хӑрушши — вӑл ялан ҫӗҫӗпе ҫӳрени. Сысна аҫисене ҫамӑллатнӑ чух унсӑр май килмест-ҫке, ҫавӑнпа та Амаев виҫ-тӑватӑ ҫӗҫӗпе ҫӳрени саккунлӑ япала тесе шутланать—«струмент» вӑл унӑн. Анчах та ҫав ҫӗҫӗсене вӑл сыснасем патне пыман чух та кӑларкаласа кӑтартать. Халӗ, ман пата кӗрсен те, ҫав «струмент» сумки

ун аллинчехчĕ. Тĕрĕссипе каласан, çав самантра райисполком конюхĕ Кавалери хам патра пулнăшăн савăнса та илтĕм — свидетель умĕнчех пусма хăймасть мана Амаев, тата Кавалери ман хута кĕме те пултарать пуль, терĕм.

— Аха, килте-ха, эппин, пирĕн писсăр! Пит аван, çав кирлĕ те пире,— терĕ Амаев, чăнкăртатакан сумкине алăк патне ывăтса.

Чун ура тупаннелле анса кайрĕ пулас манăн...

— Хулиган эппин-ха эпĕ, çапла-и?— малалла темиçе утăм ярса пусрĕ вăл.— Хĕрсене хотă памастăп? Намăссăр юрăсем юрлатăп? Çынсене лăпкă пурăнма кансĕрлетĕп? Çапла-и?— Эп чĕнмерĕм, вăл мана çисе ярасла пăхса, ыvăннă лаша пек хашкаса тăчĕ.— Мĕн тăвас ман сана куншăн? Тавай, мерă наказанине ху каласа пар — мĕнле ытларах килĕшет сана? Çупкăпа-и, тапкăпа-и е чышкăпах сăмса урлă парас? Кала!

— Литературă вăл... сан çинчен мар, унта фантази...— йынăшсах ятăм пулмалла эпĕ.

Амаев аллине хире-хирĕç тытса ман ума Наполеон пек тăчĕ.

— Литературă... лăтăртаттурă!.. Анчах эп сана ак çакăнтах çавăрса илсе хăвăн пилĕкне лăтăртаттарса хуçса хурсан, мĕн калăн-ши эсĕ, сысна шăрки?

— Мана тивме — эп айăплă мар, уншăн санăн ответ тытмалла пулать! — хăрани-мĕнĕпе темле çинçе сасăпа çухăрса ятăм эпĕ.

— А-а... санăн тата ответ тыттарассипе хăратас шуту пур-и? Йышăнмастăн эппин хăвăн айăпна, çапла-и? Пит аван, пи-итĕ аван апла пулсан... Хор-рошшо!— Амаев алăк патнелле таврăнчĕ те çĕрте выртакан сумкине илме пĕшкĕнчĕ, самантранах сумкăри çĕçĕсем чăнкăртатрĕç...

Эп вилме хатĕрлентĕм. Куççене хупрăм. Сыв пул, çут тĕнче! Сыв пул, çамрăк пурнăç, сыв пул, юратнă литературă! Виличчен пĕр кĕнеке те пулин кăлармаллаччĕ, çĕр çинче пĕр пĕчĕкçеç йĕр юлатчĕ хуть. Пулмарĕ...

Çут тĕнче çине юлашки хут пăхса илес тесе, куçа теппре уçрăм та... хам пÿлĕмĕн чÿречи тĕлĕпе милиционер утса иртнине курах кайрăм! Эп çавăнтах кăшкăрса ярасшăн, ăна чĕнсе илесшĕн пултăм, анчах пыра темскерпе пăкăласа лартнă пулмалла — сас тухмарĕ.

Ман тĕлее, самантранах çав милиционер хăех пырса кĕчĕ. Аллине çĕклесе пурне те саламларĕ те тӳрех ман çума пырса ларса çурăмран лăпкаса илчĕ.

— Вуларăм! Питĕ килĕшрĕ! — терĕ те вăл, планшетĕнчен журнал туртса кăларчĕ.— Маттур, лайăх çырнă! Уйрăмах, милици сержантне аван ӳкерсе кăтартнă. Епле паттăр вăл санăн, пĕр-пĕччен икĕ бандита тытса пырать! Çавăн пек пулмалла та ĕнтĕ пирĕн, тĕрĕс çырнă! Районти пур милиционерсен ячĕпех тав тăватăп сана ку калавшăн!..— Вăл Кавалерипе Амаев çине пăхса илчĕ.— Эсир вуланă-и? Вуламан пулсан — мейĕр, вуласа савăнăр!— журналне вĕсене пама тăчĕ милиционер.

— Вуланă, пĕлетпĕр,— ал сулчĕ те ăна хирĕç Кавалери, алăк патнелле утрĕ.

— Савăнтămăр вуласа...— мăкăртатса илчĕ Амаев. Çавăнтах çĕçĕ тултарнă сумкине çĕклерĕ те Кавалери хыççăн тухрĕ.

— Кусем ирех мĕн тума килнĕ сан пата? — ыйтрĕ милиционер.

— Калав пиркиех,— терĕм эпĕ.— Вуласа тухнă та, вăл хайсене кăмăла кайни çинчен килсе каларĕç...

## ÇИЧĚ МĂШĂР ÇĂПАТА

*Режиссер каласа пани*



Пёрёссипе, çак пётём истори пирён театрти реквизитор Мамайкин пирки пулса иртрё...

Реквизитор кам иккенне эсир пёлейместёр те пулё-ха, çавăнпа чи малтан ун çинчен ăнлантарса парам сире. Театрта питё палла çын вăл. Пысăк пуçлăх тесен те йăнăш пулмасть, мёншён тесен сцена çинчи пётём чапла пурлăх унăн аллинче: фанертан туна хакла йышши сётел-пуканё те, марлёрен майлаштарнă пысăк тёкёр-трюмосем те, хăмаран касса кăларнă кинжалсемпе пăшалсем те, шыв тултарнă шампанскипе коньяк кёленчисем те, тата ытти те, пурте, пурте, йăлт унăн аллинче. Орденсемпе медальсем те тёрлёренех пур унăн, кирлех пулсан — Ылтăн Çăлтăрсем те тупăнаççё.

Кёскен каласан, сцена çинче выляна чух артиста мёнле хатёр-хётёр кирлё — реквизиторăн çавна пёрре куç хупса илнё хушăрах тупса памалла. Унсăрăн май килмест, унсăрăн пётём спектакль пăсăлса кайма пултарать. Ара, хăвăрах чухламалла: артист сцена çине купăс выранне тăм чўлмек, е чечек çыххи выранне мунча милёкё йатса тухма пултараймасть ёнтё. Скандал вёт ун пек пулсан, курма пына халăх спектакль хыççăн мён пур кăмăлтан ала çупас выранне сцена çинелле çёрёк паранкăсемпе персе саламлама пултарать!..

Анчах та пытарма çук, пулкалать тепёр чух...

Сăмахран, иртнё сезонра пирён Мамайкин пёр спектакльте вун саккăрмёш ёмёрти чăваш хёрёсене нипоччом хальхи пăта пек çинçе, леш «шпильки» текен кёлёллё туфлисемпе выляттарчё. Паллах, курма пынисем

çак килĕшӳсĕр япалана тӳрех асăрхарĕç, кулма тапратрĕç... Антракт вăхăтĕнче ман пата колхозри комсорг пычĕ те тӳсме çук тăрăхласа илчĕ:

— Режиссер юлташ! Вун саккăрмĕш ĕмĕрте чăваш хĕрĕсем кун пек туфлисемпе çӳренĕ пулсан, ун чух радиолăсем те пулнă-тăр? Мĕн тума-ха эппин сценă çинче артистсене шăпăр каласа ташлаттаратăр? Ямаллаччĕ радиолă — Шупашкарти ташă площадкинчи пек. От, вăйлă пулатчĕ!..

— Кун пек çулпа кайсан, эсир Пугачев салтакĕсене танксем çине лартма та пултаратăр пуль? — йĕплерĕ тепĕр йĕкĕчĕ.

— Маттур ĕçлетĕр, ха-ха-ха!

Манăн пит-куç вут пек пĕçерсе кайрĕ, пĕр минут хушшинчех лачкам тара ӳкрĕм. Намăс! Тӳсме çук намăс вĕт!.. Пăх-ха эс, ялти сар туталлă йĕкĕтсем мана, театрта çирĕм çул ытла ĕçленĕ режиссера, сценă çинче историлле тĕрĕслĕхе пăснăшăн айăплаççĕ, манран куç умĕнчех кулаççĕ! Пăх-ха, пурнăç еплелле çавăрнса тухрĕ!..

Анчах та хирĕç ним калама та çук — йĕкĕтсен сăмахĕсем тĕп-тĕрĕсех.

— Эх, ку Мамайкина!..— Манăн чышкă хăех чăмăртанчĕ, шăла шатăртаттарса илтĕм. Пĕлетĕп-çке, çак намăса пĕр уншăн кăна курмалла пулчĕ пирĕн, пĕтĕмпех çав туса хучĕ! Колхоза спектакль лартма тухса каяс умĕн вăл хăйĕн реквизит ещĕкне çăпатасем пăрахса яма маннă ĕнтĕ. Ахальтен мар ăна пирĕн артистсем юлашки вăхăтра Мамайкин вырăнне Манайкин теме тытăнчĕç.

Тепĕр кунне, Шупашкара таврăнсан, эпĕ кун çинчен тӳрех директора каласа патăм та, вăл та ман пекех çилленсе кайрĕ.

— Ав епле ĕçлеме пуçларăмăр эппин! Ав епле искусствă кăтартатпăр хамăрăн хисеплĕ колхозниксене, пире çăкăр туса паракансене! Ял кулли вĕт ку! Ял кулли! Тепринче, тен, авалхи чăваш хĕрĕсене сценă çине балеринăсем пек тумлантарса кăларăпăр? Каччисене хальхи стиляжкăсем пек тăхăнтарăпăр?.. Ăçта вăл фокусник, чĕнсе килĕр-ха, эп ăна халех хăйĕн ирĕкĕпе ĕçрен тухма заявлени çыртаратăп!..

Мамайкин директор умĕнче малтанах питĕ хăраса, ни чĕрĕ, ни вилĕ тăчĕ.

— Мĕн хăтланатăн эсĕ, мĕн туса хутăн ĕнер, çавна чухлатăн-и? — çилĕпе, шăл витĕр ыйтрĕ директор.

— Айăплă, Пимен Фомич,— пăшăлтатса илчĕ Мамайкин, директор мĕн пирки каланина тӳрех ăнланса.

— Кала-ха, эсĕ мĕн, ӳсĕр пулнă-и? Е гастроле тухса каяс умĕн арăмупа çапăçрăн-и? Хĕрсем сырса тухмалли çăпатасене мĕн пуçпа манса хăвартăн?!

Мамайкин, хĕсĕк куçĕсене мăч-мăч-мăч тутарса, ассăн сывласа ячĕ.

— Эпĕ вĕсене манса хăварман, Пимен Фомич...

— Епле манса хăварман? Ăçта пулнă-ха вĕсем? Мĕншĕн эппин артисткăсем пурте пăта пек кĕлĕллĕ туфлисемпе выляна? Ай, эсĕ тĕплĕн хума пĕлменнипе, çăпатисене çул çинче акса хăвартăн-и? Санран, сӳрĕкрен, тем те кĕтме пулать!

— Апла та мар, капла та мар, Пимен Фомич...

— Мĕн шуйттанле тата? Кала! Мĕн ман пуçа минретсе тăратăн?! — пушшех çилленсе кайрĕ директор.

Мамайкин, пĕр хушă каллех куçĕсене мăчлаттарса, тем аса илме тăрăшнă пек пулса тăчĕ те:

— Çăпатисене эпĕ ас тунă çĕртех, юри хăвартăм,— терĕ.

— Юри? — креслă çинчен яштах сиксе тăчĕ директор.— Вара çăпатасем выранне леш туфлисене хурса ятăн-и? Апла эсĕ ятарласах сăтăр тăвас тенĕ?

— Çук, Пимен Фомич, нимĕнле сăтăр тăвас шут та пулман манăн! Пулман япалана пулнă тесе калама юрамасть ĕнтĕ...— Мамайкин халь кăшт хăюллăрах калаçма пуçларĕ.— Туфлисене эпĕ саппаслăх илтĕм, ăнсăртран леш «Пĕр уйăхра вăтăр туй» текен лăпарти комедие те лартма пултараççĕ тесе. Ку халтурă валли декорацисем кирлĕ мар, пĕркун Янсакассинче ăна икĕ шăналăк хушшинчех пит лайăх кăтартрăмăр...

— Эсĕ пирĕн репертуар политикине ан хутшăн,— тӳрех пӳлчĕ ăна директор,— сценă çинче вăтăр туй пулать-и, аллă-и, çĕр-и,— сан ĕç çук унта. Эс мана çăпата пирки каласа пар!

— Чимĕр-ха, Пимен Фомич, эсир мана ахалех айăплама пăхатăр. Эпĕ театра сиен мар, усă тăвас тенĕ. Эсир, драматургсене хальхи пурнăç çинчен пьесăсем çыртарайманнипе, каллех çăпаталлă спектакль хатĕрлетĕр вĕт-ха, кĕçех премьерă пулмалла. Çавна асра тытса, эпĕ хайхи çапла шут турăм: çĕнĕ спектакль валли пур

пĕрех пĕр вунă мăшăр çăпата туянмалла, апла пулсан, ма-ха манăн çав пушăт изделине хуларан сĕтĕрсе каяс? Яла çитсен, пĕр наччасрах хама кирлĕ чухлĕ çăпата илетĕп те артисткăсене пурне те çĕнĕ çăпата сыртаратăп... Тĕрĕс шутланă-и эпĕ?

— Ну, тĕрĕс, тейĕпĕр. Анчах ялне çитсен вара кун çинчен манса кайрăн-им? — каллех хаярланма пуçларĕ директор.

— Çук, манман.

— Çăпатисене ма сутăн илмерĕн эппин, артисткăсене ма туфлисемпе кăлартăн сценă çине?

— Тупаймарăм!

— Мĕн тупаймарăн?

— Çăпата. Пĕр мăшăр та тупса илеймерĕм. Çавăнпа туфлисем тăхăнтартмалла пулчĕ те. Юрать, сценă çине ытла çара уран кăларниех мар, терĕм...

Директор çак сăмахсем хыççăн хăйне такам тукмакпа çапнă пек пулса ларчĕ.

— Эс мĕн... эс мана ухмах выранне хуратăн-и, е манпа шӳт тума хăтланатăн? — кăшкăрса ячĕ вăл унтан, кăштах тăна кĕрсен.

— Апла та мар, капла та мар, Пимен Фомич,— терĕ Мамайкин, вăл кăшкăрнинчен халь ним чухлĕ те хăрамасăр.— Тĕп-тĕрĕсне калатăп...

— Манăн вара эс каланине ĕненес пулать-и? Çав териех тăм пуç мар-ха эпĕ, тусăм! Чăваш ялĕнче çăпата çук пулать вара, ха! Ăçта кайса кĕнĕ-ха вăл?

— Ăçта кайса кĕнине пĕлместĕп, анчах çуккине тĕп-тĕрĕс пĕлетĕп ĕнтĕ, хам шыраса куртăм...

— Ан лăпăртат! Пирĕн чăвашсем ĕмĕр-ĕмĕр çăпата туса пурăннă, чăваш çăпати пĕтĕм Раççейĕпе чапа тухнă, Пĕрремĕш Петĕр патша Питĕр хулине тунă чух унта ĕçлекенсем валли ятарласа чăвашсене çăпата тутарнă пулать те...— хĕрӳллĕ лектор пекех янрама тапратрĕ директор, анчах халь ĕнтĕ хăюлансах çитнĕ Мамайкин ăна пӳлсе лартрĕ.

— Тĕрĕс, Пимен Фомич, пĕтĕмпех тĕрĕс! Пĕр композитор, чăваш çăпатине мухтаса, хаваслă марш çырнине те пĕлетĕп. Апла та пулнă, капла та пулнă... Анчах эсир пĕр япалана манса каятăр: халь Петĕр патша вăхăчĕ те мар, Микулай патша самани те мар, эпир халь Октябрьти социализмла аслă революци пулнăранпа кĕçех аллă çул çитес вăхăтра пурăнатпăр.

— Мӗн вара, ҫаваншӑн ҫӑпата пӗтсе ларнӑ-им пирӗн?

— Пӗтнӗ, Пимен Фомич!

— Суя! — паранасшӑн пулмарӗ директор.— Ак, халь тесен халь тухса каятӑп та, ыранччен ҫӗр мӑшӑр, пин мӑшӑр тупатӑп! Вагон тиесе килетӗп!.. Мӗн, тиесе килейместӗп, тетӗн-и?

— Кайса пӑхӑр-ха ара, кайса пӑхӑр...— терӗ Мамайкин темле питӗ сӳрӗккӗн.— Пӗр енчен, ку аван та пулнӑ пулӗччӗ. Эсир ӗнтӗ вунӑ ҫул пирӗн патӑрта директорта ларатӑр, анчах ҫав хушӑра хуларан тухса Кӳкеҫе те ҫитсе курман-ха. Сочи-Мацестӑсене кашни ҫул ҫӳрени шутра мар...

— Вӑл ниме те пӗлтерместӗ Республикӑ пурнӑҫне эпӗ хаҫатсем тӑрӑх та пит лайӑх пӗлсе тӑрататӑп! — куҫӗсене ҫутӑлтарса илчӗ директор.

— Пулӗ, пулӗ, анчах эпӗ хаҫатсенче ҫӑпата ҫинчен ҫырнине пӗрре те курман-ха ку таранччен. Атӑ-пушмак мӗн чухлӗ туса кӑларни ҫинчен чӑнах та час-часах ҫыркалаҫҫӗ...

— Ерунда! — аллипе сӗтел ҫине ҫат! тутарчӗ те директор, креслӑ ҫине лак! ларчӗ.— Лайӑхрах шыранӑ пулсан, ҫичӗ мӑшӑр ҫӑпата тупаттӑнах эсӗ!

— Ах, Пимен Фомич!..— Халь Мамайкин хӑй тарӑхма пуҫларӗ.— Епле ҫав териех ӑнланман ҫын эсир?! Калатӑп-ҫке сире: шырарӑм! Клуб пуҫлӑхӗпе пӗрле ҫав колхоза кӗрекен виҫӗ ялне те ҫитрӗмӗр, ӗмӗр-ӗмӗр ҫӑпата туса сутса пурӑннӑ шур сухаллӑ стариксене те веҫех тӗрӗслесе тухрӑмӑр — ним усси те пулмарӗ! Нихӑшин те ҫук, ҫӑпата тума тахҫанах пӑрахса, теҫҫӗ! Хӑйсем те пурте сӑран атӑсем тӑхӑннӑ...

Директор Мамайкин ҫине татах та тӗлӗнерех пӑхрӗ.

— Мӗн вара... Ҫӑпата тума чарман пулӗ-ҫке? Эп хам ун пек указ тухнине ас тусах каймастӑп...

— Кам чартӑр? — ал сулчӗ Мамайкин.— Ҫӑпата — сӑмакун мар вӗт вӑл, никама та сиен кӳмест.

— Ма тумаҫҫӗ-ха эппин ӑна?

— Кирлӗ мар, теҫҫӗ! Атӑ-пушмакпа ҫӳреме лайӑхрах, теҫҫӗ. Чӑрмавӗ те ҫук, илемли те илемлӗ, шанчӑкларах тата: шыв-шурта урана йӗпетсе чирлесе ӳкместӗн.

Директор шухӑша кайрӗ...

— Нивушлӗ ҫаван пекех вара, Мамайкин юлташ?

Чăваш ялĕнче çăпата тупса илмелле мар пулать... Хурлăх вĕт ку!

— Мĕншĕн хурлăх пултăр?—тĕлĕнчĕ Мамайкин.— Ман шутпа, куншăн пĕртте хурланмалла мар, савăнмалла çеç! Çынсем çăпата сырма пăрахса атă-пушмакпа кăна çӳрени вĕсен пурнăçĕ лайăхланнине пĕлтерет пуль?..

— Ăна пĕлетĕп-ха, эс ан вĕрентсе лар, уншăн каламастăп эпĕ...— Директор, ассăн сывласа ярса, çамки çинчи тарне шăлса илчĕ.— Пирĕн кăçал тата виçĕ историллĕ пьеса лартмалла вĕт-ха! Пĕр лав çăпата кирлĕ пулать. Мĕн тăвăпăр?

— Вăл пьесăсене лартмăпăр та — хуйхи те пулмасть! — тесе хучĕ Мамайкин.— Драматургĕсене приказ парăпăр: çитĕ сире çăпаталлă пьесăсем кун чухлĕ çырнипе, малашне атă-пушмак тăхăнса ташламаллисене çырăр, тусăмăрсем!

...Мамайкина эпир нимĕн те тумарăмăр. Ĕçрен кăларма мар, ятлама та май килмерĕ ăна.

## ПАЛЛАМА ÇУК ВĂКĂРСЕМ ТАТА ЫТТИСЕМ

*Савали мучи каласа пани*



Эсир, тăвансем, хваттер пирки калаçатăр-и çав? Хулара çĕнĕ хваттер илме йывăртарах, тетĕр-и? Килĕшетĕп сирĕнпе. Çăмăл мар çĕнĕ хваттер туянма! Мĕн тăвас тетĕн? Халăхĕ нумай-çке-ха, çултан çул мар — куллен-кун хутшăнса пырать... Çурчĕсене те нумай тăватпăр ĕнтĕ, питĕ нумай, пĕр çулталăк хушшинчех çĕнĕ урамсем ÿссе лараççĕ, çапах та вăй çитмест-ха пурин валли те тăруках керменсем туса лартма. Анчах уншăн хуйхăрмаллиех çук, пурăна киле пурте газлă, ваннăллă тата ытти ырлăхлă хваттерсенче пурăнакан пулатпăр акă. Ун пирки иккĕленмелли çук!..

Хам çинченех калам-ха сире. Вунă çул ытла пĕр пĕчĕк пÿлĕмре хĕсĕнсе пурăнтăм хамăн йышлă çемьепе. Тен, илтнĕ те пуль эсир: манăн карчăкăм Сăпани «амăшĕ-героиня» вĕт-ха, вунă ача туса ÿстертĕмĕр эпир унпа. Каламалли те çук, питĕ тăвăрччĕ ĕнтĕ. Тепĕр чух карчăк аптрасах çитетчĕ те мана иртен пуçласа каçченех канăç памастчĕ вара.

— Çулламан пăру эсĕ, арçын мар! Хулана куçса килнĕренпе çынсем валли çĕр çурт та ытла купаларăн ĕнтĕ, анчах хăвна валли çак таранччен те хваттер илейместĕн! Пыру кăштах хĕрсен мухтанма пĕлетĕн пĕрре: манăн каменщиксен бригади ялан малта пырать, пире куçса çÿрекен хĕрлĕ ялав пачĕç, ман патрета хисеп хăми çине кăларса çакнă! Тем тума кирлĕ пуль мана санăн шăрт сухалу хăма çинче, çумăр айĕнче шÿсе тăни! Нивушлĕ вара эсĕ хваттер илме тивĕçлĕ мар?!

Эпĕ ăна хирĕç лăпкăн кăна:

— Тахта, чунам Сапани, кун чухлӗ тӳснине тата партак тӳс ӗнтӗ, часах пире те черет ҫитет ака!—теттӗм.

— Черет, черет! — тата ытларах вӗресе каятчӗ ман Сапани ун пек каласан.— Ҫынсем, ав, черетсене кӗтсе тамаҫҫӗ! Илткелетӗп эпӗ, таҫтах тухса ҫӳреместӗп пулин те: пӗрисем хайсен петтистеннай ҫуртсем пур ҫӗртех хысна ҫурчӗсене куҫаҫҫӗ, теприсем, кушаксар пуҫне урах нимӗнле ача-пача ҫук пулин те, икшер-виҫшер пӳлӗм илеҫҫӗ, теприсем тата кашни ҫӗнӗ ҫурт тумассеренех — лайаххинчен лайаххине куҫаҫҫӗ, тет!

— Манан намас пур, Сапани, совеҫ пур, ҫаванпа та эпӗ ун пек хатланма пултараймастап! Черет ҫитет те ака, чинна-вашна кайса кӗретпӗр хамара пана хваттере, пирӗн пирки никам та пӗр усал самах калама пултараймасть. Ҫапла-и? Ҫапла!

Чылай хуша ҫаван пек тавлашкаласа пуранма тиврӗ. Анчах каҫал ака питӗ телейлӗ ҫул пулчӗ пирӗншӗн. Кантура чӗнтерчӗҫ те — лап! ордер тыттарчӗҫ:

— Ме сана хваттер, Савали Петровчча! Пуран ӗнтӗ ыр курса! — терӗҫ.

— Тавтапуҫ, таванам! — пуҫ тайрам эпӗ.

Чанах та лайах пулчӗ ҫав хваттерӗ! Ара, аҫтан-ха япах пултар, хамара валли хамар тавaтпар вӗт-ха вӗсене! Сапание малтан хваттерне курмалла ҫеҫ илсе пытам та — тӗлӗнсе хытсах кайрӗ!.. Виҫӗ пысак пӳлӗм. Уйрам кухньа. Ваннай, хуть те кашни кун мунча кӗр. Коридорӗнче велосипедпа чупма пулать. Анчах пуринчен те пахи — газ! Пӗчӗк хура крана кашт кана паратан та — кавак симӗс ҫулам пар-пар-пар... ҫунма тытанать. Хуть те мӗн пӗҫер, хуть те тем шаритле. Ырлах ӗнтӗ, ырлах!..

— Ну, савна чунам Сапани,— терӗм карчака,— куратан ӗнтӗ, хваттерӗ питӗ чапла, тавай, япалисене те чаплараххисене туянапар! Кив хваттерти пантахна сӗтел-пукансене те, ханкаласем вараласа пӗтернӗ краватьсене те, ытти хунтар-мунтарсене те илсе килместпӗр кунта. Ҫылах пулать пире ун пек хатлансан. Каларса пар перекет кӗнекине, халех магазинсем тарах каятап!..

Хирӗҫсе тамарӗ ман Сапани. Хампа пӗрле асла хӗрсене илсе кайрам та, харасах икӗ грузотакси тытса тем те пӗр тиесе пытам: сӗтелсем, пукансем, диван, пружинла краватьсем, тӗкӗрлӗ шкаф, комод... Пурте йалтартатса кана тараҫҫӗ.

— Ах! — терĕ ман Сапани, çавсене пурне те вырнаçтарса çитерсен.— Рай тени çакă пуль ĕнтĕ вăл!..

— Çакă, Сапанийĕм,— терĕм ăна хирĕç ман кăмăллăн.

Çĕнĕ хваттере куçнă май тепĕр куннех хăнасем пухрăмăр. Паллах, пурте каçса кайсах мухтарĕç пирĕн çĕнĕ йăвана. Пÿлĕмрен пÿлĕме çÿреççĕ, ăна-кăна тытса пăхаççĕ, ку лайăх та ку канлĕ, теççĕ. Анчах пĕр хăни, хамăрăн прораб, тăчĕ те:

— Стенасем пуш-пушах сирĕн, çав аван мар,— терĕ.— Хам пулсан, эп кашни пÿлĕмех картинăсем çакмалла, ылтăн рамкăллисенех илмелле. Кун пек хваттершĕн нимĕн те хĕрхенсе тăмалла мар. Ну, тата комод çине статуэткăсем, тĕрлĕрен хитре кĕлеткесем лартсан та начар мар пулмалла...

— Тĕрĕс, тĕрĕс! — пĕр саслăнах килĕшрĕç ыттисем.— Вара тата илемлĕрех пулать!

— Килĕшетĕп! — сиксе тăтăм эпĕ.—Калăр, Шупашкарта туянма пулать-и ун пек япаласене? Пур-и ĕç çыннисен хваттерĕсене илемлетме пулăшакансем?

— Ара, пулмасăр! — терĕç хăнасем.— Пĕрремĕш автобус çине ларса Константин Иванов урамĕпе хăпар та ачасен больници тĕлĕнче ан. Ăна хирĕçех «Дом художника» тенине куратăн. Çав «домра» художествăллă фондăн салон-магазинĕ пур, унта вара эсĕ темле картин та, тĕрлĕ-мĕрлĕ кĕлеткесем те туянма пултаратăн!

Хама çакăн пек ăс панăшăн эпĕ хăнасене тем териех тав турăм та тепĕр куннех çав «салона» ыткăнса çитрĕм.

— Килех, мучи, килех! — пит те кăмăллăн йышăнчĕç мана сăрсемпе, пурăпа вараланса пĕтнĕ маляр пекрех çынсем. Хуçисем пулмалла ĕнтĕ, художниксем.— Картинăсем илес шут пур-и?

— Çапла çав, çĕнĕ хваттере куçрăм та...—терĕм эпĕ.

— Тархасшăн ара, тархасшăн! Хăшĕ ытларах кăмăла каять, çавна суйласа ил! Куратăн — вĕсем нумай пирĕн!

Чăнах та, картинăсем питĕ нумай кунта. Стенасем çине те çакса тултарнă — пÿрнепе пусма вырăн çук, урайĕнче те купи-купипех тăраççĕ. Куçсем йăмăхсах кайрĕç манăн... Пурте хитре ĕнтĕ. Тăруках суйласа илме те пĕлес çук.

— Ну, хăшĕ сан çине пăхать? — мана хул айĕнчен тытрĕ пĕр художникĕ, хăнкăла пек хĕрлĕ шĕпĕнлĕ сăмсалласкер.

Эп маларах, пĕр самаях пысăк картинă патнерех иртрĕм. Çĕрле машинăпа авăн çапнине ӳкернĕ. Аптрамасть пек картини.

— Ак çак... мĕн хак? — ыйтрăм художникрен.

— Вăл пин те ик çĕр тенкĕ пулать,—терĕ искусства ăсти.

— Мĕн чухлĕ терĕн? — йăнăш илтрĕм пулĕ тесе, тепĕр хут ыйтрăм çакăнтан.

— Пин те ик çĕр. Вырăсла каласан — тысяча двести целковых,— сăмахĕсене тăсарах каларĕ художник.

Манăн куçсем хăйсемех мăч-мăч-мăч туса илчĕç. Çурăм çине тар тухса кайнă пекех туйăнчĕ. Кун пек хак çинчен Сăпани пĕлсен... тур çырлахтăрах!

— Хакĕшĕн ан тăр, мучи, ку вăл — классически япала, ăна ӳкерекенĕ виçĕ хут тава тивĕçлĕ деятель! — мана хулран пăчăртаса илчĕ художник.— Пăх-ха, сăрĕсене еплерех хунă унта, çунса кăна тăраççĕ вĕт! Композицийĕ еплерех тата... Çыннисем! Каçхи пĕлĕт! Тикĕт пек хура, кун пеккине эсĕ пурнăçра нихçан та кураяс çук!..

— Мана ытла çунаканниех кирлĕ мар-ха,— терĕм вара эпĕ,— мана ахаль ӳкернисем те юрăхлă пулĕç...

Çавăнтах стена çинчи тепĕр картинă çине тĕллесе кăтартрăм:

— Ак çак Шупашкар урамĕ мĕн хак?

— Виç çĕр çитмĕл тенкĕ.

— Ку тата, сылтăмри?

— Ик çĕр аллă.

— Ку?

— Шăп виççĕр.

— Ак ку тата, пĕчĕкки?

— Çĕр аллă.

Урăх ыйтмарăм... Ман кĕсъере пĕтĕм укçи те ик çĕр тенкĕччĕ. Енчен те çав укçапа киле пĕртен пĕр вăрман ӳкерчĕкне çĕклесе пырсан, Сăпани мана пĕр сехет хушшинчех кăшласа ярать!

— Ну-ну, хăшне илетĕн? — татах хулран пăчăртарĕ мана шĕпĕнлĕ художник.

— Карчăкпа калаçса пăхам-ха, вăл мĕн калĕ...— унран хăтăлма тăрăшрăм эпĕ.

— Карчаккупа мĕн каласмалли пур? Мĕн ăнланать вăл искусствăра?! — хăпма пĕлмерĕ художник.

— Искусствăна ытлах ăнланмасан та, укçа-тенкĕ енĕпе питĕ тулккăллă вăл, пит лайăх ăнланать,— терĕм ăна хирĕç.— Тата манăн укçи те яланах ун çумĕнче, ма тесессĕн хама ытла шансах каймастăп эпĕ... Сирĕн тата унта-кунта лартмалли кĕлеткесем пур-и? Статуэтка теççĕ-и-ха? Çавсене те пăхма хушнăччĕ мана...

— Пур, пур, тархасшăн! — татах хавасланса кайрĕ шĕпĕнлĕ çын.— Тем тĕрли те! На выбор! Ассортимент питĕ пуян...

Вăл мана кил хушшине илсе тухрĕ.

— Куратăн-и, мĕн чухлĕ вĕсем пирĕн?

— Куратăп, суккăрах мар-ха,— терĕм эпĕ, кунта хĕвел ăшшине типĕтме кăларнă тăм кĕлеткесем çине тĕлĕнерех пăхса. Питĕ нумай иккен вĕсем, пин те ытла пулĕ!

— Акă, сăмахран, вăкăр,— терĕ художник, çĕртен пĕр кĕлеткине илсе.— Епле илемлĕ пулать ăна комод е пианинă çине лартсан!

Эпĕ пăхрăм-пăхрăм та, самаях иккĕленсе:

— Темле-çке, ку япала мана пĕртте вăкăр пек туйăнмасть,— тесе хутăм.— Курсах кайман кун пекки-сене...

— Тĕрĕс, вăл чăнах та вăкăр мар, бизон! — терĕ тепĕр художникĕ, пирĕн паталла пырса.

— Бизон та мар — зубр!—тӳрлетрĕ ăна виççĕмĕшĕ, çамрăкскер.

— Пурĕ пĕр мар-им? — вĕсем çине çилĕпе пăхса илчĕ шĕпĕнли.— Тем пулсан та, илем кӳрет вăл çĕнĕ хваттере! — Унтан мана куçран пăхрĕ те: — Ну, илетĕн-и? — тесе ыйтрĕ.

— Вăкăрсене юратмастăп,— терĕм эпĕ.— Ача чухнех мана пĕри айăкран тĕкрĕ те, паян кун та пулин ыраткалать...

— Апла пулсан, ак çак такана ил! Кур-ха, епле ăслăн пăхса тăракан тунă ăна!

— Мĕнле йышшискер вăл? Меринос-и, мĕн-и...

— Ратти паллă мар, анчах...

— Анчах така майĕ çук,— терĕм эпĕ.

— Ну, така та килĕшмест пулсан, акă, шутсăр хитре хĕр пур. Шыва кĕрсе тухнă та чăлха тăхăнса ларать. Кур-ха, ура хырăмĕсем мĕнлерех унăн, э?

Вăл мана çаппа-çарамас хĕрарăм кĕлеткине илсе кăтартрĕ.

— Ку та илемлĕ мар-и саншăн?

— Илемли илемлĕ пулĕ те-ха вăл, анчах эп ăна киле йăтса пырсан, карчăк ман пуçа çак япалапах çаппа çурать...

— Эппин çак упана ил! Упашăнах арăму кĕвĕçес çук...

— Илĕттĕм те, анчах ку упа тин çеç лачакара йăваланса тухнă сыснана аса илтерет-çке...

Художник мана урăх нимĕн те сĕнмерĕ.

— Ну, хăвăнне ху пĕл,— терĕ те вăл, аякkалла пăрăнса кайрĕ. Эпĕ те салон-магазинран ним илеймесĕрех тухса утрăм. Епле илетĕн-ха? Пĕр япалисем этемле мар хаклă, теприсем — ниме юрăхсăр.

Киле эпĕ «симĕс пасар» урлă таврăнтăм. Пăхатăп — пĕр ўсĕртерех хĕрарăм, çăварне пирус хыпнăскер, картинăсем сутса тăрать. Ахаль картонсем çинех ўкернĕ вĕсене. Хура кăвак кўлĕ (шыв ун пек тĕслĕ пулнине эпĕ çĕр çинче утмăл çул пурăнса та курман!), хыçалта — упа сарри пек йывăççем, пĕр енче — спичкă коробки евĕр икĕ шурă пўрт, кўлли çинче—хутран касса çыпăçтарнă пек курăнакан кукăр майлă акăш.

— А ну, илĕр часрах! Кун пек хитре картинăсем ниçта та тупаймастăр эсир, хакĕ виç тенкĕ çеç! А ну, илĕр часрах!..— пĕр чарăнмасăрах палкать хĕрарăм, пирусне паш та паш тутарса.

Лайăххах пăхрăм. Чăнах та, кун пек усал картинăсем ниçта та тупас çук çав! Хама вайпа парсан та эп ăна хваттере илсе кĕртессĕм çук... Анчах çынсем илеççĕ çав халтурăна, укçа парсах илеççĕ! Мĕн тăвас тетĕн, урăх нимĕн те çук та-ха ара!..

Çула май магазинсене кĕркелесе пăхрăм. Рамкăсăр пĕчĕк картинăсем — репродукци теççĕ-и çав вĕсене — курăнкалаççĕ, анчах вĕсем манăн пысăк хваттер валли пĕртте юрăхлă мар...

Ахалех, ним илмесĕрех таврăнтăм вара киле. Карчăк та, ачасем те питĕ кăмăлсăр пулчĕç уншăн. Паян кун та стенасем пуш-пушах. Мĕн тăвас-ха ĕнтĕ манăн, пўлĕмсене мĕнпе илемлетес? «Симĕс пасарти» халтурщиксен «илемĕсене» илсе çакма килĕшместĕп эпĕ, аюк!

## КУРНИ-ИЛТНИСЕМ, ПУÇА КĔНĔ ШУХĂШСЕМ

Пĕр поэт кашни уяв умĕнех кăшкăрать: пирĕн колхозсенче пулмалла, пурнăçпа паллашмалла! Вулакансемпе тĕл пулмалла! Атьăр-ха çитес шăматкун «Малалла» колхоза командировкăна каятпăр! Питĕ вăйлă колхоз вăл!..

...«Малалла» колхозра çав поэтăн хуняма карчăкĕ пурăнать.

* * *

— Çав Иванюк писателĕн кĕнекисем пур-и унăн? Тем, эп пĕр кĕнекине те вуламан...

— Пур-çке. Иккĕ тан.

— Мĕнле кĕнекесем? Кала-ха эппин.

— Пĕри — профсоюз кĕнеки, тепри — писательсен Союзĕн член билечĕ.

* * *

— Эсĕ çав Шуркай писатель пултарулăхне мĕнле хаклатăн?

— Эпĕ книготоргра ĕçлеместĕп те... анчах унăн пултарулăхĕ халь питĕ йӳнĕ, теççĕ: икĕ тенкĕ тăракан кĕнекисене икшер пуспа сутаççĕ.

* * *

Поэт хушамачĕ янравлă пулнăшăнах унăн сăввисем янравлă пулмаççĕ.

* * *

— Çынна тара тытса кĕпе-йĕм çĕлеттерме çеç мар, роман çыртарма та пулать, теççĕ.

* * *

Эпир пĕр композиторăн ватă амăшĕпе калаçатпăр.

— Сирĕн Ванюк ăçта çав? Тем, нумайранпа курăнмасть. Мĕн ĕçлет?

— Мĕн ĕçлетĕр вăл? — тет карчăк. — Тонкăртаттарать те тонкăртаттарать хайĕн рояльне. Хăлха йӳçĕхрĕ ĕнтĕ.

Аса килсех кайрĕ: çак Ванюк вăтăр çул хушши ĕнтĕ «опера çыратăп» тесе пурăнать. Чăнах та тонкăртаттарать... чĕлхипе!

* * *

Пĕр художник çўллĕ çыран хĕррине ларнă та чĕлхине çавăрса çыртсах çырма тĕпĕнчи чалăшса кайнă çĕрĕк мунчана ўкерсе ларать.

— Итле-ха, Кузьма Кузьмич,— тетпĕр çакна,—нивушлĕ çакăнтан лайăхрах «натурă» тупаймарăн хăвна валли? Пăх-ха лерелле, мĕнешкел хăватлă çĕнĕ çуртсем, заводсем унта... Ав, башеннăй крансем пĕлĕтелле кармашаççĕ,— унта çĕнĕ фабрикă тăваççĕ. Ма-ха çавсене ўкерес мар санăн? Тĕлĕнмелле...

— Ан кансĕрлĕр-ха, кайăр кунтан çава патне! — кăшкăрса пăрахать художник.— Çĕнĕ çуртсем ниçта та тармаççĕ вĕсем, вăл çуртсене хуть те хăçан та ўкерме пулать, анчах та ку мунчи ыран-паянах ишĕлсе анать те, кайран манăн ун пек «натурă» ăçта тупас?

* * *

Çырман кĕнекепе чапа тухаймăн.

* * *

Шухăша пуç тавра виççĕ çавăр та пĕрре çыр.

* * *

Тытман перо тутăхать.

* * *

Уçламасан услам çу пулмасть, çĕрĕн-кунĕн ĕçлемесĕр кĕнеке пулмасть.

* * *

Йăпăлти пăру ик ĕне ĕмет, йăпăлти автор пĕр ярпалах ик-виç çĕрте пичетлет.

* * *

Тепĕр чух пĕр талантсăр писатель те хайма çиет.

* * *

Пичетленнĕ ярăх сăвва каялла çулласа илме çук.

* * *

Чёлхе-ҫăвар япшар пулсан, хаяр редактор та ҫул парать.

* * *

Критик сăмахĕ чӳк шӳрпи мар.

* * *

Критик кисĕпĕн икĕ вĕҫĕ те шĕвĕр.

* * *

Ҫын ҫырса парасса шанса, пĕҫҫӳне тăратса ан вырт.

* * *

Калаҫассине сахалтарах калаҫ, ҫырассине ытларах ҫыр.

* * *

Туптаман сăвă — сăвă мар.

* * *

Ҫичĕ хут ҫыр та пĕрре пичетле.

* * *

Ахаль лариччен, рецензи те пулин вула.

* * *

Писательсен Союзĕн билетне алла илнипех хăвна писатель тесе ан шутла.

* * *

Пĕкĕрен турта тăваймăн, талантсăр ҫынтан сăвăҫ тăваймăн.

* * *

Аттуна тăхăн та ҫăпатуна кăларса ан пăрах, икĕ сăвă пичетленĕ хыҫҫăнах хăвна поэт тесе колхозра (заводра) ĕҫлеме ан пăрах.

# ФЕЛЬЕТОНСЕМ



*Çакӑнта пичетленекен фельетонсене автор юлашки темиçе çул хушшинче çырнӑ. Вĕсем «Коммунизм ялавĕ», «Çамрӑк коммунист» хаçатсенче, «Капкӑн» журналта пичетленнĕ.*

*Хайсен йӑнӑшĕсемпе çитменлĕхĕсене ӑнланса тӗрĕс çул çине тӑма пултарнӑ çынсем çинчен тепĕр хут çырас мар тесе, эпир фельетон «геройĕсен» ячĕсемпе вĕсен адресĕсене чылай çĕрте улӑштартӑмӑр, анчах фельетонсен содержанийĕ çаплипех юлать.*

*Мĕншĕн пичетлетпĕр-ха эпир вĕсене? Акӑ мĕншĕн: çакӑнта çырса кӑтартнӑ йышши киревсĕр ĕçсем пирĕн пурнӑçра халĕ те тĕл пулкалаççĕ-ха. Ачасене вӑрттӑн тĕне кĕртекенсем те пур, хĕрсене улталаса вĕсен çамрӑк пурнӑçне пӑсса хуракан ирсĕрсем те пĕтмен, харам пырсем те сахал мар, взяткӑ илекенсем те, «никамран вӑйлӑ» бюрократсем те ытла сайра тĕл пулакан кайӑксем мар.*

*Автор хӑйĕн фельетонĕсем çавнашкал путсĕр этемсемпе кĕрешме, пурнӑçри кикен-пиçенсене кӑклама пӑртак та пулин пулӑшасса шанать.*

## ТАКА ХУРАНӖНЧЕ

Январь пуҫламӑшӗнчи пӗр лапкӑ та ытла сивех мар кун, тап-тӑр кантӑрла, Хӑмаркка ялӗн мӑн урамӗ варрипе, хӑйсене хыҫалтан такам хӑваласа ҫитсе пӗҫерккӗ парасран хӑранӑ пек каялла пӑха-пӑха, икӗ арҫын ача чупнӑ. Пӗри, пысӑкраххи, ура ҫӗлисене купарчине ҫапӑнтарсах, малта ыткӑнса пынӑ, вӑхӑчӗ-вӑхӑчӗпе вӑл, хӑйӗнчен чылай кайра чупакан пӗчӗкрех ача еннелле ҫаврӑнса, хыттӑн кӑшкӑрнӑ:

— Сережка-а! Ан ю-юл! Чуп хытӑра-ах!..

Ҫав вӑхӑтра тем пирки урама тухса тӑнӑ пӗр хӗрарӑм ҫак ачасене палласа илнӗ те, малти ачи хӑй патнерех ҫитсен, кӑшкӑрсах ыйтнӑ:

— Коля! Камран таратӑр капла? Никам та хӑваламасть-иҫ сире?

— Эх, инке, пӗтетпӗр вӗт!— макӑрса ярас пекех ответ панӑ ӑна Коля тени, ҫул ҫинчен хӗрарӑм патнелле пӑрӑнса кӗрсе.— Ӑҫта та пулин пытанас пулать пирӗн!..

Ача антӑхса каяс пек хашканӑ, ниепле те сывлӑш ҫаврӑнса илеймен.

— Мӗн пулчӗ тата ун пекех? Камран пытанмалла, мӗншӗн пытанмалла сирӗн? — шалтах тӗлӗнсе кайнӑ хайхи хӗрарӑм.— Кама мӗн тунӑ вара эсир?

— Эпир нимӗн те туман!

— Ма таратӑр эппин?

— Пире... пире тӗне кӗртесшӗн! — персе янӑ Коля.— Вайпах тытса тӗне кӗртесшӗн! Эпир Сережкӑпа иксӗмӗр те пионерсем, турра та, шуйттана та ӗненместпӗр, мӗншӗн тесен вӗсем ҫук та, пулман та! Мӗн тума кирлӗ пире тӗне кӗни? Учительсем, шкулти юлташсем пӗлсен, мӗн калӗҫ? Намӑса ӑҫта чикес вара?!

— Коля, пустуй калаҫатӑн пуль эсӗ! — тата ытларах тӗлӗнсе, пӑлханса кайнӑ хӗрарӑм.— Кам хӑтланать вара ҫавӑн пек? Пулма пултараймасть ун пекки хальхи саманара!

— Ас ту, пулма пултараймасть пуль!— тенӗ ӑна хирӗҫ ача, ҫав тери кӑмӑлсӑр.— Кайса пӑх-ха эсӗ Бы-

ковсем патне, мĕн хатланаççĕ унта! Вĕсен пӳрчĕ тĕлне сахалтан та çĕр çын пырса тăнă пуль, туй курма пуханнă, тейĕн...

— Мĕн тăваççĕ вара унта?

— Шанаш пупĕ килнĕ те, урай варрине така хуранĕпе шыв лартса, ачасене тĕне кĕртет! Пĕрине тытать те шыва чиксе, теприне тытать те кутăн чăмтарать! Пĕчĕккисене те, пысăкраххисене те тиркесе тăмасть... Ашшĕ-амăшĕсем хайсем йăтса пынисене шыва чиксе пĕтерсен, курма пынă ачасене те тыта-тыта тĕне кĕртме тапратрĕç. Çăлса илеççĕ те—рас, рас! пуçĕсене хурана чикеççĕ. Лешсем пăркаланнине те, тапкаланнине те пăхса тăмаççĕ! Эпир те пырсаттăмăр та курма, пире те сĕтĕрсе кĕртесшĕн пулчĕç, анчах эпир вĕçерĕнсе тартăмăр... Хыçалтан хăваларĕç пире, çапах та тарса ӳкрĕмĕр-ха эпир!

Арçын ача тĕрĕссине калана...

Шанаш пупĕ Панихидов юлашки вăхăтра ĕççĕр аптраса питĕ тарăхса çитнĕ пулнă. Вырсарникун ирхикăнтăрлахи кĕлле кĕрсе тухать те, кайран эрнипех ĕççĕр ларать. Вилекенсем те питĕ сахал... Хальхи çынсене чир-чĕр те çапса хуçаймасть, чирленĕ пек пулсанах вĕсем тухтăр патне кайса ăна-кăна ĕçкелеççĕ е пĕр-икĕ хут унтан-кунтан тиртеркелеççĕ те каллех вăкăр пек сывă пулса пурăнаççĕ; ваттисем те çӳлти патшалăха питех ăмсанмаççĕ, çĕр çинчех ытларах пурăнасшăн, хăяматсем; авланакансем нумай, анчах вĕсенчен те уссиех çук — колхоз машинĕсем çине ларççĕ те, чиркӳ тĕлĕпе çĕр çĕмĕрсе иртсе каяççĕ, чиркĕве кĕрсе венчет тăвас пирки шухăш та çук вĕсен... Туйсем çулсеренех нумай пулнă май, çĕнĕрен çуралакансем те йышлă, анчах вĕсенчен те тупăш çукпа пĕрех: ял Советне кайса çыртарнă та — ĕçĕ те пĕтнĕ.

Сахаллансах пыраççĕ пачăшкăн тупăшĕсем, ой, каталсах пыраççĕ! Кун пекех пулсан, çамрăклах мăн сухал ӳстерни те, ăçта та пулин шоферта ĕçлесе, хĕрсем умĕнче шевиот костюмсемпе йăлтăртатса çӳрес выранне вăрăм михĕ пек хура ряса тăхăнса пурăнни те харама каять вĕт!..

Пĕррехинче, сасартăк, çак Панихидов пуп пуçне питĕ ăслă шухăш пырса кĕрет: енчен те приходри çынсем чиркĕве сахал çӳреççĕ пулсан, вĕсем патне килĕсене çӳреме кам чарать мана? Хальхи вăхăтра таврари

ялсенче тĕне кĕртмен ача-пăча — кăткă пек! Пĕрисене ашшĕ-амăшĕсем турра ĕненмен пирки тĕне кĕртмен, теприсен, тен, ачи çуралсанах чиркĕве килсе çӳреме ерçӳ пулман пулĕ, каярахпа вĕсем ун çинчен манса та кайнă...

— Çак кунсенчех экспедицие тухса каятăп!—çирĕп шут тăвать Панихидов пуп.—Пулмасть тек ун пек, çынсем хăйсем тăна кĕрсе хам пата килессе кĕтсе выртса. Çуллă икерчсем тӳрех çăвара ӳкмелли вăхăтсем ĕмĕрлĕхех иртрĕç курăнать пирĕншĕн... Хай каларăш, массăсем çывăхнерех пулас пулать!

Панихидов çакăн пирки малтан хăйĕн шанчăклă помощникĕпе, хăй пекех çамрăк та патвар, Атăл çинче питĕ лайăх грузчик пулма пултармалли, анчах халĕ тура ячĕпе ним ĕçлемесĕрех ырă курса пурăнакан Андрей Аксимовпа канашласа пăхать. Пулас коммерцилле мероприятие пур енчен те сӳтсе явнă хыççăн вĕсем экспедици валли маршрут та туса хураççĕ.

— Чăн малтан эсĕ пирĕн яла, «Новая жизнь» колхоза кай,—тенĕ Аксимов.—Мана хама унта пыма аван мар, эп камне ялта кашни усал йытă пĕлет, анчах сана манăн аппасем, Праскипе Маттĕрне, пур енчен те пулăшĕç! Вăхăчĕ пур вĕсен, колхозра тăмаççĕ, анчах чĕлхисемпе — пултараççĕ, пит лайăх агитаторсем пулаççĕ, саншăн!

Килте ларса тунсăхласа çитнĕ пачăшкă вара тепĕр куннех Аксимовăн аппăшĕсем патне çитнĕ те вĕсен ытла тасах мар пӳртĕнче Шанаш чиркĕвĕн «филиалне» уçнă. Турăшсем умне çуртасем çутса янă, урайваррине така хуранĕ лартса шыв тултарнă... Çав вăхăтрах «турă чурисем» — Праскипе Маттĕрне — ял тăрăх чăх тытакан тилĕсем пек йăрккане.

— Пачăшкă килчĕ, па-чăш-кă! Ачăрсене тĕне кĕртме илсе пырăр... пирĕн пата!— çĕлен чашкăрнă пек пăшăлтатнă вĕсем хĕрарăмсен хăлхисенчен.

Айвансем самаях тупăннă. Пĕрин хыççăн тепри йăтса пыма пуçланă хăйсен ку таранччен тĕне кĕмесĕрех пит аван ӳснĕ ачисене. Сĕрекене пулă лайăх кĕнĕ чух пулăçсем епле савăнаççĕ, «Новая жизнь» колхоза пырса кĕнĕ ку чухнехи «Иоанн креститель» те çавăн пекех савăнса хăпартланса кайнă. Ун кĕсйинче укçа тĕрки хулăнланнăçемĕн хулăнланнă-çке! Пĕр ачине хыпкăч пек пӳрнисемпе тытса хурана чиксе кăларать — виç

тенкĕ илет, теприне чикет — тата çур литрлăх хутшăнать! Савăнма мар, юрласа ярăн ун пек пулсан!..

Çавăнпа та, Шанаш пупĕ колхоза килсе çакнашкал саккунсăр ĕç тума тытăнни çинчен пĕлнĕ хыççăн Аксимовсем патне колхоз председателĕпе районтан килнĕ тепĕр çын чупса пырсан, Панихидов вĕсене питĕ сиввĕн кĕтсе илнĕ. Лешсем ăна кун пек хăтланма юраманни çинчен асăрхаттарсан, вăл çав тери паттăрланса кайса, хаяррăн кăшкăрса тăкнă:

— Эпĕ массăсем хайсем ыйтнипе килнĕ! Чарма пултараймастăр мана! Вăл сирĕн халăх интересĕсене хирĕç пыни пулать!..

Колхоз председателĕпе район çынни çине тăрарах калама пуçласан, Панихидов рясине хывса урайне çавăрса çапнă та чышкипе сĕтел çине шаккас патнех çитсе çухăрашнă:

— Эппин, хăвăр тĕне кĕртĕр ман вырăна! Куратăр—мĕн чухлĕ халăх кĕтсе тăрать!

Чарайман вара ним йĕркесĕр хĕрӳленсе кайнă пачăшкăна! Аксимовсен пӳртĕнче тахçанчченех лапăрчăк хурана чике-чике кăларакан ачасем çухăрни илтĕннĕ. Питĕ тĕлĕнмелле, анчах Шанаш пупĕ çав кун тĕне кĕртнĕ ачасем хушшинче ялти хăш-пĕр коммунистсен арăмĕсем йăтса пынă ачасем те пулнă. Тата хăш-пĕр коммунистсен ачисене Праскипе Маттĕрне канфет парассипе илĕртсе чĕнсе кĕнĕ те ирĕксĕрлесех хурана чикнĕ.

Пĕрремĕш опыт ăнăçлă пулнă хыççăн, тепрер уйăхран, Шанаш пупĕ иккĕмĕш «гастроле» тухса кайнă. Хальхинче вăл Хăмарккара пулнă. Кунта та ăна пулăшакан «тура чурисем» тупăннă. Вĕсенчен чи хастарри вара Быков колхозник пулнă. Ун патĕнче «купель»—тĕне кĕртмелли така хуранĕ—хатĕрлесе лартнă... Кунта ĕçсем «Новая жизнь» колхозринчен нумай хăвăртрах та ăнăçлăрах пулса иртнĕ. Илсе пынă ачана йăпăр-япăр çарамаслантарнă, сивĕ шыва чăмпăлт! тутарнă та часрах теприне çавăрса тытнă. Амăшĕсем е кукамăш-мамакăшсем илсе пынă ачасене чăмтарса пĕтернĕ хыççăн вара урамра чупса çӳрекенсене тыта-тыта кĕртме пуçланă. Хăраса ӳкнĕ ачасене тем тĕрлĕ илĕртнĕ, итлеменнисене хăратнă.

— Ас ту, тура мучи тытать-ха сана куншăн!..

Çивĕчреххисем тарса ӳкнĕ, йăвашраххисем вара така хуранне лекнĕ. Эпир малта асăннă Кольăпа Сере-

жа шăпах çивĕчреххисем пулнă. Анчах ултă шкул ачине «турă чурисем» ирĕксĕрех тĕне кĕртсе юлташĕсем умĕнче намăс курмалла туса хунă-хунах. Вĕсем хушшинче ялти коммунистсен ачисем те пулнă...

Каллех кĕсйи мăкăрличченех укçа тултарнă Шанаш пупĕ. Тупăш ытла та лайăх пулнăшăн савăнса, «ĕç» пĕтнĕ хыççăн унăн ĕçесси килсе кайнă. Паллах, шыв мар ĕнтĕ! Куçĕ-пуçĕ саланса кайиччченех персе лартнă вăл — çуттине те, пăтранчăккине те, унтан вара... «тупса парăр мана хĕрарăм!» теме тытăннă, урăхла каласан — «таса атте» çилхине вĕçтере-вĕçтере ăратлă айăр пек кĕçенесси патнех çитнĕ! Ирхине мухмăр уçнă та Хăмарккаран пит те тулли кăмăлпа тухса кайнă...

«Пуп куçĕ — нухреп куç» тесе эпир мар, ваттисем ĕлĕкех каланă. Ваттисен çак ăслă сăмахĕпе килĕшмесĕр тăма пирĕн нимĕнле сăлтав та, тивĕç те çук. Шанаш пупĕ мĕн-мĕн хăтланни çак сăмаха пушшех лайăх çирĕплетсе парать. Вăл чăнах та тăранма пĕлмест иккен!

Хăмарккаран пуйса тухса кайнăранпа уйăх та иртмен — вăл тепĕр «экспедици» организацилерĕ, хăйĕн помощникĕ-тусĕпе, хайхи Аксимовпа пĕрле Атнара пырса тухнă. Кунта актив — ял Совет председателĕпе секретарĕ, икĕ учитель — пуп каллех «массăллă крещени» тума хатĕрленнине пĕлнĕ те вăл вырнаçнă киле пырса хыттăн асăрхаттарнă: юрамасть, ирĕк памастпăр! Медпункт заведующийĕ те пулнă унта, вăл тĕрлĕ çемьесенчи ачасене пĕр хуранти шыва чикни — гигиенă правилисене хирĕç пыни, чир-чĕр сарма пултарни çинчен калама тытăннă.

«Таса атте» вĕсен сăмахĕсене хăлхана та чикмен. «Турă хушнă пек» сăпайлă та йĕркеллĕ пулас выранне Панихидов пуп хăйне укçа çапма май паманшăн тарăхса урсах кайнă та выранти влаç представителĕсене хирĕç кăшкăрма тытăннă:

— Пăхăнмастпăр сире, хамăрăн мĕн тумаллине сиртен ыйтса тăмастпăр! Тухса вăркăнăр, ан кансĕрлесе çӳрĕр ĕçлĕ çынсене!

«Суратпăр сирĕн çине!» теесси çеç юлнă унăн...

Аксимовĕ, хăй питĕ нумай пĕлекен çын пулнине кăтартма, хăйне кăкринчен чыша-чыша, урине тапса çухăрнă:

— Эп духовнăй семинаринче вĕренсе тухнă!..

Влаҫ представителӗсем хӑйсене хыттӑ асӑрхаттарса хӑварнӑ пулин те, вӗсем тухса кайсан, Панихидовпа Аксимов тата вун пӗр ачана хурана чиксе кӑларнӑ, унтан тепӗр киле куҫса каллех сакӑр ачана «православнӑй» туса хунӑ.

Тепӗр кунне икӗ колхозникӑн пӗчӗк ачисем чирлесе ӳкнӗ. Вара вӗсем, ачисене епле те пулин ҫӑлса хӑварас тесе, пуп патне мар, фельдшерицӑ патне чупнӑ. Пупӗ, тен, ҫав вӑхӑтра ҫак колхозниксен ачисене сивӗ шыв ӑшне чиксе кӑларнӑшӑн илнӗ укҫапа каллех эрех ҫапса ларнӑ-и...

Шутласан тӗлӗнсе хытса каймалла ҫав!

Халӗ, пирӗн хуҫалӑх ӳсӗмӗсемпе пӗрлех халӑх культури те ҫав тери ӑнаҫлӑн ӳссе пынӑ вӑхӑтра, ӗлӗк чи тӗттӗм кӗтессем пулнӑ вырӑнсене те электричествӑ, радио кӗрсе пынӑ самантра, темиҫешер учитель, вуншар коммунистсемпе комсомолецсем пур ҫӗртех тепӗр чух тӗн сӗрӗмне хирӗҫ тивӗҫлипе кӗрешейместпӗр, чиркӳ ҫыннисене хамӑр халӑха улталаса пурӑнма май паратпӑр пулать!

Пирӗн ачасем — пирӗн пуласлӑх, пирӗн шанчӑк, пирӗн телей, вӗсем коммунизм обществине туса ҫитерекенсем, ҫав ҫутӑ тӗнчере пурӑнакансем пулмалла. Эпир вӗсене тӳрӗ те таса кӑмӑллӑ, савӑнаҫлӑ та хастар, сывӑ та паттӑр туса ӳстерме тӑрӑшатпӑр, вӗсемшӗн нимӗн те хӗрхенсе тӑмастпӑр.

Ҫав вӑхӑтрах, кӗтмен ҫӗртен, таҫтан тӗттӗм кӗтессенчен кивӗ тӗнче мӗлкисем, хура чунлӑ этемсем, ҫынсен пуҫӗсене тӗн сӗрӗмӗпе минретсе, ним ӗҫлемесӗр, усал сӑвӑссем пек пурӑнакансем йӑпшӑнса тухаҫҫӗ те пирӗн ачасене пӑсма, вӗсен ӑс-тӑнне пӑтратма, ҫук турӑн «чурисем» тума хӑтланаҫҫӗ. Лӑпкӑн пӑхса тӑма пулать-и-ха ҫак тискер те киревсӗр япала ҫине? Ҫук, пулмасть,— ун пек фактсем кашни ӑнланулла совет ҫыннине тарӑхтарса пӑлхатса ямалла. Ку киревсӗрлӗхе хирӗҫ кашнин кӗрешмелле. Вӑл кӗрешӳ пирӗн ҫӗнтерӳпе вӗҫленмелле.

Вара текех ҫакӑн пек фельетонсем те ҫырмалла пулмӗ.

## ПРАНЬККАРИ ШӐНКӐРЧ

Пурте асӑрхана-тӑр: ҫемьере пилӗк-ултӑ ача ырӑнне пӗр ача кӑна пулсан, вӑл ҫав тери ачаш пулать.

Сӑлтавӗ нумай: ун пек ача амӑшӗн кӑкрине те хӑй кӳршӗсен пахчине хӑяр вӑрлама кӗрекен пуличченех ӗмет, килти сӗчӗ-ҫӑвӗ, хӑйми-чӑкӑчӗ те, лавккаран илсе пынӑ канфечӗ-премӗкӗ те темиҫе пая пайланмасть, пӗтӗмпех пӗр ҫӑвара лекет, пӗртен пӗр ачана, вӑл темле ашкӑнсан та, ҫурӑмран аяларахран лектерсе илме те шел пек туйӑнать...

Ӳсет вара ҫавӑн пек ача пӳлӗмри чечек евӗр. Хитре вӑл, таса, ҫемьене илем кӗртет пек, анчах усси—ҫук. Ялан ачаш усранӑ пирки вӑл кахал пулать, ӗҫлеме юратмасть, пысӑкланарахпа ашшӗ-амӑшне ҫеҫ мар, кӳршӗ-маршӑсене те кӳрентерме, тарӑхтарма пуҫлать, юлашкинчен — сӑмси айне хура мамӑк шӑтма пуҫланӑ вӑхӑталла — ҫав тери путсӗр ҫын пулса ҫитет.

Пур чух та, пур ҫемьере те ҫавӑн пек пулать тесе каласшӑн мар эпир, ҫук. Тепӗр ҫемьесенче пӗртен пӗр ача пулсан та — ывӑл-и вӑл, хӗр-и, пурӗ пӗр — ашшӗ-амӑшӗсем вӗсене ытлашши ачашламасӑр, иртӗнме памасӑр, пӗчӗкренех ӗҫе хӑнӑхтарса, ҫынсене хисеплеме вӗрентсе ӳстереҫҫӗ. Савӑнтарать кӑна вара ҫавӑн пек ача кайран. Чӑн-чӑн этем пулать! Анчах теприсен вара...

Акӑ, Праньккари Еххим арӑмӗн Петюкнех илер. Халь ӗнтӗ ӑна Петюк мар, Петӗр Еххимччӑ, теҫҫӗ. Кил·йышра вӑл пӗртен пӗр ывӑл пулса ӳснӗ. Амӑшӗ ӑна мӗн пӗчӗкренпех каҫса кайса юратнипе, ытарайманнипе, Петюк тесе те мар, «Шӑнкӑрч» тесе чӗннӗ. Ун хыҫҫӑн ял ҫыннисем те ҫавӑн пекех чӗнме тытӑннӑ, халӗ те ҫаплах чӗнеҫҫӗ: Шӑнкӑрч!

Упӑшкисӗр тӑрса юлсан та, мӗн кӑна туман пулӗ Еххим арӑмӗ хӑйӗн «шӑнкӑрчишӗн», мӗнле кӑна ачашламан пуль хӑйӗн пепкине! Тӳррипе каласан, хӑйӗн пӗтӗм пурнӑҫне панӑ ӑна.

— Ватӑлсан, хама пӑхаканни пулать, манӑн унсӑр пуҫне никам та ҫук вӗт, епле ачашлас мар-ха ӑна?

Ачи чăнах та лайăх ӳснĕ. Пĕр вун улттăсене çитсенех ытармалла мар каччă пулса тăнă. Çӳллĕ. Яштака. Сарă. Куçĕсем кăн-кăвак. Çитменнине тата кăп-кăтра. Ун йышшисене пирĕн енче «вырăс пек», теççĕ, ку вара çав тери мухтаса калани пулать.

Анчах шал енчен илсен — ниме тăман пуçтах кăна пулнă çак каччă. Ĕçлеме юратман, вĕренессе те, хăй каларăш, «шаля-валя» вĕреннĕ, ӳснĕ-ӳсмен ытларах улахсем тăрăх чупнă. Пулчĕ-пулмарĕ тантăшĕсемпе çапăçса илнĕ, хĕрачасене те сахал мар макăрткаланă.

— Йĕркеллĕ çын пулмасть кунтан! — тенĕ ял çыннисем, Шăнкăрч иртĕхнисене курса.

— Çамрăк-ха, каярахпа ăс кĕрет пулĕ,— тенĕ теприсем.— Ашшĕ мĕн тери лайăх çынччĕ!

— Тен, çара кайсан тӳрленĕ...

— Кам пĕлет ара, кам пĕлет...

— Тӳрленсен — тем пекчĕ!

Амăшĕ те çапла шутланă, анчах шанни кăлăхах пулнă çав.

Вăхăчĕ çитсен, Петюк-Шăнкăрча Совет Çарне илнĕ, вăл унта тăватă çул хушши пулнă, сержанта çитнĕ. Киле вăл малтанхинчен те илемлĕрех каччă пулса таврăннă: пĕвĕпе тата ытларах тĕрекленнĕ, сарă кăтрисем ункăн-ункăн явăнса, карттусĕ айĕнчен çамки çинелле пĕтĕрĕнсе аннă, çĕнĕ гимнастерки çинче тĕрлĕрен значоксем йăлтăртатнă, вĕсем хушшинче комсомол значокĕ те пулнă. Темле хытă кăмăллă, каччăсене тиркекен хĕр чĕри те ирĕлсе кайма пултарнă ун çине пăхсан!..

Пĕр икĕ çул çӳренĕ çак ытармалла мар каччă «çĕр кисретсе» — улахран улаха, туйран туя, пуш параппан çапса. Юлашкинчен сасартăк амăшне çапла каласа хунă:

— Авланатăп, анне! Авланас килсе кайрĕ...

— Авлан ара, авланах,— пĕр сăмахсăрах килĕшнĕ амăшĕ.— Хăвна та лайăх пулĕ, мана та. Чирлетĕп вĕтха пĕрмай, санăн кĕпӳ-йĕмне çума та вăйăм çитмест. Тĕллесе хунă хĕрĕ пур-и-ха?

— Хĕрĕ пирки ĕç тытăнса тăрас çук,— ал сулса кулса янă Шăнкăрч.— Паян тесен паян вун саккăр çаватса килме пултаратăп!

— Ун пекех çамăллăн калаçма кирлĕ мар, ачам,— кăмălсăр пек пулнă амăшĕ.— Лайăххине пĕрре туп та, ĕмĕр пĕр-пĕрине юратса килĕштерсе пурăнмалла пултăр.

Çак асла самахсене хирĕç Шанкарч шахарса илнĕ çеç. Унан хайĕн варттан шухашĕсем пулна пулмалла çав катра пуçĕнче...

Тепĕр темиçе кунтанах вал Муркаш тарахĕнчи пĕр ялтан Клавди ятла хĕрачана илсе пына. Çамраскер пулна вал, хаюсарскер. Анчах вуна кун та иртмен — çамрак арам макарма тытанна. Мĕншĕнне ял çыннисем паян кун та пĕлмеççĕ. Çамалах пулман пуль ĕнтĕ Шанкарчпа пуранасси, ахальтен юхман унан вĕри куççулĕ.

Пĕррехинче вара амашĕ хайĕн ытарайми ывалĕ чаланта çамрак арамне çупа-çупа ярса хаярран кашкарнине илтнĕ:

— Тухса кай! Халех тухса варкан! Сан пекки эпĕ хамар ялтах çирĕм пиллĕк тупатап!

— Ай-уй, мĕн хатланатан эсĕ, Шанкарч?! Мĕн пулчĕ? — хыпанса укнĕ амашĕ.—Ара, ик эрне кана пурантар-çке, пĕр-пĕрине пĕлсе те çитеймерĕр пулĕ-ха! Чипер хатланар, çынсем мĕн калĕç! Халех уйралсан вара пиртен пĕтĕм ял кулĕ!..

— Сан ĕç çук унта! — татса хуна ывалĕ.— Хаманне хам пĕлетĕп!

Çав кунах Клавди таван килне тухса кайна. Çав каçах Шанкарч урамра çурамĕ çине тар тухиччен ташлана, теççĕ. Саванна пуль ĕнтĕ арамне пит çамаллан каларса янашан!

Анчах та тĕнче тĕлĕнмелли кашт каярахпа пулнаха. Праньккана, Шанкарчсем патне, Клавдин амашĕпе аппашĕ унан япалисене каялла илсе кайма пына. Ним пулман пекех хавассан кĕтсе илнĕ вĕсене Шанкарч.

— Килĕрех, килĕрех, тавансем! Анне, çамарта ашала-ха! Сара асса тух! Четвĕрт тĕпĕнче юлман-и унта мĕн те пулин?

Сĕтел хушшине ларсан, вал турех Клавдие тиркеме тытанна:

— Хай айапла. Пурнаç тумалли çын мар вал сирĕн. Алла утюг тытма та пĕлмест те... Анчах эпĕ культурнай çын вĕт, районта ĕçлетĕп, пĕтĕм физкультурниксем мана паханаççĕ. Ман таса çурес пулать. Ака, çак Анфис ман арам пулсан,— эп чанах та вара телейлĕ пулна пулаттам!

Çавантах вал Клавдин аппашне, Анфиса, «çураçма» тытанна, çине тарсах, ним намаса пĕлмесĕрех...

— Качча тух мана! Халех, паянах! Эпĕ сана Клавдирен пин хут ытларах килĕштеретĕп! Ĕмĕрне сана пĕр сив сăмах каламăп, сăпкари ача пек усрăп, ĕнен мана!

Амăшĕ те, хунями те тĕлĕнсе хытсах кайнă: мĕн лăпăртатать ку? Йăмăкне хăваласа янă та, халь аппăшĕн пуçне çаврăсшăн!

— Кирлĕ мара ан калаç-ха, Шăнкăрч, чарăн! — кăшкăрсах пăрахнă амăшĕ. Хунямăшĕ те тарăхса чĕтремех тытăннă. Анчах пĕрре хĕрсе кайнă Шăнкăрч чарăнма шутламан та, хăйĕн юрринех юрланă. Амăшĕсем кансĕрлесрен, вăл Анфиса тула илсе тухса илĕртме тытăннă...

— Района куçса каятпăр... Майралла тумлантаратăп... Штапель те крепдешин, тем тĕрлĕ пурçăн кĕпесем çеç тăхăнса çӳрĕн! Тутăр вырăнне ак çакăн пек шлепке пулать...

Çаврăнă вĕт хĕре! (Хĕрĕнчен те тĕлĕнмелле ĕнтĕ...) Çавăн чухнех тытса юлнă ăна, амăшĕпе пĕрле килне те яман! Ак епле тĕлĕнтермĕшсем пулаççĕ çĕр çинче, юмахра та илтес çук ун пекки çинчен!

Малтанхи кунсенче, паллах, пурнăç чиперех пынă темелле, хăй юратнине Шăнкăрч пур майсемпе кăтартма тăрăшнă. Амăшĕ те савăннă: тинех ăса кĕчĕ пулмалла ман ывăл, тенĕ. Анчах пĕрер уйăх пек вăхăт иртсен, Шăнкăрч «юратăвĕ» таçта мурне кайса кĕнĕ. Май пулнă пулин те, район центрĕнчен вăл эрни-эрнипе киле килмен, пырсассăн та арăмне ним сăлтавсăрах хăрхăр! кăшкăрса пăрахнă. Ку ун пек мар та, вăл ун пек мар. Пĕрмай тиркенĕ. Ӳсĕрпе çапкаласа та илнĕ. Унтан хăваламах тытăннă.

— Йăмăку пекех ухмах иккен эсĕ! Анчах эпĕ — культурнăй çын, мана пĕтĕм район пĕлет! Санпа пурăнса намăс курма пултараймастăп! Тухса вĕç хăвăн килнелле! Çулу такăр пултăр!..

Çур çул асапланса пурăннă хыççăн вара Анфиса тӳсеймен, ашшĕпе амăшĕ патне таврăннă. Шăнкăрч çав каçхине темле ĕçке лексе питĕ хытă юрланă, урай хăмисене кисретсе ташланă, теççĕ. Тата темиçе кунтан Муркаш тăрахĕнчи тепĕр ялтан Раис ятлă хĕре вăрласа килнĕ. Шăнкăрчи хăй те, ăна хĕр вăрлама пулăшакан юлташĕсем те питĕ ӳсĕр пулнă, хĕрне урапа çинчен туртса антарса пӳрте сĕтĕрсе кĕрсенех намăс сăмахсемпе такмакласа, упăтесем пек сиксе ташлама тытăннă...

Çакан пек ирсĕрлĕхе Шанкарчан амашĕ те тӳссе тарайман. Ывалне тем те пĕр каласа варçса такна, унан хай пекех путсĕр тусĕсене шапарпах хаваласа яна, таталса макаракан çамрак хĕре хай хӳтлĕхне илнĕ, кӳрентерме паман. Ирхине вал ана камаллан асатса каларса яна...

Кун хыççан Шанкарч пĕр хуша лапланна пек пулса пуранна. Комсомол райкомĕнче те питĕ хыта ятлана куранать ана, ĕçре те асархаттарна. Анчах нумайлаха пулман ку, мĕншĕн тесен Шанкарч халь купаста пахчине çӳреме ханахна качака таки пекех пулса кайна-çке. Унан татах авланасси килнĕ. Аçта çитнĕ унта çамракрах та хитререх хĕрсене санаса çӳренĕ вал. Кĕçех Акучари Маруç çине куç хывна. Калама çук лайах хĕр пулна вал. Хитре, çамрак, ыра ятла—фермари чи хастар дояркасенчен пĕри. Ĕçре те никамран та юлман вал, таша-юрара та.

Çине-çинех «тупкачсем» яма пуçлана Праньккари Шанкарч çак Маруç патне. Иккĕ, виççĕ, таватта... Хай те пĕрре кана мар пырса кайна. Ашшĕ-амашĕ те, хĕрĕ те килĕшнĕ вара юлашкинчен, мĕншĕн тесен Шанкарч, хайне кирлĕ чух, йĕркеллĕ çын пекех куранма пĕлнĕ. Хĕрсен пуçĕсене çаварас тĕлĕшпе опыт пысак пулна-çке-ха унан! Вара, ĕç çине тухас умĕн, «Победа» автомобильпех пырса лартса кайна çак хĕре.

Кайран... яланхи истори çĕнĕрен пуçланна.

Малтанхи кунсенче Шанкарч хайĕн çĕнĕ арамне çав тери юратна пек пулна, анчах пĕр-ик эрнерен килне пит сайра çӳре пуçлана. «Ĕç нумай, вахат çук...» тесе суйна. Пĕр виçĕ уйах иртсен вара, кĕр енне, пуçĕпех çухална. Таçта хаяматне вĕçсе кайна Шанкарч — ана никам та, пĕр çын та пĕлмен. Те чĕрĕ вал, те вилĕ, те тарна вал, те тĕрмене хупса лартна ана... Çамрак арам çĕрĕ-çĕрĕпе çывармасар хуйхарна, тепĕр чух, макарнипе, ир енне минтерĕсем те йĕп-йĕпе пулна. Ара, епле макармастан-ха? Хайсен таван ялĕнче ним хуйха-суйхасар, саванса кана пуранна Маруç халĕ ни хĕр, ни арам пулса юлна вĕт...

Уйах хыççан уйах иртнĕ. Çур çул çитнĕ. Шанкарч сас паман. Упашки çапах та тавранать пулĕ-ха, тесе, Маруç вĕсем патĕнчех пуранна. Колхозра ĕçленĕ, Шанкарчан вата амашне пахна — çуса тасатна, апат-çимĕç хатĕрлесе пана.

Тăхăр уйăхран тин тупăннă хайхи вĕçен кайăк. Маруç тăванĕсем ăна çуллахи пĕр илемлĕ кун Ишлей ярмаркkинче тĕл пулнă,— унта вăл каçса кайсах волейболла вылянă. Тĕпчеме тытăнсан, çакă паллă пулнă: Ишлейре ăна ĕçрен те, комсомолтан та кăларнă иккен те (ахалех мар ĕнтĕ), вăл вара арăмне те, амăшне те ним пĕлтермесĕрех вербовкăпа Карагандана тапса сикнĕ. Халь те йăпăртлăха çеç килнĕ. Анчах арăмĕпе амăшĕ патневаскаман вăл, часрах мечĕкле выляма тытăннă...

— Ыран сирĕн пата пыратăп, малашнехи çинчен калаçса таталăпăр,— тенĕ Шăнкăрч Маруçа (Маруç упăшкасăр çур çул пурăннă хыççăн килне таврăннă). Анчах та паллах ĕнтĕ, Шăнкăрч пыман, каллех улталанă. Темиçе кунтан Маруç ăна Шупашкарта, юрă праçникĕнче курнă, анчах Маруçа асăрхасанах унăн «упăшки» мулкач пекех вăрманалла ыткăнса кĕрсе кайнă...

...Пĕр çулталăк хушшинче виççĕ авланса илнĕ çак путсĕр сар каччă, виçĕ хĕртен мăшкăлланă, вĕсен телейлĕ пулмалли пурнăçне пăсса хунă, таса чĕрисене тӳсме çук ыраттарса макăртнă. Юрать-ха таваттамĕшĕнчен мăшкăллама амăшĕ чарнă! Çын-и ĕнтĕ вăл? Çук, çын мар вăл, намăса çухатнă путсĕр те ирсĕр чĕрчун, иртĕхсе кайнă аçа выльăх — ун çинчен урăх ним калама та пĕлмелле мар!

...Тен, эпир çак Пранькkари «шăнкăрч» çинчен çырса хута та вараламастăмăр пулĕ, анчах ун пек «ытарайми каччăсем», «хĕрсен чĕрисене çиекенсем» час та часах тĕл пулаççĕ-ха пирĕн пурнăçра. Малтан хĕрсене юратнă пек пулса качча илеççĕ, унтан кăшт пурăнаççĕ те — уйрăлаççĕ, арăмĕсене хăваласа яраççĕ. Унтан каллех çине-çине, умлăн-хыçлăн авланаççĕ. Ирсĕр йăх ĕнтĕ!

Йĕри-тавралла çаврăнса пăхăр-ха, юлташсем, сирĕн те çакăн пек «шăнкăрчсем» çук-и? Пур пулсан — тăна кĕртĕр вĕсене, тĕрĕс çул çине тăратма тăрăшăр, йĕркене кĕмеççĕ пулсан — намăслантарăр, питлĕр вĕсене! Ытах чарăнмасан — ун пеккисем валли пирĕн уголовнăй кодексра питĕ лайăх статьясем те пур...

## ЧĂРĂШКАССИНЧИ ФЕОДАЛ

Чăрăшкассинчи Юрий Павловăн та авланмалли вăхăт çитнĕ...

Вăл ĕнтĕ çамрăках пулман — пединститутăн истори факультетĕнче тăваттăмĕш курсра заочнă вĕреннĕ, хайсен ялĕнчи вăтам шкулта истори вĕрентнĕ. Сахалах ĕçлесе илмен вăл, унсăр пуçне хăйĕн килĕ, пахчи, ĕнисысни пулнă унăн... Амăшĕ енчен хирĕçсе тăрасси пулман: авлан ара! Кăм чарать! Пире хуçалăхра пулăшакан çав тери кирлĕ!

Анчах кама илес-ха? Палăртса хунă хĕр-упраç пулман. Тепĕр тесен, вĕсем, тен, пулнă та пулĕ те, анчах темшĕн-çке Юрие çывăхарах пĕлекен хĕрсем унран пăрăнарах панă.

— Вăл çемьене пуç пырса чиксен — телей тупаймăн! Унăн амăшĕ леш Островский çырнă «Гроза» пьесăри Кабанихă вĕт, чăн-чăн деспот, Юрийĕ вара ăна хирĕç çăвар та уçаймасть...

Çавăнпа та амăшĕпе ывăлĕ хăйсене кирлĕ хĕре аякра шырама шут тăваççĕ. Хĕрĕ, вĕсен шучĕпе, çакăн пекскер пулмалла: ялти ахаль хĕр мар, вĕреннĕскер (аслă шкул пĕтернĕ пулсан тата лайăхрах!), укçине самаях ĕçлесе илмелле, анчах мĕн илнине пĕтĕмпех, пĕр пус юлмичченех хунямăшне памалла, хăй тĕллĕн ним те тумалла мар; службăран пушă вăхăтра е килти хуçалăхра, е колхозра ĕçлемелле (хальхи ĕç кунĕсем тухăçлă). Кино-театр таврашĕсене çўресе укçа тăкмалла мар, çи-пуçне чи йўннине илмелле, çулталăкра пĕр мăшăр пушмак туянсан — ытлашшипех çитет, ялта çăм чăлхапа кив калуш та темех тăрать, неччу унта çўллĕ кĕлĕллĕ пушмаксем çинчен ĕмĕтленме! Пурçăн кĕпесем те çынна пăсса яраççĕ çеç!

Амăшĕпе иккĕшĕ çавăн пек «статут» (положени) çирĕплетнĕ хыççăн Юрий тўрех арăм тумалли кандидат шырама ыткăнать. Шырамалли «площадь» аллă километртан та иртсе каять — Кўкеçрен пуçласа Калайкасси таран. Хăш чух унтан та инçерех çўрет вăл. Анчах ĕçсем ытла питех ăнса пымаççĕ-ха. Арăм тупасси—çур литр илсе ĕçесси мар çав вăл. Юлашкинчен Юрий Чă-

рашкассинчен вун пилĕк километрта ĕçлекен Марина Ш. учительница çине куç хывать... Унпа вăл ăнсăртран тĕл пулса паллашнă, анчах кăшт калаçса илнĕ хыççăнах «ку маншăн чи юрăхли пулать», тесе шут тунă. Çук-çук, «пĕрре пăхсах юратса пăрахни» пулман ку. Юрий урăххи çинчен шухăшланă: Марина институтăн физикăпа математикă факультетне пĕтерсе тухнă, дипломлă, колхозра ĕçлесе ÿснĕ, пурнăçĕ йывăр пулнă — ашшĕ вăрçăра вилнĕ. Кун пек çын çăмăлттай пулмасть, капăр тумланасси, ытла тутлă çиесси çинчен те, туристла походсене, курортсене çÿресси çинчен те шухăшлас çук. Анчах ĕне сума, сыснасене апат пама, çĕр улми кăларма пĕлетех ĕнтĕ вăл. Çакă вара — чи кирли!

Кун çинчен амăшне каласа парсан, лешĕ савăнсах кайнă: тăрăш эппин, ывăлăм, сĕтĕрсе кил вăл хĕре!

Тытăннă вара Юрий «сĕтĕрме». Маринăпа хăйĕнпе йĕркеллĕн калаçмасăрах, вăл кашни кун тенĕ пекех хăйсен ялĕнчен çирĕм километрта пурăнакан хĕрĕн амăшĕ патне çÿреме тытăннă. Хăйĕнпе, килĕпе, амăшĕпе, хуçалăхĕпе мухтаннă. Хĕрĕн кăмăлне çавăр, качча пытăр вăл мана! Ĕненĕр, ман пек каччă çĕр çухрăма кайсан та тупаймастăр-ха эсир, ман пекки пинрен пĕрре пулать, темелле!

Анчах хĕрне, Маринăна, вăл нимĕн чухлĕ те килĕшмен. Темле ытла йăпăлкка, лăпăрти пек туйăннă вăл ăна, унăн калаçăвĕсем Хлестакова аса илтернĕ. Çавăнпа та, «каччи» çывхарнине асăрхасанах, килтен тухса кайма тăрăшнă. Анчах лешĕ парăнман. Хыççăнах çÿренĕ. Тĕл пулсан вара атакăлама тытăннă:

— Эпĕ сана юратнă пек халиччен никама та юратса курман. Качча тух мана. Ӳкĕнмĕн. Ĕмĕр-ĕмĕр телейлĕ пулăн. Сана эпĕ алăра çĕклесе çÿреме хатĕр! Кăмăлу пур пулсан, аннÿне хамăр пата илсе кайăпăр, пурăнтăр пирĕн патра. Шкул пире чул çуртра хваттер парать, эпĕ директорпа калаçса татăлтăм ĕнтĕ. Санăн йăмăку Канашра вĕренет, тетĕн-и? Мĕнех вара, вĕрентĕр, пулăшатпăр ăна, çын тăватпăр! Пур енчен те лайăх пулать. Килĕш ĕнтĕ!..

Анчах Марина килĕшмен те, Юрий нимĕнсĕрех тухса кайнă. Тепĕр кунне вăл Кÿкеçре пулнă, çавăн пекех çуллă сăмахсемпе тепĕр хĕре çавăрма тăрăшнă. Ĕç тухман, вара каллех Марина Ш. патне çул тытнă. Сахал мар пулнă вăл унта. Вуннă. Вун пиллĕк. Çирĕм!

Çапах та уссиех пулман. Вара çирĕм пиллĕкмĕш хутĕнче (ĕнентерсех калатпăр — çак цифра вăл тĕп-тĕрĕс!) Юрий хĕре штурмлама йывăр артиллери илсе пынă — хайсен шкулĕн директорне.

Хальхинче хĕре Юрий мар, шкул директорĕ ӳкĕтленĕ. Тĕлĕнмелле хитре сăмахсем каланă вăл: Юрий — чи пултарулла учитель имĕш, хальхи саманара малта пыракан çын, кĕçех институт пĕтерет (унта умлăн-хыçлăн вун пилĕк хут двойка илсе тавăрнни çинчен, паллах, каламан), туртмасть, ĕçмест, унăн амăшĕ те ылтăн çын, килĕ-çурчĕ кермен пек, хуçалăхĕ вăйлă, анчах çамрăксем çемьерен уйрăм пурăнма шутлаççĕ пулсан — тархасшăн ара, ак халех хваттер уççи тыттарма пултаратăп... Ырлăх-сывлăх та телей пултăр сире!

...Марина килĕшнĕ. Каччи, питĕ васкавлăн район центрне кайса, пулас арăмне малтан ĕçленĕ шкултан хайсен шкулне куçармалла туса пынă. Тепрер ик эрнерен туй пулнă. Пĕтĕм ял хускалнă вăл туя пула. Ял Совет председателĕ хăйматлăх пулма килĕшнĕ. Темиçе кун сикнĕ туй, вуншар четвĕрт «аншарли» кӳпсе янă. Ĕмĕрхи йăлапа, Марина хăйĕн каччин тăванĕ-хурăнташĕсене парнесем панă. Туя учительсем те пынă, директор та юлман. Саламланă, хавасла тостсем каланă, «йӳçĕ!» тесе кăшкăрнă...

Анчах йӳççи каярахпа пуçланнă...

Нихçан курма шутламан пурнăç...

Туй хыççăн уйăх та иртмен — Марина хăй питĕ йывăр кил-йыша, пĕтĕм пурнăç тахçанхи, кивелсе пăнтăхнă йăласем тăрăх пулса пынă çĕре лекнине туйнă. Юрий амăшĕ килтисемшĕн «турă та, патша та» пулнă — ун умĕнче пурте чĕтресе тăнă, унăн пĕр сăмахĕнчен те иртме пултарайман. Амăшĕ хăйĕн çăра куç харшийĕсене пĕрре хускатса илсенех, Юрий ун умне чĕркуçленсе ларма хатĕр пулнă. Анчах арăмĕ çине вăл çавăнса пăхма та пăрахнă ĕнтĕ, унпа ним çинчен те калаçсах кайман. Вăл амăшĕ хăйне тата мĕн хушассине çеç кĕтсе пурăннă — шăп та шай «Гроза» пьесăри ухмахрах Тихон пек.

Çĕнĕ çынна малтан кăшт-кашт çеç сăмах тĕккеленĕ, унтан ӳпкелеме пуçланă, юлашкинчен вăрçма та тытăннă. Марина хуть те мĕн тусан та — хунямăшне килĕшмен. Пӳрт ăш-чиккине те кирлĕ пек пуçтармасть иккен вăл, урайне те çума пĕлмест, çиессе те... этемле çимест!

Марина чашăкри яшкана кашăкпа пăтратса илсен те, хунямăшĕ харр! кăшкăрса пăрахнă:

— Мĕн шыратăн эсĕ чашăк тĕпĕнче?! Ылтăн çук унта!..

Кĕç пĕтĕмпех чарнă: каçхине хут-кĕнекепе ларма юрамасть — çутă ахалех çунать, радио итлеме юрамасть — çыварма кансĕрлет, кĕпе час-час çума юрамасть — шыв ăшăтма вутă нумай каять тата пўрт те çĕрет, кинона кайма юрамасть — вăл укçа сая яни çеç!

Пĕр ирхине шкула кайма хатĕрленсе, Марина пуç тутрине якатас, тенĕ. Çавна кура, амăшĕ пĕрре кинĕ çине, тепре ывăлĕ çине витĕр шăтарас пек пăхса илнĕ çеç... Юрий, ăна ăнланса, тўрех Марина аллинчи электроутюга çăтăр-çăтăр туртса илнĕ:

— Пирĕн свет çути — казеннăй мар, эпир уншăн укçа тўлетпĕр, пĕлетĕн-и эс çавна?!

Тĕлĕнсе кайнă Марина юпа пек хытса тăнă...

Укçа... Тĕп-тĕрĕссипе каласан, хунямăшĕ çамрăк кинне пĕрмай сăмах тĕксе калани те, ăна кунтан кун ытларах курайми пулса пыни те пĕтĕмпех укçаран килнĕ. Вĕсем ывăлĕпе иккĕшĕ çапла калаçса таталнă-çке-ха: кин хăйĕн пĕтĕм укçине, пĕр пус юлми, хунямăшне памалла, анчах Марина халлĕхе укçа паман. Унăн хăйĕн кăшт та пулин тумланмалла, вĕренекен йăмăкне ярса памалла тата тăван амăшне те пулăшмалла пулнă. Ăçтан тăруках тупăнтăр-ха ун чухлĕ укçа? Амăшĕ хĕтĕртнипе Юрий пĕрре кăна мар ĕнтĕ Маринăна укçа пирки аса илтернĕ: аннене парас пулать! Марина ăна хирĕç: «Çитес уйăхри укçаран пĕр вăтăр тенкĕ паратăп ĕнтĕ», тесен, Юрий çав тери тарăхса каласа хунă:

— Вăтăр тенкĕпе эс ан та йĕкĕлте! Хăвнах япăх пулать вара...

Чăнах та çав, Марина пурнăçĕ кунтан кун япăхланса пынă. Каç-каç макăрнă. Виçĕ уйăх хушшинче начарланса, шурăхса кайнă, нервă чирĕ пуçланнă. Вăл Юрие шкул хваттерне куçасси çинчен калама тытăннă, анчах лешĕ итлесшĕн те пулман. Ара, ăна амăшĕн хўттинчех пит лайăх пулнă-çке! Марина вĕсем патĕнче пурăннă хушăра амăшĕ Юрие пĕрре кăна вăрçса илнĕ — çĕрле лаççа сăмакун юхтарнă çĕре тухса ăна пулăшманшăн. Тĕрĕссипе, ку та Маринăна йĕплесе илни пулнă: еплеха апла, хунямăшĕ, çемьене сăмакун çителĕклĕ туса парас тесе, тĕтĕм ăшĕнче асапланать, çав вăхăтра кинĕ —

выран çинче ачашланса выртать. Эккей, тупанна улпут майри!

Юрий Маринаран сивĕнсех пына. Ана вал хай те пытарман, çывах юлташĕсем умĕнче тўррĕнех калана:

— Качча илмелле марччĕ ман ку хĕре...

Çулла, çырма урла каçна чух, Марина урине амантна. Унан часрах больницана каймалла пулна. Çакан çинчен пĕлсен, Юрий ана ытти учительсем умĕнчех касса татна:

— Больницана кайса выртатан пулсан, урах ман киле пырса та ан кĕнĕ пултар!..

Ана тахашĕ намаслантарсан тин шапланна вал. Çапах та тепĕр пилĕк кунтан Шупашкара, больницара выртакан арамĕ патне кайна-ха. Анчах ана аша самахпа та пулин лаплантарас, йапатса хаварас выранне, тухса каяс умĕн пĕррех лаплаттарса хуна:

— Мана уксах-чалах арам кирлĕ мар!

Анланса çитнĕ вара Марина: çак чул чĕреллĕ, чунсар, пĕр хайшĕн кана тарашакан çынпа пурнаç пулмастех. Больницаран тухсан, вал тўрех шкул директорĕ патне кайса хай пурнаçĕ пирки тĕпĕ-йĕрĕпе, ним пытармасар каласа катартна та хайне валли пўлĕм ыйтна. Тĕрĕссипе, Марина пурнаçĕ мĕн тери йывăррине директор хай те пĕлнĕ-ха, анчах унан çамрак учительницана пулашас шут пулман. Юрий Маринана качча илесшĕн ашталанса çўренĕ чух чи асла евчĕ, «тупкач» пулса Маринана тем тĕрлĕ ырлах туса пама пулнаскер, халĕ каялла тапма тытанна. Шкул çуртĕнче пуша пўлĕм пулна пулин те — Маринана паман. Марина çине тарсах ыйтна, эп текех хуняма патĕнче пуранаймастап, мана унта уроксем умĕн хатĕрленме те памаççĕ, тенĕ. Çакан хыççан «ыра» директор кĕскен кана таварса калана:

— Хĕнес пулать сире пĕрре пит лайах...

Маринан РОНОна кайма тивнĕ, çаван хыççан тин ана пўлĕм уççине пана. Анчах çав вахатрах вал халĕ хайсен туйĕнче «йўçĕ!» тесе кашкарна тата темĕн тĕрлĕ ырлах сунна учительсем, пурте тенĕ пекех, вĕсемпе пĕрле директор та, ун çине чалашшан пахма пуçланине, унпа питех калаçасшан мар пулнине туйма тытанна. Никам та Марина майла пулман. Каçсерен, сивĕ пўлĕме питĕрĕнсе ларса, кашни каштартатна сасаран хараса, вал макарна...

Юрийĕ вара хăйне хăй чăн паттăр пекех тытнă. Марина çинчен кирлĕ мар сăмахсем лĕпĕртетнĕ, ун ятне учительсем умĕнче çеç мар, вĕренекенсем умĕнче те ӳкерме тăрăшнă. Шăп та ĕнтĕ вăл вĕрентнипе пĕр класри ачасем (алă пусмасăрах) директор патне çакăн пек заявлени çырнă:

«В настоящем (?!) просим заменить учительницу математики другим...»

Туйра ташланă учительсемех Маринăна хăлхинчен пăшăлтатса «ăс панă»:

— Тухса шăвăн ку шкултан, ĕç шала кĕрсе кайиччен. Эпир кунта — вырăнти халăх, пире никам та тивес çук, анчах санран тӳссе тăрасси пулмасть, пĕтетĕн...

— Хăвна урăх шкула куçарма ыйт часрах!

Юрийĕ тӳрремĕнех хăратнă:

— Çухал ман куç умĕнчен, е эп сана хам тирпейлесе хуратăп!

Маринăна вăл хуть те ăçта та, хуть те епле те кӳрентерме вăтанса тăман. Учительсен августри канашлăвĕнче те, Шупашкарта, театр фойинче, çынсем умĕнчех тем те пĕр каласа тăкнă та аллине каялла пăрма тапратнă. Хута кĕрекенсем пулман...

Хайхискер, ĕç РОНОна çитет. Юрие хăй мĕншĕн çакăн пек хăтланса пурăнни, хĕрарăма мĕншĕн çав тери кӳрентерни çинчен çырса пама хушаççĕ. Акă мĕн çырать вăл (чăвашла куçарсан ку классикла сочиненин пĕтĕм «сĕткенĕ» пĕтет, çавăнпа та вырăслах пичетлетлетпĕр ăна):

«— Наша семейная жизнь возникла на почве не любви меня с ее стороны, а также следствием разницы характеров, как ее гордость, высокомерность и отсутствие женственности... В данное время я ее не люблю, прошу перевести другую школу, она для этого полностью заслужила...»

Анра-сухралла çырнă çак çырава ăнланма малтан пĕр пăт тăвар çисе ярас пулать.

Маринăн пĕр таванĕ Юрий патне вĕсене Маринăпа иккĕшне мирлештерес тесе çырса янă-мĕн. Ăна Юрий тата ирсĕртерех ответ панă:

«— Пишу секретно и откровенно... Моя семейная жизнь... возникла на почве биологической любви. Неудача семейной жизни явилась следствием разницы темпераментов...»

Малалла тата: «Для меня... это (авланни ĕнтĕ!) был большой урок, т. е. генеральная репетиция...»

Авă мĕн иккен! Авланма шут тытса, вăл малтан ахаль репетици тунă пулать, халĕ генеральнăй репетици тăвас, тенĕ. Çав репетицие тăвас тесе вăл хĕр çурасма 25 хут кайнă, ăна улталанă, унăн пурнăçне пăсса, лутăркаса тăкнă. Анчах генеральнăй репетици хыççăн спектакль пулмалла-çке?

Ăна мĕнлерех туса иртерĕ-ши Юрий Павлов? Тата миçе хĕр куççульне юхтарĕ-ши, намăссăр!

●

Эх!.. Кама, мĕнле çамрăка савăнтармасть пуль пурнăçра пĕрремĕш хут ĕç укçи илни!.. Вăл куна çын нихçан та манма пултараймасть çав. Ку таранччен эсĕ ача шутĕнче пулнă, сана аçу-аннӳ пăхса усранă — çитернĕ-ĕçтернĕ, тумлантарнă, вĕт-шак расхутсем валли те — кинона каймалла-и унта, театра-и, урамра тутлă шыв ĕçмелле-и — вĕсемех укçа панă. Анчах ĕçлеме пултаракан çын пулса çитсен вара эсĕ хăвăн укçуна тытатăн, хăвна мĕн кămăла каять — çавна илетĕн, аçу-аннӳне те, хăвна пăхса ӳстернĕшĕн тав туса, пĕр-пĕр парне илсе паратăн... Çапла мар-им?

Стройкăри малярсем пулма вĕренекен çамрăк хĕрсем — Маша, Тамара, Феня тата ыттисем, пурĕ вунултă çын, пирвайхи хут ĕç укçи илмелли куна куç пекех кĕтнĕ. Каннă вăхăтра, пĕрле пухăнса ларса, малтанхи укçапа мĕн-мĕн илесси çинчен чĕвĕл чĕкеçсем пек калаçнă вĕсем.

— Епле пулсан та, вăл укçапа лайăхрах япала илсе юлас пулать — ĕмĕр асăнмалăх пултăр! — пурте пĕр кămăллă пулса килĕшнĕ çамрăк хĕрсем.

Юлашкинчен, хайхискер, çав савăнмалли кун çитнĕ — хĕрсем пирвайхи ĕç укçи илнĕ. Анчах, хăйсем валли асăнмалăх япаласем илме магазинсене тухса кайиччен, кĕтмен-туман çĕртен, çав укçаран вĕсен чăн малтан... хырçă, темле ăнланмалла мар налог тӳлеме тӳр килнĕ.

Ан тĕлĕнĕр, хисеплĕ вулакансем, тĕп-тĕрĕссинех калатпăр!

Ĕçĕ-пуçĕ ак çапла пулнă вăл...

Тин çеç укçа илнĕ хавасла хĕрсем патне хăйсен бригадирĕ Зинаида Ивановна Кашникова пырса тăнă та пурне те витĕр шăтарас пек пăхса çаврăннă. Куçĕсем унăн çывăхрах услам çу выртнине курса тăракан ватă кушаканни пекех ăмсануллăн ялкăшнă...

— Укçа илтĕр пулать, хĕр-упраç? — тенĕ вăл, кămăллăн куланçи пулса. Анчах темшĕн-çке хăйĕн сăмса çунаттисем сиккелесе илнĕ.

— Илтӗмӗр, Зинаида Ивановна! — пӗр сасӑпах хуравлана ним чухламан хӗрсем.

— Питӗ лайӑх, питӗ аван ку...

— Лайӑх пулмасӑр, Зинаида Ивановна!

— Анчах сире ҫакӑн пек укҫа илекен пулма кам вӗрентнӗ-ши? Кам тӑрӑшнипе тӳрех виҫҫӗмӗш разряд илтӗр эсир? — хӗрсем ҫывӑхнелле тата темиҫе утӑм туна бригадир.

— Кам пултӑр... Эсӗ, Зинаида Ивановна! Спаҫҫипа сана уншӑн!

— Эх, эсир те ҫав! — сасартӑк кӑмӑлсӑрланнӑ бригадир.— Спаҫҫипӑран кукӑль пӗҫерме ҫуккине пӗлместӗр пулать? Спаҫҫипа калани вӑл пӗртте ҫынна тав тунине пӗлтермест-ха! Чухлас пулать...

Хӗрсем, ним ӑнланмасӑр, пӗрре Кашникова ҫине, тепре пӗр-пӗрин ҫине тӑн-тан пӑхкаласа илнӗ. Мӗн пирки сӑмах тӗкет бригадир? Мӗн пирки систерет? Епле-ха тата ҫынна пӗтӗм чӗререн «спаҫҫипа» тесе калани ӑна тав туни пулмасть вӑл?!

Ӑнланса илме бригадир вӗсене хӑех пулӑшнӑ...

— Ыр кӑмӑллӑ та чипер ӑс-тӑнлӑ хӗрсем пек пулса, хӑвӑра ӗмӗрлӗх специальноҫ илме — ӑста малярсем пулма вӗрентсе кӑларнӑшӑн тав туса, сирӗн халех укҫа пухасчӗ те мана пӗр платйӗ те пулин илсе парасчӗ! Сахал тӑрӑшрӑм-и эп сирӗншӗн? Хамӑн вӑйӑма та, вӑхӑта та хӗрхенмерӗм сире ҫын тӑвасшӑн. Ҫапла мар-им?

— Ҫапла, Зинаида Ивановна! Нумай тӑрӑшрӑр! Тав тӑвасах пулать пирӗн сана уншӑн!

Ҫавӑнтах хӗрсем кашнинчен икшер тенкӗ пухнӑ та тутисене ҫуласа тӑракан Кашниковӑна тыттарнӑ... Нихӑшӗ те кӳренмен: чӑнах та, ма тав тӑвас мар-ха хӑвна ыр тунӑ ҫынна?..

Анчах та ку пуҫламӑшӗ ҫеҫ пулнӑ-ха...

Тепӗр ик эрнерен, хӗрсем иккӗмӗш хут укҫа илнӗ чух, Кашникова каллех вӗсем патне пырса тухнӑ.

— Итлӗр-ха, хӗр-упраҫ, сирӗн ку укҫаран Гук Адамовича тав тӑвас пулать... Унсӑрӑн май килмест...— макӑртатса илнӗ вӑл.

— Кам вара вӑл Гук Адамович? Темле Гук... Адам... Кай! Палламастпӑр-ҫке эпир ун пек ҫынна? Ӑна мӗншӗн тав тумалла пирӗн?

— Пурана киле ăнланатăр ака,— тутине пăчăртана бригадир.— Прораб вăл пирĕн. Пире ĕç параканни, ĕçленĕшĕн мĕн чухлĕ укçа тӳлессине ала пусса çирĕплетекенни. Тура пекех вăл пирĕншĕн. Ăна хирĕç пыма юрамасть — унсăр эпир нимĕн те ĕçлесе илейместпĕр. Ялан ас тавăр çавна! Пуçтарăр халех кашнинчен пĕрер тенкĕ! — приказ пана пекех каласа хуна юлашкинчен бригадир.

Çамрăк, пурнăçра нимех те курман работницăсем ăна хирĕç пырайман. Шел пулин те, хăйсем куçпа та курман çынна ыр тума пĕрер тенкĕ кăлара-кăлара тыттарнă...

Ку ик-виç çул каялла пулнă.

Анчах работницăсенчен «хырçă» шăйăрасси çаканпа пĕтмен. Пĕтме мар—йăлана кĕрсе юлнă вăл. Кашни укçа илмессерен тенĕ пекех (уйрăмах — укçа ытларах ĕçлесе илнĕ уйăхсенче) Кашникова бригадир, тĕрлĕрен тĕрлĕ сăлтавсем шыраса тупса, хăйĕн бригадинчи хĕрсемпе хĕрарăмсенчен укçа тăпăлтарнă. Паллах, ырми-канми ĕçлесе тупнă укçана работницăсен парасах килмен, хăшĕсем хирĕçме те пăхнă. Ун пек чух вара Кашникова, хăйне ним сăлтавсăрах кӳрентернĕ пек тарăхса кайса, сурчăк сирпĕтсех ятлаçнă, укçа парасшăн маррисене чи киревсĕр сăмахсемпе вăрçса тăкнă.

— Тăнсăр сурăхсем! Эсир мĕн, ку укçана эпĕ хам валли илетĕп тесе шутлатăр-им? Гук Адамовича памалла ăна, прораба! Уншăн вăл пире нарядсене лайăхрах хупса парать, вара тепринче тата лайăхрах ĕçлесе илетпĕр! Хăвăра кам ыр тунине те тавçăрса илейместĕр, сысна кăнтăрлисем! Упăшкăрсем темиçе хут ытларах ĕçсе яраççĕ, çапах та шарламастăр, кунта пĕр пусшăн чĕтресе тăратăр — выçă йытăсем пек...

Çапла пусмăрласах, вăйпах, мăшкăлласа-кӳрентерсех укçа тăпăлтарнă Кашникова бригадăри работницăсенчен. Çитменнине тата «хырçине» пысăклатсах пынă. Малтан аллăшар пус, пĕрер тенкĕ çеç илнĕ пулсан, каярахпа «налог» виçĕ тенке те çитнĕ. Памасăр тытанса тăракансене çĕрти çӳпĕ выранне те хумасăр пăскăртнă. Ĕçрен хăваласа ярассипе хăратнă. Вырăссем кун пеккине «вымогательство» теççĕ...

Пĕррехинче Феня ятлă работница чирлесе ӳкнĕ те чылай хушă ĕçлемесĕр пуранна. Сывалса ĕçе тухсан, вăл ĕç укçи илмелли кунччен пĕтĕмпе те 1 тенкĕ те 70 пус-

лах кӑна ӗҫленӗ. Кашникова «черетлӗ взнос» пухма тытӑнсан, ӑна та манса хӑварман.

— Укҫа илтӗн пуль? Тавай пӗр тенкӗ! — тенӗ вӑл хаяррӑн.— Гук Адамовича чылайранпа паман, паян парасах пулать, унсӑрӑн тип шара лекетпӗр!

— Эпӗ пӗтӗмпе те 1 тенкӗ те 70 пус ҫеҫ ӗҫлесе илтӗм-ҫке, хальхинче каҫар ӗнтӗ мана, атту манӑн паян ҫакӑр илме те укҫа юлмасть,— тархасласах йӑлӑннӑ Феня.

Анчах бригадир унӑн ҫак сӑмахӗсене хӑлхана та чикесшӗн пулман.

— Тавай, тавай, ан лӑркаса тӑр ыйткалакан пек! Выҫсах вилмӗн, ҫӑкӑрлӑх тупатӑнах ӗнтӗ камран та пулин! Е... санӑн ӗҫрен тухса вӑркӑнассу килет-и?

Тӑпӑлтарса илнӗ вара пӗр тенкине...

«Взноссем» пухмалли сӑлтавсем тупӑнсах пынӑ.

Мартӑн саккӑрмӗшӗ — хӗрарӑмсен кунӗ тӗлне Кашниковӑна хайне ҫӗнӗ платйӗ илсе памалла.

«Гук Адамович кӑмӑлсӑр ҫӳрет, сӑра ӗҫесшӗн пулмалла...»

«Гук Адамович менелник тума хатӗрленет...»

Прораб утмӑл ҫул тултарнине Кашникова бригадир питӗ сулмаклӑн палӑртма шут тытнӑ. Пӗтӗм бригадӑна пӗр ҫӗре пухнӑ та тӳрех ҫакӑн пек «ультиматум» каларса тӑратнӑ:

— Менелник кун Гук Адамовича алла ҫыхмалли сехет парнелетпӗр. Хупӑлчи ҫине хӑйӗн хушаматне ҫыртарсах паратпӑр. Йӳнех пулмасть вӑл, анчах та тӳсӗпӗр, укҫасӑр мар халь эпир. Иртнӗ уйӑхра, кив укҫапа шутласан, пиншер тенкӗ ытла илтӗр. Кама пула, тетӗр? Гук Адамовича тав тумалла уншӑн. Нарядсене вӑл лайӑх хупса пачӗ. Малашне те сахал мар ыр тавӗ-ха пире, халех пенсие каймасть вӑл. Ҫавӑншӑн пирӗн ӑна чунтан хисеплемелле, юрама та пӗлмелле. Анлантӑр-и? Халех икшер тенкӗ кӑларса хурӑр!

Бригада чӗнмен. Ытла та пысӑк «налог» пулнӑҫке ку!..

— Эпир ӑна ахаль те питӗ хисеплетпӗр-ха, укҫине те сахал мар патӑмӑр виҫӗ ҫул хушшинче,— тенӗ унтан пӗри, хӑюллӑраххи,— анчах хӑй вӑл пире этем вырӑнне тэ хумасть-ҫке! Унпа калаҫмалла пулсан — сан ҫине куҫпа та пӑхмасть, тӳрех ҫурӑмӗпе ҫаврӑнса тӑрать, пире ятпа та, хушаматпа та чӗнмест... Уншӑн эпир пур-

те «килька», «шайттан», «херзем» кăна вĕт! Çавăнпа та манăн ăна нимĕнле парне те парассăм килмест, утмăл мар — çĕр çул тултарнă пултăр хать!..

Э-эй, тапранса кайнă вара çакăн хыççăн Кашникова! Мĕнле кăна хăртман пулĕ çак самахсене калакана! Юлашкинчен хăй мĕн шутланине пурĕ пĕр тунă: бригада членĕсене çав-çавах «хырçă» тӳлеттерсе прораба сехет туянтарнă. Хĕрсенчен пухнă укçаран бригадирпа прораба юнашар ларса тăн çухатиччен ĕçмелĕх те юлнă. Гук Адамович кăмалĕ çу пек ирĕлсе тăнă...

— Пултаратăн çав эсĕ, Зина! Ылтăн хĕрарăм эсĕ! Санпа иксĕмĕр нихçан та çусăр çăкăр çиес çук эпир...

Бригада членĕсенчен взятка илмелли урăхла сăлтавсем те шыраса тупнă намăсĕпе чысне те çухатнă Кашникова. Постройком йышăннипе Окунева работницăна хваттер парсан темиçе кунтанах постройком членĕ пулнă Кашникова ун патне хашкаса чупса пынă.

— Пĕлетĕн-и, сана хваттер эпĕ партартăм вĕт! — такам илтесрен хăрана пек унăн-кунăн пăхкаласа калама тытăннă вăл.— Пурте хирĕç пулчĕç малтан, пĕр эпĕ кăна сан майлă çаптартăм. Питĕ йывăр пулчĕ ĕнентерме, çапах та çĕнтертĕм, сана хваттерлĕ турăм-турăмах! Шута илес пулать санăн çавна, тусăм... Тăрăшнăшăн пĕр аллă тенкĕ парасах пулать мана...

— Ун пек укçа çук манăн,— тенĕ ăна хирĕç Окунева.

— Ара, эсĕ пĕр тăрук мар, пайăн-пайăн парса пыр, эп мăн кăмаллă çын мар, кĕтме те пултаратăп!

Çавăнтах работницăн юлашки пилĕк тенкине илсе тухса кайнă.

Калама та çук ыр курса пурăннă Зинаида Ивановнăпа Гук Адамович работницăсенчен пусмăрласах взяткăсем илсе. Прораба «ирĕклĕ» укçа кирлĕ пулсанах, бригадир çурăлса каяс пекех тăрăшнă уншăн. Паллах, хăйне те кӳрентермен!

Кашникован декретлă отпуска каймалли вăхăт çитсен, ун вырăнне Апанасов хушаматлă рабочие тăратнă. Халь ĕнтĕ бригадăра «хырçă» пухман, Гук Адамовича нимĕн те лекмен. Пĕр уйăх иртнĕ çапла, иккĕ... Адам ывăлĕ Гук çакăншăн калама та çук тăрăхса çитсе, бригадăна хăй пĕлнĕ пек «тыткалама» тапратнă. Вăл ăна ĕç пама пăрахнă. Работницăсем темиçешер кун ним тумасăр ларнă, эрнипе пĕр пус та ĕçлесе илеймен. Апана-

сов темиçе хут та Гук патне кайса калаçнă, анчах лешĕ ал сулнă çеç: санăн килькусем валли ĕç çук манăн! Апанасов ун çинчен строительства управленин начальникĕ патне кайса каласан, Гук ăна чĕнсе илнĕ те питĕ шутсăр хытă кисретнĕ — вăл каланă сăмахсене пĕрине те хут çине çырма май çук, совет инженерĕ рабочипе ун пек калаçма пултарнине те ĕненме йывăр...

Текех вара бригада членĕсем те тӳссе тăма пултарайман. Вĕсем пурĕ пĕр çĕре пуханнă та начальник патне питĕ пысăк çыру çырса вун улттăн ала пуснă. Пĕтĕмпех каласа панă унта. Эпир вуласа куртăмăр çав çырăва. Гук Адамовичпа Кашникова мĕн-мĕн хăтланни, вĕсем работницăсене епле хĕсĕрлени, вĕсене çын вырăнне хумасăр мăшкăллани, вăйпа, çине-çине укçа шăйăрса илни çинчен вуланă чух çӳç-пуç вирелле тăрать çав!..

Çав путсĕрсене иккĕшне те питĕ хытă ответ тыттарнă. Взяткă илекенсене мĕнле тыткаламаллине пирĕн саккунсенче лайăх кăтартса панă вĕт. Суд умĕнче темле ăшталанса тӳрре тухма тăрăшнă пулин те, Гукпа Кашниковăна каçару пулман. Лекнĕ вĕсем.

Çапах та эпир çак фельетона çырасах терĕмĕр, мĕншĕн тесен çавăн пек сĕлĕхсем тĕл пулкалаççĕ-ха. Вĕсенчен сыхланма çеç мар, вĕсене хăвăртрах тăрă шыв çине кăларса саккун умне тăратма та пĕлес пулать...

## ХАРАМ ПЫР

Шупашкар хĕрринчи пĕчĕк урамри çурт хапхинчен пĕр хĕрĕх çула çитнĕ лутрарах çын тухать. Унăн сылтăм аллинче — самаях тĕреклĕ туя. Урама тухсан, вăл васкамасть, хăйне такам курасран шикленнĕ пек, хĕсĕкрех куçĕсемпе пĕрре тăвалла, тепре анаталла вăль та вальт пăхса илет. Унтан пĕр-пĕр çынна курать те, туйи çине тайăнса, ури тŭсме çук ыратнă пек уксахласа утма тытăнать. Çав вăхăтрах унăн сулахай алли кĕрхи вĕрене çулçи пек чĕтреме тытăнать... Тем тесен те, ку çын — вăрçă инваличĕ ĕнтĕ, унăн ури аманнă, ăна йывăр контузи пулнă, çавăнпа асапланать те ĕнтĕ вăл, мăнтарăн!

Анчах... эпир те ун хыççăн утса каяр-ха. Акă, вăл пĕр ансăр тăкăрлăкалла пăрăнчĕ. Каллех, паçăрхи пек, унăн-кунăн пăхса илчĕ. Никам та çук иккен кунта. Пĕр куç та курмасть. Вара халь çеç асаплăн уксахласа, чĕтренсе пыракан этем сасартăк, пĕрре куç хупса илнĕ хушăрах улшăнать: аллинчи туйи çине тайăнма пăрахать, ăна варринчен — япала йатнă пек — тытать те, çав тери хăвăрт утма тытăнать, велосипедпа та хăваласа çитеймĕн! Уксахлани те çук, алли те чĕтремест, çатлаттарса кăна пырать.

Тăкăрлăк пĕтет. Халь ĕнтĕ мăн урама тухмалла. Унта, паллах, халăх нумай. Паллакансем те пулма пултараççĕ. Çавăнпа та çак çын каллех улшăнать: малтанхи пекех туйи çине тайăнать, курпунне кăларать, сулахай аллине силлеме тапратать. Асапланать çав çын! Такам та хĕрхенмелле...

Акă, вăл пĕр учреждение кĕрет, пуç тайса илет те çав тери ывăнса çитнĕ çын сассипе калаçма тытăнать:

— Ĕне усракалатăп та хам... мана утă çулма çаран кирлĕ. Хăвăрах чухламалла — сывлăх çав тери начар манăн, сĕтсĕр пĕр кун та пурăнаймастăп...

Вăрçă инваличĕ тесе, ăна пĕр сăмахсăрах утă çулма ирĕк паракан хут çырса тыттараççĕ.

Кунтан тухсан, çак çын тата ик-виçĕ çĕре уксахласа çитет. Пĕр çĕрте ăна пахча хŭми тытмалли хăма памалла тăваççĕ, тепĕр çĕрте — çурт çине витме толь е тата

мӗн те пулин... Каҫаллапа вара вӑл калама ҫук тулли кӑмӑллпа тавранать: паянхи кун уншӑн питӗ тухӑҫлӑ пулчӗ! Унӑн йывӑр туйине ҫырманалла ыватсах чупас килет хӑйӗн килне, савнӑ арӑмӗ патне хӑвӑртрах ҫитсе: «Ну, Лена, пуранатпӑр-ха пурнӑҫне, кайса ил часрах ҫур литр!» тесе каласси килет, анчах та — юрамасть: ҫынсем курма пултараҫҫӗ, курсан — ырӑ пурнӑҫ пӗтрӗ вара!.. Ирӗксӗрех уксахлама тивет!

Тепӗр кунтан-и, иккӗрен-и, ҫак мӑн туяллӑ ҫынна эпир социальнай обеспечени министерствинче куратпӑр.

— Манӑн сывлӑх вуҫех начарланса ҫитрӗ, вилесси ҫеҫ юлчӗ, парӑр мана курорта каймалли путевкӑ! — тет вӑл.

— Халлӗхе путевкӑсем ҫук, кӑштах кӗтмелле пулать,— тенине илтсен, вӑл туйине урайне шаккаса, хаяррӑн кӑшкӑрса калаҫма тытӑнать:

— Эпӗ фронтра ҫапӑҫнӑ! Юн тӑкнӑ!..

Тата темиҫе кунтан вӑл — Верховнӑй Советра, Министрсен Советӗнче. Пур ҫӗрте те пулӑшу ыйтать:

— Эп инвалид... Питӗ начар пуранатӑп...

Малтанах йӑвашшӑн калаҫать, унтан — куҫӗсене ялкӑштарса, кӑкрине чышса, хӑйне тытамак чирӗ силлеме тытӑннӑ пек чӗтренсе, ҫӑварӗнчен кӑпӑк сирпӗтсе кӑларать, сӗтел ҫине пӗр купа тӗрлӗрен тӗрлӗ справкӑсем ыватать...

Кам-ха вӑл, ҫак ҫын?

Архаров Михаил Гордейч вӑл, Шупашкарта нумайранпа хӑйӗн ҫуртӗнче пуранаканскер. Вӑрҫӑ умӗн хысна вӑрманӗнчен пӳрт пури валли йывӑҫ вӑрланӑшӑн ӑна пӗр ҫулталлӑклӑха тӗрмене хупнӑ-мӗн. Унтан ларса тухсан, 1942 ҫулхи май уйӑхӗнче ӑна ҫара илсе тылри пӗр хулана янӑ. Виҫӗ эрнерен вӑл, пилӗк тӳсме ҫук ыратать тесе, ҫав хулари гарнизоннӑй госпитале лекнӗ, унтан ӑна эвакогоспитале куҫарнӑ. Кунта тепӗр ик эрне выртсан, 1942 ҫулхи июльте ӑна комисси пӑхнӑ та, ҫар службине юрӑхсӑр тесе, киле ямалла тунӑ. Архаровӑн пӗтӗм «фрончӗ» те ҫав кӑна пулнӑ. Вӑрҫӑра мар, вӑрҫӑ ҫывӑхӗнче те пулса курман вӑл, тӗрӗссипе калас-тӑк — пӑшал сассине те илтмен.

Анчах Архаров, ултавпа пурӑнма хӑнӑхнӑскер, хӑй вӑрҫӑра пулман пулин те, малашне инвалид шутне кӗрсе пенси илесси ҫинчен ӗмӗтленнӗ. Госпитальре тух-

тăрсем «свидетельство о болезни» çырнă чух вăл хăйĕн пуçĕ çинчи пĕр çĕвĕке кăтартнă.

— Эпĕ 1941 çулхи июлĕн саккăрмĕшĕнче аманнă. Çак çĕвĕк мана пуçран осколок лекнипе пулнă,— тенĕ вăл.

Свидетельствине çыраканĕсем, васканипе, тĕпчесех тăман куранать, суеçĕ сăмахне ĕненсе, вăл калана пекех çырса лартнă та — çав тери пысăк йăнăш туса хунă. Тĕрĕссипе, Архаров пуçĕнчи çĕвĕк ăна ача чухне лаша тапнипе пулса юлнă...

Çапах та, шиклĕ шикленнĕ, кĕрĕк пĕркеннĕ, тенĕ пек, госпитальрен тухсан, Архаров, хăйĕн суя свидетельствине аллинче çавăркаласа, иккĕленме тытăннă:

— Епле пулса тухать-ха капла? Хам «1941 çулхи июль уйăхĕнче аманнă», тесе çыртартăм, анчах эпĕ ун чухне тĕрмере ларнă-çке! Эккей, суйма пĕлмерĕм... Лекетĕп вĕт кун пек! Улăштарас пулать, ĕненмеллерех пултăр...

Çавăнтах тытать те госпитальте çырни вырăнне «1942 çулхи майăн 24-мĕшĕнче аманнă» тесе çырса хурать. Унтан (мур пĕлет, темле майпа-çке!) Хусанти шыв транспорчĕн комендантне «свидетельствă çинче тÿрлетсе çырни тĕрĕс» тесе çирĕплеттерет.

Анчах кун пек туса хуни те ытла «саккунлă» пулнă пекех туйăнмасть-ха Архарова. Хăрать вăл лекесрен. Çавăнпа та вăл свидетельствă копине туса илет, унтан Сĕнтĕрвăрринчи нотариус патне кайса «копия верна» тесе çыртарать те пашалу пек пичет пустарса тухать. Çапла майпа вара Архаров аллине тап-таса документ лекет. Халь ĕнтĕ вăл — чăн-чăн инвалид! Пенси илме тивĕçлĕ çын!..

Малашнехи ĕçсем вара питĕ хăвăрт пулса пыраççĕ. Суя «фронтовик», вăрçăра пулса курман «инвалид» Сĕнтĕрвăрри районĕн çар комиссариатне, райсобеса çитет те 1942 çулхи июль уйăхĕнчен пуçласа пенси илме тытăнать. Унăн тантăшĕсем çапăçаççĕ, Тăван çĕршыва хÿтĕлеççĕ, аманаççĕ, паттăрсен вилĕмĕпе вилеççĕ, вĕсен ачи-пăчи тăлăха юлать, ку вара, намăса вуçех çухатнă этем, тĕрĕсрех каласан — жулик, ним сăлтавсăрах пенси илсе выртать...

Пурнăç кайнă унăн!.. Вăл часах Шупашкара куçса пĕр карчăк патне хваттере вырнаçать те тытăнать хăй мĕн шутланине тума. Пенси укçи кашни уйăхрах хăй

майĕпе килсе тăрать, унсăр пуçне инвалид ячĕпе мĕн илме май пур — çавсене пурне те илет. Иртен пуçласа каçчен утать вăл тĕрлĕ учрежденисем тăрăх. Ыйтать, йăлăнать, йăпăлтатать, вăрçать, хăратать... Хваттере нихçан та пуш алăпа таврăнмасть. Çул хыççăн çул... Ака пӳрт те пулать унăн, картишĕнче ĕни те, сысни те, чăххи-чĕппи те пур. Ним ĕçлемесĕрех, хăйĕн пĕр «асамлă туйи» çине тайăнса утнипех, плахая персех, тепĕр майлă каласан — халăха, государствăна улталанипех пуять çын. Хутран-ситрен, кăштах уçăлса çӳрес, «тĕнче курас» килсен, государства шучĕпех курортсене каять. Çул укçишĕн те тӳлемест — инвалид!

Ма пурнас мар, юрлас мар?!.

Вун тăвата çул хушши ыр курса пурăнать Архаров. Çав хушăра, суя документсем майлаштарса, государства кĕсйинчен кивĕ укçапа 55 пин тенкĕ ытла пенси илет. Инвалид «правипе» илнĕ тĕрлĕ çăмăллăхсене, вăхăтлăх пособисене, курорт путевкисене шута илсен, Архаров государствăна кӳнĕ сиен тата нумай ӳсет.

Чăн-чăн харам пыр, халăх ӳчĕ ăшне кĕрсе ларнă усал сăвăс пек пурăннă çак ирсĕр этем. Ĕмĕр тăршшипех çавăн пек пурăннă пулĕччĕ те — май килмен. Тӳрĕ кăмăллă совет çыннисем Архарова тăрă шыв çине кăларса суд умне тăмалла туса хунă.

...Суда Архаров уксахласах пынă. Анчах приговор хыççăн уксахлама пăрахнă. Лере, ытла çывăхах мар вырăнсене кайсан та, уксахласси пулман унăн. Паян кун та чиперех çӳрет, çирĕм çулхи каччăлла.

...Пит те кирлĕ-çке вăл сисĕмлĕх тени! Çав пулсассăнах жуликсемпе тĕрлĕ йышши харам пырсем иртĕнеймеççĕ те çав!

●

## ПУРИНЧЕН ТЕ ВӐЙЛӐ БАБАКОВ

Канашторг кантурӗнче ҫурхи аслати пек хӑватлӑ мӑн сасӑ кӗрлет, вӑл урама та таҫта ҫитиех илтӗнет...

— Калаҫмастӑп та санпа! Нимӗнле суд решенийӗсене те вуламастӑп! Халех ҫухал ман куҫ умӗнчен! Кӗртместӗп сана вӑл хваттере! Манӑн хамӑн саккун! Ӑнланатӑн-и: ха-мӑн сак-кун!

Урампа пыракансем ҫав хаяртан та хаяр сасса чаранса тӑрсах итлеҫҫӗ.

— Мӗн пулса иртет вара кунта?—ыйтать пӗринчен тепри.

— Иван Иванч тахӑшне тӑн кӗртет пулмалла,—хуравлать ӑна тепри.

— Мӗнле Иван Иванч вӑл? Леш Бабаков-и, хайхи жулик-пупӑн кил-ҫуртне суд государствӑна памалла тусан, ӑна хӑй ирӗкӗпех ҫавӑрса илекенни-и? Ун пирки хаҫатра картинкӑ тусах кӑларнӑччӗ.

— Шӑпах ҫав Бабаков, ҫак кантур директорӗн заместителӗ. Пирӗн Канашра пӗрререн пӗрре вӗт вӑл, ӑна ҫитекенни урӑх ҫук та пуль.

— Хӑш енчен ун пекех чаплӑ вара вӑл?

— Ҫынсемпе арҫурилле ҫухӑрса ҫеҫ калаҫнипе, никама та хисеплеменнипе, пӗр хӑйшӗн ҫеҫ тӑрӑшнипе. Илтрӗн-и: «Манӑн хамӑн саккун!» — тесе мӗкӗрет.

— Кӑшт та пулин чаракан ҫук-и вара ӑна?

— Халлӗхе курӑнса каймаҫҫӗ-ха.

Темшӗн-ҫке, иккӗшӗнчен пӗри питӗ йӗрӗнсе, тьху! тесе сурать те, вӗсем хӑйсен ҫулӗпе малалла каяҫҫӗ.

Кантурта ҫав вӑхӑтра акӑ мӗн пулса иртет.

Иван Иванч Бабаков хаклӑ пустав витнӗ хӑйӗн сӗтелӗ хушшинче мрамортан тунӑ бюст пек мӑнаҫлӑн ларать, ун умӗнче пӗр вӑтӑр пиллӗксене ҫитнӗ хӗрарӑм кӗҫ-вӗҫ макӑрса ярас пек тӑрать. Ҫийӗ-тумӗ те начартарах унӑн, вӑл пӗр-пӗр снабжени начальникӗн е магазин директорӗн арӑмӗ марри пӗрре пӑхсах курӑнать. Хӗрарӑм аллинче темле хутсем. Питӗ пӑлханать пулмалла вӑл, хутсем тытнӑ алли чӗтрет...

— Акӑ-çке ĕнтĕ, Иван Иванч,— тет вӑл,— Шупашкарти аслӑ суд та эсир мана хваттертен кӑларса яни саккунсӑр, тенĕ. Анчах эсир ӑна та пӑхӑнмастӑр, пӳлĕме питĕрсе илтĕр те—кĕртместĕр... Мĕн тӑвас-ха манӑн, ӑçта каяс? Ӑçта пурӑнас?..

— А мана вӑл не касается! — аллипе сĕтел çине шарт! çапса илет Бабаков.— Хуть те шуйттан шӑтӑкне кайса пурӑн! Пӳлĕмĕ çинчен ан та асӑн — кĕртместĕп! Манӑн хамӑн саккун! Все! Тухса кай, ан кансĕрлесе çӳре текех!

Хĕрарӑм куççулĕпех макӑрса тухса каять. Бабаков темле йывӑр япалана йӑтса пӑрахнӑ пекех йывӑррӑн сывласа ярать те тутлӑн карӑнса илет.

— Çапах та пултаруллӑ çын эпĕ...— шухӑшлать вӑл,— хам мĕнле шутланӑ — çавӑнтан пĕр шит те чакмастӑп. Эккей, тупӑннӑ... экземпляр! Мана Верховнӑй суд решенийĕпе хӑратма пӑхать. Шалиш, брат, кунта эпĕ судья. Прокурорĕ те хамах. Исполнителĕ те! Ахальтен Бабаков-и мĕн эпĕ?! А-апчхи!.. Тĕрĕс, Иван Иванч, сывлӑхлӑ пул!

...Ĕçĕ çапла пулнӑ.

Сакӑр çул хушши Александра Васильевна Васильева Канашри спорт шкулĕнче техничкӑра ĕçленĕ. Лайӑх ĕçленĕ, нихçан та никам та тиркемен ӑна. Çавна шута илсе спорт шкулĕн дирекцийĕ Васильевӑна шкул çуртĕнчех хваттер—пĕр пĕчĕк пӳлĕм панӑ. Пурӑн, ĕçле!

1965 çулхи октябрь уйӑхĕнче Канаш хула Совечĕ, спорт шкулĕ урӑх çурта куçнӑ май, çак çурта Канашторга пама йышӑннӑ. Ун пек чухне урӑх хуçа аллине паракан çуртра пурӑнакансене ӑçта вырнаçтарассине те татса памалла. Анчах хальхинче Канаш хула Совечĕ унта чип-чипер чĕрĕ çын, совет çынни пурӑннине шута та илмест, асӑнмасть те ун çинчен. Вӑл çын тĕнчере çук пекех!

— Кӑларса ывӑтӑр ӑна! — приказ парать торг директорĕн заместителĕ Бабаков, хайсене панӑ çуртра «ют çын» пурӑннине пĕлсен.— Унта халь эпир хуçа! Хуть те кама та ĕнселесе кӑларса яма пултаратпӑр!

Паллах, пуçлӑхсем мĕн хушнине тӑвас пулать. Каяççĕ те Васильева пурӑнакан пӳлĕме хайсен çĕлĕк пысӑкӑш çăраççийĕпе питĕрсе лартаççĕ. Васильева ĕçрен таврӑнать — киле кĕме çук. Мĕн пулнӑ? «Çапла та çапла,— теççĕ ӑна куракансем,— сан пӳлĕме канаш-

торгсем питёрсе илчёç. Мён салтавпа, мёнле правапа? Пёлместпёр...»

Васильева ним тума аптрать. Хайён пулёмён алакё умёнче шанса тарать-тарать те (декабрь уйахё-вёт!) торгсен çараççине çёмёрсе шала кёрет. Анчах кун çинчен çёнё «хуçасем» патне хыпар çитет те, торгри кадрсен начальникё Анна Ивановна Руденко çав самантрах шап Бабаков стилёпе приказ парать:

— Каларса ыватар! Тухса каймасть пулсан — хайне питёрсе хурар! Ан уçар! Кирлех пулсан — чуречерен те сикё!..

— Мён тавас тетён — влаç!

Каллех чупаççё начальства хушнине пурнаçа кёртме. Васильевана тул енчен питёреççё те хураççё. Хуть шанса хыт, хуть выçса вил. Саккун кёнекисенче кун пек хатланакансене «произвол» е «незаконное лишение свободы», теççё...

Пёлме çук, тахçанччен лармалла пулатчё Васильеван çаван пек сивё «одиночкара». Юрать-ха спорт шкулёнче вёренекенсем хайсен техничкине питёрсе хунине пёлеççё те ана ирёке каларaççё.

Анчах Канашторг çыннисем çаван хыççан Васильева хваттерне тепёр хут питёрсе илеççё, унан куллен кирлё япалисем, тумтирё-мёнё йалтах унта юлаççё.

Çакан хыççан тытанать вара карусель çавранма, апайтурух, тур çырлахтарах!

Васильева канашторгсем хайне тискеррён курентернёшён суда пама каять. Анчах Сироткин судья ана: эсё суда ан пар, Канашторг сана хваттертен каларма ыйтса хай суда патар, тет. Тёрёссипе, Сироткинан аллине телефон трубки илсе Бабакова темиçе самах çеç каламалла, эс саккунсене пасатан, чаран, темелле çеç пулна. Анчах та ун пек тума хаяйман пулмалла çав вал... Куçран укес темен!

Хайхи Канашторг чанах та суда парать: каларса ярар Васильевана пирён çуртран! Суд питё «камалла» решени йышанать: «Васильевана хваттертен каlармалла, анчах ана истец (Канашторг) шучёпе пулём тупса памалла». Канашторган нимёнле çурт та çуккине, вал хваттер тупса пама пултарайманнине Сироткин питё лайах пёлнё, анчах çаван пек яка («обтекаемай», теççё вырассем) решени йышанна. Канашторг кунпа килёшмесёр кассаци парсан, ЧАССР Верховнай сучё ана пах-

са тухать те Канаш районӗнчи халӑх сучӗ ку ӗҫе саккуна пӑсса тухнине палӑртать, ӗҫне пӗтерсе лартать.

Анчах Канашторгра ӗҫлекенсем совет йӗркисене, совет саккунӗсене пӑсса киревсӗр хӑтланни ҫинчен пӗр сӑмах та каламан ҫав. Кунта «частнӑй определени» тенине ҫырмалла, ӑна суту-илӳ министерствине ярса памалла пулнӑ та ҫав... Шарламан!

Кун хыҫҫӑн Васильева Канашторг пуҫлӑхӗсем патне каять, хӑйӗн хваттерне уҫса пама ыйтать. Бабаков ӑна тем те пӗр кӑшкӑрса хӑваласа ярать: «У меня свои законы!..»

Васильева прокурор помощникӗ А. Колотушкин патне макӑрса пырать, мӗн пулса иртни ҫинчен каласа парать.

— Кӳрентерчӗҫ пулсан — эс вӗсене суда пар,— вӗрентет Колотушкин, чип-чипер ыр кӑмӑллӑ ҫын пекех пулма тӑрӑшса.

Васильева Канашри коммунхоз ҫурчӗсен управляющийӗ В. Ефимова патне пырса кӗрет.

— Тархасшӑн ӑҫта та пулин пӗр кӗтес парӑр, ывӑнса ҫитрӗм хула тӑрӑх йытӑ пек ҫапкаланса ҫӳресе...

— Канашторгран ходатайствӑ илсе кил, вара ӗҫ пулать,— тет Ефимова.

Хӗрарӑм хайне хушнӑ ҫӗре каять...

Лешсем, паллах, хуть те мӗнле хут та ҫырма хатӗр. Васильевӑран тасалса ҫитесчӗ кӑна!

Икӗ минутранах хӗрарӑма хут тыттараҫҫӗ.

Вӗсен хучӗпе горкоммунхоза каялла пырсан, В. Ефимова нимех те каламасть, Васильевӑна хула Совечӗ председателӗн заместителӗ В. В. Васильев патне ярать. Вӑл пӗтӗм ӗҫе татса пама пултарать имӗш, вара учрежденисем тӑрӑх сӗтӗрӗнсе ҫӳресси те пӗтет!

— Ыран кил, паян ерҫӳ ҫук,— тет Васильев.— Ыран Бабакова кунта чӗнсе калаҫӑпӑр. Итлеттеретпӗрех ӑна!..

Тепӗр кунне Васильева ун патне ирех пырать. Хула пуҫлӑхӗн заместителӗ Канашторга шӑнкӑравласа Бабаковпа калаҫма пикенет, анчах сӑмах мӗн ҫинчен пуласси не ӑнлансанах Бабаков: «Не буду открывать!» — тесе пӗрререн пӗрре кӑшкӑрать те аллинчи трубкӑна лач! парахать.

Хула пуҫлӑхӗн заместителӗ чӗрӗп пек хутланса ларать...

Ĕç малтан мĕнле пулнă — çаплипех юлать.

Васильева макăрать.

Бабаков ахăлтатса кулать: ан та çыхланăр манпа! Уншăн пулсан, районти работниксем калани çеç мар, Верховнăй суд йышăнни те — саккун мар. Унăн хăйĕн саккунĕсем! Акă епле вăйлă вăл!..

...Фельетона çырса пĕтереспе мана Маяковский сăмахĕсем аса килчĕç: бюрократизма эпĕ кашкăр пек кăшлăттăм!

# ТУПМАЛЛИ

## «КАПКАНА» ЭПĔ ÇАПЛА ПЫРСА ЛЕКРĔМ


Çĕтĕк карттус . . . . . . . . 10
Лайăх эмел . . . . . . . . 22
Юлашки мыскара . . . . . . . 31
Михал Михалчăн икĕ пурнăçĕ . . . . . 39
Çĕр те пĕрремĕш çурт . . . . . . 48
Кукша Куçма авланать . . . . . . 57
Ман кукамай Акраппин . . . . . . 76
Çыру . . . . . . . . . 98
Пĕр ирхине, пасарта . . . . . . 110


## САЛТАКСЕМ КУЛМА ЮРАТАТЧĔÇ

ÇАПАЛА ИВАНĔ КАЛАСА ПАНИСЕМ


Сахвинепе «мессершмитт» . . . . . 125
Тигр чĕлхи . . . . . . . . 136
Мыскаралла кун . . . . . . . 147
Мунча . . . . . . . . . 156
Чечек çыххи . . . . . . . . 163
Пĕр çамка историйĕ . . . . . . 173
Фриц Мюллерăн пурнăçĕпе вилĕмĕ . . . 177


## ЛИТЕРАТУРĂПА ИСКУССТВĂ КАРТИШĔНЧЕ


Харушă ир . . . . . . . . 185
Çичĕ машăр çăпата . . . . . . . 196
Паллама çук вăкăрсем тата ыттисем 208
Курни-илтнисем, пуçа кĕнĕ шухăшсем . . 208


## ФЕЛЬЕТОНСЕМ


Така хуранĕнче . . . . . . . 213
Праньккари шанкăрч . . . . . . 219
Чарашкассинчи феодал . . . . . . 225
Юрама пĕлмелле . . . . . . . 232
Харам пыр . . . . . . . . 238
Пуринчен те вайлă Бабаков . . . . 242

*АГАКОВ ЛЕОНИД ЯКОВЛЕВИЧ*

**ЧУДЕСНОЕ ЛЕКАРСТВО**

**Рассказы, юморески, фельетоны**

На чувашском языке

Художник В. Е. Емельянов
Редактор Н. А. Александров
Художественный редактор М. А. Ильин
Технический редактор В. И. Павлова
Корректоры: Т. Н. Сергеева и
В. П. Герасимова

**Индекс 7—3—3**

НТ 06200. Сдано в набор 30/X-1966 г. Подписано к печати 18/II-1967 г. Изд. № 136/66 г. Формат 84×108 1/32. Типографская № 3. Физический печ. л. 7,75. Условный печ. л. 13,02. Учетно-изд. л. 11,67. Заказ № 4534. Тираж 9000 экз. Цена 52 коп.

Чувашкнигоиздат, Чебоксары, К. Маркса, 36.

Типография № 1 Управления по печати при Совете Министров Чувашской АССР Чебоксары, Володарского, 5.

Цена 52 коп.

